К81
С32
34611-чув

В. И. Сергеев

# ХАЛЬХИ ЧӐВАШ ЧӖЛХИ
# МОРФОЛОГИ

## Вӗренӳ кӗнеки

ШУПАШКАР 1992

Национальная библиотека ЧР
4-034611

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

М т 3 3835 Т 5000 1989г

К 81
С 32

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН НАУКА, АСЛĂ ШКУЛ
ТАТА ТЕХНИКА ПОЛИТИКИН МИНИСТЕРСТВИ
АСЛĂ ШКУЛ КОМИТЕЧӖ

И. Н. Ульянов ячӗпе хисепленекен Чăваш патшалăх университечӗ

В. И. СЕРГЕЕВ

# ХАЛЬХИ ЧĂВАШ ЧӖЛХИ

## МОРФОЛОГИ

Вӗренӳ кӗнеки

ШУПАШКАР
ЧĂВАШ УНИВЕРСИТЕЧӖН ИЗДАТЕЛЬСТВИ
1992

ББК Ш 51—21

СЕРГЕЕВ В. И.

С28 Современный чувашский язык. Морфология: Учеб. пособие. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1992. 176 с.

ISBN 5—7677—0081—8

Дано систематическое описание морфологического строя современного чувашского языка. Основное внимание уделено категориальным и некатегориальным формам морфологических классов слов (частей речи).

Для студентов дневного и заочного отделений факультета чувашской филологии и культуры, учителей чувашского языка и литературы.

Научный редактор: д-р филол. наук, профессор **Н. П. Петров.**

Рецензенты:

Отдел языка Научно-исследовательского института при СМ ЧР; д-р филол. наук, профессор **Л. П. Сергеев,** д-р филол. наук **Н. И. Егоров**

ПРОВЕРЕНО 20.. 10

34611-чув

Национальная библ... Чувашской Республ...

С $\frac{4602020400-15}{М 194(03)-92}$ без объявл.

ISBN 5—7677—081—8

© Издательство Чувашского университета, 1992

## КӲРТЕМ

**Грамматика** термин авалхи грек чӗлхинче grammatike techne «вулама тата буквӑсем ҫырма вӗренмелли искусство» пӗлтерӗшлӗ пулна, ку самахан тӗпӗ gramma «буква» тенине пӗлтерет. Грамматика икӗ пайран тарать: морфологи тата синтаксис.

**Морфологи** тени грек чӗлхинчи икӗ сӑмахран пулнӑ: morphe* «форма», logos «сӑмах», «вӗрентӳ». Ҫакшт чавашлатса, хутла самах шайне лартас пулсан, ана формавӗрентӳ, кӳлепевӗрентӳ е морфавӗрентӳ теме пулать. Формавӗрентӳ (морфологи) чи малтан сӑмаха улаштаракан аффикссене тишкерес тӗллев лартать. Сӑмах структурине тӗрлӗ тӗпчеме пулать: сӑмах пулавӗ тата сӑмах улшӑнӑвӗ тӗлӗшӗнчен. Ёлӗкрех ку пайсене уйӑрман пирки сӑмах пулӑвӗпе сӑмах улшӑнӑвне морфологи курсӗнче пахса тухнӑ. Хальхи вахатри сӑмах пулавӗ (дериватологи) чӗлхе наукин уйрӑм пайӗ шутланать, ҫавӑнпа та чылай тӗпчевҫӗсем ку ыйтава морфологирен калараҫҫӗ. Сӑмах пулӑвӗ морфологи курсӗнче тӗпчемелли ыйту маррине шута илсе ӑна ку кӗнекере пахса тухман.

**Синтаксис** (грекла syntaxis < syntasso» «хайла») грамматикӑн тепӗр пайӗ шутланать, вӑл сӑмах майлашӑвӗсемпе предложенисене, вӗсенче сӑмахсем пӗр-пӗринпе мӗнле ҫыхӑнса, йӗркелешсе, майлашса тӑнине тӗпчет.

### 1 §. ЧАВАШ ЧӖЛХИН МОРФОЛОГИНЕ ТӖПЧЕНИ

Чӑваш чӗлхин пӗрремӗш грамматики «Сочинения, принадлежащие к грамматике чувашского языка» ятпа 1769 ҫулхи май уйӑхӗнче пичетленсе тухнӑ. Тӗпчевҫӗсем ку кӗнекен авторӗ Сӗве епархийӗн архиепископӗ В. Пуцек-Григорович пулӗ тесе шутлаҫҫӗ.

* Латин чӗлхинчи forma тата грек чӗлхинчи morpha пӗр тӗпренех метатеза йӗркипе (сасасем пӗр-пӗрин выранӗсене улаштарнипе) пулса кайнӑ.

Ку грамматика калӑпашӗпе пысӑк мар, унта пӗтӗмпе те 68 страница кӑна. Кӗнекери материала çапла йӗркеленӗ: 1) кӗске умсӑмах; 2) чӑваш чӗлхин морфологи тытамне ӑнлантарни; 2) кашни пуплев пайне пӑхса тухнӑ хыççӑн чӑвашла-вырӑсла йӗркелештерсе çырнӑ сӑмахсем.

Грамматикӑра чӑваш чӗлхинче 8 пуплев пайӗ пуррине палӑртнӑ: япала ячӗ, паллӑ ячӗ, хисеп ячӗ, местоимени, глагол, наречи, хыççӑмах, междомети. Кунта ят пуплев пайӗсене кӗрекен сӑмахсен вӗçленӗвне панӑ, глаголсен сӑпатлану уйрӑмлӑхӗсене тишкернӗ. Чӑваш чӗлхинче ят, камӑнлӑх, пару, таву тата пӗрлелӗх падежӗсем пуррине кӑтартнӑ. Çак кӗнекерех чӑваш чӗлхинче икӗ вӗçленӳ пуррине каланӑ: пӗрремӗш вӗçленӳ тата иккӗмӗш вӗçленӳ. Автор ку вӗçленӳсене паллах, ют чӗлхе грамматикисен витӗмӗпе йӗркеленӗ. Каяри ретри уçӑ сасӑсемлӗ сӑмахсене пӗрремӗш вӗçленӗве, малти ретри уçӑ сасӑсемлисене иккӗмӗш вӗçленӗве кӗртнӗ.

Паллӑ ячӗсем çинчен çырнӑ чух автор чӑваш чӗлхинче несӗл категорийӗ çуккине тӗрӗс каланӑ, анчах та хӑш-пӗр причастисене паллӑ ячӗ тесе йӑнӑш пăхнӑ. Кунтах *-лӑ(-ле)* аффиксла 8 сӑмаха вырӑс чӗлхинчи çыхӑну паллӑ ячӗсемпе танлаштарнӑ: *мамакла—мамыклый, пирле—пирлый, вилемлӗ—вилимлый, ӑсла—услый, тилӗллӗ—тиллий, çулле—сюллий, çунатлӑ — сьонатлый, кашкарла — кашкырлый.*

Кӗнекере шут хисепӗсене йӗрке хисепӗсенчен уйӑрман, вӗсем пӗр ушкӑнрах тӑраççӗ тесе шутланӑ пулмалла. Местоименисен ушкӑнӗсене асанман; *ку, леш* местоименисене йӑнӑшпа вӗçленменнисен ретне кӗртнӗ.

Глаголсем, вырӑс чӗлхинчи пекех, кӑтарту, хушу, килӗшӳ наклоненийӗсенче пулнине ӗнентернӗ; вӗсен хальхи, иртнӗ, пулас вӑхӑтсем пуррине палӑртнӑ; глагол пурлӑ тата çуклӑ формӑра тӑнине тӗслӗхсемпе çирӗплетнӗ.

Наречисемпе междометисене çырса кӑтартнӑ чух вӗсен грамматика паллисене асанман, сӑмахсене ушкӑнласа кӑна иртнӗ.

Чӑвашла-вырӑсла словарьти сӑмахсен списокӗнче япала ячӗсене—682, паллӑ ячӗсене — 138, хисеп ячӗсене—23, местоименисене—22, глаголсене —350, наречисене —150, междометисене —13, хыççӑмахсене 22 сӑмах панӑ. Словарьте пӗтӗмпе 1382 сӑмах.

Пӗрремӗш чӑваш грамматики хӑй вӑхӑтӗнче питех те кирлӗ вӗренӳ пособийӗ шутланнӑ, унпа 67 çул хушши Чулхулапа Хусан епархийӗсен тӗн училищисемпе семинарийӗсенче вӗреннӗ.



1836 çулта Хусанта В. П. Вишневский çырнӑ «Начертание правил чувашского языка» пичетленсе тухать. Вӑл чӑваш чӗлхин иккӗмӗш грамматики, çав вӑхӑтрах ансат шкул учебникӗ шутланать. Кӗнекен малтанхи 60 страницинче чӑваш чӗлхин морфологи ыйтӑвӗсене тишкернӗ, 61—67-мӗш страницӑсенче синтаксис уйрӑмлӑхӗсем çинчен каланӑ, малаллахи 148 страницӑра чӑвашла-вырӑсла словарь вырнаçтарнӑ, юлашки 30 страницӑра чӑваш, тутар, мари (черемис) чӗлхисенче пӗр килекен сӑмахсене танлаштарса çырса панӑ.

Морфологи ыйтӑвӗсене тишкернӗ чух автор 1769 çулта тухнӑ грамматикӑна тӗпе хунӑ, анчах та хӑш-пӗр ыйтусене çӗнӗлле çырса кӑтартнӑ. Камӑнлӑх категорийӗн пӗрреллӗ хисепри пӗрремӗш сӑпатри *ачам, ывылым (ывӑлӑм), хирим (хӗрӗм), посим (пуçӑм)* сӑмахсене чӗнӳ падежӗнче пулаççӗ тесе палӑртнӑ.

В. П. Вишневский чӑваш чӗлхинче виçӗ вӗçленӳ пуррине палӑртнӑ. Анчах та вырӑс чӗлхин верентӗвне тӗпе хунипе тата чӑваш чӗлхин материалне тӗрӗс тишкерменнипе вӗçленӳ уйрӑмлӑхӗсем туллин палӑрмасӑр юлнӑ.

Паллах, В. П. Вишневский ку кӗнекере наука çӗнӗлӗхесене кӑтартас тӗллев лартман. Автор калашле, тӗн училищинче вӗренекенсем валли ал айӗнчи пособи шутланнӑскер, çак кӗнеке çӗр çинче чӑвашсем пурӑннине, вӗсен хӑйсен чӗлхи пуррине кӑтартма кирлӗ пулнӑ. Кун йышши кӗнекесем урӑх пулманнипе тӗн училищисенче унпа 35 çул хушши вӗреннӗ. Ют çӗршыв чӗлхеçисем Френ, Казембек, Шотт, Кастрен, Альквист хӑйсен ӗçӗсенче çак кӗнеке материалӗсемпе усӑ курнӑ. Çаксене шута илсен, ку ӗçӗн çитменлӗхӗсене Н. И. Ашмарин çивӗчлетерех те кӑтартнӑн туйӑнать[1].

В. П. Вишневскин «Начертание правил чувашского языка» кӗнекипе тата 1820 çулта чӑвашла куçарнӑ евангели тексчӗпе усӑ курса В. Шотт 1840 çулта Берлинта латин чӗлхипе çырнӑ «De linqua tschuwaschorum» диссертаци кӑларнӑ.

[1] Н. И. Ашмарин хӑй вӑхӑтӗнче В. П. Вишневский ӗçне хаклана май кӗнекен çитменлӗхӗсем пирки çапла çырнӑ: «Сочинение это, написанное лицом несведущим в восточных языках, составлено по шаблону грамматик русского языка и потому совершенно игнорирует оригинальные черты чувашской речи». (Ашмарин Н. И. Материалы для исследования чувашского языка. Казань, 1898. С. 25).

на[2]. Каярахпа ку кĕнеке 1876 çулта Парижра французла тепĕр хутчен пичетленсе тухнă. Алтай тата угро-финн чĕлхисен ушкăнне кĕрекен чĕлхесене пĕлнĕ май В. Шотт чăваш чĕлхе материалне танлаштарулла мелпе çутатса парать. Чăваш чĕлхи *р* чĕлхесен шутне кĕнине тĕслĕхсемпе ĕнентерет: *саккар — секиз; тăххар — токуз; вакар — окуз* т. ыт. те. Автор морфологи ыйтăвĕсене те тĕрĕс çутатса парать: чăваш чĕлхинче вырăн тата туху падежĕсем пуррине малтанхи хут кăтартать; *-сем* нумайлă хисеп аффиксне авалхи туркка чĕлхинчи **камы* «пĕтĕм» сăмахпа çыхăнтарать. Хальхи вăхăтăн *-т-* аффиксĕ *тур* «тăр» сăмахран пулса кайнине çирĕплетет; хальхи вăхăтри нумайлă хисепри 3-мĕш сăпатăн *-ççĕ* форми ассимиляци йĕркипе *-ат-се* формăран пулнă тесе ĕнентерет, юлашки сыпăкри *-се* элемент *-сем* аффиксран пулнине кăтартма тăрăшать.

Çак ĕçрех В. Шотт чăваш чĕлхи угро-финн чĕлхисен ушкăнне кĕменнине çирĕплетет, чăваш чĕлхин тĕп тымарĕ тĕрĕк чĕлхисемпе çыхăннине палăртать.

1862—63 çулсенче Й. Буденц çырнă «Чăваш чĕлхи очеркĕсем» ятлă венгрла çырнă грамматика пичетленсе тухнă. Автор чăваш чĕлхинче ят, кăмăнлăх, пару, тăву, пĕрлелĕх падежĕсемпе пĕрлех вырăн, туху падежĕсем тата *-алла (-елле)* аффиксла сулăну падежĕ, *-чен* аффикслă çителĕклĕх (terminativus) падежĕсем пуррине палăртать. Й. Буденц сулăну тата çителĕклĕх падежĕсем тесе пахнă япаласем чăваш чĕлхе наукинче халĕ те кăсăклă шутланаççĕ.

«Чăваш чĕлхи очеркĕсенче» япала ячĕсем сăпат аффиксĕсене йышăннине тĕрĕс ăнлантарнă, чылай чухне вĕçленӳ уйрăмлăхĕсене те тĕрĕс палăртнă.

Вăхăт формисене тишкернĕ май автор чăваш чĕлхинче plusquamperfekt форми *(килсеттĕмччĕ)* пуррине палăртать, *-чĕ* аффиксла формăсене (*каяттăмччĕ, кайаттамччĕ*) çителĕксĕр глагол форми тесе палăртать.

Й. Буденц хушăран хăш-пĕр формăсене пăтраштарать пулин те (сăмахран, *ялалла, кĕтĕвелле)* сулăну форминче тăракан сăмахсемпе пĕрле *арçурилле* сăмах форми тăрать), чылай тĕслĕхсене автор тĕрĕсех ăнлантарать. Тĕслĕхрен, *çуллаччен, хĕллеччен, ирччен, кaçчен* сăмахсемпе юнашарах *сырлаччен, çырласамччен* сăмахсене илнĕ. Автор Регули 1845 çулта Чикме уесĕнче пухнă чăваш чĕлхин материалне тĕпе хунă; халăхра, чăнах та, *кăмпаччен, çылаччен* тени пур: *кăм-*

---

[2] Schott G. De lingua tschuwaschorum. Berolini, 1840.



*паччен (кăмпана·кайиччен) каткасене вĕрилесе хатĕрлерĕ-мĕр; сырлаччен (çырла пиcиччен) курака çулса типетмелле.*

Н. И. Золотницкий чăваш чĕлхин морфологи курсне çырма ĕлкĕреймен, анчах та ун чылай ĕçĕсенче морфологи ыйтăвĕсене çутатса панă вырăнсем пур. Автор пухнă чĕлхе материалĕсемпе усă курса Н. А. Лебедев 1894 çулта Хусанта «Пособие к изучению чувашского языка» еç пичетлесе каларать. Ку кĕнекере морфологи ыйтăвĕсене 1—38 страницăсенче сутатса пана. 39—76 страницăсенче чăвашла-вырăсла словарь пур. Н. А. Лебедев ĕçне чăваш чĕлхин виççĕмеш грамматики теме пулать. Ку грамматикăра, В. П. Вишневский ĕçĕпе танлаштарсан, сĕнни нумаях мар. Хушăран автор чăваш чĕлхинче çук формăсене пур туса кăтартни те тĕл пулать. Сăмахран, *пăрахмаса, илмесе* сăмахсене деепричастин хирĕçлев форми тесе пана, анчах та ку формăсем хăйсем теллĕн чĕлхере çӳремеççĕ, вĕсене эпир ытти формăсемпе пĕрлешнĕ чух кăна куратпăр: *парахмасаттам* «я не бросил было», *илмесеттĕм* «я не взял было».

Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче Н. И. Ашмарин «Материалы для исследования чувашского языка» (Казань, 1898) кĕнеке каларнă. Ку ĕç паян куна та хăй хакне çухатман*.

Кĕнеке икĕ пайран тăрать: фонетика (1—102 с.) тата морфологи (103—339 с.). Паллах, иртнĕ ĕмĕр вĕçенче çырнă ĕçре автор пур ыйтусене те хальхи чĕлхе наукин шайĕнче татса параймăн. Анчах та Н. И. Ашмарин каланă тĕрĕс шухăшсене пур чухне те шута илменни пурнăçра пулкаланă. Сăмахран, автор пăру тата тăву падежĕсене пĕр падеж тесе пăхма сĕннине чăваш чĕлхе наукинче пирĕн ĕмерĕн 50-мĕш çулĕсенче кăна шута илме пуçларĕç, пур шкулсем валли те çирĕплетнĕ учебниксенче ку ыйту кайрантарахри çулсенче кăна вырăн тупать. Апла пулсан, Н. И. Ашмаринăн тĕрĕс шухăшĕсене эпир тепĕр 100 çултан кăна хаклама вĕренсе çитетпĕр иккен.

Тепĕр ыйту вăл — вĕçленӳ ыйтăвĕ. Паян куна çитсе те пирĕн тĕпчевçĕсем *çыннанне (çынăнне), çынăнсĕр, çынăншен* йышши формăсене тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. Ку ыйту Н. И. Ашмарина та кăсăклантарнă, анчах та автор ăна хăйне евĕр

---

* Кĕнекене мĕн тĕллевпе каларнине автор хăй çапла ăнлантарать: «Выпуская в свет свои «Материалы для исследования чувашского языка» я также имел в виду следующую цель: пополнить хотя отчасти тот громадный недостаток в сочинениях, посвященных инородческим языкам, который составляет немалую преграду при историческом и этнографическом изучении Поволжья» (С. 29).

татса пана. Тĕслĕхрен, *хаванне ан пар, ҫыннанне ан ил* предложенири *хаванне, ҫыннанне* формăсенчи камăнлăх падеж аффиксĕ камăнлăх категорийĕшĕн 3-мĕш сăпат аффиксне йышăннинчен килнине ĕнентерет: *ҫыннанĕ* «принадлежащий человеку», чылай чухне *ҫыннанĕ* тес выранне кĕскен *ҫынан, ҫыннан* тесе каланине те асархаттарать (191 с.). Анчах та ҫак шухăша Н. И. Ашмарин ку кĕнекере малалла аталантарман.

Н. И. Ашмаринăн «Заметки по грамматике чувашского языка» лекцисен конспектне асăнмасăр иртме май ҫук. Ку ĕҫ 1976 ҫулта наука тĕпчев институчĕн аслалăх ҫыравĕсенче («Чăваш чĕлхи», 66-мĕш кăларăм) пичетленнĕ.

Ку лекцисенче Н. И. Ашмарин уйрăм пуплев пайĕсене тараннăн та хайеверлĕ ҫутатса парать. Уйрăмах кунта япала ячĕн вĕҫленӳ уйрăмлăхĕсем ҫинчен вуласа пĕлме кăсăклă. Ҫакăнтах автор чăваш чĕлхинчи падежсен хисепĕпе ҫыхăннă каткас ыйтусене ҫĕклет. Палла ячĕсене кунта вырăс чĕлхин категори формисене пăхăнтарса пăхса тухнă. Хисеп ячĕсене тата местоименисене хурăнташ чĕлхесен материалĕпе укерчĕклесе ҫырса кăтартнă.

Татăксем шутне автор хыҫсăмахсене, союзсене, наречисене тата междометисене кĕртнĕ.

Глагол улшăнăвне туллин тата тĕрлĕ енчен ҫырса кăтартнă. Кунтах чăваш чĕлхин грамматика терминологийĕн вырăсла-чăвашла словарĕ те пур. Чăваш чĕлхи аслăлăхĕн терминĕсене чăвашлатас тапхăрта Н. И. Ашмарин сĕннĕ хăшпĕр терминсене эпир ним иккĕленмесĕр йышăнма пултаратпăр.

Октябрьти Аслă революци хыҫҫăн чăваш чĕлхине тĕпчеме Ф. Т. Тимофеевпа Т. М. Матвеев хастарлă тытăнаҫҫĕ. Тĕрĕссине илсен, морфологие тĕпчесси ку вăхăтра шкул учебникĕсем ҫырас ĕҫпе ҫыхăннă. 1919 ҫултах Т. М. Матвеев Чĕмпĕрте «Грамматика чувашского языка» ĕҫ пичетлесе кăларнă*.

Революци хыҫҫăнхи 20—30-мĕш ҫулсенчи чĕлхе тĕпчев ĕҫĕсене хак парса, И. А. Андреев профессор ҫапла ҫырать:

* Ум сăмахĕнче автор ҫапла ҫырнă: «Я взял на себя труд изложить в общедоступной форме «Материалы» Н. И. Ашмарина. Так как это сочинение заключает в себе изложение законов фонетики и морфологии вообще чувашского языка со многими диалектическими особенностями, то я из него извлек только то, что имеет ценность практическую». Кунта автор питех те сапăйла калана. Тĕрĕссипе, ун кĕнекинче Н. И. Ашмарин шухăшĕсене малалла аталантарна вырăнсем те чылай.



«Чăваш чĕлхи науки аталанăвĕ 20—30-мĕш ҫулсенче чи малтан Тимухха Хĕветĕрĕ, Т. М. Матвеев ячĕсемпе сыхăннă, ментешĕн тесен чĕлхе науки умне пурнăҫ кăларса тăратнă ыйтусене татса парасси шăпах вĕсем ҫине тиенне. Тапхăрĕ ку сав тери хĕрӳ, калама ҫук ответлă, сав хушăрах йывăр пулнă»[3].

1924 ҫулта Тимухха Хĕветĕрĕ чăвашла сырнă пирвайхи кĕнеке «Чăваш чĕлхийĕн крамматикĕ» кăларать. Ку кĕнеке иккĕмĕш кăларăмпа 1928 ҫулта тепĕр хут тухать*.

Кĕнеке халăх хушшинче хăвăрт саралса петнине кура иккĕмĕш кăларăмне тепĕр тавата ҫултанах кăларма лекет. Малтанхипе танлаштарсан кунта ҫĕнелĕхсем те пур: перре мĕш кăларăмра фонетикăпа морфологи пайĕсем пулнă пулсан. иккĕмĕшĕнче вара синтаксис пайĕ та кĕртнĕ.

Тимухха Хĕветĕрĕн ĕҫĕнче паян кунччен хаисен хакне ҫухатман пулăхла шухăшсем пур. Тĕслĕхрен. челхемерти самахсене автор икĕ ушкăна уйăрма сĕнет: 1) улшăнакан сăмахсем: 2) улшăнман сăмахсем. Улшăнакан сăмахсен хăйсен грамматикăри сан-сăпачĕ пур: вĕсем сăпатланаҫҫĕ тата веҫленессĕ. Сăпатланаканнисем наклонени формине йышăннисем шутланаҫҫĕ. Вĕҫленекен самахсем хăйсем ике ушкăна уйрăлаҫҫĕ: 1) тулли вĕҫлевлĕ самахсем; 2) тулли вĕҫлевсеррисем. Сăмахсен формине, вĕсем улшăннине е улшăнманнине кура автор пĕтĕм чăваш чĕлхинчи самахсене ҫакăн пек ушкăнсем ҫине уйăрма сĕнет (10 с. пăхăр).

Ҫак шухăша тĕпе хурса чăваш челхинчи сăмахсене пуплев пайĕсем ҫине уйăрма питех те меллĕ. «Пуплев пайĕсем» термин пулман-ха ку вăхăтра, автор ку анлава «самах класĕсем», е «сăмах ушканĕсем» тенĕ, чăваш челхинчи самах класĕсен тулли таблицине ӳкерсе пана (125 с.).

[3] Андреев И. А. Чаваш чĕлхи пĕлĕвĕн совет тапхарĕнчи аталанавĕнчен: Тимухха Хĕветĕрĕ ҫуралнаранпа 90 ҫул ҫитнĕ май // Вопросы истории и грамматики чувашского языка. Чебоксары, 1977. С 147.

* Автор умĕнче ку тапхăрта чĕлхе наукин терминĕсене чăвашла йеркелештерес задача та тăнă, мĕншĕн тесен ку таранччен грамматикăсем пери те чăвашла пулман. Ҫавна май 1924 ҫулта тухнă кăларăмра «Умĕн каланă сăмахрах» автор грамматика терминĕсен чăвашла-вырăсла списокне парать. Тĕрĕссипе калас пулсан, терминсене чăвашлатас ĕҫре эпир халĕ те Тимухха Хĕветĕрĕ шайне ҫитмен. Грамматика терминĕсене йĕркелештернешĕн кăна Тимухха Хеветерне палăк лартса «Чăвашсен палла чĕлхеҫи» тесе ҫырса хума пулать. Асăрхăр: эпир халĕ те вăл калькаланă е ҫĕнĕрен йĕркелештернĕ терминсемпе усă куратпăр: пĕррелле хисеп, нумайлă хисеп, вĕҫлев, сăпат, хальхи вăхăт, иртнĕ вăхăт, пулас вăхăт т. ыт. те.

| Пӗтӗм чӑваш чӗлхинчи сӑмахсем | | |
|---|---|---|
| Кӗлеткеллӗ сӑмахсем | | Кӗлеткесӗр сӑмахсем |
| Улшӑнакан сӑмахсем | | Улшӑнман сӑмахсем |
| Сапатланакан сӑмахсем | Вӗҫленекен сӑмахсем | |

Хальхи чӗлхере ҫӳрекен ӑнланма йывӑр *падеж* термин вырӑнне Тимухха Хӗветӗрӗ питех те меллӗ, чӑвашла янӑракан «вӗҫлевлӗх» термин сӗннӗ, чӑваш чӗлхинче ҫичӗ вӗҫлевлӗх пуррине палӑртнӑ: ят, харкам, пару, айӑплав, вырӑн, туху, пӗрпулу вӗҫлевлӗхӗсем. Кунсӑр пуҫне, «Вӗҫлевлӗхсем ҫинчен хушса калани» пайра (115 §) *-шӑн-(шӗн)* сыпӑкпа пӗтекен вӗҫлевлӗхе пирке вӗҫлевлӗхӗ тенӗ. Ку падежа чӑваш чӗлхине тӗпчекенсем тепӗр 50 ҫултан тин ҫирӗплетсе шкул учебникӗсене кӗртеҫҫӗ.

*Хуланалла, килелле, варманалла* йышши сӑмахсене ен вӗҫлевлӗхӗнчи сӑмахсем тени, паллах, тӗрӗс мар. Вӑхӑта пӗлтерекен сӑмахсенчен нумайӑшӗ тухупа пӗрпулу вӗҫлевлӗхӗ пулма пултарать текен шухӑш кӑсӑклӑ. *Иртенпе, кӗртенпе, ҫулларанпа* йышши сӑмахсене йӗкӗр вӗҫлевлӗхри сӑмахсем тесе пӑхнӑ кӗнекере, ӑна эпир 115 §-ӑн 4-мӗш сыпӑкне вуласа пӗлме пултаратпӑр. Автор *вӗҫӗнче, вӗсӗнчен, варринче, варринчен* кӗлеткеллӗ сӑмахсене те йӗкӗр вӗҫлевлӗхри сӑмахсем тенӗ, мӗншӗн тесен вӗсенче пӗр харӑсах икӗ вӗҫлевлӗх паллисем пур: харкам вӗҫлевлӗхӗ + вырӑн (е туху) вӗҫлевлӗхӗ: *вӗҫ-ӗн-че; вӗҫ-ӗн-чен.*

Ҫак уйрӑмлӑха тӗпе хуманнипе хальхи чӑваш чӗлхин морфологи курсӗнче *иртенпе, кӗртенпе, ачаранпа* йышши формӑсене наречи теме сӗннӗ, *вӗҫӗнче — вӗҫӗнчен* йышшисене пачах та ӑнлантарман, е вӗсем вырӑн тата туху падежӗсенче пулни ҫинчен кӑна каланӑ.

Чӗлхе аталанӑвӗн хальхи шайӗпе виҫес пулсан, паллах, Тимухха Хӗветӗрӗн ӗҫӗнче «шайрӑксем» тупма пулать, анчах та тӗпчевҫӗсене автор чӗлхе пуламӗсене чӗлхере пур тӗслӗхсем ҫине таянса тӗпчеме сӗнни пуриншӗн те усӑллӑ. Чӑваш чӗлхин, ытти тӗрӗк чӗлхисемпе танлаштарсан, хӑйнеевӗрлӗхӗ тем чухлех, ӑна вырӑс чӗлхин категори пуламӗсен картине хупса тӗпчени пачах та тӗрӗс ҫул мар. Ҫак шухӑша



Тимухха Хӗветӗрӗ ҫӳлерех асӑннӑ кӗнекере кӑна мар, хӑйӗн ӗмӗр тӑршшӗпех тытса пынӑ.

Чӗлхе вӗрентӗвӗн морфологири ҫитӗнӗвӗсене пӗтӗмлетсе, 1957 ҫулта чӑваш чӗлхеҫисем «Материалы по грамматике современного чувашского языка: Морфология» кӗнеке кӑларнӑ. Авторӗсем — Н. А. Андреев, В. Г. Егоров тата И. П. Павлов. Кӗнекен умсӑмахӗнче каланӑ тӑрӑх, статьясен авторӗсем умӗнче наука грамматики (морфологи) тавас тӗллев тӑнӑ, анчах та ку тӗллеве туллин пурнӑҫлама май килмен. Пуплев пайӗсене ҫырса кӑтартнӑ аслӑлӑх статйисенче хирӗҫӳлӗхсем те пур. Ку, паллах, авторсен кашнин хӑйӗн аслӑлӑхри тавракурӑмӗ, шухӑшӗ тӗрлӗрен пулнинчен килнӗ. Н. И. Ашмарин ӗҫӗсенче хурӑнташ чӗлхесен материалӗпе танлаштарса тӗпченине те, диалект формисен тӗрлӗ енлӗхне илсе ҫырса кӑтартнине те тупма пулать пулсан, ҫӳлерех асӑннӑ «Материалы...» аслӑлӑх статйисен пуххисене хальхи чӑваш литература чӗлхин материалӗпе ӳкерчӗклес тӗллев лартнӑ. Ҫав вӑхӑтрах тӗслӗхсене халӑх сӑмахлӑхӗнчен (фольклортан) та илнӗ. Умсӑмахра каланине ӗненес пулсан, авторсем умӗнче хальхи литература чӗлхине нормӑлас ыйту тӑнӑ. Анчах та ҫак ырӑ тӗллев пурнӑҫлансах ҫитмен пулмалла, ун пирки нихӑш тӗпчевҫӗ те кайрантарах пичетленсе тухнӑ ӗҫсенче куҫкӗретлӗ каламан. Ҫитменнине тата ку ӗҫе хакласа е тиркесе (критиклесе) ҫырни те пулман.

Пирӗн ӗмӗрӗн 60-мӗш ҫулӗсенчен грамматика ыйтӑвӗсемпе тухнӑ ӗҫсенче хальхи чӑваш чӗлхине нормӑлас тӗллев малти вырӑнта тӑман. И. П. Павлов «Хальхи чӑваш литература чӗлхи: Морфологи» (Шупашкар, 1965) кӗнекене чӑваш литература чӗлхин нормисене ҫирӗплетме пулӑшас шухӑшӗмӗтпе ҫырнӑ. Автор хӑй каланӑ тӑрӑх, ку кӗнекере хальхи чӑваш литература чӗлхин морфологине теори тӗлӗшӗнчен системӑласа, ку таранччenхи хирӗҫӳлӗхсенчен хӑтӑлса, туллинрех ҫутатса парас тӗллев лартнӑ. Морфологин чылай ыйтӑвӗсене автор ҫӗнӗлле татса пама тӑрӑшнӑ.

Чӑнах та, И. П. Павлов ӗҫӗ хӑй вӑхӑчӗшӗн питех те кирлӗ шутланать, мӗншӗн тесен Тимухха Хӗветӗрӗ ҫырнӑ чӑвашла грамматика тахҫанах саланса пӗтнӗ, вырӑсла ҫырнӑ ӗҫсемпе студентсене усӑ курма сӗнни килӗшӳллех пулман. Чӑваш чӗлхипе интересленекенсем, чӑваш чӗлхине тӗпчекенсем, студентсем тавлашуллӑ ыйтусене хамӑр чӗлхепе ҫырса кӑтартнӑ ӗҫе хапӑлласах йышӑннӑ. Ку кӗнеке 26 ҫул хушши студентсен алла тытса чӑвашла вуламалли ӗҫ шутланать.

Паллах, кирек мĕнле калăпла ĕç те тавлашулла ыйтусемсĕр пулмасть. И. П. Павлов ĕçĕнче те пур вĕсем. Сав ситменлĕхсене тата автор ăсласа çутатса çитереймен тавлашулла пулăмсене И. А. Андреев хайĕн рецензийĕнче кăтартнă[4].

Пĕр шутласан, И. П. Павлована рецензент-хаклавçа асăрхаттарнисене шута илсе кĕнекене иккĕмĕш кăларăмпа юсаса, çĕнетсе кăлармалла пулнă, анчах та «эпĕ çырса кăтартни пĕртен-пĕр тĕрĕс çул» текен шухăш тытăмĕнчен хăталайманни тата фактсен çаралăхĕнче чĕлхе саккунĕсене шайлаштарма пĕлейменни кĕнекене пĕр кăларăм шайĕнче юлма çул уçса панă.

Тĕрĕссипе илсен, чăваш чĕлхи морфологийĕн ыйтăвĕсене çутатса паракан ĕçсем кунпах вĕçленмеççĕ. М. Р. Федотов профессор çырнă ĕçсене те асăнмасăр иртме çук. «Тĕрĕк чĕлхисен танлаштарулла грамматики: Морфологи лекцийĕсем» (Шупашкар, 1975) кĕнекере М. Р. Федотов чăваш чĕлхин морфологи ыйтăвĕсене, ытти тĕрĕк чĕлхисен материалĕпе танлаштарса, истори тĕлĕшĕнчен тĕпчет. Калас пулать, автор ку кĕнекере терминологие йыварлатас сул çине тăнă; ют çĕршыв чĕлхисене аван пĕлнĕ май вырăсла терминсене те, чăвашлисене те латинла çавăрса хурать: местоимени (пронмина), глагол (верб), залог (генера), наречи (адвербиа), союз (коньюкционес), пулас вăхăт (футур), хальхи вăхăт (презенс), хисеп категорийĕ (нумерус), нумайлă хисеп (нумерус плюралис), пирке падежĕ (каузалис) т. ыт. те.

М. Р. Федотов чăваш чĕлхин морфологи ыйтăвĕсене «Чувашский язык в семье алтайских языков» (Шупашкар, 1983) кĕнекен 2-мĕш пайĕнче истори тĕлĕшĕнчен çутатса парать. Танлаштарулла истори меслетне тĕпе хурса çырнă ĕçре, паллах, хальхи чĕлхе аталанăвĕн йĕрĕ те аванах палăрать.

1988 çулта пуçламăш шкул учителĕсене хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли Л. П. Сергеевпа В. И. Котлеев «Чăваш чĕлхи» вĕренÿ пособийĕ кăларчĕç. Кĕнекери «Морфологи» пайне Л. П. Сергеев çырнă. Автор кунта пуплев пайĕсене кĕрекен сăмахсен улшăнăвне тĕплĕн çырса кăтартнă. И. П. Павлована «Морфологийĕпе» танлаштарсан, Л. П. Сергеев çакăн пек çĕнĕлĕхсем кĕртет: а) япала ячĕсен тата местоименисен вĕçленÿ парадигминчи морфемăсене уйăрса кăтартать, анчах та камăнлăх форминчи 2, 3-мĕш сăпатсенчи

[4] Андреев И. А. [Рецензия]. И. П. Павлов. Современный чувашский литературный язык: Морфология // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1966. Вып. 32. С. 193—203.



япала ячĕсен вĕçленĕвĕнче ку патрашулла пулса тухнă (215 с.); а) паллă ячĕсен палăрту категорийĕ (226 с.), япала ячĕсен палăрту формин кăна пулнине тĕрĕс кăтартать; б) хисеп ячĕсен сăпат формин (категорийĕ мар) пулнине асăрхаттарать. Анчах та ку ыйтусем пособире теори тĕлĕшĕнчен кăлăпланнă теме май килмест.

Евĕрлев сăмахĕсен морфологири улшăнăвĕ пирки темĕншĕн пĕр сăмах та каламан, çавна май ку ушкăн лексика ушкăнĕ евĕрлĕ кăна курăнать.

Вĕренÿ тата вĕренту ĕçĕнче питех те кирлине пĕлсе тăна çĕртех кĕнекене 1000 экземпляр анчах кăларни тĕлĕнтерет. Кĕнеке тухнă хыççăн тепĕр уйăхранах сутăнса пĕтнĕ.

1960 ç. пуçласа ку тарана çитиччен тухнă монографисемпе статьясене шута илсен, çакна каламалла: чăваш чĕлхин морфологи ыйтăвĕсене тĕпчесси малалла пырать, анчах та теори тĕлĕшĕнчен категори формисене тĕрĕс çутатса паманни чылай ыйтусене анланма кансĕрленĕ сисĕнет. Калăпăр, морфологири сăмах ушкăнĕсене (пуплев пайĕсене) мĕнле тĕп принципсене кура уйăрмаллине тăтса памасăр, эпир чĕлхери сăмахсене грамматика тĕлĕшĕнчен тĕрĕс ушкăнласа тухаймастпăр; вырăс чĕлхи вĕрентĕвĕн традицине тĕпе хунипе ку таранччен эпир сăмах улшăнăвĕ çинчен кăна калаçатпăр, анчах та чăваш чĕлхи вырăс чĕлхи маррине шута илсе унта форма улшăнăвĕ пуррине те кăтартмалла.

Юлашки вăтăр сул хушшинче морфологии çивĕч те тавлашулла ыйтăвĕсене çутатса паракан ăслăлăх статйисем те чылай пичетленчĕç. И. А. Андреевпа И. П. Павлов çырнă ĕçсенче тавлашу пуплев пайĕсене пĕр-пĕринчен уйăрасси, сăмаха улăштаракан аффикссене сăмах тăвакан аффикссемпе патраштармалла марри çинчен пырать.

Чăваш чĕлхин морфологине теори тĕлĕшĕнчен калăплас пулсан, ку таранччене патраштарава пĕтерме тăрăшмалла, анчах ку хирĕçулĕхсенчен пĕтĕмпех хăтăлса çитме май парать тесе каламастпăр: чĕлхене мĕн чухлĕ таранрах тĕпчетĕн, унăн йĕркелештерÿлĕхĕ хирĕçлетÿсемпе хирĕçтăравлăхсенче çавăн чухлĕ уççăнрах курăнать.

### 2 §. САМАХ ТАТА САМАХ ФОРМИН УЛШĂНĂВĔ

Ку таранччен эпир, вырăс чĕлхин морфологи курсне тĕпе хурса, сăмах улшăнăвĕ пирки ăнчах калаçнă. Чăваш чĕлхи агглютинациллĕ чĕлхе шутланать, çавăнпа та сăмах улшăнăвне кăна тĕпчени пирĕн чăваш чĕлхи морфологийĕшĕн парах та çителĕксĕр.

Тĕслĕхрен, *çынпа, çынсемпе, çыннисемпе* сăмах формисем грамматика енчен пачах расна: *сынпа* тенĕ чухне *çын* сăмах пĕрлелĕх падежĕнче пулнине пĕлетпĕр, анчах та *çынсемпе* тенĕ чухне çав сăмахăн нумайлă хисеп форми пĕрлелĕх падежĕнче тăрать, *çыннисемпе* тĕслĕхре камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат форми — нумайлă хисепре тата пĕрлелĕх падежĕнче. Асăрхăр, *çынпа* сăмахăн пĕрлелĕх падеж форми малалла ытти категори формисене сайра йышăнать.

Халĕ *çынсем* нумайлă хисепĕн категори формине илер. Ку форма ирĕклĕнех вĕçленет, апла пулсан, пур падеж аффиксне те йышăнать: *çынсен, çынсене, çынсенче, çынсенчен, çынсемпе, çынсемсĕр, çынсемшĕн.* Унсăр пуçне эпир *çынсемех, çынсемччĕ* теме те пултаратпăр.

*Çынни* — камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат форми. Вăл вĕçленет: *çыннин, çыннине, çыннинче. çыннипе, сыннисĕр, çыннишĕн;* вăлах нумайлă хисеп формин аффиксне йышăнать те каллех туллин вĕçленет: *çыннисен, çыннисене, çыннисенче, çыннисенчен, çыннисемпе, сыннисемсĕр, çыннисемшĕн.* Çав вăхăтрах эпир *çынниех, çынниччĕ* формăсене те тĕл пулатпăр: *хамăр ял çынниех вăл; кӳршĕ ял çынниччĕ вăл.*

Ку таранччен мĕн каланине çакăн пек ӳкерчĕк туса кăтартма пулать:

| | | |
|---|---|---|
| 1) | *çын* (сăмах, лексика единици) | туллин вĕçленет: *çыннан, çынна, çынта, çынтан, çынпа, çынсăр, çыншăн* нумайлă хисепре пулать: *çын(+)-сем* камăнлăх категорийĕн пур афф. йышăнать: *çыннăм, çынну, çынни, çыннăмăр, çыннăр* *çын(+)ччĕ* япалан иртнĕ вăхăтри тăрăмне палăртать *çын(+)ах* (вăйлату категорийĕнче пулать) |
| 2) | *çынпа* (пĕрлелĕх падеж форми) | *çын-па-х* (вăйлату категорийĕнче) *çын-па-ччĕ* (иртнĕ вăхăтра) *çын-п-и(-н)-е çынпах килчĕ* (палăрту форминче + пăру падежĕнче) *çын-па-скер* (палăрту формине) |
| 3) | *çын-сем* (нумайлă хисеп категори форми) | туллин вĕçленет *çын-се-нн-и* (камăнлăх падежĕнче + палăрту формине) *çын-сем-ех* (вăйлату категорийĕнче) *çын-сем-ччĕ* (иртнĕ вăхăтра) |



| | | |
|---|---|---|
| 4) | *çын(н)-и* (камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат форми) | тӳллин вĕçленет нумайлă хисепре пулать: *çын(н)-и-сем* *çынниччĕ* (иртнĕ вăхăтра) *çынниех* (вăйлату категорийĕнче) |

Çапла вара, эпир сăмах улшăнăвĕ çинчен кăна мар, сăмахăн вăл е ку форми мĕнле улшăнни çинчен ирĕккĕнех калаçма пултаратпăр. Сăмах улшăнăвĕ вăл — сăмах тĕпĕ (лексика единици) тĕрлĕрен сăмаха улăштаракан аффикссене хай çумне тӳрех йышăнма пултарни. Сăмах формин улшăнăвĕ çинчен калаçна чух сăмах тĕпĕ çумне хушăнакан форма малалла мĕнле аффикссем йышăннине шута илмелле.

Паллах, тĕрлĕрен пуплев пайне лекекен сăмахсен е сăмах формисен улшăнăвĕ пĕр мар. Тĕслĕхрен:

| | | |
|---|---|---|
| 1) | *пысăк* (паллă ячĕ) | *пысăк-рах* (танлаштару категорийĕнче) *пысăкк-и* (палăрту категорийĕнче) *пысăк-скер* (палăрту категорийĕнче) тулли мар вĕçленӳре пулать, *пысăка (хур), пысăкран, пысăкшăн* *пысăкк-ăн* (мĕнлелĕх категорийĕнче) |
| 2) | *пысăкки* (паллă ячĕ, палăрту категори форми) | тулли вĕçленӳре пулать (пур падеж аффиксне те йышăнать) *пысăккиччĕ* — иртнĕ вăхăтра *пысăккиех* — вăйлату категорийĕнче |
| 3) | *пысăкрах* (паллă ячĕ, танлаштару категори форми) | палăрту категори формине йышăнать: *пысăкраххи* *пысăкраххăн*—мĕнлелĕх категори формине *пысăкрахчĕ* — иртнĕ вăхăт категорийĕнче *пысăкрахах* — вăйлату категорийĕнче |

Паллă ячĕн грамматика формисене хăш-пĕр чухне япала ячĕсем те йышăнма пултараççĕ: *ача-рах, тиха-рах, курăкрах* — япала ячĕн танлаштару форми; *ача-скер, тиха-скер* — япала ячĕн палăрту форми. Кун пек чухне вĕсем сăйлавлăх принципне пăхăнса категорисĕр формăсем шутланаççĕ. **Грамматика формисем вăл е ку пуплев пайĕнчи мĕнпур е чылай сăмах çумне çыпçăнма пултараççĕ пулсан, эпир вĕсене категори формисем тетпĕр.** Акă *-сем* нумайлă хисеп аффиксĕ пур япала ячĕ çумне те çыпçăнма пултарать. Апла пулсан, япала

ячӗн нумайлӑ хисеп категори формиӗ пур. Пур япала ячӗ те вӗҫленнине шута илсен япала ячӗн вӗҫленӳ тата падеж категорийӗсем пурри куранать.

Уйрӑм сӑмахсем кӑна йышӑнакан грамматика формисем суйлавлӑх принципне пахӑнаҫҫӗ. Ака *ачарах (вал ачарах-ха халь)* теҫҫӗ, анчах ҫав пӗлтерӗшпех *юманрах, калемрех* формӑсемпе уса курма сук. Сайра уса куракан формӑсене категорисӗр формӑсем теме пулать. Ҫапла вара, *ача-сем*—япала ячӗн нумайлӑ хисеп категорийӗн формиӗ, *ача-рах (вал ачарах-ха халь)* — япала ячӗн танлаштару формиӗ, вӑл категорисӗр форма шутланать. Категори формисем пӗтемлӗх (е чылайлах) принципне пахӑнаҫҫӗ. Вӗсем вӑл е ку пуплев пайӗнчи пур (е чылай) сӑмах ҫумне ҫыпҫӑнса грамматика пӗлтерӗшне туллин палартаҫҫӗ. Процент тӗлӗшӗнчен шутласан, категори формисем вӑл е ку пуплев пайне кӗрекен пӗтӗм сӑмахӑн 50%-ӗнчен пуҫласа 100%-ӗ таранах хушанма пултараҫҫӗ.

Категорисӗр формӑсем суйлавлӑх принципне пахӑнаҫҫӗ. Ҫыпҫӑнасса вӗсем вӑл е ку пуплев пайӗнчи сӑмахсен пӗррвиҫҫӗмӗш е унтан та каярах пайӗ ҫумне кӑна ҫыпҫӑнаҫҫӗ. Хушӑран вӗсем уйрӑм сӑмахпа е сӑмах формипе кӑна ҫуреҫҫӗ.

Ҫапла вара, чӑваш чӗлхинче сӑмах тата сӑмах формин улшӑнӑвне тата категориллӗ формӑсемпе категорисӗр формӑсен улшӑнӑвне тӗпчемелле. **Пуплев пайӗсем тата ҫав пуплев пайӗсене кӗрекен сӑмахсен е вӗсен категори формисемпе категорисӗр формисен улшӑнӑвӗпе пӗлтерӗшӗсем ҫинчен вӗрентекен чӗлхе наукин пӗр пайне морфологи темелле.**

Чӗлхемӗрте сӑмах тата сӑмах формин улшӑнӑвӗ пурри куҫкӗретлӗ. Ҫавӑнпа та кашни пуплев пайне тӗпченӗ чухне ҫав уйрӑмлӑха шута илсе пымалла. Ку вара чылай грамматика пуламӗсене ансат та уҫӑмла ӑнлантарма май парать. Категори формисемпе категорисӗр формӑсем пуплев пайӗсене хӑйсене пахалах виҫипе шайлаштарма, пӗр-пӗринчен тӗрӗсрех уйӑрма май параҫҫӗ.

### 3 §. МОРФОЛОГИРИ СӐМАХСЕН УШКӐНӖСЕМ

Пуплев пайӗсене палартмалли принципсем.

Чӗлхери сӑмахсене пуплев пайӗсем ҫине уйӑрнӑ чухне тӑвата принципа шута илмелле: семантика, сӑмах пулӑвӗ, морфологи тата синтаксис принципӗсем.

Семантика (е пӗлтерӗш) принципне шута хунӑ чух сӑмахсен лексика тата грамматика пӗлтерӗшӗсене пӑхмалла:



япала ячӗ — япалалӑха, паллӑ ячӗ — япалан паллине, глагол ӗҫе-хӗле палартать.

Сӑмах пулӑвӗн принципӗ сӑмах тӑвакан аффикссем пуррипе ҫуккине сӑнама ыйтать. Енчен те сӑмах тӗпӗнче вӑл е ку сӑмах тӑвакан аффикс пулсан, ун тӑрӑх сӑмах хӑш пуплев пайне кӗнине калама пулать. Тӗслӗхрен, *шӗшкелӗх, юманлӑх, вӗҫев, суйлав* сӑмахсем япала ячӗ пулнине вӗсенче япала ячӗ тӑвакан *-лах(-лӗх), -в(-ав, -ев)* аффикссем пурри хыпарлать.

Синтаксис принципӗ шанчӑклах мар пулин те, хушӑран ӑна та шута илмелле.

Пуплев пайӗсене пӗр-пӗринчен уйӑрса илмелли чи шанчӑклӑ принцип вӑл — морфологи принципӗ. Морфологи принципӗ сӑмахсен морфологи паллисене, тӗрӗсрех: вӗсен мӗнле грамматика категорийӗсемпе формисем пуррине шута илме хистет.

Пуплев пайӗсене лекекен лексемӑсене, чӑнах та, категори формисем тӑрӑх уйӑрса илме пулать. Хаш-пӗр категори формисем темиҫе ушкӑнри сӑмахсемпе те ҫуреме пултараҫҫӗ, сӑмахран, хисеп, падеж, сапат категорийӗсем, анчах та танлаштару категорийӗ паллӑ ятне кӑна тивӗҫлӗ. Танлаштару категорийӗ паллӑ ячӗн кӑна пулать тенине ҫапла ӑнланмалла: *-рах(-рех), -тарах(-терех)* аффикс пур паллӑ ячӗпе те ҫурет, паллӑ ячӗн танлаштару категори формине йӗркелештерет; япала ячӗсемпе сурене чух ку аффикс япала ячӗн категорисӗр танлаштару формине кӑна тӑвать, мӗншӗн тесен пур япала ячӗ ҫумне те хушӑнаймасть вӑл: *тихарах лаша, куракрах тыра* тенӗ чух *тиха, курак* япала ячӗсем (асархар: *сетелтерех, кӗнекерех* теместпӗр), *тихарах, куракрах* — япала ячӗн танлаштару формисем; *лайахрах, хитререх, ачашрах*..., — паллӑ ячӗн танлаштару категорийӗн формисем.

Чӑваш чӗлхинчи сӑмахсене, вӗсен морфологи, лексика тата синтаксис паллисене кура ҫакӑн пек ушкӑнсем ҫине пайлама пулать (укерчӗке пахар). Укерчӗкри сӑмахсене тишкерсен, вӗсен морфологи ушкӑнӗсене ҫакӑн пек ятсем парса тухма май пур: 1) япала ячӗ; 2) паллӑ ячӗ; 3) хисеп ячӗ; 4) ятылмашӗ (местоимени); 5) ӗҫ ячӗ; 6) ӗҫхӗл; 7) ӗҫхӗлҫумӗ (наречи); 8) хыҫсӑмах; 9) евӗрлев сӑмахӗ; 10) татак; 11) союз (пӗтӗҫтерӳ); 12) междомети (кӑмӑлчав).

Сӑмахсен морфологире ҫакӑн пек ушкӑнсем пуррине вӗсен пӗлтерӗшӗпе улшӑнӑвӗ тӑрӑх палартатпӑр. Улшӑну икӗ тӗрлӗ пулать: тулли тата тулли мар. Пӗр-пӗр ушкӑна кӗрекен пур сӑмах та тулли улшӑннине эпир категори формисем-

2. 989.



34611-449
Национальная библиотека
Чувашской
Республики






пе çыхăнтаратпăр, тулли мар улшăну категорисĕр сăмах формисене йĕркелештерет кăна. Хăш-пĕр категори формисем темиçе ушкăна тивĕçлĕ пулаççĕ, теприсем уйрăм ушкăна кăна тивĕçтереççĕ.

Çапла майпа, сăмахсен морфологири ушкăнĕсене палартнă чухне чи малтанах çав ушкăна кĕрекен сăмахсен мĕнле грамматика категорийĕсем пуррине кăтартмалла, тулли мар улшăнавне — категорисĕр формисене — тишкермелле, сăмах пулавĕн аффиксĕсене тупса, вĕсем хăш ушкăнри сăмахсене тивĕçлине санамалла. Паллах, пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле сăмахсен лексика пĕлтерĕшне пĕлни кирлех, унсăрăн сăмаха хăш ушкăнра пахас ыйту каткасланнă пулĕччĕ.

Хăш чухне тĕпчевçĕсем грамматика категорийĕпе ăнлав категорийĕсене пăтраштарнипе морфологире ăнланусăрлăхсем сиксе тухаççĕ. Кун пек чухне икĕ япалана асра тытмалла: 1) ăнлав категорине чĕлхере тĕрлĕрен майсемпе палăртма май пур: морфологи (аффикс) мелĕпе, сăмах майлашăвĕпе (синтаксис мелĕпе), сăмаха икĕ хут е мăшарлатса каланипе (лексика мелĕпе), интонаципе, пĕр-пĕр сасса вăрăмман каланипе (фонетика мелĕпе); 2) морфологири сăмах ушкăнĕсем пĕрремĕшле е иккĕмĕшле сăмахсене пĕрлештерсе тăраççĕ, анчах сăмах майлашăвĕсемпе сăмах çавранăшĕсене çав ушкăнсенче пăхма май çук.

Чăваш чĕлхинче сăмахсен морфологири ушкăнĕсене палăртнă чух сăмахăн синтаксисри функцине — вăл мĕнле предложени членĕ пулнине — чылай чух шута хума май çук. Сăмах менле предложени членĕ пулнине шута хурса ушкăнласан, морфологире подлежащи, сказуемăй, обстоятельство, дополнени класĕсем пулмалла.

Ку тарана çитсе те чăваш морфологийĕ тĕрлĕрен кирлĕмарлăхран хăталаймасть. *Лайах ача лайах вĕренет* предложенири *лайах* сăмах япала ячĕ умĕнче чухне те, глагол умĕнче тăрсан та палла ячĕ пулнине 1953—55 çулсенчи дискусси вăхатĕнчех татса пана, анчах та, шкул учебникĕсене ĕненес пулсан, *вăйсăр çын* тенĕ чухне *вăйсăр* сăмах палла ячĕ, *вайсар çентереимест* предложенири *вăйсăр* сăмах çуклах падеженчи япала ячĕ пулать. Çаван пекех *амăшĕсĕр ача* тенĕ чухне *амашесер* палла ячĕ иккен. *Икĕ уйах ĕнтĕ амашĕсер пуранать* предложенири *амашĕсĕр* сăмах çуклăх падеженчи япала ячĕ. Анчах та çак шухăша çирĕплетекенсем пĕр япалана асра тытмаççĕ: палла ячĕн каманлăх-сапат категорийе çуккипе сăмах тытамĕнче сăпат аффиксĕ те пулма пул-

тараймасть: *амăшĕсĕр* сăмахра 3-мĕш сапат аффиксĕ пур, апла пулсан, вăл япала ячĕ пулма тивĕçле.

Морфологи чĕлхе наукин авалтан çирĕпление пайĕ шутланать пулсан, унăн хăйне сыхласа аталантармалли, çирĕплетмелли саккунĕсем те пулмалла. Морфологи саккунĕсене синтаксисран кăна калармалла мар, синтаксис хăй морфологи пулăмĕсемпе анла уса курма тивĕç.



## ЯПАЛА ЯЧĔ

**Кам? е мĕн? ыйтура тăрса япалана пĕлтерекен, вĕçленекен, сапатланакан тата нумайлă хисепре пулакан сăмахсене япала ячĕ теççĕ.** Çак шухăшах кĕскенрех çапла та калама пулать: япалана (е япалалăха) пĕлтерекен, сапат, хисеп, падеж тăрăх улшăнакан сăмахсене япала ячĕ теççĕ.

Ку таранччен ĕçсенче чылай чухне япала ятне лексика пĕлтерĕшĕ тăрăх кăна палăртнă: 1) Япалалăха пĕлтерекен пуплев пайне япала ячĕ теççĕ; 2) *Кам?* е *мĕн?* ыйтура тăракан, япалана пĕлтерекен пуплев пайне япала ячĕ теççĕ; 3) Япалана (е япалалăха) пĕлтерекен пуплев пайне япала ячĕ теççĕ.

Çакăн йышши палăртăмсенче япала ячĕн морфологи паллисене пăхах та асăнман, çавăнпа та кун пек калани çителĕксĕр пек туйăнать.

Чăваш чĕлхинче сынна палăртакан сăмахсем кăна *кам?* ыйтура пулаççĕ, чĕрĕ мар япаласене тата чĕрчун ячĕсене *мĕн?* ыйтура лартаттăр: *сĕтел — мĕн?, сысна — мĕн? çын — кам? Ванюк — кам?*

Япалана пĕлтерекен тенине çапла ăнланмалла; чăн пурнăçри япаласем (вĕсене алпа тытса пăхма, куçпа курма май пур пулсан), вĕсене пĕлтерекен сăмахсем пурте морфологире япала ячĕ пулаççĕ, анчах та япала ячĕ шутне алпа тытма май çук, куçа курăнман пулăмсемпе абстрактлă ăнлавсене пĕлтерекен сăмахсем те кĕреççĕ: *юрату, курайманлăх, тасалăх, сылăхлăх* т. ыт. те.

Япала ячĕ сапат тăрăх улшăннă май камăнлăх пĕлтерĕшне те усамлă палăртать, çавăнпа та унăн камăнлăх-сапат категорийĕ пуррине ĕнентеретпĕр: *кĕнекем, кĕнеку, кĕнеки, кĕнекемĕр, кĕнекĕр.*

Япала нумай пулнине *-сем* аффикспа палăртни япала ячĕн нумайлă хисеп категорийĕ пурри çинчен калать: *ача-сем, çурт-сем, хĕр-сем, Иванов-сем* т. ыт. те.

Япала ячĕсен тулли вĕçленĕвĕ вĕçлевлĕх (падеж) категорийĕ пуррине кăтартать.

## а. Пайăр ятсемпе пайăр мар ятсем

Шкул учебникĕсенче те, студентсем валли хатĕрленӳ вĕренӳ пособийĕсенче те япала ячĕсене пăхса тухнă чухне пайăр тата пайăр мар ятсене морфологи курсĕнче вĕренмелли çинчен каланă. Тĕрĕсех-ши ку? Пайăр тата пайăр мар ятсен морфологири тăрăмне çирĕплетмелли хăйсен ятарлă формисем пур-и? Ку ыйтăва никам та ку таранччен тĕплĕн хураваман. Тĕрĕссипе илсен, пайăр тата пайăр мар ятсем лексикологире пăхса тухмалли япаласем шутланаççĕ. Пĕлтерĕшпе чĕлхери функцине кура лексикологири сăмахсене çак ушкăнсене пайлаççĕ: 1) тулли лексика пĕлтерĕшлисем (кунта пайăр мар ятсемпе пĕрле ытти пуплев пайне кĕрекен сăмахсене кĕртме пулать); 2) тулли мар пĕлтерĕшлисем (пайăр ятсем)[1].

Лексикологин пайăр ятсене тĕпчекен уйрăмне ономастика теççĕ. Ономастика чĕлхе наукин уйрăм пайĕ шутланать.

Грамматикăра (морфологире) пайăр ятсене пайăр мар ятсенчен уйăрса илмелли тĕп критерисем çук. Сăмаха пысăкран пуçласа çырни морфологи критерийĕ мар, вăл графика палли кăна.

Пайăр тата пайăр мар ятсем грамматика (синтаксис) тĕлĕшĕнчен уйăралса тăнине И. П. Павлов çакăн пек ăнлантарать: «...сынна, выльăх-чĕрлĕхе пĕлтерекен пайăр ятсем тӳрĕ дополнени функцийĕнче яланах пару-тăву падеж формине йышăнаççĕ: *Петере куртăм, Кольăна курмарăм* (танл.: *кино куртăм, картина куртăм, тиле куртăм*)»[2]. Кун пек калани хирĕçлеме йывăр мар, мĕншĕн тесен илсе кăтартнă тĕслĕхсенчи япала ячĕсем пару-тăву падеж аффиксне йышăнасси япала ячĕсен валентноçĕнчен килет: *кинона кайрăм, картинăна тепĕр вырăна илсе çакрăм, тилле капкăнпа кăна мар, ытти майпа та тытма пулать.* Тĕслĕхсенчи япала ячĕсем пурте тӳрĕ дополнени функцийĕнче пару-тăву падеж аффиксне йышăнчĕç, анчах та вĕсем пайăр ятсем мар.

«Пайăр ятсем нумайлă хисепре пуласшăн мар», — тени те тĕрĕс шухăш мар, вĕсем *-сем* аффикса ирĕккĕнех йышăнаççĕ, çав хушăрах чылай пайăр ятсенчен *-сем* аффикс хушăннипе пайăр мар ятсем пулса каяççĕ: *Мускав — мускав-*

[1] Уфимцева А. А. Лексика // Общее языкознание: Внутренняя структура языка. М.: Наука, 1972. С. 446—447; Сергеев В. И. Чĕлхери сăмахсен тĕсĕсем // Хальхи чăваш чĕлхин лексикологийĕ. Шупашкар, 1978. 14 с.

[2] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965.



*сем, Элĕк — элĕксем, «Мичуринец» совхоз ĕçченĕсем — мичуринецсем* т. ыт. те. Пĕлтерĕш улшăнăвне тĕпе хуни те кун пек чухне вырăнсăр. Асархăр: *Нинăсем патне каям-ха,* тенĕ чухне темиçе Нина пулма пултарать.

Чăваш чĕлхинче пайăр мар ятсене пайăр ята куçарни тĕл пулать: *шăнкăрч* (кайăк) — *Шăнкăрч* (çын), *юманлăх* (юмансем ӳсекен вырăн) — *Юманлăх* (ял ячĕ). Ку пулăм та морфологи курсĕнче тĕпчемелли ыйту мар. Чĕлхе наукинче кăна ономастика деривацийĕ е эйдонимика самах пулавĕ тесе ят панă[3]. Апла пулсан, пайăр мар ятсем пайăр ята куçнине лексикологире е дериватологире тĕпчемелле.

Морфологи курсĕнче япала ячĕсене вĕреннĕ чухне пайăр ятсемпе пайăр мар ятсене пăхса тухасси пĕртен-пĕр грамматика паллисĕр пулăмпа çыханнă[4]: пайăр ятсем ытти пуплев пайĕсен çук, çавна май тулли морфологи тишкерĕвне лекекен япала ячĕсене пайăр е пайăр мар ят тесе палăртса хăварма лекет.

## а. Паллăлăхпа паллăмарлăх категорийĕ пирки

Тĕрĕк чĕлхисенче паллăлăхпа паллăмарлăх категорийĕ (вырăсла: категория дефинитивности; определенности-неопределенности) пуррипе çуккине ĕнентерес тесен, унăн ятарлă аффиксĕ е аффиксĕсем пуррипе çуккине тĕрĕслемелле. Енчен те ятарлă форми (е формисем) çук пулсан, çав формăсен пĕлтерĕш хирĕçлетĕвĕ çинчен те калаçма май çук. Чăваш чĕлхинче те, ытти тĕрĕк чĕлхисенчи пекех, паллăлăхпа паллăмарлăх категорийĕ морфологи категорийĕ пулнине ĕнентерме май çук.

Тĕрĕссипе илсен, эпир асăннă категори — ăнлав категорийĕ. Паллăлăхпа паллăмарлăх текен ăнлав категорине чĕлхере тĕрлĕрен майпа палăртма пулать; хисеп формисемпе, камăнлăх формисемпе, падеж аффиксĕсемпе. 1. Паллăлăха е паллăмарлăха хисеп формипе палăртма пултарнишĕнех нумайлă хисеп аффиксне эпир паллăлăхпа паллăмарлăх кате-

[3] Белецкий А. А. Лексикология и теория языкознания (Ономастика) / Киевский ун-т. Киев, 1972. С. 55.

[4] Çак шухăша якут чĕлхин грамматикинче çапларах палăртнă: «Собственные имена не имеют особой грамматической формы выражения (только могут иметь отдельные уменьшительные формы и на письме обозначаются с большой буквы). Поэтому их следует считать не особой грамматической категорией, а лишь особым семантическим разрядом существительных». (Грамматика современного якутского литературного языка: Фонетика, Морфология. М.: Наука, 1982. С. 108).

гори форми тесе пăхаймастпăр. Çавнах камăнлăх тата падеж формисем пирки те калама пулать.

Паллăлăхпа паллăмарлăха, тĕпчевçĕсем ĕнентернĕ тăрăх[5], синтаксис мелĕсемпе те (самах майлашăвĕсемпе) палăртма пулать. Тĕрĕссипе, вăл лексика единицисен пĕлтерешĕнче те палăрать.

Çапла майпа, тĕрĕк чĕлхисенче паллăлăхпа паллăмарлăх анлав категорине чĕлхере тĕрлĕрен мелсемпе палăртма май пурри синчен çеç калаçма лекет. Пирĕн шутпа, паллăлăхпа паллăмарлăха хисеп, падеж, камăнлăх-сăпат категорисене вĕреннĕ чух пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен вĕсем мĕнле шайлашса тăни çинчен калаçмалла. Ку тĕлĕшпе тюркологире тĕпчев ĕçĕсем пуррине те кăтартмалла. Самахран, Дж. Г. Киекбаев тата С. Н. Иванов ĕçĕсене асăнма пулать[6]. Вĕсенчен пери падеж формисене паллăлăхпа паллăмарлăх теорине тĕпе хурса тĕпчет, тепри — хисеп формисемпе вĕсен пĕлтерĕшĕсене паллăлăхпа паллăмарлăхпа çыхăнтарать. Чăваш чĕлхинче те хисеп, падеж, камăнлăх-сăпат категорийĕсене паллăлăхпа паллăмарлăх пĕлтерĕшĕпе çыхăнтарса çырса кăтартма май пур.

### 1 §. ЯПАЛА ЯЧĔСЕН ХИСЕП КАТЕГОРИЙĔ

Япала ячĕсен икĕ хисеп пуррине палăртаççĕ; пĕрреллĕ тата нумайлă хисеп. Нумайлă хисепĕн морфологи палли — *-сем* аффикс. Ку аффикс чылай япала ячĕсемпе çўреме пултарнине шута илсен чĕлхере нумайлă хисеп категорийĕ пур теме пулать.

Пĕрреллĕ хисепĕн ятарла грамматика палли (тĕрĕсрех: аффиксĕ) çук, çавăнпа та нумайлă хисеппе пĕрреллĕ хисеп морфологи тĕлĕшĕнчен пĕр тан мар. Пĕрреллĕ хисепри самах япала пĕччен, пĕрре çеç пулнине палăртмасть, ушкăнла палла мар нумайлăха та пĕлтерет: *кету* (ку самаха асăнсан, пирĕн куç умне тĕрлĕрен чĕрчунсен палла мар ушкăне тухса

[5] Майзель С. С. Категория дефинитивности в турецком языке // Сб.: «Академику В. А. Гордлевскому». М.: Изд-во АН СССР, 1953. С. 168—186; Андреев И. А. О категории дефинитивности в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1965. Вып. 28. С. 76—87; Грамматика современного башкирского литературного языка. М.: Наука, 1981. С. 125—126.

[6] Киекбаев Дж. Г. О происхождении некоторых падежных форм в урало-алтайских языках в свете теории определенности-неопределенности // Вопросы методики и методологии лингвистических исследований. Уфа, 1966; Иванов С. Н. Родословное древо тюрок Абул-гази-хана. Ташкент, 1969.



тăрать), *халăх* (сынсен палла мар ушкăнĕ); анчах *халăхсем* тени тĕрлĕрен халăхсен уйрăмшар ушкăнлăхне палăртать: тĕнчери халăхсем: акалчансем, нимĕçсем, американецсем т. ыт. те; хамăр çĕршыври халăхсем: чăвашсем, тутарсем, марисем, мăкшăсем т. ыт. те.

Пĕрреллĕ хисеп форми кăна мар, нумайлă хисеп форми те чăваш чĕлхинче (анларах: тĕрĕк чĕлхисенче) тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ; тĕслĕхрен, чăваш чĕлхинчи *-сем* аффикслă формăсем нумайлăха кăна мар, пĕччеллĕхе те палăртма пултараççĕ, çав вăхăтрах пĕрреллĕ хисеп форми палла мар нумайлăха палăртма пултарать терĕмĕр. Хăй вăхăтĕнче Н. И. Ашмарин чăваш чĕлхинчи хисеп категорийĕн пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене тĕплĕн çырса кăтартнă пулнă[7].

Чĕлхери (морфологири) хисеп категорине анлав категорийĕпе пăтраштарма кирлĕ мар.

Чăн пурнăçри япаласем, пулăмсем пирĕн куçа уйрăммăн та, ушкăнăн та, нумайăн та куранаççĕ. Пирĕн аславра е шухăшлавра вĕсем абстракциленеççĕ. Абстракциленнĕ нумайлăх тата пĕрреллĕх логика (анлав шухăшлав) категорийĕсем шутланаççĕ. Чĕлхере пĕрреллĕхе тата нумайлăха тĕрлĕрен палăртма пулать. Самахран, нумайлăха çак мелсемпе палăртатпăр:

1) аналитика (е синтаксис) мелĕпе, кун пек чухне япала ячĕ умĕнче ăна хисеп тĕлĕшĕнчен анлантаракан самахсем пулаççĕ: а) хисеп ячĕсем (*вуна çын, çĕр сурăх, тăхăр тăрна* т. ыт. те); ă) палла местоименисем (*пур çын перле пухăнсан; тепĕр кĕнеке; пĕтĕм тĕнче, ял калаçать, кашни утамрах*); б) палла мар местоименисем (*темиçе йывăç, темĕнле çын та пур* т. ыт. те);

2) синтетика (аффикс) мелĕпе: а) кун пек чухне нумайлăха палăртма пирĕн чĕлхере *-сем* аффикспа анла уса кураççĕ: *çынсем, кунсем, çулсем, кĕнекесем;* ă) *-шар(-шер)* валеçў хисепĕн аффиксĕпе: *Петĕрпе Нинăна икшер улма патăм* (4 улма): *Петĕрпе Нинăна пĕршер (пĕрер) улма патăм* (2 улма кăна*); б) япалан палла мар нумайлăхне япала ячĕн камăнлăх-сăпат категорийĕн 3-мĕш сăпат форми çумне пĕрлелĕх падеж аффиксне хушнипе: *-и(-ĕ) + -пе; ялĕпе ĕçе тухна;*

[7] Ашмарин Н. И. Опыт исследования чувашского синтаксиса. Казань, 1903. Ч. 1. С. 50—81.

* Танл.: *Петĕрпе Нинана виçшер улма патам (6 улма); Петĕрпе Нинана вуншар улма патам (20 улма); Вĕсене эпĕ икшер улма патам* тенĕ чухне валеçнĕ улмасен хисепĕ палла мар, мĕншĕн тесен ушканри çынсен шутне палартман.

в) -*серен* аффикспа: *килсерен телевизор* тени пӗр килте кӑна мар, темиҫе килте телевизор пуррине пӗлтерет;

3) сӑмаха икӗ хут каланипе (композици мелӗпе): *хир-хир урла каҫрӑмӑр, ял-ял витӗр тухрӑмӑр;* танл.: *хирсем урла каҫрӑмӑр, темиҫе хир урла каҫрӑмӑр; ялсем витӗр тухрӑмӑр, темиҫе ял витӗр тухрӑмӑр;* е сӑмахсене мӑшӑрлатса каланипе: *шӑна-пӑван, ҫӗлен-калта, апат-ҫимӗҫ, сӗт-турӑх* т. ыт. те;

4) лексика мелӗпе: *кетӳ, ушкӑн, эртел* т. ыт. те. Япала ятне икӗ хут калани нумайлӑха палӑртмалли мел шутланать, анчах та ӑна ниепле те «нумайла хисепе палӑртмалли... мел» тесе пӑхма май ҫук[8], мӗншӗн тесен чӑваш чӗлхинче нумайлӑ хисепӗн ятарлӑ аффиксӗ -*сем* кӑна.

Икӗ хут каланӑ сӑмахсем нумайлӑ хисеп аффиксне чылай чухне йышӑнсах каймаҫҫӗ: *хир-хирсем, уй-уйсем, ҫыр-ҫырсем* тени чӗлхере тӗл пулмасть. Анчах та калаҫу чӗлхинче *Ял-ялӗсем тырӑ вырма тухрӗҫ ӗнтӗ; Ял-ялсенче улӑм (тырӑ) валеҫсе панӑ тахҫанах* тенине илтме пулать. *Ял-ялӗсем* тени кунта ялсем темиҫе пулнине кӑна пӗлтермест, ҫав хушӑрах ҫав ялсенче пурӑнакан ҫынсене те палӑртать (*хурамалсем, элӗксем, муркашсем* тенӗ чухнехи пекех).

Мӑшӑр сӑмахсем (уйрӑмманах вӗсен иккӗмӗш компоненчӗсем) нумайлӑ хисеп аффиксне йышӑнаҫҫӗ: *ача-пача, ача-пачасем; уй-хир, уй-хирсем* е *уйсем-хирсем, атте-анне, атте-аннесем* т. ыт. те.

5) фонетика (е интонаци) мелӗпе: кун пек чухне япала ятӗнчи пӗр-пӗр уҫӑ сасса вӑрӑммӑн каланипе нумайлӑха уҫӑн палӑртма пулать, танл.: *Класра сӗтел ларать* тенӗ чухне эпир пӗр сӗтел пулнине контекстран тата калаҫу интонацийӗнчен сисетпӗр; *класра сӗт-е-е-л ларать; ача-а-а урамра...* тенӗ чухне пире калаҫу интонацийӗ тата юлашки сыпӑкри уҫӑ сасӑсене тӑсса калани япала питӗ нумай, унӑн хисепӗ паллӑ мар пулнине палӑртма май парать.

Нумайлӑха е пӗрреллӗхе палӑртмалли мелсем татах та пулма пултараҫҫӗ, анчах та чылай чухне япала пӗрре е нумай пулнине палӑртма контекст пулӑшать, танл.: *Уй варринче ларакан юман ҫулсерен йӗкел тӑвать* тенӗ чухне эпир юман пӗрре пулнине пӗлетпӗр, ҫав вӑхӑтрах пӗрреллӗ хисеп форминчи *йӗкел* сӑмах паллӑ мар нумайлӑха палӑртнине сисетпӗр. *Иртсе пӗтми юман ӳсет* тенӗ чухне *юман* сӑмах, пӗр-

[8] Павлов И. П. Морфологие ҫӗнӗ программӑпа вӗрентесси. Шупашкар, 1981. 21 с.



реллӗ хисеп форминче пулин те, ушкӑнла паллӑ мар нумайлӑха палӑртнине туятпӑр.

Н. К. Дмитриев хальхи пушкӑрт, тутар литература чӗлхинче подлежащипе сказуемӑй хисеп тӑрӑх килӗштерсе тӑнине палӑртать[9]. Хальхи чӑваш чӗлхи пирки те ҫавнах каламалла.

## 2 §. КАМАНЛӐХ-САПАТ КАТЕГОРИЙӖ

Чӑваш чӗлхинче те (ытти тӗрӗк чӗлхисенчи пекех) тӗпчевҫӗсем каманлӑх категорийӗ (е форми) пурри ҫинчен калаҫҫӗ. Каманлӑх форми тени тӗрӗсех мар пулӗ, мӗншӗн тесен чӑваш чӗлхинче каманлӑха кӑтартакан формӑсем пӗрпӗрине пӗлтерӗш тӗлӗшпе хирӗҫлеҫҫӗ, чылай япала ячӗпе ҫӳреҫҫӗ, ҫавна май категори шайне лараҫҫӗ. Каманлӑх категорийӗ тени ҫак халлӗнех ҫителӗксӗр пек туйӑнать, мӗншӗн тесен «хуҫине палӑртакан морфемӑсен» сапачӗсем куҫкӗретлӗ, ҫавӑнпа та ку категорине каманлӑх-сапат категорийӗ тесен тӗрӗсрех. Ҫапла вара, япала камӑн е мӗнӗн пулнине сапат аффиксӗсемпе кӑтартакан формӑсене каманлӑх-сапат категорийӗ темелле. Япала камӑн е мӗнӗн пулнине чӑваш чӗлхинче виҫӗ мелпе палӑртма пулать.

1. **Синтаксис мелӗпе:**

| | |
|---|---|
| *ман кӗнеке* | *пирӗн кӗнеке* |
| *сан кӗнеке* | *хамар ҫурт* |
| *хам ҫурт* | *сирӗн кӗнеке* |
| *хаван ҫурт* | *хавар ҫурт* |

2. **Синтаксис тата морфологи (аффикс) мелӗпе:**

| | |
|---|---|
| *ман кӗнекем* | *пирӗн кӗнекемӗр* |
| *сан кӗнеку* | *сирӗн кӗнекӗр* |
| *хаман кӗнекем* | *хамар кӗнекемӗр* |
| *хаван кӗнеку* | *хавар кӗнекӗр* |
| *хайӗн кӗнеки* | *хӑйсен кӗнеки* |

3. **Морфологи** (тӗрӗсрех: **аффикс) мелӗпе** (кун пек чухне япала ячӗ ҫумне тивӗҫлӗ сапат аффиксӗсем хушанса пыраҫҫӗ).

| | Пӗрреллӗ хисепре | Нумайла хисепре |
|---|---|---|
| 1 с. | *-м, -ам(-ӗм)* | *-м(-ар), -ам(-ар), -ӗм(-ӗр)* |
| 2 с. | *-у(-ӳ)* | *-ар(-ӗр)* |
| 3 с. | *-ӗ(-и)* | *-ӗ(-и)* |

Пӗрреллӗ хисепре

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ача-м* | *пуҫ-ам* | *кин-ӗм* | *шаши(й)-ӗм* |
| 2 с. | *ач-у* | *пуҫ-у* | *кин-ӳ* | *шаши(й)-ӳ* |
| 3 с. | *ач-и* | *пуҫ-ӗ* | *кин-ӗ* | *шаши(й)-ӗ* |

[9] Дмитриев Н. К. Категория числа // Исследование по сравнительной грамматике тюркских языков. Морфология. М.: Изд-во АН СССР, 1956. Ч. 2. С. 70—71.

Нумайла хисепре

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ача-мар* | *пуç-ам-ăр* | *кин-ĕ-мĕр* | *шаши(й)-ĕм-ĕр* |
| 2 с. | *ач-ар* | *пуç-ăр* | *кин-ĕр* | *шаши(й)-ер* |
| 3 с. | *ач-и* | *пуç-ĕ* | *кин-ĕ* | *шаши(и)-ĕ* |

*Шаши* сăмаха вĕçленĕ чух скобкăра илнĕ (й) сасă пирки кайрантарах калăпăр.

Япала ячĕ нумайлă хисепре пулнине палăртма ятарла *-сем* аффикс хушăнать.

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *ача-м-ар-сем* | *пуç-ам-ăр-сем* | *кин-ĕм-ĕр-сем* |
| 2 с. | *ач-ăр-сем* | *пуç-ар-сем* | *кин-ĕр-сем* |
| 3 с. | *ач-и-сем* | *пуç-е-сем* | *кин-ĕ-сем* |

Илсе кăтартнă тĕслĕхсенчен çакă курăнать: камăнлăх-сăпат категорийĕн хайĕн хисеп категорийĕ пур, кăна 1-мĕшпе 2-мĕш сăпат аффиксĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре пулнинчен тата япала ячĕ пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре тăнинчен куратпăр.

Камăнлăх-сăпат категорийĕнче пĕр харăс виçĕ грамматика категорийĕ тĕвĕленнĕ: 1) камăнлăх; 2) сăпат; 3) хисеп категорийĕсем: *кĕнекем* сăмахра кĕнеке калаканнин пулнине пелетпĕр (камăнлăх категорийĕ): *-м* сăпат аффиксĕ ку сăмах 1-мĕш сăпатра пулнине питĕ уçăмлăн кăтартать (сăпат категорийĕ); *-сем* нумайлă хисеп аффиксĕ çукки ку сăмах форми пĕрреллĕ хисепре тăнине пĕлтерет;

*кĕнекем* сăмах формипе те, пĕлтерĕшпе те *кĕнекемĕр, кĕнекесем, кĕнекемĕрсем* тенисене хирĕçлет, апла пулсан, пĕрпĕрне хире-хирĕç тăракан пĕр йышши пĕлтерĕшлĕ формăсен системине йĕркелет. Кăна эпир морфологи тишкерĕвĕнче уçăмлă кăтартма пултаратпăр:

*кĕнекемĕр* — япала ячĕ, сăмах тĕпĕ — *кĕнеке*, пĕрремĕшле сăмах, пайăр мар ят, камăнлăх категорийĕн 1-мĕш сăпатĕнче, япала ячĕ пĕрреллĕ хисепре, сăпат аффиксĕ нумайлă хисепре, тĕп падежра;

*кĕнекемсем* — япала ячĕ, сăмах тĕпĕ—*кĕнеке*, пĕрремĕшле сăмах, пайăр мар ят, камăнлăх категорийĕн 1-мĕш сăпачĕ, япала ячĕ нумайлă хисепре, сăпат аффиксĕ пĕрреллĕ хисепре, тĕп падежра.

Камăнлăх-сăпат категорийĕн 1-мĕш тата 2-мĕш сăпачĕсенче хисеп категорийĕ икĕ тĕрлĕ йĕркеленет:

1) сăпат аффиксĕсем пĕрреллĕ тата нумайлă хисепре пулаççĕ; кунта нумайла хисеп аффиксĕ *-ар(-ĕр)* пулать;

2) япала ячĕ хăй пĕрреллĕ тата нумайла хисепре пулать; нумайлă хисеп аффиксĕ кунта — *-сем*. Чăваш чĕлхинче те, ытти тĕрĕк чĕлхинчи пек, нумайлă хисеп аффиксне камăнлăх-сăпат аффиксĕ умне лартнă тĕслĕхсем тĕл пулаççĕ:



*Тăвансемĕр*, **пĕрле чухне,**
Ай, юрлар-и юррине (Давыдов-Ан.).

Камăнлăх-сăпат категорийĕн аффиксне нумайлă хисеп форми хыççăн лартнă тĕслĕхсенче чĕнӳ пĕлтерĕшĕ малти вырăна тухса тăрать.

Мускав урамĕнче плакат:
*Атьсемĕр!* Хыçăмăр Мускав-çке (Хус.).

*Таванарсем, ачарсем* формăсенче çирĕплету пĕлтерĕшĕ палăрать, чĕнӳ пĕлтерĕшĕ вĕсенче пачах та çук.

Асăрхар: хушу наклоненийĕнчи *-ар(-ĕр)* 2-мĕш сăпат аффиксĕ чылай чухне *-сам(-сем)* аффикс хыççăн тăрать, кун пек форма ĕç тума евĕклĕн ыйтнине е хушнине пĕлтерет.

Çеçен хирте пĕр авăс —
Ăн *кассамăр* çивчĕ пуртапа.
Çака килте пĕр вăтă —
Ăн *каласамăр* сив сăмах (фольк.);

Çĕнтеру юрри вĕçлетĕп,
*Тултарсамăр* куркара (Хус.).

Камăнлăх-сăпат категорийĕ чăваш чĕлхинче хисеп категорийĕ тĕлĕшĕнчен тăватă тĕслĕ пулнине асăрхатпăр:

1) япала ячĕ те, сăпат аффиксĕ те пĕрреллĕ хисепре: *çуртăм, çурту, çурчĕ; пуçăм, пуçу, пуçĕ;*

2) япала ячĕ пĕрреллĕ хисепре, сăпат аффиксĕ нумайлă хисепре: *çуртăмăр, çуртăр.*

Асăрхаттару. Уйрамман илсе кăтартнă *кĕнеки, куçĕ* сăмахсенче «сăпачĕ нумайлă хисепре» пулнине ниепле те ĕнентерме çук[10], тĕрĕссипе кунта сăпат аффиксĕ нумайла хисепре мар, пĕрреллĕ хисепрех пулать;

3) япала ячĕ нумайлă хисепре, сăпат аффиксĕ — пĕрреллĕ хисепре: *çуртамсем, çуртусем, çурчĕсем; ачамсем, ачусем; ачисем;*

4) япала ячĕ те, сăпат аффиксĕ те нумайлă хисепре: *çуртамарсем, çуртарсем; ачамарсем, ачарсем.*

Асăрхаттару. Уйрамман илсе пана *кĕнекисем, куçĕсем* тĕслĕхсенче «сăпачĕ нумайлă хисепре» пулнине палăртма май çук[11].

Çулерех каланине таблица туса кăтартма пулать (ӳкерчĕке И. П. Павлов кĕнекинчен илнĕ, анчах унта çĕнĕлĕхсем кĕртнĕ).

Таблицăна пăхнă чухне çакна шута илмелле: а) [а, е] уçă сасăпа пĕтекен сăмахсем çумне 1-мĕш сăпат аффиксĕ *-м* ху-

[10] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 16 с.
[11] Павлов И. П. Асаннă ĕç. 76 с.

| Сапатсем | Япала ячĕсен тата сапатсен хисепĕсем | | | |
|---|---|---|---|---|
| | Япала ячĕ те, сапат аффиксĕ те пĕрреллĕ хисепре | Япала ячĕ пĕрреллĕ хисепре, сапат аффиксĕ нумайла хисепре | Япала ячĕ нумайла хисепре, сапат аффиксĕ пĕрреллĕ хисепре | Япала ячĕ те, сапат аффиксĕ те нумайла хисепре |
| 1-мĕш с. | *-м*<br>*-ам*<br>*-ĕм* | *-м-ар*<br>*-ам-ар*<br>*-ĕм-ĕр* | *-м-сем*<br>*-ам-сем*<br>*-ĕм-сем* | *-м-ар-сем*<br>*-ăм-ăр-сем*<br>*-ĕм-ĕр-сем* |
| 2-мĕш с. | *-у, -ў* | *-ар, -ĕр* | *-у-сем*<br>*-ў-сем* | *-ар-сем*<br>*-ĕр-сем* |
| 3-мĕш с. | *-ĕ, -и* | *-ĕ* сапат аффиксĕ *-и* кунта пĕрреллĕ хисепрех юлать | *-ĕ-сем*<br>*-и-еем* | *-ĕ-сем* сапат *-и-сем* аффиксĕ кунта каллех пĕрреллĕ хисепрех юлать |

шанать: *ача-м, лаша-м, ĕне-м, урапа-м, çуна-м; ача-м-ар, ача-м-ар-сем* т. ыт. те; а) 3-мĕш сапатăн *-ĕ, -и* аффиксĕсем пур çĕрте те пĕрреллĕ хисеп форминчех юлаççĕ: *ун ачи, вĕсен ачи* тĕслĕхсенчи *ачи* самаха кашнинчех çапла тишкерў тумалла: *ачи* — япала ячĕ, самах тĕпĕ — *ача*, пĕрремĕшле самах, пайар мар ят, каманлах категорийĕн 3-мĕш сапатĕнче, япала ячĕ те, сапат аффиксĕ те пĕрреллĕ хисепре, тĕп падежра.

Каманлах-сапат аффиксĕсене йышăннă чух сăмах тĕпĕпе аффикс çĕвĕкĕнче çакан пек улшанусем пулса иртеççĕ:

а) енчен те самах [а, е] уçа сасапа пĕтет пулсан, 2-мĕш тата 3-мĕш сапат аффиксĕсем хушанна чух самах тĕпĕнчи [а, е] сасасем тухса ўкеççĕ:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 2 с. | *лаш-у* | *ён-у* | *тих-у* | *качак-у* |
| 3 с. | *лаш-и* | *ён-и* | *тих-и* | *качак-и* |

а) япала ячĕ [а, ĕ] сасасемпе пĕтет пулсан, вĕсен умĕнче пĕр хупа саса çеç пулсан, çав хупа саса ҫарамланать:

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *пуллам* | *сĕллĕм* | *туллăм* |
| 2 с. | *пуллу* | *сĕллу* | *туллу* |
| 3 с. | *пулли* | *сĕлли* | *тулли е тулĕ* |

б) [у, ў] сасасемпе пĕтекен япала ячĕсенче çав сасасем [а, ĕ] сасасемпе ылмашанаççĕ те — 1-мĕшпе 2-мĕш сапат



аффиксĕсем умĕн (в) хушмасаса (интерфонема) кĕрсе ларать, 3-мĕш сапат аффиксĕ умĕн (ш) хушмасаса (интерфонема) пулать тени чĕлхе вĕрентĕвĕнче хуçаланать:

| | кĕрў | пару | çыру |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *кĕрĕ(в)-ĕм* | *пара(в)-ам* | *çыра(в)-ам* |
| 2 с. | *кĕрĕ(в)-у* | *пара(в)-у* | *çырă(в)-у* |
| 3 с. | *кĕру(ш)-ĕ* | *пара(в)-ĕ е пăру(ш)-ĕ* | *çырă(в)-ĕ* |

Танл.: *вĕсен тына пăрушĕ (паравĕ);* калаçу чĕлхинче икĕ варианчĕ те тĕл пулать; хаш-пĕр чух 2-мĕш сапат форминчи (в) хушмасасса каламасан та пултараççĕ: *Миçе хут вуламарам-ши сан кĕске çыруна* (Арт.). Кунта *çыравуна* теес выранне кĕскен *çыруна* тенĕ, *сан* местоимени пурри ун пĕлтерĕшне тĕрĕс анланма пулăшать.

## 3 §. ЯПАЛА ЯЧĔСЕН ПАДЕЖ (ВĔÇЛЕВЛĔХ) КАТЕГОРИЙЕ

Хальхи чаваш чĕлхинче 8 падеж пуррине палартаççĕ.

| | Ыйтавĕсем | Аффиксĕсем |
|---|---|---|
| Тĕп | *кам? мĕн?* | *-ăн(-ĕн, -н)* |
| Каманлах | *камăн мĕнĕн?* | *-а, -е* |
| Пару | *кама? мĕне?* | |
| Выран | *камра? мĕнре?* | *-ра(-ре), -та(-те), -че* |
| Туху | *камран? мĕнрен?* | *-ран(-рен), -тан(-тен), -чен* |
| Пĕрлелĕх | *кампа? мĕнпе?* | *-па(-пе)* |
| Çуклах | *камсăр? мĕнсĕр?* | *-сар(-сĕр)* |
| Пирке | *камшан? мĕншĕн?* | *-шан(-шĕн)* |

Падежсен хисепĕ пур чĕлхере те пĕр пек мар. Тĕслĕхрен, абхазсен чĕлхинче падежсем çук теççĕ: финсен чĕлхинче вара вĕсен шучĕ — 15. Хаш-пĕр чĕлхесенче падежсен хисепĕ 25 çитни те пур. Ĕлĕкрех акалчан чĕлхинче падежсем пулна, хальхи акалчан чĕлхинче вĕсем хайсен пĕлтерĕшне çухатна.

Чанах та, мĕне кура-ха эпир чаваш чĕлхинче 8 падеж пуррине катартатпар? Тен, падежсен хисепне палартна чух пĕлтерĕше кана тĕпе хумалла? Апла тусан хальхи пару-таву падеж тытамĕнче татах та темиçе падеж пуррине палартма май пулна пулĕччĕ: 1) *командира пĕлтернĕ* — парў-таву падежĕ; 2) *армана кайна* — сулану падежĕ; 3) *çырлана кайна* — тĕллев падежĕ; 4) *Мирунпа Хаврунь пыраççĕ* тенĕ чух — çывахлах падежĕ; 5) *çĕре плугпа сухалаççĕ* — карал падежĕ; 6) *варманпа пыраççĕ* — выран падежĕ.

Асархарар пулĕ, пĕлтерĕше кана шута хунипе пирĕн пĕр формалла темиçе падеж пулса кайна пулĕччĕ, вара вал е ку самах хаш падежрине патраштарма пуçланă пулаттамар. Тĕслĕхрен, *Çак шухашпа вал правление пырса кĕчĕ* тенĕ чух-

не, *шухашпа* тенине абстрактла пĕлтерĕшлĕ падежсен шутне кĕртме лекĕччĕ.

Самахсен синтаксисри пĕлтерĕшĕпе функцине тĕсесен, пирĕн чĕлхере çакан пек падежсем пулмалла: подлежащи падежĕ, определени *(йываç çурт, чул хуме)*, дополнени (кунта хальхи тĕп мар падежсем пурте кĕнĕ пулеччеç), обстоятельство (кунта та тĕп мар падежсем пурте пулна пулеччеç) тата сказуемай падежĕ (кунта тĕп, каманлах, выран паде-жĕнчи япала ячĕсем, формисем кĕнĕ пулĕччĕç).

Ку йĕркепе те падежсене палартса тухма май çукки куç умĕнчех.

Падежсене пĕр-пĕринчен уйарна чухне самахан формине (морфологи паллине) кана шута илни те çителĕксĕр.

Пĕр вахатра 3-мĕш сапат аффиксне йышанна япала ячĕсен вĕçленĕвĕнче [н] саса пулать пулсан, çав формасене кана падеж формисем тесе шутламалла текен шухаш та çурална пулна: *сĕтелĕ — сĕтелĕн, сĕтелне, сĕтелĕнче, сĕтеленчен, сетел-пе, сĕтелĕ-сĕр, сĕтел-шĕн.* Ку принципа кана шута илсен, хальхи падежсен системинчен пĕрлелĕх, çуклах, пирке падежĕсем тухса ӳкмелле, тĕп падеж та хай выранне йышанма тивĕçлĕ мар.

Апла пулсан, падежсен хисепне палартна чухне пĕр харасах грамматика формине те, çав форман пĕлтерĕшне те, падеж аффикссене йышанна самахсен синтаксисри функцине те шута илмелле. Çавсене пĕтĕмĕшле пĕрле илсе пахнипе хальхи чĕлхере 8 падеж пуррине палартаççĕ те ĕнтĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, падежсен хисепне палартна чух самахсен морфологи паллисене те, синтаксисри пĕлтерĕшне те, самахан семантикине те шута илмелле.

Асанна 8 падежан кашниййĕнех хайĕн форми пур, формине кура тата контекстри самахсен çыханавне шута илсе, эпир вĕсен пĕлтерĕшне уçамлах палартма пултаратпар. Нихаш падежан та форми тепĕр падеж формипе пĕр килсе тухмасть. Çавна май эпир самах хаш падежрине тӳрех калама пултаратпар. Формине кура ку падежсен хайсене тивĕçлĕ тĕп ыйтавĕсем пур (вĕсем кашни падежанах иккĕ): *кам-мĕн? кама-мĕне? кампа-мĕнпе..?* Анчах асархар: ку ыйтусем кашни вĕçленекен самахах пырса тивеççĕ, хаш-пĕр ыйтусем вара уйрам япала ячĕсемпе кана çыханна.

Падежсен ыйтавĕсем самахан формипе пĕлтерĕшне тата синтаксисри функцине кура тĕрлĕрен пулма пултараççĕ.



Пулса кайни енчен пахсан, чаваш чĕлхинчи падежсене икĕ ушкана уйарма пулать:

1) авалах пулса кайнисем;
2) хальтерех пулса кайнисем.

Авал пулса кайна падежсем ытти тĕрĕк чĕлхисенче те пур: тĕп, каманлах, пару, таву, выран, туху падежĕсем. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче пару тата таву падежĕсем уйрамман çуреççĕ (мĕншĕн тесен формипе те, пĕлтерĕшĕсемпе те пĕр-пĕринчен уйаралса тараççĕ), чаваш чĕлхинче ку икĕ падеж формисем пĕрлешсе пĕр падеж пулса тана.

Чаваш чĕлхинчи пĕрлелĕх падежĕн *-па(-пе)* аффиксĕ те хыççамахран пулса кайна: *-па(-пе)~пала(пеле), палан(пелен) < бирлен.* Хаш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче те, самахран казах чĕлхинче, *билен, биле* хыççамах аффикса куçса кайна: *биз поезбен калдик* ~ чав. *эпир поездпа килтĕмĕр; биз қайқпен жуздик* ~ чав. *эпир лодкапа ишрĕмĕр.*

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче çуккисем хальтерех пулса кайнисем шутне кĕреççĕ: çуклах, пирке, пĕрлелĕх падежĕсем. Халĕ тĕп падежа уйрамман пахса тухар.

## 4 §. ТĔП ПАДЕЖ (ВĔÇЛЕВЛĔХ)

Тĕп падеж тени чаваш чĕлхинче çĕнĕ падеж шутланмасть, дискуссиччен (дискусси хыççан та шкул учебникĕсенче) ана ят падежĕ тенĕ. Тĕп падежан, ытти падежсемпе танлаштарсан, аффиксĕ çук. Аффикссарскер вал ытти тĕп мар падежсене хирĕçлет, мĕншĕн тесен ыттисен пурин те хайсене тивĕç аффикссем пур. Ку таранччен грамматикасенче нихашĕнче те тĕп падеж çукки çинчен калани пулман, анчах та юлашки вахатра тĕп падежа, унан аффиксĕ çуккине кура падеж категорийĕнче тама пултарайман япала тесе пахма пуçларĕç[12].

Тĕрĕк чĕлхисенче тĕп падеж çуккине кура В. Г. Гузеевпа Д. Н. Насилов çакан пек сăлтавлаççĕ: тĕрĕк чĕлхисенчи пĕрреллĕ хисепĕн ятарла аффиксĕ çук, апла пулсан, пĕрреллĕ хисеп категорийĕ çинчен калаçу та пулма кирлĕ мар; каманлах категорийĕн тĕп формине категори форми теме май çук, тĕрĕссипе ана никам та ку таранччен каманлах категорине кĕртмен, çапла вара, (нуль) аффиксла тĕп падеж форми те падеж системинче тамалла мар.

[12] Гузеев В. Г., Насилов Д. М. Словоизменительные категории в тюркских языках и понятие «грамматическая категория» // Вопросы языкознания. 1981. № 3. С. 26—27, 29.

Кун пек шухаш халӗ ҫес сурална шухаш мар. Тӗслӗхрен, пирӗн ӗмӗр пуҫламашӗнчех Гуго Шухардт тӗрек челхисенче (тӗп) падеж сукки ҫинчен ҫырна[13].

Каманлӑх категорийӗн тӗп форми сукки акӑлчан челхесине Ч. Е. Базелла (Байзелла) агглютинацилле челхесенче хисеп категорийӗпе падеж (вӗҫлену) категорийӗсене урахларах ӑнлантармалла текен шухӑш патне илсе ҫитерне[14].

Тӗп падеж форми ытти падеж аффиксӗсене хушанмалли никӗс шутланать, ҫавӑнпа та унан ячӗ — тӗп падеж, вал самах тымарӗпе (*ача, кин, ар, кун, хӗвел*) е иккӗмешле самахӑн тӗпӗпе (*юманлах, пӗлтерӳ, ентеш, йахташ, пара, пелӳ*) тӳр килет. Падеж аффиксӗсене йышанман перремешле тата иккӗмӗшле пур самахсене тӗп падежра пулнине палартмалла. Енчен те *сын, пурт, юман, сисӗм, чечек, хӗвел* самахсен хисепне тата тӗп падежра пулнине кӑтартмасан вӗсен морфологи паллисем сук пек пулса тухать.

Тӗп падежан ыйтавӗсем: *кам? (Петер, ача, хӗрарӑм, кин, ывал); мӗн? (ӗне, пару, ҫеҫке, арлан, кенеке); хасан? (кер каять, сур килет); мӗн чухлӗ? (ҫулталак, уйах, эрне* (ҫитре); *мӗнле? (чул ҫурт, ывал ача, ама хур*). Тӗп падежри самахан пӗлтерӗшӗсем тӗрлӗрен пулма пултараҫҫе:

а) предложенире тӗп падежри самах подлежащи пулсан унан субъект пӗлтерӗшӗ пуррине палартаҫҫӗ: *ача вулать, хӗр юрлать, атте ӗҫлет;*

а) предложенире *вал* дополнени пулать пулсан, унан объект пӗлтерӗшӗ пур теҫҫӗ: *вӗсем кӗнеке вуласҫе.*

Изафет I самах майлашавӗсенчи пке япала ячӗ те тӗп падежра тараҫҫе; ун пек чухне пӗрремӗш самахӗн ҫакан пек пӗлтерӗшсем пулма пултараҫҫӗ:

а) япалана мӗнрен тунине кӑтартасси: *тимӗр кереҫе, чул ҫурт, ылтан сехет; ҫӗмӗрт пӗкӗ, юман пичке;*

а) япалан висине палартасси: *пат тырӑ, кило премек, тонна сӗлӗ;*

б) япала хӑш ушкана кӗнине пӗлтересси: *хӗрарӑм учитель, тутар врач, тус аппа.*

---

[13] Кун пирки О. П. Суник ҫырна «Существительное в тунгусо-маньчжурских языках» (Л., 1982) кӗнекере (163 с.) вуласа пелме пулать.

[14] Базелл Ч. Е. Лингвистическая типология // Принципы типологического анализа языков различного строя. М.: Наука, 1972. С. 23. Вал ҫапла сырна: «Отсюда возникает вопрос, не указывает ли так называемый нулевой суффикс именительного падежа просто на отсутствие падежа, а так называемый нулевой суффикс единственного числа просто на отсутствие числа».



в) япалана мӗнпе танлаштарнине систересси: *мак сухал, шарт ҫуҫ, ҫурла уйах.*

Изафет II самах майлашавӗсенчи пӗрремӗш компонент, тӗп падежри самах:

а) каманлаха кӑтартать: *атте парни, юлташ самахӗ;*

а) япалан сыханавне палартать: *парти членӗ, ӗне какайӗ, юман вутти;*

б) тӗллеве пӗлтерет: *хресчен ҫурчӗ, кирпӗч завочӗ, ҫӗвӗ фабрики.*

Тӗп падежри япала ячӗ глаголсемпе те ҫыхӑнура тӑма пултарать, ун пек чухне унан ҫак пӗлтерӗшсем палараҫҫӗ:

а) вахат:

Ҫӗнӗ **кун** пуҫланчӗ
Пирӗн ҫӗршывра.
Ес юрри шаранчӗ
Пӗтӗм таврара (юраран).

а) тӳрӗ объекта пӗлтерет: *ҫыру ҫырманни уйах та иртрӗ пулӗ.*

Тӗп падежри япала ячӗсен пӗлтерӗшӗсем кунпах вӗҫленмеҫҫӗ. Ҫӳлерех эпир тӗп падежри пӗрремӗшле е иккӗмӗшле япала ячӗсем изафет самах майлашавӗсенче пулнине тата глаголсемпе ҫыханнине кана санарамар, ҫавна май вӗсен хаш-пӗр пӗлтерӗшсене ҫеҫ палартрамар.

Тӗп падежри япала ячӗсен тата ҫакан пек уйрӑмлах пур: вал е ку грамматика форминчи самах та тӗп падежра пулать. Самахран, каманлах категорийӗнчи *тусам, тусу, тусӗ, тусӑмӑр, тусӑр* формисем пурте тӗп падежра пулаҫҫӗ, вӗсен, паллах, каманлаха палартас сӗмӗ тӗп выранта тарать. Нумайла хисепри япала ячӗсем те (*ҫынсем, ялсем, хуласем, ҫӑлтарсем*) тӗп падежри самахсемех, апла пулсан, тӗп падеж формин тӗп тӗллевӗ — япала нумаййине палартасси.

*Юлташанни, куршӗнни* йышши паларту форминчи япала ячӗсем те тӗп падежра шутланаҫҫӗ. Кун пек чухне япала каман пулнине палартса калас пӗлтерӗш тӗп вырана тухса тарать.

Ытти пуплев пайӗсене кӗрекен самахсем тата вӗсен формисем вӗҫленнине шута илсен тӗп падежан пӗлтерӗшӗсем тӗрлӗрен те виҫесӗр нумай пулнине палартмалла.

Тӗп падежри япала ячӗ предложенире тӗрлӗрен член пулма пултарать:

1) подлежащи: *Ут* юртать. Ут юртна-юртна майӗн
Лаппи-лаппи юр вӗҫсе юлать (Яковлев);

2) сказуемай: Чанлах — пархатарла *ӗҫ* (Эйзин);
Тӗрлӗ ташмансемшӗн — ҫивӗч *хӗҫ* (Эйзин);

3) определени: Тахçанах çак *йывăç* кĕпере
Эп курасшăн çунначчĕ тепре (Хус.);

4) дополнени: Çĕнĕ çынна тимлĕ санаса пахна хыççăн *сигарет* чĕртрĕ (Вутлан).

## § 5. ЯПАЛА ЯЧĔСЕН ВĔÇЛЕНУ ПАРАДИГМИ

### I. Самах вĕçленĕвĕ

#### 1. Хупа сасăсемпе пĕтекен самахсем

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *юман* | *керек* | *парк* | *нефть* |
| К. | *юманăн* | *кĕрĕкĕн* | *паркăн* | *нефтьĕн* |
| П. | *юмана* | *кĕрĕке* | *парка* | *нефтье* |
| В. | *юманра* | *кĕрĕкре* | *паркра* | *нефтьре* |
| Т. | *юманран* | *кĕрĕкрен* | *паркран* | *нефтьрен* |
| П. | *юманпа* | *кĕрĕкпе* | *паркпа* | *нефтьпе* |
| Ç. | *юмансăр* | *кĕрĕксĕр* | *парксăр* | *нефтьсĕр* |
| П. | *юманшăн* | *кĕрĕкшĕн* | *паркшăн* | *нефтьшĕн* |

#### 2. [А, е] уçа сасăсемпе пĕтекен самахсем

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *качака* | *алгебра* | *чере* | *черне* |
| К. | *качакан* | *алгебран* | *чĕрен* | *чернен* |
| П. | *качакана* | *алгебрана* | *чĕрене* | *чĕрнене* |
| В. | *качакара* | *алгебрара* | *чĕрере* | *чĕрнере* |
| Т. | *качакаран* | *алгебраран* | *чĕререн* | *чĕрнерен* |
| П. | *качакапа* | *алгебрапа* | *черепе* | *чĕрнепе* |
| Ç. | *качакасар* | *алгебрасар* | *чĕресĕр* | *чĕрнесĕр* |
| П. | *качакашан* | *алгебрашан* | *чĕрешĕн* | *чĕрнешĕн* |

#### 3. [Ă, ĕ] сасăсемпе пĕтекен самахсем

а) [а, ĕ] умĕн пер хупа сасă пулнă чух

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *тура* | *каçа* | *чĕпĕ* | *кĕçĕ* |
| К. | *туррăн* | *каçăн* | *чĕппĕн* | *кĕçĕн* |
| П. | *турра* | *каçça* | *чĕппе* | *кĕççе* |
| В. | *турара* | *каçара* | *чĕпĕре* | *кĕçĕре* |
| Т. | *тураран* | *каçаран* | *чĕпĕрен* | *кĕçĕрен* |
| П. | *турапа* | *каçапа* | *чĕпĕпе* | *кĕçĕпе* |
| Ç. | *турасар* | *каçасар* | *чĕпĕсĕр* | *кĕçĕсĕр* |
| П. | *турашан* | *каçашан* | *чĕпĕшĕн* | *кĕçĕшĕн* |

а) [а, ĕ] умĕн икĕ хупа саса тăна чух

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *çулçа* | *ĕнчĕ* | *тенкĕ* |
| К. | *çулçан* | *ĕнчĕн* | *тенкĕн* |
| П. | *çулçа е çулçăна* | *ĕнче (ĕнчĕне)* | *тенке (тенкĕне)* |
| В. | *çулçара* | *ĕнчĕре* | *тенкĕре* |
| Т. | *çулçаран* | *ĕнчĕрен* | *тенкĕрен* |
| П. | *çулçапа* | *ĕнчĕпе* | *тенкĕпе* |
| Ç. | *çулçăсăр* | *ĕнчĕсĕр* | *тенкĕсĕр* |
| П. | *çулçăшăн* | *ĕнчĕшĕн* | *тенкĕшĕн* |



#### 4. [и] сасапа пĕтекен самахсем

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *Нарспи* | *çерçи* | *изложени* |
| К. | *Нарспин* | *çерçин* | *изложенин* |
| П. | *Нарспие* | *çерçие* | *изложение* |
| В. | *Нарспире* | *çерçипе* | *изложенире* |
| Т. | *Нарспирен* | *çерçирен* | *изложенирен* |
| П. | *Нарспипе* | *çерçипе* | *изложенипе* |
| Ç. | *Нарсписĕр* | *çерçисĕр* | *изложенисĕр* |
| П. | *Нарспишĕн* | *çерçишĕн* | *изложенишĕн* |

#### 5. [У, у] сасăсемпе пĕтекен самахсем

| | | |
|---|---|---|
| Т. | *кану* | *çĕнтеру* |
| К. | *канăван* | *çĕнтерĕвĕн* |
| П. | *канава* | *çĕнтерĕве* |
| В. | *канура* | *çĕнтеруре* |
| Т. | *кануран* | *çĕнтерурен* |
| П. | *канупа* | *çĕнтерупе* |
| Ç. | *канусăр* | *çĕнтерусĕр* |
| П. | *канушăн* | *çĕнтерушĕн* |

#### 6. Вырăс чĕлхинчен е ун урлă йышăннă самахсем

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *кино* | *власть* | *кофе* | *Гвинея* |
| К. | *кинон* | *влаçăн* | *кофĕн* | *Гвинейăн* |
| П. | *кинона* | *влаçа* | *кофĕне* | *Гвинейăна* |
| В. | *кинора* | *влаçра* | *кофĕре* | *Гвинейăра* |
| Т. | *киноран* | *влаçран* | *кофĕрен* | *Гвинейăран* |
| П. | *кинопа* | *влаçпа* | *кофĕпе* | *Гвинейăпа* |
| Ç. | *киносар* | *влаççар* | *кофĕсĕр* | *Гвинейăсар* |
| П. | *киношан* | *влаçшан* | *кофĕшĕн* | *Гвинейăшăн* |

#### 7. Çын хушамачĕсен вĕçленĕвĕ

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *Андреев* | *Андреева* | *Павловская* |
| К. | *Андреевăн* | *Андреевăн* | *Павловскаян* |
| П. | *Андреева* | *Андреевăна* | *Павловскаяна* |
| В. | *Андреевра* | *Андреевăра* | *Павловскаяра* |
| Т. | *Андреевран* | *Андреевăран* | *Павловскаяран* |
| П. | *Андреевпа* | *Андреевăпа* | *Павловскаяпа* |
| Ç. | *Андреевсăр* | *Андреевăсар* | *Павловскаясар* |
| П. | *Андреевшăн* | *Андреевăшăн* | *Павловскаяшăн* |

### II. Самах формин вĕçленĕвĕ

#### 1. Нумайлă хисепри япала ячĕсен вĕçленĕвĕ

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *çынсем* | *Ивансем* | *аттесем* |
| К. | *çынсен* | *Ивансен* | *аттесен* |
| П. | *çынсене* | *Ивансене* | *аттесене* |
| В. | *çынсенче* | *Ивансенче* | *аттесенче* |
| Т. | *çынсенчен* | *Ивансенчен* | *аттесенчен* |
| П. | *çынсемпе* | *Ивансемпе* | *аттесемпе* |
| Ç. | *çынсемсĕр* | *Ивансемсĕр* | *аттесемсĕр* |
| П. | *çынсемшĕн* | *Ивансемшĕн* | *аттесемшĕн* |

**2. Каманлах-сапат категорийӗнчи япала ячесен вӗҫленӗвӗ**

1-мӗш сапат

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *юлташам* | *ӗмӗрӗм* | *аттемӗр* |
| К. | *юлташаман* | *ӗмӗрӗмӗн* | *аттемӗрен* |
| П. | *юлташама* | *емӗрӗме* | *аттемере* |
| В. | *юлташамра* | *ӗмӗрӗмре* | *аттемӗрте* |
| Т. | *юлташамран* | *ӗмӗрӗмрен* | *аттемертен* |
| П. | *юлташампа* | *ӗмӗрӗмпе* | *аттемерпе* |
| Ҫ. | *юлташамсар* | *емӗрӗмсӗр* | *аттемӗрсер* |
| П. | *юлташăмшан* | *ӗмӗрӗмшӗн* | *аттемершен* |

2-мӗш сапат

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *юлташу* | *ӗмӗру* | *аҫар* |
| К. | *юлташун* | *ӗмӗрун* | *аҫаран* |
| П. | *юлташна* | *ӗмӗруне (ӗмӗрна)* | *аҫара* |
| В. | *юлташунта* | *ӗмӗрунте* | *аҫарта* |
| Т. | *юлташунтан* | *ӗмӗрунтен* | *аҫăртан* |
| П. | *юлташупа* | *ӗмӗрупе* | *аҫарпа* |
| Ҫ. | *юлташусăр* | *ӗмӗрусӗр* | *аҫарсар* |
| П. | *юлташушан* | *ӗмӗрушӗн* | *аҫăршан* |

3-мӗш сапат

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *юлташӗ* | *ӗмӗре* | *ачи* |
| К. | *юлташӗн* | *ӗмӗрӗн* | *ачин* |
| П. | *юлташне* | *ӗмӗрне* | *ачине* |
| В. | *юлташӗнче* | *ӗмӗрӗнче* | *ачинче* |
| Т. | *юлташӗнчен* | *ӗмӗрӗнчен* | *ачинчен* |
| П. | *юлташӗпе* | *ӗмӗрӗпе* | *ачипе* |
| Ҫ. | *юлташӗсӗр* | *ӗмӗрӗсӗр* | *ачисӗр* |
| П. | *юлташӗшӗн* | *ӗмӗрӗшӗн* | *ачишӗн* |

**3. -и паларту аффиксӗ йышанна пӗрреллӗ хисепри япала ячӗсен вӗҫленӗвӗ**

| | Тулли форма | Кӗске форма | |
|---|---|---|---|
| Т. | *куршӗнни* | *куршӗнни* | *варманти* |
| К. | *куршӗннин* | *куршӗннин* | *вармантин* |
| П. | *куршӗннине* | *куршӗнне* | *вармантине* |
| В. | *куршӗннинче* | *куршӗнче* | *вармантинче* |
| Т. | *куршӗннинчен* | *куршӗнчен* | *вармантинчен* |
| П. | *куршӗннипе* | *куршӗнпе* | *вармантипе* |
| Ҫ. | *куршӗннисӗр* | *куршӗнсӗр* | *вармантисер* |
| П. | *куршӗннишӗн* | *куршӗншӗн* | *вармантишен* |

**4. -и паларту аффиксӗ йышанна нумайла хисепри япала ячӗсен вӗҫленӗвӗ**

| | Тулли форма | Кӗске форма |
|---|---|---|
| Т. | *юлташсенни* | *юлташсенни* |
| К. | *юлташсеннин* | *юлташсеннин* |
| П. | *юлташсеннине* | *юлташсенне* |
| В. | *юлташсеннинче* | *юлташсенче* |
| Т. | *юлташсеннинчен* | *юлташсенчен* |
| П. | *юлташсеннипе* | *юлташсенпе* |
| Ҫ. | *юлташсеннисӗр* | *юлташсенсӗр* |
| П. | *юлташсеннишӗн* | *юлташҫеншӗн* |

Асархаттару. Кӗске формасемпе ытларах калаҫу чӗлхинче ус кураҫҫӗ.



## 6 §. ПАДЕЖ СИСТЕМИНЕ КӖМЕН ФОРМĂСЕМ

Падеж системине кӗмен формăсем ҫинчен чăваш чӗлхе наукинче никам та, ниҫта та пӗтӗмлетсе тӗплӗн ҫырса катартни ҫук. «Падеж системине кӗмен формăсем» текен сăмах ҫавранăшӗ чи малтанхи хут 1981 ҫулта тухна «Чӗлхе пӗлӗвӗсен программинче» тӗл пулать[15].

1989 ҫулта ку программăна ҫӗнетсе «Хальхи чăваш чӗлхи» ятпа кăларна. Малтанхинче те, каярахпа тухна программăра та ҫакăн пек йӗркесем пур: «Падеж системине кӗмен формăсем, вӗсен аффиксӗсем: *-алла(-елле), -чен, -серен, -ҫемӗн* т. ыт. те». Ку формăсен пӗлтерӗшӗсемпе уйрăмлăхӗсем, т. ыт. те (тата ыттисем те) тени падеж системине кӗмен формăсем чӗлхемӗрте татах та пулнине ҫирӗплетет. Ку ӗҫре вӗсене пур енлӗн тӗпчесе ҫырса кăтартас тӗллев лартман, падеж формисене кӗскен ҫырса кăтартнипех ҫырлахна.

Падеж системине кӗмен формăсене чи малтанах вӗсем пур е ҫук япала ячӗпе ҫыхăнма пултарнипе пултараймаснине тӗлӗшӗнчен тӗпчемелле, унтан вӗсем сăмах тӗпӗ ҫумне тӳрех хушăнма пултарнипе пултарайманнине сăмах тата сăмах формин улшăнăвӗнче сăнамалла. Пур е ҫук япала ячӗпе ҫӳренине палăртса, вӗсене те категори форми теме пулать. Ку формăсем суйлавлăх принципне пăхăнаҫҫӗ пулсан, вӗсене те категорисӗр формăсем теме май пур. Ҫав хушăрах ҫак формăсен категориллӗхне палăртна чухне вӗсем сăмах улшăнăвӗнче е сăмах форми улшăнăвӗнче анлă уса курнине тишкермелле.

Ку тӗлӗшпе ҫав формăсен валентноҫӗ пӗр-пӗринчен палăрмаллах уйăрăлса тăма пултарать. Сăмахран, *ачи, качаки, лаши* тенӗ чухне, *-и* аффиксăн палăрту пӗлтерӗшӗ пур пулин те, ăна 3-мӗш сăпат аффиксӗ тетпӗр, апла пулсан, япала ячӗсен сăмах улшăнăвӗнче *-и* палăрту аффиксӗ пуррине палăртмастпăр. Тӗрлӗрен падеж формисем хыҫҫăн тăракан *-и* аффикс, уйрăммăнах выран падеж форми ҫумне ҫыпҫăнаканни, сăмах форми улшăнăвӗнче категори форми шутланма пултарать: *варманти, ялти, шыври, уйри, килӗнчи* т. ыт. те.

### 1. Япала ячӗсен еверлӗх (категори) форми

Чăваш чӗлхинчи еверлӗх категори форми *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффикспа пулать. Ыйтăвӗсем: *камла? мӗнле?*

---

[15] Чӗлхе пӗлӗвӗсен программи: Чăваш чӗлхипе литература уйрăмӗ валли / Чăваш ун-чӗ, 1981. 12 с. (Программăн «Морфологи» пайне И. А. Андреев профессорпа И. П. Павлов доцент хатӗрленӗ).

*Соловьева — сарта пулна хӗр, арҫын пек патвар келет-келлӗ, ҫӳҫне те а р ҫ ы н л а кастарнӑ. с а л т а к л а ҫиреп утать, самаха пат тӳре татса калҫать* (Арт.).

Тӗпчевсӗсем пурте тенӗ пекех *-ла(-ле)* аффикс туяннӑ сӑмахсем хӑйсен пӗлтерӗшӗсемпе *пек, евӗр,* хыҫсӑмахсене сывӑх тӑнине кӑтартаҫҫӗ. Чӑнах та, А. Артемьевӑн «Саламби» повеҫӗнчи йӗркесенче ку аван паларать: предложенин малтанхи пайӗнче *пек* хыҫсӑмах пуррипе *(арҫын пек)*, автор малаллахи пайӗнче *арҫынла* формӑпа уса курать, кунта *арҫын пек* тата *арҫынла* тени пӗр пӗлтерешлех.

— *Мӗнле илемлӗ! — терӗ Саламби, пӗчӗк а ч а л л а саванса* (Арт.).

Тӗпчевҫӗсен *ачалла* йышши формӑсем пирки пӗршухӑшлӑх сук. Чылайӑшӗсем вӗсене *арҫынла хӗрарӑм, енотла ыйта. вакӑрла этем, фашистла элемент* тенӗ чухне паллӑ ячӗ тессӗ. Шкул учебникӗсенче *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффиксла сӑмахсене наречи тенӗ. Ҫапла майпа, чӗлхевҫӗсем *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффикса сӑмах тӑвакан (дериваци) аффиксе тесе шутлаҫҫӗ, анчах та пур е чылай япала ячӗпе сыхӑнма пултаракан аффикса дериваци аффиксӗ теме май сук. Сӑмах тӑвакан аффикссем вӑл е ку пуплев пайӗн пӗчӗкшер ушкӑнӗсемпе кӑна ҫӳреҫҫӗ, ҫитменнине тата *-ла(-ле)* аффикс паллӑ ячӗсемпе те *(симӗсле, ӑшалла),* хисеп ячесемпе те *(саккӑрла. таххӑрла, ҫиччӗлле),* местоименисемпе те *(мӗнле, темӗнле, камла, сирӗнле),* наречи формисемпе те *(хальхилле, паянхилле, ӗлӗкхилле),* глагол формисемпе те *(пелнелле, кирмасла)* сӳреме пултарать. Ҫӳлерех каланине тепе хурса, *-ла(-ле)* аффикса сӑмаха е сӑмах формине улӑштаракан аффикс теме пулать. Тӗслӗхрен, *Тамара хӑш чухне хӑй Маниловла ӗмӗтҫе тухасран та шикленчӗ* (Скв.) Ку йӗркесенчи *Маниловла* сӑмаха наречи теейместпӗр, вӑл япала ячӗн евӗрлӗх категори формине шутланма тивеҫ.

Ку аффиксла сӑмахсен евӗрлӗх пӗлтерӗшӗ кӑна мар, ытти пӗлтерӗшсем те паларма пултараҫҫӗ. Акӑ *ачалла савӑнать* тенӗ чух *ача пек* теме май пур, анчах та: *...ас-пус, камал-туйӑм енчен ачаллах сусарланса ӳсет, — терӗҫ ӑна ача сиртӗнче* (Арт.) предложенири *ачаллах* тенине *ача пек, евер сиртӗнче* (Арт.) теме май ҫук, кунта *ачалла(х)* тени япалан тӑрӑмне кӑтартать, *ачаллах* тенине кунта *пӗчӗклех* тенипе улӑштарма пулать.

Хушӑнасса ку аффикс пайӑр ятсем ҫумне те, пайӑр маррисем ҫумне те хушӑнать:



Пур йыварлӑхсене те эпӗр
Ҫӗнтерӗпӗр *Андриянла* (Хус.).

*Андриянла* тенине П. Хусанкай пысӑк саспаллипех ҫырнӑ, апла пулсан поэт Андриян сӑмахран наречи тӑвасшӑн пулман.

Евӗрлӗх категори формипе кӑмӑнлӑх категорийӗн 3-меш сӑпат тата нумайлӑ хисеп аффиксӗ хыҫҫӑн тӑма пултарни те япала ячӗ наречие куҫманнине пӗлтерет: *ту качакилле, сурах путеккилле, ӗне парушӗлле, куршӗсемле, ачасемле, чахсемле.* Вырӑн падеж аффиксӗ ҫумне хушӑнакан *-и, -хи* паларту форми те *-лле* аффикса йышӑнма пултарать:

а) Кӗпер чалт та тумӗ: пусатӑн, каҫатӑн;
Анчах ун айне савӑйланна чӗре —
Ҫав *юрариллех* — никампа ннхҫан та
Тек пусарнаймасть, ыратать вӗссӗрех (Хус.);

а) *Кантарла ҫитеспе Нина килсе кӗчӗ. Вал х ӗ л л е х и л л е тумланна* (Арт.)

Евӗрлӗх категори форми тӗрлӗ пӗлтерӗше палӑртать:

1) ӗҫе кам пек е мӗн пек тунине:

а) Чуна парса *стахановла* ӗҫлес те
Валерий *Чкаловла* вӗҫесскерсем (Сем.);

а) *Практика та ӳсрӗ, мӗн тесен те, пӗр-пӗр колхоза с т у д е н т л а кайса пӗр-ик уйах «практика ирттерни» мар кунта* (Арт.);

2) вӑхӑта: *ачаллах ӗҫе вӗренчӗ; сывлӑмла ҫулмасан, ҫава касмасть, кивӗ уйахла выльӑх пусмаҫҫӗ; хӗрле ача туна;*

3) ӗҫе мӗнле майпа пурнӑҫланине: *укҫалла, тыралла, кӗтевле;*

4) мӗнле вылянпне: *футболла, хоккейла, лапталла, теннисла;*

5) мӗнле чӗлхепе каланине: *чӑвашла, вырӑсла, нимӗҫле, акӑлчанла.*

### 2. Япала ячӗсен иртнӗ вӑхӑт категорийӗ

Япала ячӗсен иртнӗ вӑхӑт категорийӗ чӑваш чӗлхинче *-чӗ(-ччӗ)* аффикспа пулать. Ку аффикс пур япала ячӗ ҫумне те хушӑнма пултарнине тата ҫак аффиксла формӑсен вӑхӑт (иртнӗ вӑхӑт) пӗлтерӗшӗ пуррине шута илсе, япала ячӗсен вӑхӑт категорийӗ пурри ҫинчен калама май пур. *Пӗрремӗш аптека малтан пӗр хутла ҫуртраччӗ* (Ялав. 1987. 3. 27 с.) предложенири *ҫуртраччӗ* сӑмах япалан иртнӗ вӑхӑтри тӑрӑмне палӑртать.

Тӳлек *ачаччӗ* Рахманкул.
Илемлӗ *каччаччӗ* вал ялшан (Хус.).

Асархаттару. Рахманкул — тулек ача,
Вал илемлӗ каччa
тенӗ чухне *ача, каччa* самахсен иртнӗ вахатри тарама палартас сем ҫук, предложенири ҫирӗплету пӗлтерӗше вӗсен хальхи вахатпа ҫыханна.

*Эпир иккӗн те студентчӗ. Пирӗн йываҫ пӳртчӗ. Генапа Саша ачаччӗ* предложенисенчи палартна самахсем иртнӗ вахат пӗлтерӗшне питӗ уҫамла палартаҫҫӗ; *-чӗ* аффикс хушаннашанах япала ячӗсем глагола тухса каяйма ҫҫӗ-ха. Ку аффикс самах тӗпӗ ҫумне кана мар: а) тӗрлӗрен падеж формисем ҫумне те ҫыпҫанма пултарать:

*Макҫӑманччӗ, Макҫамраччӗ, Макҫампаччӗ, Макҫамсарччӗ, Макҫамшанччӗ:*

а) каманлах категорийӗн сапат аффиксӗсем ҫумне: *Макҫам арамӗччӗ, кӳршӗ ял ҫынниччӗ, юратна тусамччӗ, ҫывӑх юлташуччӗ;*

б) нумайла хисеп аффиксӗ ҫумне: *пӗр ял ҫыннисемччӗ эпир, вал ӗҫе пуҫараканӗсем Ивановсемччӗ.*

Ака А. Артемьев ҫырна «Салампи» повеҫри тӗслӗхсене илсе пахар:

1. *Мӗн* тери ыра камалла *хӗрччӗ*, халӗ ак мӗнле хытна унан чунӗ. 2. — Эсир тем *самахпаччӗ* ӗнтӗ? 3. — Мӗн *ятлаччӗ-ха* . эсӗ, ывалам? 4. Хам ун чухне *Маньчжуриреччӗ*. 5. Ирхине ҫеҫ, витере ӗҫленӗ чух, катанпир *кӗпепеччӗ-иҫ?* 6. Питӗ ыра *ҫынсемччӗ*. Выраслa перкелешме ҫавсенчен вӗрентӗм. 7. Салампи маншан таван хӗрӗм *выраннехчӗ*. 8. Салампи ӗне *ферминчеччӗ* — ана телефон патне чӗнтерчӗҫ. 9. Пасар *кунӗччӗ* те, эпӗ те вара, пасара каям пек туса, унран юлмарам.

Кирек мӗнле грамматика форми те нумай пӗлтерӗшлӗ пулна пекех, ку категори формине йышанна самахсен те нумайпӗлтерӗшлӗхӗ паларать. Пӗлтерӗш улӑшаслахӗ *-чӗ* аффиксла формасем мӗнле самахсен хупарлавне лекнинчен килет. Тӗслӗхрен, *Ирхине ҫумарччӗ* тенӗ чухне иртнӗ вахат пӗлтерӗшне уҫҫанах сисетпӗр пулсан, *Ҫумарччӗ пӗрре!* предложенири *ҫумарччӗ* иртнӗ вахата мар, ӗмӗтленнине, ҫав япала кирлине палартать: *Мунчаччӗ халь!...* тени «Мунча кӗрсен лайах пулмалла» тенипе пӗр пӗлтерӗшлӗрех. Ӗмӗтленни яланах пулас вахатпа ҫыханна.

Ку таранччен *ачаччӗ, студентчӗ* самахсенчи *-чӗ(-ччӗ)* аффикса ҫителӗксӗр глагол тенӗ, апла калама салтавӗ сахалтарах. Чаваш чӗлхинчи *-чӗ(-ччӗ)* аффиксан тутар чӗлхинчи *идем* йышши пулашу глаголӗсен пек палласем пачах ҫук. тата, ҫитменнине, *-чӗ(-ччӗ)* аффикс сапатла формари пӗрре иртнӗ вахат аффиксне аса илтерет; *ил-ч-е, лар-ч-е* самахсенче *-ч-* — пӗрре иртнӗ вахат аффиксӗ.



Эпир пахса тухакан *-чӗ(-ччӗ)* аффиксан иртнӗ вахата палартаслахӗ япала ячӗсемпе ҫыханура тана чух кана мар, ытти ушканри самахсемпе ҫуренӗ чух та куҫкеретлӗ:

а) палла ячӗсемпе: *аванччӗ, лайахчӗ, хитречче;* Ӗнерхи каҫ тӳпе *хураччӗ* (Эйзин);

а) хисеп ячӗсемпе: *виҫҫӗччӗ, вунначчӗ, вуннамӗшче;*

б) местоименисемпе: *эпӗччӗ, эсӗччӗ, лешӗччӗ, унччӗ, унтаччӗ, лешӗнпеччӗ, хавахчӗ, пирӗннисемччӗ;*

в) наречисемпе: *паҫарччӗ, анчахчӗ, ӗнерччӗ;*

г) причастисемпе: *лараканччӗ, ларнӑччӗ;* анчах пулас причастисем ҫумне хушансан, иртнӗ вахат пӗлтереше палармасть: *ларасчӗ, килесчӗ, вулаасчӗ* самахсем ӗметленнине, ӗҫ тума сунам пуррине пӗлтереҫҫӗ, ҫаван пекех *ҫиеттемче, вулӗччӗ, килӗччӗ* йышши ӗҫхӗлсен пулас вахат пелтерешепе пӗрлех ӗмӗт пӗлтерӗшӗ пур;

д) деепричастисемпе: *ларсаччӗ, курсаччӗ, пӗлсеччӗ* т. ыт. те.

## 3. Тасамлах категори форми вахата палартни

Пӗр ӗҫ теприн умӗн пулса иртнине япала ячӗсем ҫумне *-чен(-ччен)* аффикс хушса палартма пулать: *Ҫумарччен эпир вармантан таврантамар* тенине *ҫумар ҫавиччен* тесе анланмалла. Ку аффикса вахат пӗлтерӗшлӗ самахсем кана йышанаҫҫӗ тени тӗрӗсех мар: *ирччен, каҫчен, кантарлаччен* тенинсӗр пуҫне, чӗлхере *праҫникчен, Петӗрччен* йышши формасем те пур, тӗрӗссипе, *-чен* аффикс чылай самахпа ҫуреме пултарать. *Варманта вӗсем праҫникченех ӗҫленӗ; Петӗрччен председатель Иван пулна.* Анчах *-чен* аффиксла япала ячесем пулас (малаллахи) вахат сыпакне те палартма пултараҫҫӗ; *Варманта уявчен (ҫуллаччен, хӗллеччен, керкуннеччен, ҫуркуннеччен) ӗҫлемелле* тенӗ чухне, паллах, *ӗҫлемелле* самахан пӗлтерӗшӗпе килӗшуллӗн, *-чен* аффиксла форма ӗҫӗн пулас вахатри тасамне, тарамне палартать.

## 4. Вайлату категорийӗ

Япала ячӗн вайлату категорийӗ *-ах(-ех, -х)* аффикс хушаннипе пулать. Пӗтӗмлӗх принципне шута илсен, ку аф-

фикспа пулакан формӑсене категорисӗр формӑсем теме май ҫук, мӗншӗн тесен ку аффикс япала ячӗн тӗпӗ ҫумне кӑна мар, тӗрлӗрен сӑмах формисем ҫумне хушӑнма пултарать: *ачах: Ачи ачах вал; ачасемех, ачамах: Хам ачамах мана ҫапла калама пултарчӗ те; ачиех: Ҫын ачиех ӗҫ тума пулашать; ачаскерех: Ачаскерех ҫапла калама пӗлет те;*

*ирех: Ирех тарса кайрӗ; ирхиех: Ирхиех мар пулмалла ку сӗт;*

*ҫыннӑнах: Тем тесен те ҫыннӑнах вал япала, хӑйен ун пекки пулман.*

Вӗҫлевлӗхӗсем тӑрӑх улшӑнакан кашни сӑмахах *-ах(-ех, -х)* аффикс йышӑнма пултарать:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *Петӗр-ех* | *студент-ах* | *вӗренекен-ех* |
| К. | *Петӗрӗнех* | *студентӑнах* | *вӗренекенӗнех* |
| П. | *Петӗр-е-х* | *студент-а-х* | *вӗренекӗн-е-х* |
| В. | *Петӗртех* | *студентрах* | *вӗренекентех* |
| Т. | *Петӗртенех* | *студентранах* | *вӗренекентенех* |
| П. | *Петӗрпех* | *студентпах* | *вӗренекенпех* |
| С. | *Петӗрсӗрех* | *студентсӑрах* | *вӗренекенсӗрех* |
| П. | *Петӗршӗнех* | *студентшӑнах* | *вӗренекеншӗнех* |

Нумайла хисеп аффиксӗ хыҫҫӑн тани те чӗлхе нормиех шутланать: *Петӗрсемех, Петӗрсенчех, Петӗрсенех, Петӗрсенчех.., студентсемех, студентсенех, студентсенчех, студентсенченех* т. ыт. те.

## 7 §. ЯПАЛА ЯЧӖСЕН КАТЕГОРИСӖР ФОРМИСЕМ

Япала ячӗсен категорисӗр формисен ҫак паллӑсем пур: вӗсем пур япала ячӗпе те ҫӳреймеҫҫӗ, хӑшӗ-пӗрисен сингармонизм вариантчӗсем, чылайӑшӗсен *кам? мӗн?* местоимений семпе ҫыхӑннӑ ыйтӑвӗсем ҫук.

Пур япала ячӗсемпе те ҫӳрейменни ку аффикссене категори формисем тӑвакан (тӗрӗсрех: сӑмаха туллин улӑштаракан) аффикссем тесе шутлама ирӗк памасть, сӑмахӑн лексика пӗлтерӗшне улӑштарайманнине кура вӗсене сӑмах тӑвакан аффикс теме май килмест.

Вӗсем ҫаксем:

1. **Сулӑну форми** *-алла(-елле)* аффикспа пулать: *вӑрманалла, ялалла, хирелле, ҫӳлелле.* Тӗрӗссипе, ку аффикс вырӑна пӗлтерекен япала ячӗсемпе кӑна ҫӳрет.

2. **Пурлӑ форма** *-ла(-лӗ), -лла(-ллӗ)* аффикспа пулать: *магазинлӑ* (ял), *шӗлепкеллӗ* (ҫын), *тутӑрлӑ* (пике), *ураллӑ* (пукан), *моторлӑ* (кимӗ) т. ыт. те. Ку формӑсен паллӑ ячӗсен пек танлаштару категорийӗ ҫук: *магазинлӑрах ял, шӗлепкеллӗрех ҫын, тутӑрлӑрах пике, ураллӑрах пукан, моторлӑрах кимӗ* тенисем чӗлхере ҫук. Пурлӑ форман *-лӑ(-лӗ)* аффиксне эпир сӑмах формин улшӑнавӗнче те тӗл пулатпӑр:

а) *-сем* нумайлӑ хисеп аффиксӗ хыҫҫӑн:

Ҫӗршывам чӗрӗлет!
Пӗчик *пуртсемлӗ* ялсенче
Таван ҫӗр урлӑ уйсенче
Ҫӗн Сывлӑш чун уҫса вӗрет (Ҫеҫп.);

а) каманлӑх-сапат категорийӗн 3-мӗш сапат аффиксӗ ҫумӗнче: *кукар шӑршиллӗ сывлӑш, тари сассиллӗ ир;*

Ҫӗн Ҫул! Кунҫул! Ҫӗн Кун килет,
Ҫавна кура кӗвӗллӗ чун,
Кӗсле *кӗввиллӗ* вутла юн (Ҫесп.).

3. Япала ячӗсен **валеҫу форми** *-шар(-шер)* аффикспа пулать: *улмашар, сехетшер, патшар, кӗнекешер.* Кунта сума (хисепе) тивӗҫлӗ япала ячӗсем кӑна кӗреҫҫӗ, шута тивӗҫменнисене *-шар(-шер)* аффикспа калама май ҫук: *саванаҫ-шар, телей-шер, юрату-шар* тенисем чӗлхешӗн ют;

4. *-скер* аффиксла **палӑрту форми**: *ачаскер, тихаскер* тенине илтме пулать хушӑран.

Ку аффикс тӗрлӗ вӗҫлевлӗх аффиксӗсем хыҫҫӑн тӑма пултарать: *вармантаскер, лашапаскер, сӗтшӗнскер;*

5. *-и, -хи* аффиксла **палӑрту форми**: *-и* палӑрту категори аффиксӗ пулнӑ чух ялӑнах вал е ку вӗҫлевлӗх аффиксӗ хыҫҫӑн тӑрать, *вӑрман-т-и, ҫырма-р-и, хир-ӗ-н-ч-и.* Темӗншӗн-ҫке тӗпчевҫӗсем ӑна вырӑн вӗҫлевлӗхӗн аффиксӗпе пӗрлешсе кайнӑ тесе пахаҫҫӗ. Кун пек калани тӗрӗс марри *-и* аффикс ытти вӗҫлевлӗх аффиксӗсем хыҫҫӑн тӑма пултарнинчен те курӑнать: *Велосипедпали лашаллинчен иртсе кайрӗ; Ӗҫпине ӗспех килнӗччӗ-ха; Хуларанни хӗрсех каласать; Лашасарри мӗнпе сухалӗ? Шывшӑнни ӑҫта кайса ҫухалчӗ?*

*-хи* аффикс хушӑннӑ сӑмахсем вуннӑран ытла мар: *ирхи, каҫхи, кӑнтӑрлахи, ҫуллахи, хӗллехи, кӗрхи, ҫурхи, кӗркуннехи, ҫуркуннехи.*

6. *-серен* аффиксла **тӑтӑшлӑх форми**: *килсерен, ирсерен, ҫулсерен, кунсерен, каҫсерен* т. ыт. те.

7. **Ҫителӗклӗх форми** *-лӑх(-лӗх)* аффикспа пулать, пӗрпӗр япала тума (илме, уса курма) тепӗр япала ҫителӗклине кӑтартать: *пуртлӗх йывӑҫ, кӗпелӗх ҫитса, эрнелӗх апат, уйӑхлах отпуск, варлахлах тыра, юпалӑх юман.*

Ҫителӗклӗх форми сӑмах тӑвакан *-лӑх(-лӗх)* аффиксран хӑйӗн функцийӗпе кӑна уйӑрӑлса тӑрать.

*Шӑлаварлӑх пустав, пальтолӑх укҫа, силослӑх кукуруза* сӑмах майлашӑвӗсенчи *шӑлаварлӑх, пальтолах, силослӑх*

сăмахсем танлаштару категорийĕн аффиксне йышăнманни-
не кура эпир вĕсене паллă ячĕ теейместпĕр.

8. **Танлаштару форми.** Паллă ячĕсен танлаштару категорийĕ пур пулсан. япала ячĕн танлаштару форми (категорисĕр форми) пурри çинчен кăна калаçма пулать. *ачарах, тихарах, курăкрах.*

*Ачарах пулнă сав эпир ун чухне; Тихарах лашана тытма та хăрималла, Тырăсем курăкрах-ха халь.*

Юлашки предложенири *курăкрах* тени тырăсем пиçсе çитменнине пĕлтерет.

Танлаштару форми тĕрлĕ пуплев пайĕнчи сăмахсен раснa вĕçлевлĕхсен аффиксĕсем хыççăн тăма пултарать: *шаларах кĕр, туларах тух, маларах ирт, хыçаларах юл, çăварах тухсан, хĕлерех кĕрсен* (пару в. хыççăн); *аялтарах, çӳлтерех* (вырăн в. хыççăн).

Танлаштару форми икĕ вĕçлевлĕх аффиксĕ хушшинче танине те асăрхама пулать: *вĕçĕнче-рех-рен, патенчерехрен, китĕнчерех-рен, пусĕнчерехре, варринчерехре* т. ыт. те.

9 **Мĕнлелĕх форми.** Япала ячĕсен мĕнлелĕх форми *ан-(-ĕн)* аффикспа пулать: *ирĕн-каçан, алакан-тĕпелен; вармапăн (кирăнать), сутан (ил), кĕмĕлĕн, ахахан, ылтанăн (ялтăртатать).* Чĕлхе историйĕн тĕпчевçисем ана авалхи карал (оруди. инструмент) падеж аффиксĕн юлашки теççĕ. Хальхи чăваш чĕлхеçисен ку форма пирки пĕршухăшлах çук: пĕрисем ăна камăнлăх падежĕ тесс пăхаççĕ, çавна май падежăн мел, мĕнлелĕх, вăхăт, виçе пĕлтерĕшĕсем пуррине палăртаççĕ, теприсем *-ăн(-ĕн)* аффикс наречи тăвакан аффикс тесе шутлаççĕ. Хăш-пĕр япала ячĕсем çумне кăна хушăннине тĕпе хурсан, тен, ăна сăмах тăвакан (дериваци) аффиксĕ теме те пулĕччĕ. анчах паллă тата хисеп ячĕсенче вăл пĕтĕмлĕх принципне пăхăнать, пур паллă тата хисеп ячĕ çумне те çыпçăнса, сăмах тăваслăх мехелне çухатать, çавна май ăна сăмаха улăштаракансисен ретне кĕртме лекет. Çапла майпа вăл паллă тата хисеп ячĕсен категори форми, япала ячĕсен категорисĕр форми шутланать. Ыйтăвĕ унăн *мĕнле?* Япала ячĕ чылай чухне япала мĕнле пулнине, мĕн пулнипе, вăл форма чылай чухне япала мĕнле пулнине, мĕн еверлĕ пулнине пĕлтерет: *варманан (мĕнле?) куранать — варман пек куранать, ахахан йалтăртатать — ахах пек йалтăртатать.*

Эп туйăнтăм хама *кĕперрĕн* (Хус.).

Унсăр пуçне, ку формăн çак пĕлтерĕшĕсем пур:

а) вăхăт:



Ӳссе пыратчĕç *талакан, сехетĕн*
Çап-çута ĕмĕтсемпеле хĕрсе (Сем.);

ă) вырăн: *алакăн-тĕпелĕн, выранан-выранăн, тĕллĕн-тĕллĕн;*

б) мел: *патан (сут), сутан (ил), куçан (кур). Аллăн пар та, уран ут* (ват. сам.); *Яшлах кайакла вĕçет, ватлах виç уран çӳрет* (ват. сам.).

10. **Еверлĕх форми.** Ку форма икĕ сăмахра анчах тĕл пулать: *амăшнешкел* тата *этемешкел* (упăте). Местоименисенче вара вăл анла саралнă: *манашкал, унашкал, кунашкал* т. ыт. те.

## ПАЛЛĂ ЯЧĔ

Палла ячĕ тесе япалан, ĕçĕн, паллăн паллине пĕлтерекен, танлаштару, паларту, мĕнлелĕх категорийĕсенче пулакан сăмахсене калаççĕ.

*Çĕнĕ кĕпе, çӳллĕ йывăç, лутра юман* сăмах майлашăвĕсенчи *сĕнĕ, çӳлле, лутра* сăмахсем япалан паллине катартаççĕ, вĕсем танлаштару категорийĕн *-рах(-рех)* аффиксне ирĕккĕнех йышăнаççĕ: *сĕнĕрех кĕпе, çӳллерех йывăç, лутрарах юман*. Сав вăхăтрах *йывăç сурт, чул кĕпер, тимер кереçе, ылтăн шăл, кĕмĕл çĕрĕ* сăмах майлашăвĕсенчи определени пулакан сăмахсем *-рах(-рех)* аффикс йышăнаиманни вĕсем япала ячĕн шайĕнчех юлнине пелтерет.

*Вайла ĕçле, сивĕ пулчĕ, шура тумланать, кĕске кастар* сăмах майлашăвĕнчи палла ячесем ĕçен паллине катартаççĕ. Вĕсем ку сăмах майлашăвĕсенче тана чух танлаштару категорийĕнче пулаççĕ: *вайларах ĕçле, сиверех пулче, шурарах тумланмалла пулна, кĕскерех кастар*.

*Тĕксĕм кавак, шупка кĕрен, тĕксĕм симĕс, çутă сарă* сăмах майлашăвĕсенчи определени пулакан сăмахсем паллăн паллине катартаççĕ, вĕсем те *-рах(-рех)* аффикса ирĕккĕнех йышăнаççĕ: *тĕксĕмрех кавак, шупкарах кĕрен, тексемрех симĕс, çутарах сара*.

Пĕлтерĕшĕпе грамматика уйрăмлăхĕсене кура палла ячĕсене ку таранччен яланах икĕ ушкăна уйарнă: а) мĕнлелĕх палла ячĕсем; ă) çыхăну палла ячĕсем. Ку ĕçре чаваш чĕлхинче (ытти тĕрĕк чĕлхисенче те) çыхăну палла ячĕсем çук текен шухăша тĕпе хуна[1].

Мĕнлелĕх палла ячĕсене пĕлтерĕшне кура темиçе ушкăна уйăрма май пур:

1) тĕсе палăртаканнисем: *сара, симĕс, кавак, хура, шура, тĕксĕм;*

2) выльăх-чĕрлĕх тĕсне палăртаканнисем: *ула, тура, çыра, чуптар, çӳрен;*

[1] Андреев И. А. К вопросу о выделении категории относительных прилагательных в тюркских языках // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1966. Вып. 22. С. 90—103.



3) виçе пĕлтерĕшлисем: *йывăр, çăмăл, вăрăм, кĕске, таран, ăшах, пысăк, пĕчĕк, ватам;*

4) этемĕн кăмăл-туйăм пахалăхне пĕлтерекеннисем: *хаяр, йăваш, кутăн, чее;*

5) çыннăн çитменлĕхĕсене пĕлтерекеннисем: *уксах, суккăр, сӳрĕк, сӳтĕк, имшер, самăр.*

6) япалана пĕтĕмĕшле хаклаканнисем: *çĕнĕ, кивĕ, лайăх, аван, çамрак, вата, чĕрĕ;*

7) япалана форми тĕлĕшĕнчен хаклаканнисем: *хулăн, çухе, çинçе, тачка, сарлака.*

Палла ячĕн синтаксис уйрăмлăхĕсем: чăваш чĕлхинчи палла ячĕсем чылай чухне определени пулаççĕ, обстоятельство тата сказуемăй пулна тĕслĕхсем те сахал мар:

1) определени: *Ă с л а çын уйăламасăр калаçмасть* (ват. сам.); *Ирхине ç а р а с и в ĕ сывлăш тĕтре пек таратчĕ* (Скв.);

2) обстоятельство: *Машина кивĕ пулин те л а й ă х чупать* (Скв.);

3) сказуемăй:

Çырмийĕсем *таран*, шывĕ *тарă*,
Çаванаттам эпĕ шывĕпе (юраран);
Пас тытна йывăçсем *шап-шура* (Яккусен).

### 1 §. САМАХ УЛШĂНĂВĔ. ПАЛЛА ЯЧĔСЕН ПАХАЛĂХ ВИÇИНЕ ПАЛĂРТАКАН ФОРМИСЕМ

Мĕнлелĕх палла ячĕсен пахалăх виçине палăртакан формисем (тепĕр майлă вĕсене ку таранччен танлаштару степенĕсем тенĕ) виçĕ тĕрлĕ пулнине палăртаççĕ: а) тĕп форма, унăн ятарлă аффиксĕ çук, вăл палла ячĕн тĕпĕпе пĕр килет: *лайăх, хитре, илемлĕ, чипер, усал, кавак, шупка, хĕрлĕ, ула, ула-чăла.* Тĕп форма шутнех пахалăха хакланине палăртакан тĕрлĕрен аффикспа пулакан палла ячĕсем те кĕреççĕ: *пĕчĕк — пĕчĕкçĕ (пĕчĕкçеççĕ); шĕвĕр — шĕвĕрkke, шĕвреке, шĕврешке; шура — шуранка, шуранкă; çамал — çамалкка, çăмăлçах, çамалттай; хура — хурамкка; самар — самăркка, начар — начаркка* т. ыт. те; ă) танлаштару категори форми: *пысăкрах, пĕчĕкрех, начартарах, кĕренрех е кĕрентерех;* б) вайла форма (шкул учебникĕсенче вайла степень теççĕ ăна) палла ячĕ умĕн *чи, чан* татаксем лартнипе пулать тесе ĕнентернĕ. Анчах та ку сăмах улшăнăвĕнче вĕрентмелли йыту мар. Вайла виçене кунта синтаксис мелĕпе палартна: *чи, чан* (татăксем) + палла ячĕ.

Танлаштару форми пĕтĕмлĕх принципне пăхăнса категори форми шайне ларать.

Кун пек чух каллех чи ансат япалана салтавлама пелмелле: морфологири самахсен ушканĕсене уйрам самахсем кана кĕреççĕ, самах майлашавĕсемпе самах çавранăшĕсем кемеççе.

Палла ячĕн вайла форми пултар тесен, çав форма пер самах шайĕнчен тухмалла мар. Ун пек самахсем пирен челхере пур: *сип-симĕс, хĕп-хĕрлĕ, кан-кавак, хуп-хура. шап-шура е шуп-шура, ем-ешĕл, яп-яка, тап-такар, çап-çара, çап-çара. сеп-сенкер, шĕп-шĕвĕр, чап-чамар* т. ыт. те.

Пур палла ятĕнчен те вайла форма тума май çук: *ман-мантар, нуп-нумай, ип-илемлĕ* тенисем чĕлхемерте тел пулмаççе. саванпа та эпир вайла формана, пĕтĕмлех принципне пахăнманнине пула категори формн тесе шутлама пултараймастпар.

Палла ячĕсен пахалах виçи вайла пулнине челхере тĕрлĕ мелсемпе палартма пулать (пахалах виçи тени — анлав категорийĕ):

1) морфологи мелĕпе (палла ячĕ умне форма тавакан префикссем хушса), ана эпир вайла форма тетпĕр:

*тап-: Тап-такар та туп-тӳрĕ çулпа кайрамар;*
*тип-: Тип-тикĕс паккуссем хĕвел питенче кушăхнă;*
*тап-: Тап-тара шывра пулăсем ишни куранать;*
*тĕп-: Тĕп-тĕрĕс калас тесен малтан пелмелле;*
*сап-: Сап-сарă тула пуссине тухрамăр;*
*сап-: Çап-çамрак куранать;*
*çап-: Çăп-çамăл пуранса́ урттересшĕн эсĕ;*
*чап-: Чап-чамар пулса кайна;*

2) синтаксис мелĕпе (самах майлашавĕсемпе): *чи пысак, чи хитре, чан çӳллĕ, лак тулли, вар çавракa, шак хыта, яр уçа. пач тĕттĕм; хитререн хитре, çӳллĕрен çӳлле, шутсар пысак. пысăкран пысак, чатма çук лайах* т. ыт. те;

3) фонетика мелĕпе (интонаципе): палла ячĕн пĕр-пĕр уса сассине варамман тасса каланипе: *су-ӳ-лле, пы-ы-сак, пĕчи-и-иккĕ, пĕ-ĕ-ĕчĕк; Кутамкки йы-ы-ывар тата* (Агак.);

4) редупликаци мелĕпе: *хĕрлĕ-хĕрлĕ, пысак-пысăк, симес-симĕс.*

Ку мелсенчен пĕрремĕшĕ кăна морфологире пахса тухмалли мел шутланать, ыттисене асанса кана иртмелле, мĕншĕн тесен морфологи тишкерĕвĕ туна чух самах майлашăвĕнчи самахсене кашнине уйрамман илсе тишкерӳ тума лекет: самахран: *вар çавракa* тенĕ чух *вар* — вайлату татакĕ (хăшĕсем ана евĕрлев самахĕ теççĕ); *çавракa* — палла ячĕ (вайла форма ку самах калапăшĕнче пачах та палармасть).



Асархаттару. *Çӳ-у-ллĕ, пы-ысак* йышши самахсене тишкерӳ туна чухне пахалах виçи вайла пулнине кана калатпар, анчах ку самах морфологи тĕлĕшĕнчен вайла формара пулнине палартаймастпар, мĕншĕн тесен кунта вайла формана палартакан ятарла морфема çук. Енчен те *çу-уллĕ* йышши самахсене вайла формара тесен, *Тухрамар пĕр уçланкана... çырла-а-а...* йышши предложенисенчи юлашки уçа сасса варамлатса калана самаха та нумайла хисепре теме лекет. *Çырла-а-а* самах нумайла хисепре пулать тени анлав категорийĕпе морфологи категорине патраштарнине пĕлтерет. Çапла вара, *çырла-а-а* самах — пĕррелле хисепри япала ячĕ, *çу-у-уллĕ* — вайла виçене палартмалли фонетика мелĕ.

## 2 §. ПАЛЛА ЯЧĔН ТАНЛАШТАРУ КАТЕГОРИЙĔ

Палла ячĕн танлаштару категори форми палла ячĕн тĕп формн çумне *-рах(-рех), -тарах(-терех)* аффикс хушăннипе пулать. Танлаштару пĕлтерĕшĕпе пĕрлех ку формасем япалан е ĕçĕн палли пысакрах е пĕчĕкрех, вайларах е начартарах пулнине катартаççĕ. Алломорфсем хушанасси палла ячĕн тĕп форми мĕнле сасăпа пĕтнинчен килет;

1) палла ячĕ [р] сасăпа пĕтсен, *-тарах(-терех)* хушăнать: *чипер — чипертерех, йывар — йывартарах, начар — начартарах;*

2) [й, л, н] сасасемпе пĕтекен палла ячĕсем икĕ вариантла пулма пултараççĕ: *нумай — нумайрах, нумайтарах; вĕçкĕн — вĕçкĕнрех, вĕçкĕнтерех;*

3) ытти хупа е уçа сасăсемпе пĕтекен самахсем çумне *-рах(-рех)* кăна хушăнать: *ула — уларах, хура — хурарах, çепĕç — çепĕçрех, чее — чеерех.*

Вĕçкĕнленсе е манкамалланса калаçакан çынсем вырăс чĕлхинчи палла ячĕсем çумне те *-рах(-рех)* аффикс хушма пултараççĕ.

— *Анатолий, тархасшăн выльăр-ха мĕн те пулин* ***ч у в с т в и т е л ь н а й р а х х и н е!*** *Чайковские юрататăп,* — терĕ *вал (Муза), илемлĕ кулкаласа.*

Чăваш чĕлхинчи пур палла ячĕ те *-рах(-рех)* аффикса йышăнать, çаванпа та ана палла ячĕсен танлаштару категорийĕ тетпĕр. Япала ячĕ е глагол умĕнчи палла ячĕсем çак аффикса йышанса улшанаççĕ. Ку таранччен япала ячĕ çумĕнчи палла ячĕсем улшанмаççĕ тесе вĕрентнĕ:

*хĕсĕк куç — хĕсĕкрех куç; хĕсĕк выран — хĕсĕкрех выран; хĕсĕкрех пулна; самаркка хĕрарам — самăрккарах хĕрарам; самаркка чах — самăрккарах чах; çăткан кайăксем — çăткăнрах кайăксем; çăткан çын — çатканрах çын, çатканрах пул; парлак çул — парлакрах çул; парлак юр — парлакрах юр; шыçмак арçын — шыçмакрах арçын; шыçмак кĕлетке —*

*шыçмакрах кĕлеткĕ; самăлттай этем — самалттайрах этем; çăмалттай хер — çамалттайрах хĕр; ватанчак хер — ватанчакрах хĕр; вăтанчăк сын — ватанчакрах сын; тархала пит — тăрхаларах пит; тархала куран — тăрхаларах куран; лапах ача — лайăхрах ача, лайахрах ĕçлет.*

Самах палла ячĕ пулманнине те çав палла тепе хурсах пĕлетпĕр. Палла ячĕ пулман самах танлаштару категорийĕн аффиксне йышанаймасть: *шапчак сассиллĕ ир — шапчак сассиллĕрех ир(?)* темеççĕ; *ларма хĕр — лармарах хер(?)* тени чĕлхере çук; *юха самса — юхарах самса(?)* тени те чĕлхере тĕл пулмасть; *куçлăхла арçын — куçлахлăрах арçын(?); моторла кимĕ — моторлăрах кимĕ(?); пианинолах укçа — пианинолахрах укçа(?); экспортлăх тавар — экспортлахрах тавар(?); ирхи пуйас — ирхирех пуйас(?); каçхи апат — каçхирех апат(?); чул çурт — чулрах çурт(?)*

Çапла майпа, çулерех илсе пана самах майлашăвесенчи определени е обстоятельство пулакан самахсем палла яче пулмаççĕ тесе турремĕнех каламалла.

## 3 §. ПАЛЛА ЯЧĔСЕН ПАЛАРТУ КАТЕГОРИЙĔ

Палла ячĕсем пурте япала ячĕ умĕнче таман чухне (хайсем тĕллĕн сурене чух) *-и, -скер* аффикссене йышанма пултарассĕ: *хĕрли, ăсли, çамракки, хитри, асли, вăрамскер, катраскер, чиперскер. П ĕ ч ĕ к с к е р, х и т р е с к е р, çер макартса тухнаскер* (туп. юм.); *К ĕ ç ĕ н н и, у х м а х х и, Иван ятлă пулна.*

*-И. -скер* аффикс йышанна палла ячĕсем япалана ун палли тарах палартаççĕ, çавна май вĕсенче япалалах сĕмĕ пала пуçлать. *Ă с л и асласа иличчен, у х м а х х и персе ярать* (ват. сам.) предложенири *асли—асла çын, ухмаххи — ухмах çын* пĕлтерĕшлĕ.

*-И. -скер* аффиксла палла ячĕсем пĕр япалана тепринчен (ыттисенчен) вĕсен палли тарах уйарса илме май параççĕ: *или. иласкер* тесен эпир выльах-чĕрлĕхрен е кайак-кĕшĕкрен пĕри ула пулнине пĕлетпĕр; *чăпарри, чапарскер* тесен чах е куккук пирки шухăшлатпар; *катри, катраскер* тесен пирĕн анлаври катра çын е путек-сурах санарланать.

Паларту категорийĕнчи палла ячĕсем япалалах семне туянса япала ячĕсем пекех тулли вĕçленуре пулаççĕ:

| | | |
|---|---|---|
| Т. | *асли* | *хитрескер* |
| К. | *аслин* | *хитрескерĕн* |
| П. | *аслине* | *хитрескерне* |
| В. | *асличе* | *хитрескерĕнче* |
| Т. | *аслинчен* | *хитрескерĕнчен* |
| П. | *аслипе* | *хитрескерпе* |
| Ç. | *аслисĕр* | *хитрескерсĕр* |
| П. | *аслишĕн* | *хитрескершĕн* |



Паларту категорийĕн аффикссене йышанман палла ячĕсем те япала ячĕн пĕлтерĕшĕпе çурене чух туллин вĕçленессĕ.

Т. *хитре: Х и т р е хĕрсен хитрелĕхĕ куçахать* (ват. сам.);
К. *хитрен: Х и т р е н хĕрри катак тет* (ват. сам.);
П. *хитрене: Х и т р е н е такам та куç хывать* (ват. сам.);
В. *хитрере: Х и т р е р е мар юрату* (Шавлы);
Т. *хитререн: Х и т р е р е н хитрене хапсанма хушман* (ват. сам.);
П. *хитрепе: Х и т р е п е мĕн тумалла, камăлĕ пултар;*
Ç. *хитресĕр: Х и т р е с ĕ р пуçне эсĕ урăх нимĕн те курман;*
П. *хитрешĕн: Х и т р е ш ĕ н пит ан çун.*

Паларту категорийĕнче таракан *-и, -скер* аффиксла палла ячĕсен япала ячĕленес (субстантиваципенес) сĕмĕ пысак. Ун пек чухне *-и* аффиксла палла ячĕсем хуташ вĕçленуре пулаççĕ:

Т. *кĕçĕнн-и: К ĕ ç ĕ н н и килте çукчĕ;*
К. *кĕçĕнн-и-н: К ĕ ç ĕ н н ин çĕлĕкĕ кивелнĕ;*
П. *кĕçĕнн-ц-н-е: К ĕ ç ĕ н н и н е кĕрĕк кирлĕ;*
В. *кĕçĕнн-и-н-че: К ĕ ç ĕ н н и н ч е 10 тенкĕ укçа пур;*
Т. *кĕçĕнн-и-н-чен: К ĕ ç ĕ н н и н ч е н ыйтса пĕл;*
П. *кĕçĕнн-и-пе: К ĕ ç ĕ н н и п е пурте мухтанна;*
Ç. *кĕçĕнн-и-сĕр: К ĕ ç ĕ н н и с ĕ р пуçне ыттисен ачисем пулман;*
П. *кĕçĕнн-и-шĕн: К ĕ ç ĕ н н и ш ĕ н хыпса çунакан çук.*

Паларту категорийĕнчи палла ячĕсем субстантивациленни вĕсем нумайла хисеп аффиксне йышанма пултарнинче те куранать: *ватти — ваттисем, çамракки — çамраккисем, яшши — яшшисем.*

## 4 §. ПАЛЛА ЯЧĔСЕН МĔНЛЕЛĔХ КАТЕГОРИЙĔ

Палла ячĕсен мĕнлелĕх категорийĕ самах тĕпĕ çумне *-ан(-ĕн, -н)* аффикс хушаннипе пулать (*хура — хуран, симĕс — симĕссĕн, пĕчĕк — пĕчĕккĕн, пысак — пысаккăн; ăшшăн, сиввĕн, кичеммĕн*): а) *Маруç ун çине ă ш ш а н... пахса илчĕ* (Арт.);

а) Май хĕвелĕ пек *а ч а ш ш ă н*
Пахрĕç куçусем (юраран).

Ку аффикс хушаннипе пулна формасем ĕç мĕнле пулнине пĕлтереççĕ, туйăма вайларах палартас сĕм те пур вĕсенче:

Кĕмĕлех çĕлен пек пĕчĕкçĕ çырма çеç
*Саваккан* янрарĕ, тĕмсенче çĕтсе (Çеçп.);
Тин туптап пек *асаплан*

Чунамри çураçава:
*Илĕртуллĕн те асамлан*
Сапакалла юр çават (П. Яккусен).

Чылай палла ячĕ çумне çыпçăнма пултарнине сăнаса, эпир ăна наречи тăвакан аффикс тееиместпĕр. Çитменнине тата, *-ан(-ĕн, -н)* аффикс тĕп форма çумне кăна мар, танлаштару категорийĕн *-рах(-рех)* аффиксĕ çумне те хушăнать:

Тинĕс, тинĕс, *вайлараххан,*
*Хавартраххăн, çăмалраххан.*
Чул пулсан — *хаватлăраххан*
Хыççан, хыççан хум парах (Çеçп.).

## 5 §. САМАХ ФОРМИН УЛШАНАВĔПЕ ÇЫХАННА КАТЕГОРИ ФОРМИСЕМ: ПАДЕЖ ТАТА ХИСЕП КАТЕГОРИЙĔСЕМ

Асăрхарăр пулĕ, япала ячĕ умĕнче тăрса определени пулакан паллă ячĕсем падеж, хисеп тăрах улшăнмаççĕ. Япала ячĕ умĕнче тăман палла ячĕсен тĕп форми хăш-пĕр падеж аффикссене кăна йышăнма пултарать. Япала ячĕленнĕ (субстантивациленнĕ) *пуян, кахал, ухмах, якăлти, веçкен* йышши сăмахсем кăна тулли вĕçленуре пулаççĕ. Япала ячĕленнĕ *пуян, кахал* сăмахсене палла ячĕ теме çук, мĕншĕн тесен вĕсем нумайла хисепре те, камăнлăх-сăпат категоринче те пулма пултараççĕ.

Апла пулсан, тĕп формăри палла ячĕсен сăмах улшăнавĕнче падеж категорийĕ туллин палăрмасть. Анчах та *-и, -скер* палăрту категорийĕн аффиксне йышăнна сăмахсем туллин вĕçленеççĕ, çавна май сăмах формин улшăнавĕнче палла ячĕсен падеж категорийĕ пурри куçкĕретлĕ.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *асли* | *кĕçĕнни* | *асласкер* |
| К. | *аслин* | *кĕçĕннин* | *ăсласкерен* |
| П. | *аслине* | *кĕçĕннине* | *асласкере е асласкерне* |
| В. | *аслинче* | *кĕçĕннинче* | *асласкерĕнче е асласкерте* |
| Т. | *аслинчен* | *кĕçĕннинчен* | *ăслăскерĕнчен* |
| П. | *аслипе* | *кĕçĕннипе* | *асласкерпе* |
| С. | *аслисĕр* | *кĕçĕннисĕр* | *асласкерсер* |
| П. | *аслишĕн* | *кĕçĕннишĕн* | *асласкершен* |

*Кĕçĕннипе* асла пул, *аслипе* кĕçĕн пул (ват. сăм.).

Палла ячĕсен тулли вĕçленеслĕхĕ танлаштару категорийĕн *-рах(-рех)* аффиксĕ çумне *-и, -скер* аффикс хушăнсан та сыхланса юлать:

| | | |
|---|---|---|
| Т. | *вайлăраххи* | *йсларахскер* |
| К. | *ваилăраххин* | *ăсларахскерĕн* |
| П. | *вăйлăраххине* | *ăслăрахскерне е ăслăрахскере* |
| В. | *вайлараххинче* | *йслăрахскерте* |
| Т. | *вайлăраххинчен* | *ăсларахскертен* |



| | | |
|---|---|---|
| П. | *вăйлăраххипе* | *асларахскерпе* |
| Ç. | *вайлараххисĕр* | *асларахскерсĕр* |
| П. | *вайлараххишĕн* | *асларахскершĕн* |

Палăрту аффиксĕсене йышăнна палла ячĕсем *-сем* нумайла хисеп аффиксне ирĕккĕнех йышăнаççĕ: *аслисем, пĕчĕккисем, кĕçĕннисем, асласкерсем, кахалтараххисем.* Кун пек сăмах форминче те япалалăх сĕмĕ мала тухса тăрать: *аслисем* — хамăртан аслăрах сынсем; *кĕçĕннисем* — хамăртан кĕçĕн çынсем, ачасем.

Нумайла хисеп аффиксĕ пур палла ячĕсен палăрту категори формине çумне те сыпçăнма пултарнине шута хурса палла ячĕсен форма улшăнавĕнче нумайла хисеп категорийĕ пуррине ĕнентерме йывăр мар.

Нумайла хисеп аффиксне йышăнна палăрту категорийĕнчи сăмахсем туллин вĕçленеççĕ, апла пулсан, кунта хисеп тата падеж категорийĕсем пĕрле тĕвĕленнĕ:

| | | |
|---|---|---|
| Т. | *ваттисем* | *кĕçĕнскерсем* |
| К. | *ваттисен* | *кĕçĕнскерсен* |
| П. | *ваттисене* | *кĕçĕнскерсене* |
| В. | *ваттисенче* | *кĕçĕнскерсенче* |
| Т. | *ваттисенчен* | *кĕçĕнскерсенчен* |
| П. | *ваттисемпе* | *кĕçĕнскерсемпе* |
| Ç. | *ваттисемсĕр* | *кĕçĕнскерсемсĕр* |
| Ç. | *ваттисемшĕн* | *кĕçĕнскерсемшĕн* |

*Ваттисене* асăнман çынна хавал тухман, тет (ват. сăм.). *Ваттисен* сăмахне итлемесен пуçна çухатăн (ват. сăм.).

**Сăмах тата сăмах форми улшăнавĕнче тĕл пулакан категори формисем.** Палла ячĕн *-чĕ(-ччĕ)* аффиксла иртнĕ вахăт категорийĕ пуррине те палăртмалла. Ку аффикс пур палла ячĕ çумне те хушăнма пултарнине сăнасан, эпир ăна палла ячĕн категорисĕр форми тесе пахаймастпăр:

а) тĕсе пĕлтерекен палла ячĕсен: *хураччĕ, хĕрлĕччĕ, симĕсчĕ, кавакчĕ, шураччĕ, сараччĕ;*

а) виçе пĕлтерĕшлисен: *пĕчĕкчĕ, пысăкчĕ, кĕскеччĕ, тарăнччĕ, çухеччĕ, çамалччĕ, йывăрччĕ; Хамăр пекех ч у х ă н ч ч ĕ — лаши, ĕни пулман* (Ю. Николаева); *Пара пит с а х а л ч ч ĕ. Н а ч а р ч ч ĕ* пара (Хус.);

б) кăмăл пахалăхне кăтартаканнисем: *хаярччĕ, сăпайччĕ, чееччĕ;*

Йатти питĕ *хаярччĕ,*
Хампар айĕнчен тухмастчĕ (Юраран);

в) тулаш паллине пĕлтерекеннисен: *тăрĕччĕ, кукарччĕ, хытканччĕ; Пахма питĕ и л е м л ĕ ч ч ĕ* (Ю. Николаева).

Иккĕмĕшле паллă ячĕсем те, хăйсене уйрăммăн илнĕ чухне, ку аффикса çăмăллăнах йышăнаççĕ: *пылакчĕ, тўремччĕ, çамламасчĕ, шуранкаччĕ, катрашкаччĕ, хĕсĕкчĕ, парапаçчĕ, хĕрĕнкĕччĕ, парлакчĕ, шыçмакчĕ, çăмăлттайччĕ, мухтанчăкчĕ.*

Илсе кăтартнă тĕслĕхсенче пуринче те иртнĕ вăхăт пĕлтерĕшĕ пур, вĕсем пурте япала паллин иртнĕ вăхăтри тăрăмне палăртаççĕ.

Çавăнпа пĕрлех *-чĕ(-ччĕ)* аффикс танлаштару тата палăргу категорийĕсен формисем хыççăн та тăма пултарать: *çĕнĕрехчĕ; ватарахчĕ; хитрескерччĕ, мăнтарскерччĕ, ачашшиччĕ, кĕçĕнниччĕ. Тимĕр манран пилĕк çул а с л ă р а х ч ĕ* (Илп.); Пирĕн хушăра Тимĕр пуринчен *а с л и ч ч ĕ* (Илп.).

Паллă ячĕсен вăйлату категорийĕ те пур: *хитрех: хитри хитререх ĕнтĕ хăй; пысăкрахах: пысăкрахах касса ил; чиперскерех; вăйлиех çĕнтерчĕ.*

### 6 §. ПАЛЛĂ ЯЧĔСЕН КАТЕГОРИСĔР ФОРМИСЕМ

1. Евĕрлĕх форми: *çĕнĕлле, кивĕлле, ухмахла, айванла, пĕчĕкле. Эпĕ çак пўрте ç ĕ н ĕ л л е илтĕм* (А XIII, 74); *Эпĕ ку çĕлĕке к и в ĕ л л е илтĕм* (А VI, 195); *П ĕ ч ĕ к л е (п ĕ ч ĕ к к ĕ л л е) вĕрентнине нимĕн те çитмест* (А X, 260); *Чылайăшĕн пўртсем ш у р а л л а* (А XVII, 287).

2. Сулăну форми.

Анчах аçту: Михетер
Хĕрне памасть *çукалла* (К. Ив.).

*Çук* сăмаха кунта паллă ячĕ тесе пахсан, *çукалла* паллă ячĕн сулăну форми пулать: *Хĕрне памасть çук çынна* тесе ăнланмалла. Кун пек тĕслĕхсем чĕлхере урăх тĕл пулмаççĕ.

3. Пурлă форма: *хуралла, шуралла вырăнсем. Х а с т а р л а, хыт утамлă пулар* (Çеçп.); *Ш у р а л л а тутăр кĕр ленти — чăпла хĕрсенĕн пуçĕнче* (А XVII, 237); *нумайлă; сахаллă: Н у м а й л ă - с а х а л л ă пулна, Иван пуян патне вĕçтерсе те çитнĕ* (юмах); *Çĕр н у м а й л ă ялсем* (А IX, 41); *Çĕр с а х а л л ă ялсем* (А XI, 84).

4. Валеçу форми: *нумайшар, сахалшар. Вĕсене çав лайăх çĕр... н у м а й ш а р теçеттин лекет* (А IX, 42); *Вĕсене часчасах çитерес пулать, анчах пит с а х а л ш а р çитерес пулать.*

5. Тăсăмлăх форми: *çĕнĕччен, нумайччен. Чăвашсен тырри çитместчĕ ç ĕ н ĕ ч ч е н* (А XIII, 79); *Н у м а й ч ч е н ала çупна.*



## ХИСЕП ЯЧĔ

**Хисепе кăтартакан миçе? мисемĕш? миçешер? миçен? ыйтусенче тăракан сăмахсене хисеп ячĕсем теççĕ.**

Хисеп ячĕсем ятсăр хисепе те (отвлеченное число), паллă хисепе те палăртаççĕ. Ятсăр хисепе палăртакан хисеп ячĕсем (вĕсене хăшĕсем субстантивлă форма теççĕ) туллин, хăйсем тĕллĕн çўреççĕ: *пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăватта, пиллĕк, ултта, .., вунна...* Япала ячĕсем умĕн тăракан хисеп ячĕсем (вĕсене атрибутивлă форма теççĕ) япалан хисепне уçăмлă палăртаççĕ: *икĕ* е *ик çын, виçе* е *виç кĕнеке, вуна* е *вун çул, вун пĕр кĕпер.* Ун пек чух хисеп ячĕн кĕске формипе усă кураççĕ.

Тытăмне кура хисеп ячĕсем хутсăррисем тата хутлисем пулаççĕ. Хутсăррисен шутне çак хисеп ячĕсене кĕртмелле: *пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăватта, пиллĕк, ултта, çиччĕ, саккăр, тăххăр, вунна, çирĕм, вăтăр, хĕрĕх, аллă, çĕр, пин, миллион, миллиард.* Хутлисем икĕ е ытларах хисеп ятĕнчен тăраççĕ тесе вĕрентнĕ ку таранччченхи вĕренў пособийĕсенче. Çĕнĕ орфографире çак хисеп ячĕсене уйрăм çырма сĕннĕ: *вун пĕртен* пуçласа *вун тăххăра* çити, *сакăр вунна, тăхăр вунна, ик çĕртен* пуçласа *тăхăр çĕре* çитиччен. *Утмăл, çитмĕл* сăмахсене, иккĕмĕшле хисеп ячĕн шутне кĕртсе, хутлă тесе шутлама май пур, мĕншĕн тесен *-мăл(-мĕл)* сыпăксем авалхи чĕлхере «вунна» тенине пĕлтернĕ.

Çав хушăрах хутлă хисеп ячĕсен шутне сыпăнуллă çыхăнура тăракан и примыкани йĕркипе пĕрлешекеннисене кĕртме май çук, мĕншĕн тесен ун пек пĕрлешўсенчен сăмах майлашăвĕсем пулса каяççĕ. Халиччен *пин те тăхăрçĕр сакăрвун çиччĕ (1987)* хутлă хисеп ячĕ тесе палăртнă. Кун пек каланине тĕпе хурас пулсан, нимĕçсем пек, ăна пĕрле çырмалла пулса тухать: *пинтетăхăрçĕрсакăрвунçиччĕ.* Çакăн пек çырсан кăна эпир ăна хутлă теме пултаратпăр, уйрăм тăнă чух вăл хисеп ячĕсем ниепле те пĕр сăмах шутланаймаççĕ. Пĕрле çырнă чух *те* татăк (союз?) сăмах тытăмне кĕрсе кайса çухалать, уйрăм çырнă чух вăл, хăйĕн функцине çухатман пирки, ниепле те хисеп ячĕ шутланаймасть. Тишкерў тунă чухне хисеп ячĕсен сăмах майлашăвĕсенчи кашни сăмахне уйрăммăн илме лекет.

Япалан е ĕçĕн хисепне пĕлтерет тенине çак тĕслĕхсенче курма пулать:

*пĕр кĕнеке, çын, кун; пĕрре вуларăм, куртăм, чупрăм; иккĕмĕш кĕнеке, кил; иккĕмĕш вуларăм, килтĕм, куртăм; икшер кĕнеке, улма; икшер илмелле, сĕнмелле, памалла; виçĕ кил (çурт), кĕнеке; виççĕ килтĕм, кантăм, чупрăм; виççĕмĕш çурт, выран; виççĕмĕшне кĕтĕм, килĕштертĕм.*

Тулли хисеп ячĕсем (чылайăшĕсем) вĕçленеççĕ тата нумайлă хисеп аффиксне йышăнаççĕ.

Шкул учебникĕнче *çура, чĕрĕк* сăмахсем вак хисеп ячĕсем пулнине кăтартнă. Вĕсем тепĕр хисеп ячĕпе çыхăнма пултараççĕ: *çур пин, чĕрĕк миллион,* çавна май чылай чухне вĕсем, япала ятне ăнлантарса, определени пулаççĕ: *çур гектар* (тата *гектар çура*); *çур ĕмĕр, çур çул тултарчĕ, çур çулхи, çур хакпа сут е çурма хакпа сут; чĕрĕк сехет, чĕрĕк литр кĕленчи.*

*Çур (çура), чĕрĕк* сăмахсене вак хисеп ячĕсем шутне кĕртме сĕннĕ, анчах та *машар, йĕкĕр, харах, воçмушка, уçмушка, уçмухха, теçетке* сăмахсене хăш пуплев пайне кĕртмеллине каламан. Паллах, кусене вак хисеп ячĕ тесе пăхма май çук. Çавна май вĕсене тулли мар вĕçленуллĕ (е туллин улшăнман) япала ячĕсем теме май пур. Тĕрĕссипе вĕсене, уйрăм ушкăна уйăрса сумятсем темелле.

*Çур(а), чĕрĕк, воçмушка* сăмахсем *-мĕш, -ан(-ĕн, -н)* аффиксене йышăнмаççĕ, анчах *çуршар, чĕрĕкшер, воçмушкашар* формăсем чĕлхере пур: *Çуршар, чĕрĕкшер, воçмушкашар брикетсемшĕн — тенкĕрен ирттерсе тӳленĕ* (Осипов). Вĕсем *-и(-ĕ)* палăрту аффиксне йышăнма пултараççĕ: *çурри, чĕрĕкĕ* тĕп формăра та, палăрту форминче те туллин вĕçленеççĕ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *çура* | *чĕрĕк* | *çурри* |
| К. | *çурран* | *чĕрĕкĕн* | *çуррин (çуррин çурри)* |
| П. | *çурра* | *чĕрĕке* | *çуррине* |
| В. | *çурара* | *чĕрĕкре* | *çурринче* |
| Т. | *çураран* | *чĕрĕкрен* | *çурринчен* |
| П | *çурапа* | *чĕрĕкпе* | *çуррипе* |
| Ç | *çурасăр* | *чĕрĕксĕр* | *çуррисĕр* |
| П. | *çурашăн* | *чĕрĕкшĕн* | *çурришĕн* |

Хисеп ячĕсене мăшăрлатса тата ике хут калама пулать. Мăшăр хисеп ячĕсем: *иккĕ-виççĕ, пиллĕк-улттă, саккăр-тăххăр, вăтăр-хĕрĕх, вуннă-вун пиллĕк, çитмĕл-çитмĕл пиллĕк.*

Икĕ хут каланă хисеп ячĕсен шучĕ пысăках мар: *пĕр-пĕр, вун-вун, пин-пин.* Анчах сумятсене мăшăрлатса е икĕ хут сахал калаççĕ.



## 1 §. ХИСЕП ЯЧĔСЕН ФОРМИСЕМ

Пĕлтерĕшне кура тата грамматика формисене сăнаса, хальхи чăваш чĕлхинче хисеп ячĕсен шут, йĕрке, валеçӳ тата пĕтĕмлетӳ формисем пуррине кăтартнă. Хисеп ячĕсен çакăн пек формисем пуррине кунта вĕсем мĕнле аффикс йышăнма пултарнине кура палăртнă; тĕрĕсрех каласан, *-мĕш, -шар(-шер), -ан(-ĕн, -н)* аффикссем сăмаха улăштаракан аффикссем пулнине тĕпе хунă. Шкул учебникĕсенче хисеп ячĕсене пĕлтерĕшне кура ушкăнланă, çавна май çулерех асăннă аффикссене сăмах тăвакан аффикссен шутне кĕртнĕ теме май пур. Тĕслĕхрен, 1982 (1985) çулсенче М. И. Скворцов редакциленипе тухнă «Чăвашла-вырăсла словарьти» «Чăваш чĕлхинчи сăмах тăвакан аффикссем» ятлă хушмалчăра (661—664 с.) ку аффикссем дериваци аффиксĕсем пулнине палăртнă: *-мĕш: пĕрремĕш, икçĕрмеш; -ан(-ĕн): иккĕн, улттăн; -шар(-шер): икшер, вуншар,* çавна май çак аффиксла хисеп ячĕсене пурне те реестра уйрăм сăмах пек кăларса пынă.

Анчах та кун пек чухне çакна асра тытмалла: ку аффикссем пĕтĕмлĕх принципне пăханса тăраççĕ, хисеп ячĕ пулакан кашни сăмах тĕпĕ çумнех хушăнма пултараççĕ, çавна май вĕсене, сăмаха улăштаракан аффикссем тесе, хисеп ячĕсен йĕрке, валеçӳ, мĕнлелĕх (е малтанхилле пĕтĕмлетӳ) категорийĕсем (е категори формисем) пурри çинчен калаçмалла.

Хисеп ячĕсен шут форми — тĕп форма, ăна ку таранччен шут хисеп ячĕ тенĕ. Унăн ятарлă аффиксĕ çук, анчах та вăл хисеп ячĕн категориллĕ е категорисĕр формисене хăй çумне çыпăçтармалли тĕп шутланать: *-мĕш* аффикс хушăнсан, йĕрке хисеп категорийĕ йĕркеленет, *-шар(-шер)* аффикспа валеçӳ хисеп категори форми пулать; *-ăн(-ĕн, -н)* аффикс хисеп ячĕн мĕнлелĕх категори форми пурри çинчен хыпарлать.

Чăваш чĕлхинче хисеп ячĕ пулакан сăмах тымарĕсем е тĕпĕсем нумай мар, вĕсенчен кашни çӳлерех кăтартнă аффикссене йышăнма пултарать: *пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр, вуннă, çирĕм, вăтăр, хĕрĕх, аллă, утмăл, çитмĕл..., çĕр, пин, миллион, миллиард.*

Чĕлхере кирек мĕнле хисепе те çак сăмахсемпе усă курса палăртма пулать.

Кӳлепипе пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен шут хисепĕсем виçĕ тĕрлĕ пулаççĕ:

1) тулли кӳлепеллисем: иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр, вуннă;

2) кĕскерех кӳлепеллисем: диал. пере, икĕ, виçĕ, тăватă, пилĕк, улта, çичĕ, сакăр, тăхăр, вунă;

3) кĕске кӳлепеллисем: пĕр, ик, виç, тăват, улт, çич, вун. Пĕрре, пере, пĕр шут хисепĕн алломорфĕсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ: пир: пирвайхи; пĕч(ч): пĕччен.

«Чăвашла-вырăсла словарьте» (1985) пĕр сăмахăн вунпĕр пĕлтерĕш пуррине палăртнă: 1) япалан е ĕçĕн шутне палăртать: пĕр сехет, пĕрре кайнăччĕ; 2) индоевропа чĕлхисенчи паллă мар артикль вырăнĕнче çӳрет: пĕр çын килчĕ (темĕнле, палламан çын); 3) тепĕр хисеп ячĕпе тăнă чух хисепе çывхартса каланине пĕлтерет: пĕр виçĕ тенкĕ пар-ха; пĕр алла кĕнеке кирлĕ; 4) союз пĕлтерĕшĕ: Сӳс хӳреллĕ хурçа йыта Пĕр кĕрет те, пĕр тухать (К. Ив.); 5) вăйлату тăткĕ пĕлтерĕшĕ: хĕрĕ пĕр чиперскер т. ыт. те.

Ытти шут хисепĕсен кун пек пĕлтерĕшсем пурри сисĕнсех каймасть.

## 2 §. СĂМАХ ТАТА СĂМАХ ФОРМИН УЛШĂНĂВĔ

Сăмах улшăнăвĕ тесе хальхинче эпир шут хисеп ячĕсен тĕпĕсем çумне тĕрлĕрен сăмаха улăштаракан аффикссем хушăннине калатпăр. Сăмах формин улшăнăвĕ — хисеп ячĕсен категори е категорисĕр формисем ытти сăмаха улăштаракан аффикссене йышăнма пултарни.

Тулли кӳлепеллĕ шут хисепĕсем вĕçленеççĕ, ку вăл шут хисепĕсен сăмах улшăнăвĕнче падеж категорийĕ пуррине пĕлтерет:

Т. *вуннă: Вунна икке пайланать; Вунна та курна эп ана;*
К. *вуннан: Вуннăн çурри — пиллĕк;*
П *вунна: Вунна икке пайламалла; Вунна çитсе пырать;*
В. *вуннăра: Вал вуннăра анчах-ха; Вуннара пулнă-ши вал ун чух?*
Т. *вуннаран: Вуннаран иртнисем икĕ ача; Вуннаран иккĕ калар;*
П. *вуннапа: Вуннапа вал киле килет; Вуннапа сутрĕ;*
Ç. *вуннăсар: Вуннасар ана ан та кĕт; Вуннасар илеймĕн;*
П. *вуннашан: Вуннашанах пĕр эрне ĕçлемелле-и пирĕн унта?*

Хисеп ячĕ ăнлантаракан япала ятне сиктерсе хăварма та пулать. Вара хисеп ячĕ хăй вĕçленĕве лекет, çавна май кунта ятсăр хисеп (хисеп ячĕн субстантивлă форми) вĕçленĕвĕ куç умĕнчех.

Тулли кӳлепеллĕ шут хисепĕсем нумайлă хисепре те тăма пултараççĕ; ку вĕсен нумайлă хисеп категорийĕ



пуррине пĕлтерет: иккĕсем, вуннăсем, ватăрсем, алласем т. ыт. те. Ун пек чухне ку формăсен çак пĕлтерĕшĕсем палăраççĕ: а) çыннăн çулне ватамран палăртни: *Вал ватăрсенче (хĕрĕхсенче, аллăсенче, утмăлсенче* т. ыт. те); *Кӳршĕре пирĕн пĕр суккар Илькка пурăнатчĕ; Çирĕмсене пуçтарса пыратчĕ пуль вăл* (Илп.); ă) вăхăта çывăхлатса калани: *Иккĕсем çитнĕ пулмалла;* б) укçа шутне (япала сутнă е илнĕ чух) çывăхлатса, ватамран илсе калани: *Алласемпе сутать пулмалла; Хĕрĕхсемпе илме пулатьтар; Пилĕк пинсем ыйтать пулмалла.*

Кун пек чухне шут хисепĕсене *-сем* аффикспа каласси япала ятне каламаннинчен килет: *хĕрĕхсенче — хĕрĕх çулсенче; иккĕсем тĕлнелле — икĕ сехетсем тĕлнелле; алласемпе сутать — алла тенкĕсемпе сутать.*

Нумайлă хисеп аффиксне йышăннă хисеп ячĕсем хашпĕр падежсенче пулма пултараççĕ; туллин те вĕçленме пултараççĕ:

Т. *пиллĕксем: Пиллĕксем тĕлнелле кил;*
К. *пиллĕксен: Пиллĕксен тĕлĕнче пулна ку ĕç;*
П. *пиллĕксене: Пиллĕксене çитсе пырать пулмалла;*
В. *пиллĕксенче: Пиллĕксенче тĕл пулапăр;*
Т. *пиллĕксенчен: Пиллĕксенчен те иртмен;*
П. *пиллĕксемпе: Пиллĕксемпе сутать пулмалла;*
Ç. *пиллĕксемсĕр: Пиллĕксемсĕр илеймест;*
П. *пиллĕксемшĕн: Пиллĕксемшĕн тарăшсах вĕренмелле.*

Нумайлă хисепри тулли шут хисепĕсем вĕçленесси хисеп ячĕ ăнлантаракан *сехет, çул, тенкĕ, пус* сăмахсене каламаннинчен килĕт; *иккĕсенче — икĕ сехетсенче; ватăрсенче — ватăр çулсенче; алласемпе — алла тенкĕпе; сакăр вуннăсăр памарĕ — сакăр вуна тенкĕсĕр сутмарĕ.*

Шут хисепĕсем уйрăм сапат аффиксĕсене йышăнма пултараççĕ, çавăнпа шут хисепĕсен категорисĕр сапат формисем пурри çинчен калаçма май пур:

Сапат аффиксĕсене йышăнакан хисеп ячĕсем чăваш чĕлхинче нумай мар, ăна çак ӳкерчĕкре те курма пулать:

| Нумайлă хисеп | | Пĕрреллĕ хисеп |
|---|---|---|
| 1-мĕш сапат форми | 2-мĕш сапат форми | 3-мĕш сапат форми |
| *пĕр...?* | *пĕрсĕр* (А Х, 225) | *пĕрĕш* (А Х, 219) |
| *иксĕмĕр* | *иксĕр* | *пĕрерĕшĕ* |
| *виçсĕмĕр* | *виçсĕр* | *иккĕшĕ* |
| *тăватсамăр* | *тăватсăр* | *виççĕшĕ* |
| *пилĕксĕмĕр* | *пилĕксĕр* | *тăватташĕ* |
| *ултсамар* | *ултсар* | *пиллĕкĕшĕ* |
| *çичсĕмĕр* | *çичсĕр* | *улттăшĕ* |
| | | *çиччĕшĕ* |
| | | *вуннăшĕ* |

Ӳпала ячĕсем сапат аффиксне йышăннипе танлаштарсан, хисеп ячĕсен сапат формисем *-с-* элемент пуррипе уйăралса тăраççĕ:

*ик(с)-ĕм-ĕр,* танл.: *хĕр-ĕм-ĕр, кинĕмĕр, килĕмĕр;*
*тăват(с)-ам-ăр,* танл.: *çурт-ам-ăр, пурлăхамăр, ушамăр;*
*вис(с)-ĕр,* танл.: *хĕр-ĕр, кин-ĕр, килĕр, хирĕр;*
*тăват(с)-ăр,* танл.: *хăват-ăр, çурт-ăр, çуралнă кунăр.*

Чĕлхе историкĕсем шут хисепĕсен сапат аффиксесем умĕн тăракан *-с-* элемент мĕне пĕлтернине тĕрлĕрен ăнлантараççĕ. Морфемăсене уйăрса палăртнă чухне те ку хисеп ячĕсене тĕрлĕрен пайлаççĕ. Ака М. Р. Федотов вĕсен пайланулăхне çапларах кăтартнă[1]: *ик-сĕ-мĕр* тут. *ике-без; ик-се-р* тут. *икегез.*

Анчах та автор 1-мĕшпе 2-мĕш сапат форминчи *-сĕ-* элемента тĕрĕк чĕлхисенчи *-си, -сы* виççĕмĕш сапат аффиксĕпе çыхăнтарма тăрăшни усăсăр пек туйăнать, *-с-* авăлхи нумайла хисеп аффиксĕн архетипĕ пулмалла.

Шкул учебникĕсенче сапат аффиксĕсем умĕнхи *-с-* элемента кĕртсе лартнă сасă (интерфонема) тенĕ.

Шут хисепĕсен 3-мĕш сапат форми хисеп ячĕсен тулли кӳлепи çумне хушăнни куç умĕнчех, эпир *вун пĕреше, çирĕм иккĕшĕ, çĕр вуннăшĕ, ик çĕр вăтăрăшĕ, тахăр çĕреше* тесе те калатпăр, анчах та *миллионăшĕ, миллиардăше* тени чĕлхере çук.

Шут хисепĕсен 3-мĕш сапат форми тăванлăха палăртакан сăмахсенчи пекех: *иккĕшĕ,* танл.: *пиччĕшĕ, инкĕшĕ, тетĕшĕ, кĕрӳшĕ, хуньăшĕ, хăтăшĕ; тăваттăше,* танл.: *аппăшĕ, мучăшĕ, куккăшĕ, амăшĕ, асламăшĕ.*

Шут хисепĕсен сапат формисем вĕçленеççĕ. 1-мĕшпе 2-мĕш сапатрисем тĕп вĕçленӳре пулаççĕ, 3-мĕш сапатрисем — хутăш вĕçленӳре.

| Падежсем | Сапатсем | | |
|---|---|---|---|
| | 1-мĕш с. | 2-мĕш с. | 3-мĕш с. |
| Т. | *иксĕмĕр* | *иксĕр* | *иккĕше* |
| К. | *иксĕмĕрĕн* | *иксĕрĕн* | *иккĕшĕн* |
| П. | *иксĕмĕре* | *иксĕре* | *иккĕшне* |
| В. | *иксĕмĕрте* | *иксĕрте* | *иккĕшĕнче* |
| Т. | *иксĕмĕртен* | *иксĕртен* | *иккĕшĕнчен* |
| П. | *иксĕмĕрпе* | *иксĕрпе* | *иккĕшĕпе* |
| Ç. | *иксĕмĕрсĕр* | *иксĕрсĕр* | *иккĕшĕсĕр* |
| П. | *иксĕмĕршĕн* | *иксĕршĕн* | *иккĕшĕшĕн* |

[1] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1983. Ч. 2. С. 104, 105.



Шут хисепĕсен сапат аффиксĕсене сăмах тăвакан аффикс шутласа хăш-пĕр тĕпчевçĕсем *иксĕмĕр, иксĕр, иккĕшĕ* йышши хисепсене пĕтĕмлетӳ хисепĕ теме пăхаççĕ. Ку шухăша ырлама май çук. Ку çулпа кайсан япала ячĕн камăнлăх категори аффиксĕсене пурне те сăмах тăвакан аффикс тесе шутлама лекет. Япала ячĕсен сапат аффиксĕсем сăмаха улăштаракан аффикссем (тĕрĕсрех: категори формисем) шутланаççĕ пулсан, шут хисепĕсен сапат формисене категорисĕр форма тесе шутлама лекет, мĕншĕн тесен вĕсем пĕтĕмлĕх принципне пăхăнмаççĕ: 1-мĕшпе 2-мĕш сапат аффиксĕсен нумайлă хисеп форми кăна, пĕрреллĕ хисеп форми çук, вăл та пулин ытларах *иккĕпе çиччĕ* хушшинчи хисеп ячĕсенче кăна пулать. 3-мĕш сапат аффиксĕ чылай шут хисепĕсемпе çурет пулин те, ăна уйрăммăн илсе сапат категорийĕ (3-мĕш сапат категорийĕ) теместпĕр.

## 3 §. *ПĔР(РЕ)* ХИСЕП ЯЧĔН УЙРĂМЛĂХĔСЕМ

*Пĕр, пĕрре* шут хисеп ячĕсен ретĕнче пуçламăш сăмах пулса тăрать. Вăл нумай пĕлтерĕшлĕ пулни çинчен калаçмар ĕнтĕ.

*Пĕр* шут хисеп ячĕ, контекстри пĕлтерĕшне курă, япалан паллă шутне те, япалан шутне тĕрĕслетсех калама май çуккине те палăртать: *пĕр çын, пĕр вун çын пулĕ.*

*Пĕр* хисеп ячĕ глагол умĕнче те тăма пултарать, ун пĕлтерĕшне вăйлатать: *Çанталăк пĕр уяртать, пĕр пăсăлать. Сӳс хӳреллĕ хурçа йытă пĕр кĕрет те, пĕр тухать.* Кун пек предложенисенче *пĕр* хисеп ячĕн уйăру союз пĕлтерĕшĕ пулать.

## 4 §. ЙĔРКЕ ХИСЕП КАТЕГОРИЙĔ

Ку форма шут хисепĕсен тулли кӳлепи çумне *-мĕш* аффикс хушăннипе пулать. Йĕрке хисеп категори формин япаласен йĕркине палăртнипе пĕрлех палăрту пĕлтерĕшĕ те пур: *вунă çын* тесен çынсем вуннă пулнине, *вуннăмĕш çын* тесен çынсем вуннăн е ытларах пулнине, вуннăмĕшне палăртса каланине пĕлетпĕр.

Йĕрке хисепĕсен категори формипе япаласен йĕркине кăна мар, ĕçĕн йĕркине те палăртаççĕ: *Пĕрремĕш* вуласан нимĕн те ăнланмарăм; Черетре *вуннăмĕш* тăратăп; *вуннăмĕш* çурт, *иккĕмĕш* квартал.

Йĕрке хисепĕсем вĕçленеççĕ. Чылай чухне тĕпчевçĕсем 3-мĕш сапат аффиксне йышăннă йĕрке хисепĕсем вĕçленнин уйрăмлăхĕсене палăртмаççĕ. Морфемăсем тĕлĕшĕнчен кунта, паллах, уйрăмлăх пулмаллах:

| | | |
|---|---|---|
| Т. | *вунна-мĕш* | *вунна-меш-е* |
| Ķ. | *вунна-мĕш-ĕн* | *вунна-меш-е-н* |
| П. | *вунна-мĕш-н-е* | *вунна-мĕш-н-е* |
| В. | *вунна-мĕш-ĕн-че* | *вунна-мĕш-ен-че* |
| Т. | *вуннă-мĕш-ĕн-чен* | *вунна-меш-ен-чен* |
| П. | *вунна-мĕш-пе* | *вуннă-мĕш-ĕ-пе* |
| С. | *вуннă-мĕш-сĕр* | *вунна-мĕш-е-сер* |
| П. | *вуннă-мĕш-шĕн* | *вунна-мĕш-ĕ-шен* |

Хальхи чăваш чĕлхинче *виçĕм кун, таватам кун, виçĕм çул. таватам сул* текен самах çавранашĕсем пур. Ķалаçу чĕлхинче *пилĕкĕм, ултăм, сичем кун, çул* тенисем тел пулаççе. Хисеп ячĕн кĕске форми çумне *-ам(-ĕм)* аффикс хушăнса, шут хисепĕн йĕрке форми пулать. Ку аффикспа пулнă 4—5 хисеп ятне уйрам ушкан туса йĕрке хисепĕ теме май çук. Ку таранччен ĕçсенче вĕсене йĕрке хисепĕ тесе пахнă пулна[2].

## 5 §. ВАЛЕÇӲ ХИСЕП ĶАТЕГОРИЙĔ

Шут хисепĕсен кĕске кӳлепи çумне *-шар(-шер)* аффикс хушăнса япалана пĕр виçеллĕ валеçнине кăтартакан самахсен кӳлеписене валеçӳ хисепĕ теççĕ.

*Пĕр* хисеп ячĕн валеçӳ форми икĕ тĕрле пулма пултарать: *пĕр-ер, пĕр-шер.* Ытти хисеп ячĕсенче кун пек уйрăмлăх урăх палăрмасть: *вун пĕршер, çирĕм пĕршер, çĕр пĕршер* т. ыт. те.

Валеçӳ хисеп формисем нумайлă хисеп аффиксне йышăнмаççĕ, вĕсен вĕçленĕвĕ те тулли мар:

Т. *вуншар*
Ķ. *вуншаран(?)*
П. *вуншара: вуншара сутна;*
В. *вуншарта(?)*
Т. *вуншартан: вуншартан кая ыштмасть;*
П. *вуншарпа: вуншарпа туянтам;*
Ç. *вуншарсăр: вуншарсар сутмасть;*
П. *вуншаршан(?)*

И. П. Павлов чĕлхеçĕ юлашки çулсенче писательсемпе поэтсем час-часах хăйсен произведенийĕсенче, хаçат-журналсенче валеçӳ хисеп формипе тĕрĕс уса курманнине палăртать[3].

[2] Н. И. Ашмарин калана тарах, хальхи чăваш чĕлхинчи йĕрке хисепĕн *-мĕш* аффиксĕ çав *-ам(-ĕм)* аффикс çумне 3-меш сапат аффиксе ике хутчен хушăннипе пулна: ултт-ам-ĕ-шĕ (Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка) // Тр. / ЧНИИ. Чебоксары, 1976 Вып. 66. С. 43).

[3] Павлов И. П. V—VI классенче чаваш челхин морфологине верентесси. Шупашкар, 1985. 50—51 с.



*Пиншер* çутăпа çуталать тĕп хуламăр (Г. Еф.). Дивизири полксем кашни кун *вуншар, çирĕмшер, ватаршар* яла ирĕке каларатчĕç (Агак.).

Çакăн пек тĕслĕхсенче *-шар(-шер)* аффиксла хисеп ячĕсем нумайлăха палăртма пуслани сисĕнет. Ку вăл *-шар(-шер)* аффикс ытти тĕрĕк чĕлхисенчи нумайлă хисеп аффиксĕпе хуранташла пулнинчен те килме пултарать.

Асархаттару. Хакас, тофалар чĕлхисенче *-шар(-шер)* аффикс выранĕнче *-лар(-лер)* аффикс çурет: *ики-лер, алты-лар* (танл.: *китаб-лар* «кĕнекесем»).

Чăваш чĕлхинче *Тӳпере пиншер çалтăр* тенĕ чух, паллах, *пиншер* сăмах валеçӳ пĕлтерĕшĕпе мар, нумайлăх пĕлтерĕшĕпе тарать. Ку форма нумайлăха палăртасси контекстран та килет: *Макçампа Яккăва икĕ улма патам* тенĕ чухне улмасен хисепĕ иккĕ (2) пулни паллă.

*Макçампа Яккăва икшер улма патăм тесен, икшер* (контекста кура) тăватта (4) пулни уçăмла куранать. Малтанхи пуплеве иккĕмĕш пуплевпе танлаштарсан, уйрăмлăхĕ морфологи тĕлĕшĕнчен хисеп ячĕн формисенче кăна: *икĕ — икшер. Икшер* тени иккĕмĕш предложенире 4 тенипе пĕр пĕлтерĕшлĕ пулчĕ, нумайлăха палăртни куранма пуçларĕ.

Çак тĕслĕхсене пăхса тухнă хыççăн *-шар(-шер)* аффикс нумайлăха нихăçан та кăтартман[4] теме пултараймастпăр.

Çавăнпа çыравçăсем те, вулакансем те çак предложенисене пĕр пекех ăнланаççĕ:

1. *Çĕршер çул ӳсекен юмансем кашласа лараççĕ ку çĕршывра* (Харлампьев). 2. *Çамраксем икĕ кун хушшинче çĕршер йывăç лартрĕç* (Юхма). 3. *Чечексем çине çĕршер лĕпĕш вĕçсе пычĕ* (В. Алент.).

Ку предложенисенчи *çĕршер* тени паллă мар нумайлăха палăртать, ăна сивлеме сăлтав çукрах пек туйăнать.

Çав вахатрах япала нумайăшне хисеп ятне икĕ хут каланипе те палартма пулать: Тӳпере *пин-пин* çалтар сивĕ çутăпа йалкашать (В. Алент.).

Çапнине купа туса
Пуçтарса хурас пулсан,
Çака тыра куранса
Таре *çĕр-çĕр* çухрамран (Я. Ухç.).

[4] Павлов И. П. Хисеп ячĕсен хашпĕр формисемпе уса курасси пирки // Таван Атал. 1972. 7 №. 79 с.

## 6 §. МĔНЛЕЛĔХ ХИСЕП КАТЕГОРИЙĔ

Ку категори шут хисеп ячĕн тулли кӳлепи çумне *-ан(-ĕн, -н)* аффикс хушăннипе пулать: *иккĕн, виççĕн, тăваттăн, пиллĕкĕн, улттăн, çирĕммĕн, çĕрен, пинĕн...*

*Çирем улттăн* вĕсем, *çирĕм улттăн,*
Çирĕм улта герой — сахал мар (Хус.).

Япала ячĕсен мĕнлелĕх формиӗ *-ан(-ĕн)* аффикспа пулнине шута илсен (*варманан* куран, *патан* сут), палла ячесен *-ан(-ĕн)* аффиксла мĕнлелĕх категори формиӗ пуррине тепе хурсан *(лайаххăн, чиперрĕн, кахаллан, илемлен)*, морфологири терминсене пĕрпеклетес тĕллевпе, хисеп ячĕсен петемлетӳ хисеп категорине те мĕнлелĕх категори формиӗ темелле пек. Кун пек калама пире *пĕрре* хисеп ятĕнчен пулакан *печчен* форма та хистет, вал пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшлĕ мар.

*Иккĕн икерч çиме, улттăн аван çапма лайах* (Ват. сам.); *Пĕччен хырăм пĕрчĕпе те таранать* (Ват. сам.) предложенисенчи *иккĕн, улттăн, пĕччен* хисеп формисем *миçен?* ыйтура тараççĕ. Çав хушарах *Иккĕн автан çиме, вуниккĕн аван çапма лайах* тенĕ чухне мĕнлелĕх пĕлтерĕш семе те пур.

Мĕнлелĕх категорине камăнлăх падежĕн *-ăн(-ĕн, -н)* аффиксĕпе патраштарма юрамасть. *Иккĕн* (*мĕнен?* — кам. пад.) *хӳрине варамман çырнă.* Эпир хулана *иккĕн (миçен?)* кайрамар.

Мĕнлелĕх категори формиӗ туллин вĕçленмест, апла пулсан. кун пек чух самах формиӗ улшанавĕнче падеж категори пурри палармасть; *çирĕммĕне çитрĕмĕр, улттантан пĕри, иккĕнĕшĕн укçа илсе пураннă.*

Чĕрчунсен е çынсен шутне тĕрĕс палартман чухне ку хисеп формисене машарлатса та калаççĕ: *Пӳлĕмрен çиччĕнсаккаран сиксе тухрĕç. Кашкартан хăранипе сурăхсем пер кĕтессе пиллĕкĕн-улттăн пухăнса танă.*

Хисеп ячĕсен валеçӳ категори формиӗ çумне мĕнлелĕх категори аффиксĕ хушанма пултарать: *пĕрерĕн, икшерĕн, виçшерĕн, вуншаран, хĕрĕхшерĕн, утмалшаран, çĕршерĕн, пиншерĕн.* Ун пек формăсене хашĕсем валеçӳ-пĕтĕмлетӳ хисеп ячĕсем теççĕ.

Япаласене е сынсене ушкăнласа тухнине палартарах калана чухне ку формăсене икĕ хут калаççĕ: *икшерĕн-икшерĕн, виçшерĕн-виçшерĕн, вуншарăн-вуншарăн;* машарлатса калана чухне хисеп тĕп-тĕрĕс паларманни сисĕнет: *ултшарăн-çичшерĕн е ултшар-çичшерĕн.*



Хисеп ячĕсен пур формиӗ çумне те *-чĕ(-ччĕ)* аффикс хушанма пултарать: *вуннăччĕ, вуннараччĕ, вуннамĕшчĕ, вуншарччĕ, вуншаранччĕ; иксĕмĕрччĕ, иксĕрччĕ, иккĕшĕччĕ; виççĕмĕшчĕ, виççĕмĕшсемччĕ.* Пĕтĕмлĕх принципне пăхăнса, япаласен е ĕçĕн хисепне, йĕркине, ушкăнне иртнĕ вăхăтпа çыхăнтарнине сăнаса, хисеп ячĕсен иртнĕ вăхăт категорийĕ пурри çинчен калаçма май пур: *Эпĕ çиччĕре (çиче çулта)* тенĕ чухне калаканни хăй ӳсĕмне хальхи вăхăтпа палартать. *Эпĕ çиччĕреччĕ* тесен калаканни малтан (тахçан) иртнĕ вăхатра çиччĕре пулнине пĕлетпĕр.

Хисеп ячĕсем е вĕсен формисем *-ах(-ех, -х)* аффикса йышăнса, вăйлату категори формиче пулаççĕ: *пиллĕк пиллĕкех, çĕр çĕрех; Черетре пĕррремĕшех пулман эп. Иксĕмĕрех юлтамар. Иккĕшех çурт купалама тытăннă.*

Тасамлăх категори формиӗ *-ччен* аффикс хушăннипе пулать: *пĕрреччен, вуннăччен, çĕрччен.*

## 7 §. ХИСЕП ЯЧĔСЕН КАТЕГОРИСĔР ФОРМИСЕМ

1) Шутлав формиӗ: *пĕрре — пĕрев, икĕ — икев, виçĕ — виçев (е виçел)* — ачасен вăййари шут виçи;

2) евĕрлĕх формиӗ: *виççĕлле* (пуша), *саккăрла* (çаптарна таша);

3) сулăну формиӗ: *вăтаралла* (çывхарать) *хĕрĕхелле — хĕрĕхсенелле* (çитнĕ çын), *утмăлалла* (капашать);

Улта уйахра эп ураланнă, тет,
*Таххаралла* — чĕлхе каларна, тет (Хус.);

4) пурлă форма: *çиччĕллĕ* (лампа, хĕç), *таххарла* (çапата);

Вал çапрĕ революци умĕн
*Мильонла* халахан чунне (Хус.);

5) палăрту формиӗ: *вуннăри* (ача), *çирĕмрескер, пĕри.*

## МЕСТОИМЕНИ (ЯТЫЛМАШĔ)

**Ят самахсем выранĕнче çӳрекен, падеж тата хисеп тарăх улшанакан, евĕрлĕх категорийĕ пур самахсене местоимени (ятылмашĕ) темелле.**

Ят самахсем тесе эпир япала ятне, палла ятне, хисеп ятне калатпăр. Енчен те ятылмашĕ вĕсем выранĕнче çӳрет пулсан, сав самахсен пĕлтерĕшне кăна мар, морфологири уйрамлахĕсене те палартма кирлĕ вăл.

Тĕслĕхрен, *вăл* местоимениех илсе пăхар:

1. *П е т ĕ р лайăх вĕренет — в ă л лайăх вĕренет.* 2. *К а в а к кĕпе килĕшет — в ă л кĕпе килĕшет.* 3. *И к к ĕ виççĕрен пĕчĕк — в ă л виççĕрен пĕчĕк.*

Пĕрремĕш тĕслĕхри *вăл* ылмаш *Петĕр* япала ячĕ выранĕнче тарать, иккĕмĕшĕнче — *кавак* палла ячĕ выранĕнче, виççĕмĕшĕнче — *иккĕ* хисеп ячĕ выранĕнче, çапла майпа *вăл* местоимени япала ятне, палла ятне, хисеп ятне ылмаштарать. Ылмашсем пĕлтерĕшне тата морфологи паллисене кура çак ушкăнсене пайланаççĕ: сăпат, таврăну-сăпат, ыйту, катарту, çуклăх, палла тата палла мар местоименисем.

Ят самахсем выранĕнче çӳрекен, кашни сăпатра хăйне уйрам пĕлтерĕшлĕ, хисеп тата падеж тарăх улшанакан, хуташ тата камăнлăх вĕçленĕвĕсенче пулакан самахсене сăпат местоименийĕсем теççĕ. 1-мĕш с. — *эпĕ, эп: эпĕр, эпир;* 2-мĕш с. — *эсĕ, эс; эсĕр, эсир;* 3-мĕш с. — *вăл, вĕсем.*

Маларах эпир кашни сăпатăн хăйне уйрам пĕлтерĕш пуррине палартнăччĕ: *эпĕ* — калакан çынна, *эпир* — калаканнине тата унпа пĕрле пулакан çынсене палăртать; *эсĕ* — кама каланине, *эсир* — кама каланине тата унпа пĕрле пулакан çынсене пĕлтерет; *вăл* — калаçăва хутшăнман çынна тата кирек мĕнле япалана та; *вĕсем* — калаçăва хутшăнман çынсене кăна мар, чĕрĕ мар япаласене те кăтартать. Кăтарту пĕлтерĕшĕ уççăн палăрнипе *вăл, вĕсем* самахсене кăтартусăпат местоименийĕсем теме те пулать.

Сăпат местоименийĕсен хисеп категорийĕ япала ячĕсеннинчен уйăрăлса тăрать: *эпĕ — эпĕр (эпĕ-р), эпир (эпи-р); эсĕ — эсĕр (эсĕ-р), эсир (эси-р).*

1-мĕшпе 2-мĕш сăпат местоименисен нумайлă хисеп аффиксĕ *-р* морфема шутланать, мĕншĕн тесен *эпĕ, эсĕ* самахсем уçă сасăпа пĕтеççĕ, çавна май нумайлă хисеп аффиксĕ кунта *-ĕр* мар, *-р* кăна. 3-мĕш сăпатра кăна, япала ячĕсенчи пек, *-сем* нумайлă хисеп аффиксĕ хушăнать: *вăл — вăлсем→ вĕсем.* Нумайлă хисепри *эпир (эпĕр), эсир (эсĕр)* местоименисене *эпĕ, эсĕ* выранне уса курни сисĕнет (çынна хисеплени палартас тĕллевпе): *Çаван пирки калаçса, пахас терĕмĕр с и р ĕ н п е, — Борисов... Салампи çине тинкерчĕ* (Арт.). *Наука ĕçĕсенче, автор пĕччене пулсан та, евĕклĕхшĕн э п ĕ теес выранне э п и р местоименипе уса курать. Анчах э п и р лайăх терминсем тупассине хирĕç мар* (И. П. Павлов. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. 92 с.). Ку вырăс чĕлхин витĕмĕпе пулса пырать пулмалла.

Япала ячĕсемпе танлаштарсан сăпат местоименийĕсен вĕçленĕвĕ те уйрамлăхсем пуррипе палăрса тăрать: вĕçленӳре икĕ тĕрлĕ тĕп: тĕп падежра — *эпĕ, эсĕ, вăл;* камăнлăх падежĕнче — *ман, сан, ун* (е *манăн, санăн, унăн*).

### 1 §. САПАТ МЕСТОИМЕНИЙĔСЕН САМАХ УЛШАНАВĔ

#### Нумайлă хисеп категорийĕ

Нумайлă хисеп аффиксĕсене тĕп падежри формăсем йышăннине сăнаса местоименисен самах улшанавĕнче хисеп категорийĕ пуррине палăртатпăр:

| | | |
|---|---|---|
| *эпĕ (эп) — эпир (эпĕр)* | } *-р* | аффикс |
| *эсĕ (эс) — эсир (эсĕр)* | | |
| *вăл — вĕсем* | } *-сем* | аффикс |

Тĕп падежри сăпат ятылмашĕсем çумне *-чĕ(-ччĕ)* иртнĕ вахăт категори аффиксĕ хушăнать: *юрлаканни эпĕччĕ, ташлаканни — эсĕччĕ, купăс калаканни — вăлччĕ; ĕçне тавакансем эпирччĕ, укçа илекенĕсем вĕсемччĕ, тăкак куракансем — эсирччĕ,* анчах *эпирччĕ, эсирччĕ, вĕсемччĕ* — самах формин улшанавĕнче пăхмалла япаласем.

Тĕп падежри сăпат местоименийĕсем вăйлату категори формин аффиксне те йышăнаççĕ: *эпех, эсех, вăлах, эпирех, эсирех, вĕсемех.*

Самах улшăнавне лекекен категори формисем те, категорисĕр формăсем те сăпат местоименийĕсен урăх çук.

### 2 §. САМАХ ФОРМИН УЛШАНАВĔ

#### Падеж категорийĕ

*Эпĕ, эсĕ, вăл* местоименисене вĕçленĕ чух падеж аффиксĕсем тĕп падеж форми çумне мар, камăнлăх падеж форми

ҫумне ҫыпҫӑнса пыраҫҫӗ, ҫавӑнпа та ку вӗҫленӗве қаманлӑх падеж формин вӗҫленӗвӗ е, кӗскен, қаманлӑх вӗҫленӗвӗ тетпӗр. Местоименисен вӗҫленӗвӗ тӗпчевҫӗсене пӗрре мар кӑсаклантарнӑ. Пӗрреллӗ хисепри қаманлӑх падежӗнче виҫӗ сапатра та тулли тата кӗске формӑсем пулнине палӑртнӑччӗ. Тулли тата кӗске формӑсен вӗҫленӗвӗн хайӗн уйрӑмлӑхӗсем пур.

Қаманлӑх падежӗнчи тулли тата кӗске тӗпсем вӗҫленнин уйрӑмлӑхӗсене ҫак ӳкерчӗксенче курма пулать. Вӗҫленекен тӗпсем: *ман, сан, ун:*

| Хисеп | Вӗҫлевлӗх | Сапат | | |
|---|---|---|---|---|
| | | 1-мӗш | 2-мӗш | 3-мӗш |
| Пӗррелӗ | Т. | *эпе, эп* | *эсӗ, эс* | *вӑл* |
| | Қ. | *ман* | *сан* | *ун* |
| | П. | *ман-а* | *сан-а* | *ан-а* |
| | В. | *ман-ра* | *сан-ра* | *ун-ра* |
| | Т. | *ман-ран* | *сан-ран* | *ун-ран* |
| | П. | *ман-па* | *сан-па* | *ун-па* |
| | Ҫ. | *ман-сар* | *сан-сар* | *ун-сар* |
| | П. | *ман-шан* | *сан-шӑн* | *ун-шан* |

Малалла *манан, санӑн, унӑн* вӗҫленекен тӗпсен улшӑнӑвне сӑнӑпӑр:

| Хисеп | Вӗҫлевлӗх | Сапат | | |
|---|---|---|---|---|
| | | 1-мӗш | 2-мӗш | 3-мӗш |
| Пӗррелӗ | Т. | *эпе* | *эсе* | *вӑл* |
| | Қ. | *манан* | *санан* | *унан* |
| | П. | *манӑнне* | *сананне* | *унанне* |
| | В. | *мананче* | *санӑнче* | *унӑнче* |
| | Т. | *мананчен* | *сананчен* | *унӑнчен* |
| | П. | *мананпе* | *санӑнпе* | *унӑнпе* |
| | Ҫ. | *манансар* | *санансӗр* | *унансӗр* |
| | П. | *манӑншӗн* | *санӑншӗн* | *унаншӗн* |

Қаманлӑх падежӗнчи формӑсем *ман, манан,* пӗр мар пулин те. пӗлтерӗшӗсем пӗр килсе тухаҫҫӗ. Пару падежӗнчен малаллисенче пуринче те пӗлтерӗш уйрӑмлӑхӗ пысӑк: *Мана каларӗҫ* тенӗ чухне калаканни хайне кам та пулин, мӗн те пулин каланине палӑртать. *Манӑнне варларӗҫ* тенӗ чухне калаканнин япалине кам та пулин варланине е илнине пӗлтерӗр. Илемлӗ произведенисенче кун пек чух тулли формӑпа кӑна мар, кӗскипе те уса кураҫҫӗ: *Мӗншӗн м а н н е ӗҫкунӗ нумай чакартар? Паянах ӗҫрен тухатӑп, — тесе харатать* (Арт.).



Ака «Саламписем» повеҫрен илнӗ ҫак йӑркесене тишкерер. 1. *С а н юрруна пачах илтеймерӗм, — терӗ ҫирӗп карчӑк, чалхине хурса.—Қам юрларӗ с а н н е? Хӗрӗм, эсӗ мар-и?* (Арт.). 2. *Эпӗ хам та лайӑх пӗлетӗп ана, хушса тӳлемеллине! Анчах кам кӗсйинчен, кам хушмалла? М а н ч е н - и, с а н ч е н - и, у н ч е н - и ? — тесе, председатель стена ҫинчи Мичурин портречӗ ҫине тӗллесе кӑтартрӗ* (Арт.).

Пӗрремӗш предложенири *санне* тени «санӑн юрруна» тенипе пӗр пӗлтерӗшлӗ. Иккӗмӗш предложенире *манчен* — ман кӗсьерен, *санчен* — сан кӗсьерен, *унчен* — ун кӗсйинчен тенисемпе пӗр килсе тухать.

Сана — сава хакӗ, сана гонораре,
... ята ҫеҫ ҫырса ларт *манӑнне* (Хус.).

*Манӑнне* тени «ман ята» тенипе пӗр килсе тухать.

| Хисеп | Вӗҫлевлӗх | Сапат | | |
|---|---|---|---|---|
| | | 1-мӗш | 2-мӗш | 3-мӗш |
| Пӗррелӗ | Т. | *эпӗ — эп* | *эсе — эс* | *вал* — диал. *у* |
| | Қ. | *манан — ман* | *санӑн — сан* | *унан — ун* |
| | П. | *манӑнне — манне* | *сананне — санне* | *унанне — унне* |
| | В. | *мананче — манче*[1] | *сананче — санче* | *унанче — унче* |
| | Т. | *мананчен — манчен* | *сананчен — санчен* | *унӑнчен — унчен* |
| | П. | *манӑнпе — манпе* | *сананпе — санпе* | *унӑнпе — унпе* |
| | Ҫ. | *манӑнсӗр — мансӗр* | *санӑнсӗр — сансӗр* | *унӑнсӗр — унсӗр* |
| | П. | *манӑншӗн — маншӗн* | *сананшӗн — саншен* | *унаншен — уншен* |

Қалаҫу чӗлхинче, хушӑран литература чӗлхинче те, вӗҫленӗвӗн кӗске вариантӗпе те уса кураҫҫӗ.

Қалаҫу чӗлхинчи пур вӗҫлевлӗхсенчи қаманлӑх форми те ҫемҫен илтӗнет: *манне, санне, унне; маншӗн, саншӗн, уншӗн* т. ыт. те. Н. И. Ашмарин қаманлӑх падежӗнчи [н] сасана ң орфограммӑпа палӑртнӑ: *маң, маңсем, манаңсем,* танл.: *салтакаң.*

Кӗске тӗпсем вӗҫленнӗ чухне вӗҫленӳри *ман, сан, ун* формӑсене морфемӑсем тӗлӗшӗнчен мӗнле уйӑрмалла текен ыйту сиксе тухать. Ку ыйтӑва ҫутатса панӑ чух 3-мӗш сапатри *ун* местоимение пӗлтерӗшлӗ пайсене уйӑрнинчен пуҫӑнсан аванрах: *у-н.* Чӑваш чӗлхин диалекчӗсенче *у* «вӑл» тени пулать: *килет у — килет вал; ҫыравҫа у — ҫыравҫа вал* тенисем пӗр пӗлтерӗшлех. Ҫитменнине тата *у* ытти хурӑнташ

[1] Н. И. Ашмарин ҫакан пек вӗҫлену уйрамлахӗсене асархана, анчах та, ун шучӗпе, тӗп падежра кун пек чух *мананӗ* форма тарать пмӗш (Материалы для исследования чувашского языка. Казань, 1898. С. 191).

чĕлхесенче те тел пулать; узбекла, уйгурла *у* «вал» (вĕçленекен тĕп вĕсенче — *ун*), тутар чĕлхинче *ул* (вĕçленекен тĕп — *ун*): азербайджан, кумык, турккă чĕлхисенче *о* (вĕçленекен тĕп — *он*); алтай, казах, нухай, каракалпак, туркмен чĕлхисенче *ол* (вĕçленекен тĕп — *он*) т. ыт. те.

Чăваш чĕлхинчи тĕп падежри *вăл* хурăнташ чĕлхесенчи *ол, ул, ал* самахсене тӳр килет. Умĕнче таракан *в-* хушма саса (танл.: *он — вун-а, отуз — ватар, угез — вакар*). Вĕçленӳре [а, у] сасăсен ылмашăвĕ пурри курăнать, ку саккунла ылмашу (танл.: *лар-у ∼ лар-а(в)-а, пух-у ∼ пух-а(в)-ан*).

Çапла вара, *ман, сан, ун* — вĕçленекен тĕпсем, çав вăхатрах каманлăх падеж формисем те.

Нумайла хисепри сăпат местоименийĕсен вĕçленĕвĕнче те уйрамлахсем пур, кусем хуташ тата каманлăх вĕçленĕвĕсенче пулаççĕ.

Хутăш вĕçленӳ

| Хисеп | Вĕçлевлĕх | Сапат: 1-мĕш | 2-мĕш | 3-мĕш |
|---|---|---|---|---|
| Нумайлă | Т. | *эпир, эпĕр* | *эсир, эсĕр* | *весем* |
| | К. | *пир-ĕн* | *сир-ĕн* | *вĕ-се-н* |
| | П. | *пир-е* | *сир-е* | *вĕ-се-н-е* |
| | В. | *пир-те* | *сир-те* | *вĕ-се-н-че* |
| | Т. | *пир-ĕн-тен* | *сир-ĕн-тен* | *вĕ-се-н-чен* |
| | П | *пир-ĕн-пе* | *сир-ĕн-пе* | *вĕ-сем-пе* |
| | Ç. | *пир-ĕн-сĕр* | *сир-ĕн-сĕр* | *вĕ-сем-сĕр* |
| | П. | *пир-ĕн-шĕн* | *сир-ĕн-шĕн* | *вĕ-сем-шĕн* |

Каманлăх вĕçленĕвĕ

| Хисеп | Вĕçлевлĕх | Сапат: 1-мĕш | 2-мĕш | 3-мĕш |
|---|---|---|---|---|
| Нумайлă | Т. | *эпир, эпĕр* | *эсир, эсер* | *весем* |
| | К. | *пир-ĕн* | *сир-ĕн* | *вĕ-се-н* |
| | П. | *пир-ĕнн-е* | *сир-ĕнн-е* | *вĕ-се-н-е* |
| | В. | *пир-ĕн-те* | *сир-ĕн-те* | *вĕ-се-н-че* |
| | Т. | *пир-ĕн-тен* | *сир-ĕн-тен* | *вĕ-се-н-чен* |
| | | *пир-ĕн-чен* | *сирĕн-ĕн-чен* | |
| | П. | *пир-ĕн-пе* | *сир-ĕн-пе* | *вĕ-се-н-пе* |
| | Ç. | *пир-ĕн-сĕр* | *сир-ĕн-сĕр* | *вĕ-се-н-сĕр* |
| | П. | *пир-ĕн-шĕн* | *сир-ĕн-шĕн* | *вĕ-се-н-шĕн* |

*Пирĕн, пире, пирте, пиртен, сирĕн, сире, сирте, сиртен* местоименисенче падеж аффиксĕсем тĕп падежăн нумайла хисеп форми çумне хушанаççĕ; *пирĕнпе, сирĕнпе, пирĕнсĕр, сирĕнсĕр, пирĕншĕн, сирĕншĕн* тенĕ чухне — каманлăх падеж форми çумне.



3-мĕш сăпатри нумайла хисепри *вĕсем* местоимени вĕçленĕвĕ нумайлă хисепри япала ячĕсен пекех, кунта пĕрлелĕх, çуклăх, пирке падежĕсенче падеж аффиксĕсем тĕп падежри *-сем* форма çумне хушанса пыраççĕ.

Хуташ вĕçленӳпе каманлăх вĕçленĕвĕнчи самахсем хушшинче пĕлтерĕш тĕлĕшĕпе те, кӳлепи тĕлĕшĕпе те уйрăмлăхсем пурри куç умĕнчех. Ака ĭару вĕçлевлĕхнех илсе пăхар:

*п и р е тиркеççĕ — пи р ĕ н н е суйлаççĕ, сутаççĕ, тиркеççĕ;*
*с и р е хисеплеççĕ — с и р ĕ н н е хурлаççĕ, мухтаççĕ;*
*в ĕ с е н е мухтана — в ĕ с е н н е хурлана.*

*Пире тиркеççĕ* тени калаканнине тата унпа пĕрлехи çынсене хайсене тиркенине пĕлтерет пулсан, *пирĕнне тиркеççĕ* тесе калани çав çынсен япалине тиркенине палăртать. Кун пек чухне каманлăх пĕлтерĕшĕ вайла палăрать, тĕрĕсрех: каманлăх падежĕн *-ĕн* аффиксĕн пĕлтерĕшĕ сĕвĕрĕлмест. Выран, туху вĕçлевлĕхĕсенчи *пир-те* ятылмашĕсен пĕлтерĕш уйрамлахĕсем те пур: *пирте* «пирĕн патра» тенипе пĕр пĕлтерĕшлĕ, *пирĕнте* тени япала камрине палартать. Танл.:

1. *Пирте,* Урал тавращĕнче,
Эспр пулман-и? (Я. Ухс.).

*Пирте* тени кунта «пирĕн патра», «пирĕн таврара» пĕлтерĕшлĕ.

2. — Гена кĕнекисем камра?
— *Пирĕнте.*

Иккĕмĕш тĕслĕхри *пирĕнте* тени Генан кĕнекисем камрине уçамла катартать. Контекста улăштарма та пулать:

— Гена кĕнекисем камсенче?
— *Пирĕнте* мар — *вĕсенче.*
— *Пирĕнте* те мар, *сирĕнте* те мар — *вĕсенче.*

Туху вĕçлевлĕхĕнче *пирĕнтен* ятылмашĕн варианчĕ те пур: *пирĕнчен. Улмисем те вĕсен пирĕнчен пысакрах.* Кунта туху вĕçлевлĕхĕнчи самахпа япаласене танлаштарнине катартна. Ку предложени туллин çапларах янарать: *Улмисем те вĕсен пирĕн улмасенчен пысакрах.* Пĕрремĕш пуплевре *улма* самаха сиктерсе хăварнă пулин те, калаçу улма (панулми е çĕр-улми) çинчен пынине пуплевĕн пуçламашĕнче таракан *улмисем* самах тăрах пĕлетпĕр.

Туху падеж формин танлаштару пĕлтерĕшĕ пуррине ытти ушкăнсенчи самахсен вĕçленĕвĕнчен те куратпăр:

*Л а ш а р а н çӳллĕ, к у р а к р а н лутра* (йĕнерчĕк); *Н у м а й р а н нумай пулса пыма пуçлана* (Аслан); *М а н р а н лутра, с а н р а н çӳллĕ* (калаç.); *Пахчи ун м а н а н ч е н икĕ хут пысак.*

Тепӗр чухне туху вӗҫлевлӗхӗнчи нумайлӑ хисепри ятыл-машне тӗп вӗҫлевлӗхри сӑмахпа та улӑштарма пулать: *Пирӗнтен пери те пухура пулман. Эпир пӗри те пухура пулман.* Кун пек чухне пӗлтерӗш улшӑнавӗ сисӗнсех каймасть.

Нумайлӑ хисепри 3-мӗш сӑпат местоименийӗн камӑнлӑх вӗҫленӗвӗнче, хутӑш вӗҫленӳпе танлаштарсан, пӗрлелӗх, ҫуклӑх, пирке падежӗсенче пӗлтерӗш уйрӑмлӑхӗсем пурри палӑрать.

Хутӑш вӗҫленӳре:

*в ӗ с е м п е : Эпӗ в ӗ с е м п е Шупашкара тухса кайрӑм;*

*в ӗ с е м с ӗ р : В ӗ ҫ е м с ӗ р эпир ку ӗҫе вӗҫлеймен пулаттӑмӑр;*

*в ӗ с е м ш ӗ н : В ӗ с е м ш ӗ н пулсан пур пӗрех.*

Камӑнлӑх вӗҫленӗвӗнче:

*в ӗ с е н п е : Пирӗн сурахсем в ӗ с е н п е хуташса кайнӑ;*

*в ӗ с е н с ӗ р : В ӗ с е н с ӗ р пуҫне урах сурӑхсем уйра ҫукчӗ;*

*в ӗ с е н щ ӗ н : Хамӑр выльӑхсене киле хавӑртрах кӗртрӗм, в ӗ с е н ш ӗ н чылаях чупма лекрӗ.*

Камӑнлӑх вӗҫлевӗнчи падеж формисем тата пӗлтерӗшӗсем *-и* палӑрту аффиксне йышӑннӑ камӑнлӑх падежӗнчи местоименисене аса илтереҫҫӗ:

Пӗррелле хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *мананни* | *сананни* | *унанни* |
| К. | *мананнин* | *сананнин* | *унаннин* |
| П. | *мананнине* | *сананнине* | *унаннине* |
| В. | *мананнинче* | *сананнинче* | *унаннинче* |
| Т. | *мананнинчен* | *сананнинчен* | *унаннинчен* |
| П. | *манӑннипе* | *сананнипе* | *унаннипе* |
| Ҫ. | *мананнисӗр* | *сананнисӗр* | *унаннисӗр* |
| П. | *мананнишӗн* | *сананнишӗн* | *унаннишӗн* |

Нумайлӑ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т | *пирӗнни* | *сирӗнни* | *вӗсенни* |
| К. | *пирӗннин* | *сирӗннин* | *вӗсеннин* |
| П. | *пирӗннине* | *сирӗннине* | *вӗсеннине* |
| В | *пирӗннинче* | *сирӗннинче* | *вӗсеннинче* |
| Т. | *пирӗннинчен* | *сирӗннинчен* | *вӗсеннинчен* |
| П. | *пирӗннипе* | *сирӗннипе* | *всеннипе* |
| Ҫ. | *пирӗннисӗр* | *сирӗннисӗр* | *весеннисер* |
| П. | *пирӗннишӗн* | *сирӗннишӗн* | *вӗсеннишен* |

Т ӗ с л ӗ х. *Шинельсене хыврӑмӑр та П е т ӗ р ӗ н н е ая сартамар, м а н ӑ н н и п е витӗнтӗмӗр* (Арт.).

Ку предложенири *Петӗрӗнне* тенине *Петӗрӗннипе, мананнипе* тенине *мананпе* сӑмах формисемпе улӑштарма пулать,



пӗлтерӗш пачах улшӑнмасть. Ҫакӑ пире камӑнлӑх вӗҫленӗвӗнчи кӳлепесем *-и* палӑрту аффиксӗсӗр формӑсем мар-ши текен шухӑш патне илсе ҫитерет.

Тӗнче ҫути катартнипех, анне,
Тавтапуҫа эс тивӗҫ *м а н а н н е* (Хус.).

Чӑваш чӗлхинче *мананни, сананни* йышши формӑсем мӗнле пӗлтерӗшпе ҫӳренине Н. И. Ашмарин хайӗн «Синтаксисӗн» пӗрремӗш пайӗнче ӑнлантарать[2]. Автор асӑрхаттарнӑ тӑрӑх, *Мананни кунта, сананни лере* тенисене *Манӑн кунта, санӑн лере* формӑсемпе улӑштарма пулать, уншӑн пӗлтерӗш пӗрех юлать. 561 страницӑри асӑрхаттарура *-и* аффикс йышӑннӑ *мананни, сананни, Ҫтапананни* формӑсем тӗрӗс марри, калаҫура та, чӗлхере те вӗсене *-и* формӑсӑр кӳлепесемпе улӑштарма май пурри ҫинчен ҫырнӑ. Апла каланӑ пулсан, *-и* аффикса сиктерсе хӑварсан та, пӗлтерӗш ҫавах юлать пулсан, Н. И. Ашмарин кӑтартнӑ тӗслӗхсене *-и, -ӗ* аффикссемсӗр каласа тухар:

*Намӑссӑр хӗрарам ашшӗ-амашинӗнне (ашшӗ-амашӗнне.—* В. С.) *те, упӑшкинӗнне (упӑшкинне.* — В. С.) *те ятне ҫӗртет* (561 с.); *Пирӗн лаша куршӗннинчен (кӳршӗ лашинчен, куршӗнчен.* — В. С.) *кашт ватӑрах* (25 с.); *Ав сананни (санӑн) килет* (26 с.); *Мананнисем пурте килте-ха (Манӑн пурте килте-ха.*—В. С.) (26 с.); *Ҫӗлӗкне эпӗ аттенӗнне (аттенне.*— В. С.) *тахӑнап; Пурттипе эпӗ аттеннипе (аттенпе.* — В. С.) *касрам, пӑчӑкипе пичченнипе (пичченпе.* — В. С.) *татрам* (46 с.); *Ывӑл ачусем пур-и санӑн, — вӗрент вӗсене, ҫамраккӑнпа пуҫне тай вӗсенӗнне (вӗсенне.* — В. С.).

Н. И. Ашмарин каланине тӗпе хурсан чӑваш чӗлхинче камӑнлӑх, тӗп тата хутӑш вӗҫленӳсем пуррине ҫирӗплетмех лекет. Местоименисен вӗҫленӗвӗ пурин те тенӗ пекех камӑнлӑх вӗҫленӗвӗпе ҫыхӑннӑ.

## 3 §. САПАТ МЕСТОИМЕНИСЕН ЕВӖРЛӖХ КАТЕГОРИ ФОРМИ

*Манашкал, санашкал, унашкал, пирӗнешкел, сирӗнешкел, вӗсенешкел* йышши сӑмах формисенче пӗрисем *-ашкал(-ешкел)* евӗрлӗх формин аффиксне кураҫҫӗ, теприсем, евӗрлӗх форми чӑваш чӗлхинче яланах пару падеж аффиксӗ ҫумне хушӑннине палӑртса, *-шкал(-шкел)* аффикс тулли пӗлтерӗшлӗ *вашкал, вышкал* «евӗрлӗ» сӑмахран пулса кайнине ӗнен-

[2] Ашмарин Н. И. Опыт исследования чувашского синтаксиса. Казань, 1903. Ч. I. С. 26, 46, 561.

тереççĕ. Н. И. Ашмарин словарĕнче çакăн пек предложени тата анлантарни пур. *Çынна вышкал çын пулать* (Вăл сын майла çын пулать тени пулать). Çавăнтах: *Çынна сын вышкалла. Çаван вышкалла çын* тени те тĕл пулать (А У, 220 с.). Словарь статии хыççăн *-шкал(-шкел)* аффикса пăхма сĕнне. Словарĕн 17-мĕш томĕнче *-шкал(-шкел)* хыççăмах пулнине, хăй умĕнчи сăмаха пару падежĕнче тытса тăнине палăртнă (А XV, 383 с.). Хальхи чĕлхере *-шкал(-шкел)* хыççăмах пĕлтерĕшпе çӳремест, вăл аффикса тухнă.

М. Р. Федотов чăваш чĕлхинчи евĕрлĕх кӳлепи *-ашкал (-ешкел)* аффикспа мар, *-шкал(-шкел)* аффикçлине, пуласса вăл *вашкал ≈ вышкал* хыççăмахран пулса кайнине палăртать, çавна май *-шкал(-шкел)* аффикс пару вĕçлевлĕхен кӳлепи çумне хушăннине ĕнентерет: *сана вышкал: сан-а-шкал.* Анчах та автор *-шкал(-шкел)* кӳлепеллĕ сăмахсене палла ячĕ тенĕ[3].

М. Р. Федотов каланине тата Н. И. Ашмарин словарĕнче кăтартнине тĕрĕс тесе шутласан, *-шкал(-шкел)* кӳлепеллĕ сăмахсене сăпат местоименийĕсен категорисĕр форми теме тивет, мĕншĕн тесен пĕтĕмлĕх принципĕ пăсăлать пек: *эпĕшкел; эсĕ-шкел; вăл-а-шкал* чĕлхемĕрте çук, анчах та кун пек чух *-шкал(-шкел)* аффикс пару падеж форми çумне хушăннине тĕпе хумалла.

Сăпат местоименийĕсен евĕрлĕх форми *-ла(-ле)* аффиксна пулни те палăрать:

Эп çĕр çул пурăнма та хатĕр —
Ĕçлесе, кĕрешсе, юратса.
Вилĕм куне çитсен, — мана каттăр
*Сирĕнле:* тепĕр хут çуратса (Хус.)

### 4 §. ТАВРĂНУ МЕСТОИМЕНИЙĔСЕМ

Ят сăмахсем тата сăпат местоименийĕсем вырăнĕнче тăракан, кашни сăпатăн аффиксĕ пуррипе хăйне пĕлтерĕшлĕ пулакан, хисеп тата падеж тăрăх улшăнакан сăмахсене таврăну е таврăну-сăпат ятылмашĕсем (е местоименийĕсем) темелле.

Таврăну местоименийĕсем сăпат ятылмашĕсемпе пĕр пелтерĕшлĕ пулнине вĕсенĕ кирек мĕнле контекстра та улăштарма май килнинчен пĕлетпĕр: *хам* тени *эпĕ* тенипе, *ху — эсĕ. хăй — вăл* тенипе пĕр пĕлтерĕшлĕ пулса тухаççĕ, анчах та стиль тĕлĕшĕнчен çавах та вĕсенче пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ-

[3] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. Ч. 3. С. 25.



сем пулмалах: *эпĕ килтĕм* тенинче яланхи, йăлана кĕнĕ калаçу сĕмĕ палăрать пулсан, *хам килтĕм* е вăйлатса калана *эпĕ хам килтĕм* тенинче сапайсарлăх курăнать. Çирĕплетсех е вăйлатса калас тĕллевпе *эсĕ ху, вăл хăй* тени те тĕл пулать.

Сăпат местоименийĕсен ятарлă сăпат аффиксĕсем çук: *эпĕ, эсĕ, вăл.* Таврăну-сăпат ылмашĕсен сăпат аффиксĕсем пулнине япала ячĕсен çав пĕлтерĕшлĕ кӳлеписемпе танлаштарса пĕлме пулать:

| | |
|---|---|
| ача-м — ха-м | |
| ач-у — х-у | *ха, х, хă* — çыханчăк |
| ачи(й)ĕ — хă-(й)ĕ | тымар морфемасем |

Çакăн пек танлаштарса пăхни *хам, ху, хăй* местоименисене морфемăсем тĕлĕшĕнчен хальхи чĕлхере пайлама май пуррине кăтартать: пĕрремĕш сăпатра *-м* аффикс, иккĕмĕш сăпатра *-у;* виççĕмĕш сăпатри (й)*-ĕ* пирки уйрăмман чăрăнса тăмалла: *хăй* сăмах малтан *хăйĕ* кӳлепеллĕ пулнă, *-ĕ* 3-мĕш сăпат аффиксĕ тухса ӳкнипе (й) саса ун функцине хăй çине илнĕ, çавна май эпир ăна, *хăй* сăмаха, *-ĕ* сăпат аффиксĕ çук пулин те, 3-мĕш сăпатра тетпĕр, апла пулсан, (й) кунта *-и* тата *-ĕ* аффикссен вырăнĕнче тăрса, вĕсен функцине пурнăçлать.

*Çил а ч и й ĕ шăйăн-вайăн Çаварать-мĕн кĕртсене* (Энтип). Танл.: *Çил а ч и кĕртсене çаварттарать. Çил а ч и с е м сиккипе кĕртсем тăрăх чупкалаççĕ* (Тукташ).

Таврăну местоименисем, сăпат ылмашĕсем пекех, пĕрреллĕ тата нумайла хисепсенче пулаççĕ:

| Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайла хисеп | |
|---|---|---|---|
| *хам* | *эпĕ* | *хам-ар* | *эпĕ-р* |
| *ху, хав* | *эсĕ* | *хав-ар* | *эсĕ-р* |
| *хăй* | *вăл* | *хăй-сем* | *вĕ-сем* |

1-мĕшпе 2-мĕш сăпатсен нумайла хисеп аффиксĕ *-ар(-р),* 3-мĕш сăпатăн — *-сем.* Таврăну-сăпат местоименийĕсен хисеп категорийĕ сăмах формин улшăнăвĕнче палăрать.

Таврăну местоименисен вĕçленĕвĕ те хăйевĕрлĕ: 1-мĕш сăпат местоименийĕ тĕп тата камăнлăх вĕçленĕвĕсенче пулать:

| Тĕп вĕçленӳ | | Камăнлăх вĕçленĕвĕ |
|---|---|---|
| Т. | *хам* | *хам* |
| К. | *хам-ан* | *хам-ăн* |
| П. | *хам-а* | *хам-анн-е* |
| В. | *хам-ра* | *хам-ан-че* |
| Т. | *хам-ран* | *хам-ăн-чен* |
| П. | *хам-па* | *хам-ан-пе* |
| Ç. | *хам-сар* | *хам-ăн-сĕр* |
| П. | *хам-шан* | *хам-ăн-шĕн* |

Пӗлтерӗш тӗлӗшӗнчен ку е вӑл вӗҫлевлӗх кӳлеписем пӗрпӗринчен уйрӑлса тараҫҫӗ.

П. *Х а м а хам каларам — Х а м а н н е илме маннӑ; Х а м а н н е хам пӗлетӗп*

В. *Х а м р а пӗр тенкӗ анчах — Х а м а н ч е (хам кутамккара) икӗ ҫавра ҫакӑр тата чакат, у н а н ч е виҫӗ ҫакар.*

Т. *Х а м р а н култармап — Х а м а н ч е н пысӑкраххине илтӗм*

П. *Х а м п а пымаран — Х а м а н п е юнашар хур*

Ҫ. *Х а м с а р ан кай — Х а м а н с ӗ р пуҫне тата икӗ ҫелек пурччӗ ҫулӗк ҫинче*

П. *Ха м ш а н тарашатап — Х а м ӑ н ш ӑ н чылай тӑрӑшма лекрӗ*

Ку таранччен таврану ятылмашӗсен каманлӑх вӗҫленӗвӗ пуррине асанман.

2-мӗш сапатри таврану местоименийӗ икӗ кӳлепелле: *ху* тата *хӑв*. Ҫак уйрӑмлаха асархаманнине пула вӗҫлену хайеверлӗхсене тӗрӗс палартман пулнӑ. Пирӗн шутпа, *ху* тата *хав* ылмашсен вӗҫленӗвӗ ҫапларах:

| Хуташ вӗҫлену | | Каманлах вӗҫленӗвӗ |
|---|---|---|
| Т. | *ху* | *хӑв* |
| К. | *ху-н* | *хав-ан* |
| П. | *ху-н-а* | *хав-н-а* |
| В. | *ху-н-та* | *хӑв-ӑн-та* |
| Т | *ху-н-тан* | *хав-ан-тан* |
| П. | *ху-па* | *хав-ӑн-па (хав-ан'-пе)* |
| Ҫ. | *ху-сар* | *хӑв-ӑн-сар (хав-ан'-сӗр)* |
| П. | *ху-шан* | *хав-ӑн-шан (хав-ан'-шӗн)* |

Сасӑ пӗр килӗвӗн саккунне пӑхӑнман кӳлепесен пӗлтерӗшӗ расна:

Пӗрл. *Х ӑ в ӑ н п а х а в (х у п а х у) калаҫса ҫӳреме парахха; Х ӑ в ӑ н п е пӗлсе уса куратӑн-ха эсӗ, ҫын япалине шеллеместӗн.*

Ҫукл. *Х ӑ в а н с а р (х у с а р) пуҫне ку ӗҫе никам та чухламасть тесе ан шутла эсӗ; Х а в ӑ н с ӗ р ӗҫлесе пах-ха эсӗ...*

Пирке: *Х ӑ в а н ш а н (х у ш ӑ н) анчах тӑрӑшатӑн эсӗ; Х ӑ в ӑ н ш ӗ н анчах ан тӑраш, ҫын ачине те хисеп ту.*

3-мӗш сапатри *хай* местоимени те икӗ тӗрлӗ вӗҫленӳре пулать:

| Хуташ вӗҫленӳ | | Каманлах вӗҫленӗвӗ |
|---|---|---|
| Т. | *хай* | *хай* |
| К. | *хӑй-ӗн* | *хай-ӗн* |
| П. | *хай-н-е* | *хай-ӗнн-е* |
| В. | *хай-ӗн-че* | *хай-ен-че* |
| Т. | *хай-ӗн-чен* | *хай-ӗн-чен* |
| П. | *хай-пе* | *хай-ӗн-пе* |
| Ҫ. | *хӑй-сӗр* | *хай-ӗн-сӗр* |
| П. | *хай-шӗн* | *хӑй-ӗн-шӗн* |



Пар. *Х ӑ й н е хӑй лаплантарма пултараймарӗ: Х ӑ й ӗ н н е пуҫтарса хутаса чикрӗ, ҫ ы н с е н н е сапаласа парахса хӑварчӗ.*

Пӗрл. *Х ӑ й п е мӗн тумаллине пӗлмест вӑл: Х а й ӗ н п е юнашар тепӗр кӗнеке илсе хучӗ.*

Ҫукл. *Х а й с ӗ р пуҫне ертӳҫӗ пулма тивӗҫлӗ ҫын ҫук тесе шутлать вал; Х ӑ й ӗ н с ӗ р пуҫне ҫынсен те калушӗсем ҫуккине пӗлсен, лӑпланчӗ хайхискер.*

Пирке. *Х а й ш ӗ н тарашать; Х а й ӗ н ш ӗ н (хай ачишӗн) тем тума та хатӗр вал.*

Каманлӑх вӗҫленӗвӗнчи ылмашсен каманлӑх падежӗн *-ӗн* аффиксӗ пуррине кура япала каман пулнине катартас сӗм аван паларать.

Нумайла хисепри таврану местоименийӗсен те веҫлену уйрамлахӗсем пур:

| | 1-мӗш сапат | | 2-мӗш сапат | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *хамар* | *хамар* | *хавар* | *хавар* |
| К. | *хамаран* | *хамаран* | *хаваран* | *хавӑран* |
| П. | *хамӑра* | *хамаранне* | *хӑвара* | *хавӑранне* |
| В. | *хамарта* | *хамӑранче* | *хӑварта* | *хавӑранче* |
| Т. | *хамӑртан* | *хамаранчен* | *хавӑртан* | *хаваранчен* |
| П. | *хамарпа* | *хамаранпе* | *хавӑрпа* | *хӑварӑнпе* |
| Ҫ. | *хамарсар* | *хамӑрӑнсӗр* | *хаварсар* | *хаварансӗр* |
| П. | *хамаран* | *хамараншӗн* | *хӑваршан* | *хавӑраншӗн* |

Пӗтӗмлӗх принципне тӗпе хурсан *-ччӗ* аффиксла таврану местоименийӗсем иртнӗ вахатра пулаҫҫӗ темелле: *хамччӗ, хуччӗ, хайччӗ, хамарччӗ, хӑвӑрччӗ, хайсемччӗ; хампаччӗ — хамӑрпаччӗ, хайсенччӗ* т. ыт. те; *-ах(-ех, -х)* аффикс таврану ылмашсен кирек мӗнле кӳлепи ҫумне те хушанма пултарнине шута хурсан, ку самахсен вайлату категорийӗ пур тесе шутламалла.

Категориллӗ формӑсен шутне *-шкал(-шкел)* аффиксла кӳлепесене кӗртмелле: *хамашкал, хӑйнешкел, хамарашкал, хӑйсенешкел*. Вӗсем еверлӗх категорийӗнче пулаҫҫӗ.

### 5 §. КАТАРТУ МЕСТОИМЕНИЙӖСЕМ

Ят самахсем выранӗнче тарса, катарту пӗлтерӗшӗпе ҫӳрекен, хисеп, падеж тарах улшанакан, еверлӗх категорийӗ пур, яланах каманлӑх вӗҫленӗвӗнче пулакан самахсене ка-

тарту местоименийĕсем теççĕ. Вĕсем çаксем: *ку, çак, çака, çав, çава, леш, лешĕ.* Хушăран *вăл* сăмаха та кăтарту ятылмашĕ тесе пăхаççĕ. Кăтарту ятылмашĕсен шутне *хăй* сăмаха кĕртни тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен *хăй* сăмах хисеп, вĕçлевлĕхсем тăрăх улшăнмасть: çавна май *хăй* сăмаха кăтарту татăкĕсен шутне кĕртмелле, *хăйхи* тенине паларту форминче пулнине палартмалла. Хăш-пĕр татăксем çумне. чăнах та, *-и, -скер* аффикссем çыпçăнаççĕ: *пысăк марри (марскер), çĕлĕк çукки кансĕрлет.*

*Çак-çака, çав-çава, леш-лешĕ* кăтарту ятылмашĕсем пĕрпĕринчен [а, ĕ] сасăсем пуррипе уйрăлса тăраççĕ, вĕсене вариантсем тесе пăхма пулать. Анчах та *леш, леше* тене чухне *-ĕ* 3-мĕш сăпат аффиксĕ пулнине палартаççĕ тĕпчевçесем[4], çавна май *леш* сăмах *-ĕ* сăпат аффиксне йышăнмасăр вĕçленме пултараймасть имĕш. Ку шухăша ырлама май çук, мĕншĕн тесен *леш* тата *лешĕ* местоименисен вĕçленевĕ ун пек чухне морфемăсем тĕлĕшĕнчен пĕр-пĕринчен уйрăлса тăмалла:

| | | |
|---|---|---|
| Т. | *леш* | *леш-е* |
| К. | *леш-ĕн* | *леш-ĕ-н* |
| П. | *леш-н-е* | *леш-н-е* |
| В. | *леш-ĕн-че* | *леш-ĕ-н-че* |
| Т. | *леш-ĕн-чен* | *леш-ĕ-н-чен* |
| П. | *леш-ĕн-пе* | *леш-ĕ-н-пе* |
| Ç. | *леш-ĕн-сĕр* | *леш-ĕ-н-сĕр* |
| П. | *леш-ĕн-шĕн* | *леш-ĕ-н-шĕн* |

Ку çул çине тăрас пулсан, *çава, çака* местоименисенчи [а] сасса та 3-мĕш сăпат аффиксĕ темелле, вара вĕсен вĕçленĕвĕ те *леш, лешĕ* сăмахсенни евĕрлех пулмалла. Анчах та ку таранччен [а] 3-мĕш сăпат аффиксĕ пулнине палартман. *Лешĕ* тенине *леш* местоименин тулли кӳлепи тесе пăхма май пур пек: *çĕнĕ ~ çĕн çул; кивĕ ~ кив масар; пуша ~ пуш урам* тенĕ чухнехи пекех. Анчах та япала ячĕ уменчи *леш* ылмаш кĕске кӳлепеллĕ, уйрăм уса курнă чухне тулли кӳлепеллĕ пулни *лешĕ* сăмахри *-е* 3-мĕш сăпат аффиксе пулнине ĕнентерет: *леш çын — лешĕ.*

Кăтарту местоименисем каманлăх вĕçленĕвĕнче кăна пулаççĕ, падеж аффиксĕсем пур чухне те каманлăх падежĕн кӳлепи çумне кăна хушăнса пыраççĕ. Вĕçленӳ уйрăмлăхесене кашнине уйрăммăн вĕçленĕ чухне те курма пулать.

[4] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 58 с.



| | Кĕске кӳлепе | | Тулли кӳлепе |
|---|---|---|---|
| Т. | *ку* | *ку* | *ку* |
| К. | *ку-н* | *ку-н* | *кунăн* |
| П. | *ку-н-а* | *ку-нн-е* | *кунăнне* |
| В. | *ку-н-ра* | *ку-н-че* | *кунăнче* |
| Т. | *ку-н-ран* | *ку-н-чен* | *кунăнчен* |
| П. | *ку-н-па* | *ку-н-пе* | *кунăнпе* |
| Ç. | *ку-н-сар* | *ку-н-сĕр* | *кунăнсĕр* |
| П. | *ку-н-шан* | *ку-н-шĕн* | *кунăншĕн* |

Хăш-пĕр падежсенчи пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене çак тĕслĕхсемпе ăнлантарма пулать:

Пару п. *Куна (кăна) патша патне чĕнтернĕ тет. Унне хӳмине ишнĕ, кунне хапхине аркатнă;*

Выр. п. *Кунра (кунта) вăрланă япала пулман; Кунче (ку хутĕнче) пирĕн черет çитет.*

Тух. п. *Кунран (кунтан) нимĕн те ыйтса пĕлеймĕн. Атти кунчен чылай пысăк.*

*Кунта, кунтан* сăмахсем, местоимени пĕлтерĕшне улăштарса, выран пĕлтерĕшĕ туянна чух вĕсене тĕпчевçĕсем ĕçхĕлçумĕ (наречи) теççĕ.

*Кунта* сăмах сулăну кӳлепиллĕ пулма пултарать: *кунталла;* вăл паларту аффикссене те йышăнать: *кунти, кунтаскер, кунтискер; -ччĕ* аффикспа тăна чух иртнĕ вăхăта палартать: *кунтаччĕ вăл;* танлаштару аффиксне те ирĕккĕнех йышăнать: *кунтарах кил.*

*Кунтан* сăмах та паларту аффиксĕпе çӳреме пултарать: *кунтанскер, кунтанни кунтанах-ха вăл.* Çак пĕлтерĕше тата морфологи уйрăмлăхĕсене шута илсен, чăнах та, *унта, кунта, унтан, кунтан* сăмахсем ĕçхĕлçӳмĕленни çинчен каласма пулать пек. Анчах та ытти падежсенчи кӳлепесене ĕçхĕлçумĕ теме май çук, вĕсем кăтарту местоименийĕсемех шутланаççĕ.

Пĕрл. п. *Кунпа мĕскер тумалла халь? Кунпе мĕн тумаллине пĕлместпĕр;*
*Ку пурри паллă-ха.*

Çукл. п. *Кунсар пуçне тата икĕ çын пурччĕ; Кунсĕр (ку çын пурттисĕр) пуçне тата икĕ пурта кирлĕ.*

Пирке п. *Куншăн куллянмах кирлĕ мар; Куншĕн чылай чупма лекрĕ.*

*Кунне, кунче, кунчен, кунпе, кунсĕр, куншĕн* ятылмашĕсен кӳлеписем япала камăн пулнине уçăмлăн катартаççĕ:
*кунне* — кун япалине (кĕнекине, укçине, ĕнине...);
*кунче* — кун япалинче (хутаççинче, сĕтелĕнче...);
*кунчен* — кун япалинчен (пысăкрах, пĕчĕкрех...);

*кинпе* — кун япалипе (çĕлĕкĕпе, алсипе, кенекипе...);
*кинсĕр* — кун япалисĕр (аттисĕр, укçисер, кеписер...);
*куншĕн* — кун япалишĕн (ĕнишĕн, укçишĕн, пушмакешĕн...).

Сак йĕркепех *çав, çава, çак, çака* ятылмашсен вĕсленўри пĕлтерĕш уйрамлахĕсене катартса тухма пулать, анчах та хальхинче вĕсен вĕçлену уйрамлахĕсене палартнипех çырлахапар.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *çав* | *çава* | *çав(ă)* |
| К. | *çав-ан* | *çава-н* | *çаван* |
| П. | *çав-н-а* | *çав-н-а* | *çавăнне* |
| В. | *çав-ан-та* | *çава-н-та* | *çавăнче* |
| Т. | *çав-ан-тан* | *çава-н-тан* | *çаванчен* |
| П. | *çав-ăн-па* | *çава-н-па* | *çаванпе* |
| Ç. | *çав-ан-сар* | *çава-н-сар* | *çавăнсĕр* |
| П. | *çав-ан-шан* | *çава-н-шан* | *çаваншĕн* |

Қатарту местоименийĕсен кĕске кўлепи çумне *-сем* аффикс хушăнсан, нумайла хисеп форми пулать: *çак — çаксем, çав — çавсем, леш — лешсем.* Нумайла хисепри катарту ятçумĕсем хутăш тата каманлăх вĕçленĕвĕсенче пулаççе:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *кусем* | *кусем* | *çавсем* | *çавсем* |
| К. | *кусен* | *кусен* | *çавсен* | *çавсен* |
| П. | *кусене* | *кусенне* | *çавсене* | *çавсенне* |
| В. | *кусенче* | *кусенче* | *çавсенче* | *çавсенче* |
| Т. | *кусенчен* | *кусенчен* | *çавсенчен* | *çавсенчен* |
| П. | *кусемпе* | *кусенпе* | *савсемпе* | *çавсенпе* |
| Ç. | *кусемсĕр* | *кусенсĕр* | *çавсемсĕр* | *çавсенсĕр* |
| П. | *кусемшĕн* | *кусеншĕн* | *çавсемшĕн* | *çавсеншĕн* |

Қăтарту местоименийĕсен кирек мĕнле кўлепи çумне те *-ччĕ (-чĕ)* аффикс хушăнма пултарать, ун пек сăмахсем чылай чухне иртнĕ вăхăта палăртаççĕ: *куччĕ, çавччĕ, çакчĕ, çавсемччĕ, лешсемччĕ, çавăнччĕ, çакăнтанччĕ, кусемпеччĕ* т. ыт. те: *-ах(-ех, -х)* аффикс йышăннă кăтарту ятçумĕсен вайлату пĕлтерĕшĕ паларать: *саках, çавах, лешех. кусемех, лешсемех. саках, çавантах, çавантанпах, лешĕншенех* т. ыт. те. Қăтарту ятçумĕсен евĕрлĕх кўлепи те пулать: *çакнашкал, çавнашкал, кунашкал, лешнешкел.*

Н. И. Ашмарин *апла, çапла, капла* сăмахсене кăтарту местоименийĕсен ретĕнче пахнă пулнă[5]. Хисеп, падеж тăрăх улшăнманнине кура çав сăмахсене наречи тесен тĕрĕсрех пулать.

[5] Ашмарин Н. И. Материалы... С. 194.



## 6 §. ЫЙТУ МЕСТОИМЕНИЙĔСЕМ

Ят сăмахсем выранĕнче ыйту пĕлтерĕшĕпе çўрекен, хисеп тата падеж тарах улшăнакан (тĕп, хутăш тата каманлах вĕçленĕвĕсенче пулакан) иртнĕ вахат тата вайлату категорийĕсем пур сăмахсене *(кам, мĕн, хăш, хашĕ, миçе)* ыйту ылмашĕсем темелле.

Тĕпчевçĕсем *епле* тата *мĕнле* сăмахсене те ыйту местоименийĕсен ретнех кĕртеççĕ. Ку сăмахсем вĕçленмеççĕ тата хисеп тарах улшăнаççĕ, çавна май вĕсене местоимени тесе пахма май çук. *Мĕнле* тени *мĕн* ыйту местоименин евĕрлĕх кўлепи шутланма тивĕç, *епле* — ыйту татакĕ е наречи.

Қу ушкăна кĕрекен сăмахсен кашнин вĕçлену каткăслахĕпе уйрамлахĕсем пур.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *кам* | *кам* | *мен* |
| Қ. | *камăн* | *каман* | *мĕнĕн* |
| П. | *кама* | *каманне* | *мĕне, мĕнĕнне, мĕнне* |
| В. | *камра* | *каманче* | *мĕнре, мĕнĕнче* |
| Т. | *камран* | *каманчен* | *мĕнрен, мĕнĕнчен* |
| П. | *кампа* | *каманпе* | *мĕнпе* |
| Ç. | *камсар* | *камансĕр* | *мĕнсĕр* |
| П. | *камшăн* | *каманшĕн* | *мĕншĕн* |

*Қам* местоимени тĕп тата каманлах вĕçленĕвĕсенче пулать, *мĕн* — тĕп тата хутăш вĕçленусенче.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *хăш* | *хаш-ĕ* | *миçе* |
| Қ. | *хăш-ĕн* | *хаш-ĕ-н* | *миçен* |
| П. | *хаш-н-е* | *хаш-ĕ-нн-е* | *миçене* |
| В. | *хаш-ĕн-че* | *хаш-ĕ-н-че* | *миçере* |
| Т. | *хаш-ĕн-чен* | *хаш-ĕ-н-чен* | *миçерен* |
| П. | *хаш-ĕн-пе* | *хăш-ĕ-н-пе* | *миçепе* |
| Ç. | *хăш-ĕн-сĕр* | *хаш-ĕ-н-сĕр* | *миçесĕр* |
| П. | *хаш-ĕн-шĕн* | *хаш-ĕ-н-шĕн* | *миçешĕн* |

*Хашĕ* сăмахра *-ĕ* 3-мĕш сăпат аффиксĕ тесе шутласан, вĕçленўре те ăна уйрамман кăтартмалла, каманлăх вĕçлевлĕхĕнче вĕсем морфема тĕлĕшĕнчен икĕ тĕрлĕ пулни курăнать: *хаш-ĕн, хаш-ĕ-н.* Пару вĕçлевлĕхĕнче кўлепе расна пулни пĕлтерĕш уйрăмлăхĕпе çыханнă: *хашне каламалла; хашĕнне çĕлĕкне илсе килмелле?*

Нумайла хисепри ыйту ятылмашĕсен те вĕçлену уйрăмлахĕсем пур.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *камсем* | *камсем* | *мĕнсем* | *хашĕсем* |
| Қ. | *камсен* | *камсен* | *мĕнсен* | *хашĕçен* |
| П. | *камсене* | *камсенне* | *мĕнсене* | *хăшĕсене* |
| В. | *камсенче* | *камсенче* | *мĕнсенче* | *хашĕсенче* |
| Т. | *камсенчен* | *камсенчен* | *мĕнсенчен* | *хашĕсенчен* |
| П. | *камсемпе* | *камсенпе* | *мĕнсемпе* | *хашĕсемпе* |
| Ç. | *камсемсĕр* | *камсенсĕр* | *мĕнсемсĕр* | *хăшĕсемсĕр* |
| Қ. | *камсемшĕн* | *камсеншĕн* | *мĕнсемшĕн* | *хăшĕсемшĕн* |

*Камсем* самах хуташ тата каманлах вĕçленевесенче пулать пулсан, *мĕнсем* тени хуташ вĕçленӳре кана тарать.

Япаласем нумайăшне е япаласен хисепĕ палла маррине палăртма ыйту ятсумĕсене икĕ хут калаççе:

*Кам-кам* параймасть,
Тытса хаварчĕç (Элкер).

*М ĕ н - м ĕ н курман пуле вал хай пурнаçĕнче; Х а ш е - х а ш ĕ пиçне усса тараççĕ, шарламаççĕ.*

Ыйту ятылмашĕсем те *-чĕ-(-ччĕ)* аффикса йышанса иртнĕ вахата палартма пултараççĕ: *мĕнччĕ, камчче. хашечче, миçеччĕ, миçенччĕ, вĕсем миçеречче? хашенпечче?* т. ыт. те. Ыйту местоименийĕçсен вайлату категорийе пуррине те палартмалла: *К а м а х тухса калĕ пухура? М е н е х вара?*

### 7 §. ÇУКЛĂХ МЕСТОИМЕНИЙĔСЕМ

*Кам. мĕн. хăш-(ĕ)* ыйту местоименийĕсем çумне *ни* префикс хушаннипе пулна *никам, нимĕн (ним), нихаш* самахсене çуклах ятылмашсем темелле. Вĕсем веçленеççе, анчах сата хисеп тарах улшанмаççĕ, мĕншĕн тесен *никам, нимен* сата махсем япала çуккине пĕлтереççĕ, çук япалан хисепне те палартма май çук.

Ку таранччен *нимĕнле, ниепле* сăмахсене çуклăх местоименийĕсем тесе пахна. Хисеп, падеж тарах улшанман саманахсене местоимени тесе шутлама май çук. *Нимĕнле* самахсене çуклах местоименийĕн евĕрлĕх кулепи кана шутланать. *Ниепле* — виçе наречийĕ.

*Никам. нимĕн, нихаш(ĕ)* местоименисен вĕçленĕвĕ пĕрреллĕ хисепри *кам, мĕн, хаш(ĕ)* ыйту ятçумĕсен евĕрлех, анчах та нумайла хисеп кулепи çуккипе нумайла хисепри вĕçленĕвĕ те çук.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *никам* | *никам* | *нимĕн* | *ним* |
| К. | *никаман* | *никаман* | *нимĕн* | *нимĕн* |
| П. | *никама* | *никаманне* | *нимĕне* | *ниме* |
| В. | *никамра* | *никаманче* | *нимĕнре* | *нимре* |
| Т. | *никамран* | *никамăнчен* | *нимĕнтен* | *нимрен* |
| П. | *никампа* | *никаманпе* | *нимĕнпе* | *нимпе* |
| Ç. | *никамсăр* | *никамансĕр* | *нимĕнсĕр* | *нимсĕр* |
| П. | *никамшăн* | *никаманшĕн* | *нимĕншĕн* | *нимшĕн* |

*Никам* сăмах тĕп тата каманлах вĕçленĕвĕсенче пулать. *Нимĕн ~ ним* ятçумĕсен вĕçленĕвĕ пĕр-пĕринчен уйралса тарать. Каманлах падежĕнчи *нимĕн* самахан юлашки *-ен* сыпакĕ падеж аффиксĕпе пĕр килсе тухать (*нименен* тени чĕлхере çук). Çапла вара, *нимĕн-ĕн* тенине *ним* çуклах ятçу-



мĕн кĕске кулепи çумне *-ĕн* аффикс хушанса пулна тесе пахмалла.

*Нихаш(ĕ)* местоимени хуташ тата каманлах вĕçленĕвĕсенче пулни уççан паларать. Пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен те вĕсем пĕр-пĕринчен уйралса тараççĕ:

Пар. *Н и х а ш н е те тивмен; Н и х а ш ĕ н н е те нимĕн те варламан. Нихăшне* тени çыннине е япалине хайне тивменнине палартать пулсан, *нихашĕнне* — «нихăш çыннин япалине» пĕлтерĕшлĕ.

Пĕрл. *Н и х а ш п е, н и х а ш ĕ п е пĕр самах ваклама çук; Н и х а ш ĕ н п е (нихашĕн япалипе) те усă курма май çук.*

Пирке. *Н и х ă ш ĕ н ш ĕ н, н и х а ш ĕ ш ĕ н те пĕр ыра самах каламан; Н и х ă ш ĕ н ш ĕ н те (никам япалишĕн те) кун чухлĕ утман; Петĕр кĕрĕкĕпе пурттине илессишĕн лесник патне виçĕ хут çитмелле пулчĕ,* Çуклах вĕçлевлĕхĕнчи *нихашсĕр, нихăшĕсĕр, нихăшĕнсĕр* кулепесемпе чĕлхере питĕ сайра уса кураççĕ.

### 8 §. ПАЛЛА МАР МЕСТОИМЕНИСЕМ

Ку ушканри местоименисем *кам, мĕн, хаш, миçе* ыйту местоименисем çумне *та, те* префикссем хушаннипе пулна: *такам, темшĕн, тахаш, темиçе.* Вĕсем япала палла маррине пĕлтереççĕ, падеж тата хисеп тарах улшанаççĕ.

Хисеп тата падежсем тарах улшаннине шута илсен, тата япала, унан палли е шучĕ палла маррине тĕпе хурсан, палла мар местоименисен ушканне *хаш-пĕр, хашĕ-пĕри* самахсене кĕртме пулать, анчах та çав ушканах *темтепĕр* самаха кĕртни иккĕленуллĕ. Вĕçленменнине тĕпе хурсан *темтепĕр* самаха виçе наречийĕ тесен тĕрĕсрех пулать.

Чаваш чĕлхинче палла мар местоименисен шутне е хисепне самах çавранашĕсемпе «пуянлатни» сисĕнет. Самахран, *темĕн чухлĕ, кам та пулин, мĕн те пулин, мĕнле те пулин, хашĕ те пулин* йышши самах майлашавĕсемпе çавранашĕсене палла мар местоименисем теме сĕнеççĕ. Самах çавранашĕсемпе майлашавĕсене пĕр самах шайне лартакан тĕпчевçĕсем морфологи мĕнне тата вал мĕн çинчен вĕрентнине пачах манса каяççĕ. Кун пек чухне И. П. Павлов каланине шута илмелле: «Пуплев пайĕсем уйрам самахсене кана пĕрлештерсе тараççĕ, самах çавранашĕсемпе самах

майлашăвĕсене пĕрлештермеççĕ»[6]. Сăмахсен (сăмах майла-
шăвĕсен мар!) тытăмĕпе улшăнăвне тĕпчекен чĕлхе науки-
не морфологи теме йышăннă.

Çак ансат шухăша тытса пырайманнипе шкул учебникĕсенче те *кам та пулин* йышши сăмах çаврăнăшĕсем паллă местоимени пулса тăна, вĕсене вĕçленӳ таблицине кĕртнĕ. Паллах, ку шухăша ырлама çук.

Вĕçленӳ уйрăмлăхĕсене вĕçленӳ парадигмисенче тӳрех асăрхама пулать.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *тахаш* | *тахашĕ* | *темиçе* | *тахашсем* |
| К. | *тахăшĕн* | *тахашĕн* | *темиçен* | *тахăшсен* |
| П. | *тахăшне* | *тахашĕнне* | *темиçене* | *тахашсене* |
| В. | *тахăшĕнче* | *тахашĕнче* | *темиçере* | *тахашсенче* |
| Т. | *тахăшĕнчен* | *тахăшĕнчен* | *темиçерен* | *тахашсенчен* |
| П. | *тахашпе* | *тахашĕнпе* | *темиçепе* | *тахашсемпе* |
| Ç. | *тахашсĕр* | *тахăшĕнсĕр* | *темиçесĕр* | *тахашсемсĕр* |
| П. | *тахашшĕн* | *тахăшĕншĕн* | *темиçешĕн* | *тахашсемшĕн* |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *хаш-пĕр* | *хăшĕ-пĕри* | *хаш-пĕрисем* |
| К. | *хаш-пĕрин* | *хашĕ-(н)-пĕрин* | *хăш-пĕрисен* |
| П. | *хаш-пĕрине* | *хăшне-пĕрне* | *хаш-пĕрисене* |
| В. | *хаш-пĕринче* | *хашĕ-пĕринче* | *хăш-пĕрисенче* |
| Т. | *хаш-пĕринчен* | *хăшĕ-пĕринчен* | *хаш-пĕрисенчен* |
| П. | *хаш-пĕринпе* | *хашĕ-пĕринпе* | *хаш-пĕрисемпе* |
| Ç. | *хаш-пĕринсĕр* | *хăшĕ-пĕринçĕр* | *хаш-пĕрисемсĕр* |
| П. | *хаш-пĕриншĕн* | *хашĕ-пĕриншĕн* | *хаш-пĕрисемшĕн* |

## 9 §. ПАЛЛА МЕСТОИМЕНИСЕМ

Япала ячĕ вырăнĕнче çӳрекен, веçленекен, анчах та нумайлă хисепре пулман сăмахсене паллă местоимени темелле. Вĕсем çаксем: *пур, пурте, кашни, ытти, тепер.*

Вĕçленменнине тата нумайлă хисепре пулманнине кура *харкам, харпар* сăмахсене паллă местоимени*сем теме йывăр. Паллах, кирек, хуть* тавĕсене катарту татăкĕсем темелле. Ялсем çаврăнăшĕсене паллă местоимени тăксемпе çӳрекен сăмах çавтеме май çук. *Кирек кам, кирек мĕн. хуть кам* сăмах çаврăнăшĕсенчи *кирек, хуть* татăксене уйрăммăн илсе морфологи тишкерĕвĕ тумалла:

*кирек* — татăк; *кам* — местоимени. сăмах тĕпĕ — *кам*, пĕрремĕшле сăмах, ыйту местоименийĕ, пĕрреллĕ хисепре, тĕп падежра.

Паллă местоименисен вĕçленĕвĕ те кăсăклă. *Пур* ятçуме хăй тĕллĕн те, уйрăм сăпат аффиксĕсене йышăнсан та (*пурсăмăр, пурсăр, пурĕ, пурĕшĕ*) вĕçленме пултарать.

[6] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине верентеси. Шупашкар, 1985. 102 с.



| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *пур* | *пурсамар* | *пурсар* | *пуреше* |
| К. | *пурин* | *пурсамаран* | *пурсăрăн* | *пурĕшĕн* |
| П. | *пурне* | *пурсамара* | *пурсара* | *пурĕшне* |
| В. | *пуринче* | *пурсамарта* | *пурсарта* | *пурĕшĕнче* |
| Т. | *пуринчен* | *пурсамартан* | *пурсăртан* | *пурĕшĕнчен* |
| П. | *пуринпе* | *пурсамарпа* | *пурсарпа* | *пурĕшĕнпе* |
| Ç. | *пуринсĕр* | *пурсамăрсăр* | *пурсарсар* | *пурĕшĕнсĕр* |
| П. | *пуриншĕн* | *пурсамаршан* | *пурсаршан* | *пурĕшĕшĕн* |

*Пирте* местоименири *те* татак тĕп вĕçлевлĕхре кана пĕрле çыранать, ытти вĕçлевлĕхсенче ăна уйрăм çырна пирки тишкерӳ туна чух татак тесе пахмалла:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *пурте* | *кашни* | *ытти* |
| К. | *пурин те* | *кашнин* | *ыттин* |
| П. | *пурне те* | *кашнине* | *ыттине* |
| В. | *пуринче те* | *кашнинче* | *ыттинче* |
| Т. | *пуринчен те* | *кашнинчен* | *ыттинчен* |
| П. | *пуринпе те* | *кашнинпе* | *ыттипе* |
| С. | *пуринсĕр те* | *кашнинсер* | *ыттисер* |
| П. | *пуриншĕн те* | *кашниншĕн* | *ыттишен* |

*Пурте, кашни* местоименисем камăнлăх веçленĕвĕнче пулаççĕ, *ытти* хутăш вĕçленӳре пулать.

*Урăх, тепĕр* сăмахсен вĕçленĕвĕ те пĕр пек мар.

| | | | Паларту форми |
|---|---|---|---|
| Т. | *урах* | *тепĕр, тепре* | *урахxи* |
| К. | *урахан(?)* | *тепĕрĕн(?), теприн* | *урахxин* |
| П. | *урăха* | *теприне, тепринне* | *урăххине* |
| В. | *урахра(?)* | *тепринче* | *урахxинче* |
| Т. | *урахран* | *тепринчен* | *урахxинчен* |
| П. | *урахпа* | *тепринпе* | *урахxипе* |
| Ç. | *урăхсăр?* | *тепринсĕр* | *урахxисĕр* |
| П. | *урахшан?* | *теприншĕн* | *урăххишĕн* |

*Урах* сăмах (ку таранччен палла местоимени тесе пахнаскер) тĕп вĕçленӳре пулать пулсан, *тепĕр* сăмах — каманлăх вĕсленĕвĕнче. *Урăх, тепĕр* сăмахсем *-и, -скер* паларту аффиксне йышăнма пултараççĕ: *урахxи, урахскер, теприи.* Паларту аффиксне йышăнна кӳлепесем нумайла хисепре, тулли вĕçленӳре пулаççĕ. *Урăх* сăмах танлаштару аффиксне йышăнма пултарни (*урахрах*) вăл палла ячепе сывăххине катартать. Тулли мар вĕçленӳре пулни те *урах* сăмах палла ячĕ е наречи енне суланнине ĕнентерет.

## ĔÇХĔЛ (ГЛАГОЛ)

**Ĕçĕн тăрăмне, куçăмне, пулăвне, пĕр енчен, наклонени (тайăм), вăхăт, сăпат, хисеп категорийĕсемпе, тепĕр енчен, причасти, деепричасти, инфинитив категорийĕсемпе палартакан сăмахсене ĕçхĕл (глагол) темелле.**

Мĕнле ĕçе-хĕле палăртнине кура глаголсене темиçе ушкăна уйăрма май пур:

1) еç тума хушнине (хистенине) пĕлтерекеннисем (кĕскен: еç глаголĕсем);

2) куçăм ĕçхĕлĕсем: *ут, чуп, вĕç, кил, кай, хăпар, улах, ан, кĕр, тух, ярăн, сĕтĕрĕн, йăралан, юх, упален, çавран, пăтран, ӳс;*

3) тăрăм ĕçхĕлĕсем: *вырт, лар, кан, тăр, чăрăн, чечеклен, чирле, сывал, хурал, кавакар, шурал, симĕслен, хĕрел;*

4) пуплев (калаçу) ĕçхĕлĕсем: *кала, пĕлтер, юмахла, кăшкăр, çухăр, пупле, чĕн, хирĕçле, ответле, хуравла, ыйт;*

5) шухăшлав ĕçхĕлĕсем: *шухăшла, тăнла, ăнла(н), ăслан, чухла, ăнкар, пĕл, ман;*

6) туйăм-сисĕм ĕçхĕлĕсем: *илт, итле, туй, сис, юрат, кур, сăв;*

7) кăмăл ĕçхĕлĕсем: *саван, хĕпĕрте, çиллен, кулян, тарах, юрат, тунсăхла, йĕр, кул;*

8) сасса евĕрленине палăртакан ĕçхĕлсем: *янра, шăвла, кăшла, нăйла, сĕрле, ӳхĕр, макăр, мĕкĕр, ахлат, шартлат;*

9) çутçанталăк пуламĕсене палăртакан ĕçхĕлсем: *шăнт, ăшăт, сивĕт, пăрлан, шăрахлан, шăрахлат;*

10) обществăри пуламсене палăртакан ĕçхĕлсем: *кĕреш, çапаç, пĕрлеш, эртеллен.*

Ĕçхĕл япала ятне хирĕçлет. Япала ячĕ япалалăха пĕлтерет пулсан, ĕçхĕл япалан тăрăмне, куçăмне, пулăмне палăртать. Сăмаха улăштаракан кӳлепесене шута илес пулсан ĕçхĕлĕн вĕсем нумайрах. Япала ячĕ падеж, хисеп, сăпат тăрăх улшăнать, ĕçхĕл — тайăм, вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх. Япала ячĕпе ĕçхĕлĕн улшăнăвĕнче сăпат тата хисеп кӳлеписем пуррине тата çав кӳлепесене палăртакан аффикссен уйрăмлăхĕпе пĕрлех пĕрпеклĕхсем пуррине асăрхама пулать. Япала ячĕсен ĕçхĕлĕн пек темиçе тĕрлĕ вăхăт кӳлепи çук, япала ячĕсем иртнĕ вăхăта *-чĕ(-ччĕ)* аффикс йышăнсан кăна палăртма пултараççĕ. Тайăм улшăнăвĕ япала ячĕсен çук, вăл ĕçхĕлĕн кăна.



Морфологире япаласен пурлă тата çуклă кӳлеписене палăртма хушăран *-лă(-лĕ)* тата *-сăр(-сĕр)* аффикссемпе усă куратпăр: *кĕпеллĕ ача, кĕпесĕр çын;* ĕçхĕлĕн çуклă кӳлепи пурри уçăмлă куранать: *(вула-мас-т-ăп, вула-ма-р-ăм, вула-м-ăн).* Асархăр: *ан, мар, çук* татаксемпе пулна хирĕçлев кӳлеписем: *ан кай, вулам мар, вулас çук* морфологи мелĕпе пулман, çаванпа та çав сăмах çавранăшĕсенчи татаксене сăмаха улăштаракан мел (аффикс, префикс е постфикс теме май çук), апла пулсан, вĕсем морфологире пăхса тухмалли япаласем мар; тĕрĕсрех: морфологире сăмах майлашăвĕсемпе предложенисен тытăмне мар, сăмах улшăнăвне тĕпчеççĕ.

Хальхи шкул программинче те (çавна май шкул учебникĕсенче те) залог категорийĕ çинчен асăнман. Хальхи залог аффиксĕсене унта сăмах тавакан аффикссем тесе пăхнă. Шухăшĕ ку питĕ выранлă шухăш, мĕншĕн тесен ку аффикссемпе чылай чухне чĕлхере çĕнĕ сăмахсем пулаççĕ. Залог кӳлеписене пур ĕçхĕлтен тума май çукки те залог аффиксĕсене сăмаха улăштаракан аффикссен ретĕнче мар, сăмах таваканнисен ретĕнче пăхма ыйтать. Словарьсенче те чылай чухне *-ăн(-ĕн, -н), -ал(-ĕл, -л), -аш(-ĕш, -ш), -аç(-ĕç, -ç), -тар(-тер), -ар(-ер), -т* аффикслă сăмахсене, словарь единици (иккĕмĕшле сăмах) тесе реестра кĕртеççĕ: *тыт—тытăн, тат — татăл, çап — çапаç, хир — хирĕç, тар — тараш, тар — тарт, лар — ларт* т. ыт. те.

Апла пулсан, çӳлерех кăтартнă чылай аффикссене* ĕçхĕлтен ĕçхĕл тавакан кӳлепесем тесе пăхмалла, вĕсемех тата япала е паллă ячĕсенчен те ĕçхĕл тума пултараççĕ: *пуç—пуçăн, пуç — пуçар, пуçтар, çута — çутал, кавак — кавакар, шыв — шавар, таса — тасал, яка — якал* т. ыт. те.

Ĕçхĕлсене икĕ пысăк ушкăна уйăраççĕ. Наклонени (тайăм), вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнаканнисене сăпатлă формăсем тенĕ; тайăм, вăхăт, сăпат, хисеп кӳлеписем çуккисен ретне причастие, деепричастие, инфинитива кĕртнĕ те, вĕсене сăпатсăр (е сăпатлă мар) формăсем теме хушнă. Çакăн пек калани чĕлхе фактĕсене хирĕçленĕ пулин те, паянна çитсе те чăваш чĕлхе науки çак патăрмахран мĕнле тухмалли пирки татăклă шухăш каламан. Пирĕн шутпа, пайташ (причасти), ĕçхĕлтеш (деепричасти), ĕçхĕлĕн сăпатсăр формисем тенĕскерсене глаголăн категори формисем

* 1985 çулта тухнă «Чăвашла-вырăсла словарь» хушмалăхĕнче ку аффикссене пурне те сăмах таваканнисем тесе кăтартнă.

темелле. Мĕншĕн çапла пахма май пуррине эпир кайрантарах «Пайташ» тата «Ĕçхĕлтеш» пайсенче ăнлантарăпăр.

Чăваш чĕлхинче кусăмлă тата кусăмсăр ĕçхĕлсем пуррине палартни чĕлхе наукине нимĕн чухлĕ те усă памасть. Çитменнине тата кусăмлисене кусăмсăррисенчен уйăрса илмелли критерисем чĕлхемĕрте пачах та çук.

«Хутăш глаголсем» тени чăваш чĕлхин морфологине синтаксис никĕсĕ çинче вĕрентме пуçланинчен килнĕ. Хутăш глаголсем ят сăмахсем е евĕрлев сăмахĕсем çумне *пул, ту* пулăшу глаголĕсем хушăннипе пулаççĕ имĕш[1]. Кун пек калани «пуплев пайĕсем уйрăм сăмахсене кăна пĕрлештерсе тăраççĕ, сăмах майлашăвĕсемпе сăмах çаврăнăшсене пĕрлештерсе тăмаççĕ»[2] текен принципа пăсни пулать. *Хапал ту, урçа пул* сăмах çаврăнăшĕсенче *хапал, урçа* — япала ячĕсем; *ту пул* — ĕçхĕлсем. Вĕсем юнашар тăнă чух иккĕшĕ пĕр харăс ниепле те ĕçхĕл (глагол) пулаймаççĕ. Çўлерех асăннă принципа тĕпе хурсан чĕлхемĕрте хутлă глаголсем çуккине те палартмалла. Енчен те *вуласа тухрăм, аташрĕç кайрĕç, сикрĕ тухрĕ* сăмах çаврăнăшĕсене пĕр сăмах теме пуçласан, виçĕ е ытларах компонентлă конструкцисене те хутлă глагол теме лекет, сăмахран: *хĕрелсе кайса чупса çитсе кашкарса парахрĕ; чупса пырса сиксе хапарса ларса юрласа ячĕ.*

## Сыхăнчăк аффикс морфемăсем пирки

Аффикс морфемăсем яланах çыхăнчăк шутланаççĕ, вĕсем сăмах тĕпĕпе е ытти аффикссемпе çыхăнса тăраççĕ, хăйсене уйрăммăн çўрейменççĕ. Сăмах тĕпĕпе çыхăнса *(пахкала, лар-нă, кур-са)* хăйсен пĕлтерĕшне палăртаççĕ пулсан, вĕсене эпир пĕр енлĕ çыхăнчăк аффикс морфемăсем тейĕпĕр. Аффикссен çыххинче тăраканнисем те хăйсен пĕлтерĕшне палăртаççĕ пулсан, пĕр енлĕ çыхăннисемех шутланаççĕ: *пах-кала-нă* (*пах-нă, пах-кала* тенисем пур); *лар-наскер, -скер* аффикс паллă ячĕсемпе те çыхăнма пултарать: *хитре-скер, пысăк-скер.* Анчах та вăхăт, хирĕçлев, пулаюлăх аспекчĕн аффиксĕсем сăмах тĕпĕпе кăна тăнă чухне хăйсен пĕлтерĕшне палăртаймаççĕ: *кай-р-ăм* (пĕрре ирт. в.), *кай-р* тени çук чĕлхере, апла пулсан, пĕрре иртнĕ вăхăт аффиксĕ

[1] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар. 1965. 217—219 с.

[2] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Иккĕмĕш кăларăм. Шупашкар, 1985. 102 с.



икĕ енлĕ çыхăнчăк: пĕр енчен вăл сăмах тĕпĕпе, тепĕр енчен сăпат аффиксĕпе çыхăннă.

## 1 §. АСПЕКТ (ТĂРĂМ) КАТЕГОРИЙĔ

Ĕç мĕнле тăрăмра пулнине е пулманнине, ĕçе тума майĕ пулнипе пулманнине катартмалли уйрăм мелсем пур. Çавна кура глаголсем тăвата формăра пулса пĕлтерешсемпе уйăрăлса тăраççĕ, çав формăсене глагол аспекчĕсем (тăрăмĕсем) теççĕ. Чăваш чĕлхинче тăвата аспект пуррине палăртаççĕ: çирĕплетў, хирĕçлев, пулаюлăх тата пулаюсăрлăх аспекчĕсем. Шкул учебникĕсенче глаголăн аспект категорийĕ пуррине асăнман, унта çирĕплетў аспектне пурлă форма тенĕ, хирĕçлев аспектне — çуклă форма; пулаюлăх, пулаюсăрлăх (малтанхилле: пултараслăх, пултараймаслăх) форммисене асăнман.

а) **Çирĕплетў аспекчĕ (тăрăмĕ).** Çирĕплетсе каланине палăртма ятарлă аффикс çук пулин те, чĕлхере ку аспект пуррине палăртаççĕ. Глагол тĕпĕ е унăн формисенче хирĕçлесе калани çук пулсан ун пек формăсем пурте çирĕплетў аспектĕнче пулаççĕ: *вула, вуларăм, вулатăп, вулăттăм, вулăп, вулаттăм, вулăпин, вуламалла, вулана, вуланаскер, вуласа, вуласан, вулаттармалла, вулатăр* — пурте çирĕплетсе каланине пĕлтереççĕ.

*Çав кунтан вара çарти пурнăçăм тепĕр майла çавранса кайрĕ. Гвардеец пулса тăтăм, комсомола кĕтĕм. Пĕр сăмахпа каласан, пурнăç кайрĕ ман* (Арт.).

Çирĕплетў категорийĕ вăл — шухăшлав категорийĕ. Çирĕплетў тăрăмĕн ятарлă аффиксĕ çук пулсан, ăна грамматика (морфологи) категорийĕ тесе пахма йывăр. Çитменнине тата çирĕплетў (шухăшлав) категорийĕ чылай пуплев пайĕн пулма пултарать: Ял. Пахча. Çуртсем — япала ячĕсен çирĕплетў тăрăмĕ.

1) Эпир — иксĕмĕр.
Хĕлле
Кăн-кăвак каç.
Тата
Симфони (Эйзин).

2) Аслă ял. Йăмра та хурăн.
Улма сачĕ те пахча (Ивн.).

Кашни йĕркери кашни сăмах çирĕплетсе каланине пĕлтерет, анчах та вĕсен аффиксĕ çук, çавна май япала ячĕсен, паллă ячĕсен, хисеп ячĕсен, местоименисен, наречисен тата ытти пуплев пайĕсен çирĕплетў тăрăмĕ пуррине асăнмастпăр.

а) **Хирĕçлев аспекчĕ (тарамĕ).** Хирĕçлев категорийĕ (категория отрицания) — шухăшлав (логика, философи) категорийĕ. Хирĕçлев аспекчĕ — грамматика (морфологи) категорийĕ, ăна палăртма чăваш чĕлхинче ятарла аффикс пур: *-мас(-мес), -ма(-ме), -м.* Ку аффикс чылай чухне глагол тĕпĕ çумне тÿрех хушăнать, анчах сăпат е вăхăт аффиксĕсемсĕр хăйне тĕллĕн çÿреймест: *юрла-мас-т-ăп, ĕçле-мес-т-ĕп* (хальхи вăхăтра), *юрла-ма-р-ăм, ĕçле-ме-р-ĕм* (пĕрре иртнĕ вăхăтра), *юрла-м-ăн, ĕçле-м-ĕн* (пулас вăхăтра): *юрла-м-атт-ăм, ĕçле-м-ĕтт-ĕм* (ĕмĕт наклоненийĕнче); *юрла-м-ăпин, ĕçле-м-ĕп-ин* (килĕшÿ наклоненийĕнче). *Юрлама, ĕçлеме* сăмахсем уйрăммăн тăнă чухне инфинитив пулаççĕ, ун пек чухне вĕсенче глаголăн хирĕçлев тарамĕ палармасть; *юрлам, ĕçлем* — уйрăм тăнă чух хушу наклоненийĕн пĕрреллĕ хисепри пĕрремĕш сăпат формисем, кунта та хирĕçлени палăрмасть. Апла пулсан, хирĕçлев аспекчĕн аффиксĕ икĕ енлĕ çыхăнчăк морфема: пĕр енчен, вăл глагол тĕпĕпе çыхăнать (анчах та ку халлĕн хăй пĕлтерĕшне палăртаймасть), тепĕр енчен — вăхăт тата сăпат аффиксĕсемпе (вĕсемпе çыхăнсан кăна хирĕçлев пĕлтерĕшĕ палăрать).

Анне мана кĕпеллĕ *çуратман,*
Кĕпесĕр те — телейсĕр *хаварман* (П. Яккусен).

Çирĕплетÿпе хирĕçлев хирĕçле ăнлавсем пулин те, пĕр-пĕринпе уйрăлми çыхăннă:

— ...Вилмешкĕн эпĕ *харамастăп.*
Хам халахшăн вилни — телей... (Хус.).

*Харамастăп* тени кунта хирĕçлев аспектĕнче, анчах та ку сăмаха Таня (Зоя Космодемьянская) иккĕленсе мар, çирĕплетсех калать.

Асархаттару. *Каймастăп! Вуламастăп! Вĕренместĕп!* текен çын ҫҫе тума хирĕçленине çирĕплетсех калать.

б) **Пулаюлăх аспекчĕ.** Глаголăн пулаюлăх тарамĕ ĕçе тума пултарнине пĕлтерет. Хальхи чăваш чĕлхинче вăл *-ай(-ей, -й)* аффикспа пулать: [*ут-ай-ат-ăп, вĕрен-ей-ет-ĕп, вула-й-ат-ăп*].

Ку аффикс каллех икĕ енлĕ çыхăнчăк шутланать, мĕншĕн тесен, глагол тĕпĕпе анчах çÿреймест вăл: *вулай, çÿрей, курай, ларай* тенисем хальхи чĕлхере çук, апла пулсан ун пĕлтерĕшне ун хыççăн пыракан аффикссем витĕмлеççĕ:

— Чăваш çынни чĕлхи чухăн, —
Теме хаякан



Пулĕ-ши ун чух, пелесчĕ,
*Кураясчĕ* ман! (Çеçп.);
Пуртрен тухса тĕнче *кураяччен,*
Çеçке варри *пулаяччен* улма,
Ăнлантам эп пĕве *кĕрееччен:*
Чун ыратнисĕр — юрату пулмасть (П. Яккусен).

Хăварах куратăр: хальхи орфографи правилисене пула *-ай(-ей, -й)* аффикс, ун хыççăн пыракан [а, е] уçа сасасемпе пĕрлешсе, *-ая, -ее* вариантла пулса тарать.

в) **Пулаюсарлăх аспекчĕ.** Пулаюсарлах аспекчĕн те хăйне ятарла уйрăм аффиксĕ çук: вал пулаюлăх аспекчĕн *-ай(-ей, -й)* форми çумне хирĕçлев аспекчĕн *-мас(-мес), -ма(-ме), -м* аффиксĕ хушăннипе пулать, кун пек чухне икĕ аффиксĕ те икĕ енлĕ çыхăнчăк шутланать: *лар-ай-мас-т-ăп, пĕл-ей-ме-р-ĕ.*

Çнтĕ, çитĕ-çке, аннем, ан хуйхар,
Йĕкуне чарсах эс ан ахлат.
Сан ĕшеннĕ ват чĕру те туйтар:
Читлĕхре вай *илеймест* халат (Хус.);
Яш пуçампах кĕскелчĕ утам
Сарт таррине *хапараймн* (П. Яккусен).

Тĕрĕссипе, кун пек формăсене пулаюлăх аспекчĕн хирĕçлев тарамĕ тесен тĕрĕсрех пулать.

## 2 §. ГЛАГОЛĂН САПАТЛА ФОРМИСЕМ

### СĂМАХ ФОРМИН УЛШĂНĂВĔ

Наклонени (тайăм), вăхăт, сăпат, хисеп тарăх улшăнакан формăсене глаголăн сăпатла формисем теççĕ. Тĕрĕссипе кун пек чухне наклонени, вăхăт, сăпат, хисеп категорийĕсем пирки калаçмалла, мĕншĕн тесен вăхăта, сăпата, хисепе пĕлтерекен аффикссем кирек мĕнле глагол тĕпĕ çумне те çыпсăнма пултараççĕ. Ку аффикссен йĕрки те сăмах формисенче çирĕп йĕркене пăхăнса тарать: вăхăт аффиксĕ сăпат аффиксĕ умĕн тăрать, чылай чухне хăй тĕллĕн çÿреймест; сăпат аффиксĕ пĕр харасах сăпата та, сăпатăн хисепне те палăртать: *вула-т-ăп: -т-* — хальхи вăхăт аффиксĕ, *-ăп* — пĕрреллĕ хисепри 1-мĕш сăпат аффиксĕ, анчах *вулаççĕ* сăмахра *-ç-* нумайлă хисеп аффиксĕ, *-ĕ* — виççĕмĕш сăпат аффиксĕ; *пĕл-ет* сăмахра вара, 3-мĕш сăпатăн *-ĕ* аффиксĕ тухса ÿкнипе (ĕлĕк: *пĕлетĕ* пулнă), *-ет* хальхи вăхăт аффиксĕ пĕр харасах сăпата та, хисепе те, наклонение те палăртать. Пĕр-пĕринпе çирĕп пĕрлешÿре тăраканскерсене вĕсене пурне те пĕр-пĕринпе çыхантарма пĕлмелле.

## 3 §. КĂТАРТУ ТАЙĂМĔ (НАКЛОНЕНИЙĔ)

Кăтарту наклоненийĕн ятарлă аффиксĕ çук, апла пулсан категори формисене çирĕплетмелли никес çук. Тепĕчвĕсем калан тăрăх, ытти наклоненисем хушшинче вăл вăхăт формисем пуррипе паларса тарать; еç пулассине, еç пынине, еç пулса иртнине çав вăхăт формисемпе палартатпăр. Анчах та кун пек чух çакна асархамалла: вăхăт аффиксĕсем хăйсен пĕлтерĕшне сăпат аффиксĕсемпе çыхăнса палартаççĕ. Çапла вара, кăтарту наклоненийĕн пĕлтерĕшне вăхăт формисем те, сăпат формисем те пĕр харăсах катартаççĕ.

Чăваш чĕлхинче хальхи, иртнĕ, пулас вăхăтсем пур; иртнĕ вăхăта хăйне темиçе тĕрлĕ палартма пулать.

## 4 §. ВĂХĂТ КАТЕГОРИЙĔ

Вăхăт категорийĕ — логика (ăнлав) е философи категорийĕ. Вăхăт тĕлĕшĕнчен расна килсе тухакан сыпăксене тĕрлĕрен палартаççĕ: *ĕмĕр, çулталăк, уйăх, эрне, талăк, кун.* Пурнăçра вăхăта хĕвелпе çыхăнтараççĕ: *каç, ир, кантарла, çĕрле.*

Грамматикăри (морфологири) вăхăт категорине ăнлав категорийĕпе тата философири вăхăт категорийĕпе пăтраштармалла мар. Морфологире вăхăта эпир тĕлерен вăхăт аффиксĕсемпе палартатпăр, çавăнпа та тĕпчевçĕн пĕрремĕш тивĕçĕ вăл — вăхăта палартакан аффикссене тупса вĕсене йĕркелештерсе, чăн пурнăçри фактсемпе çыхăнтарса çырса кăтартма пĕлмелле.

Ăнлаври вăхăта чĕлхере темиçе мелпе те палăртма пултарăпăр:

а) лексика семантика мелĕпе: *ĕнер, паян, çулла, хĕлле, кĕркунне, çуркунне; çулталăк* (пĕр çул), *уйăх, кун, сехет, минут* т. ыт. те.

а) синтаксис (аналитика) тата морфологи (аффикс) мелĕпе: *каятăп пулать; кайрăм пулать; каяттăм пулать, каятăп пулĕ, кайрăм пуле, каяттăм пуле, каяс пулнă, кайнă пулатăп. кайнă пулăп* т. ыт. те.

Енчен те синтаксис мелĕпе вăхăта палăртнине морфологире пăхас пулсан, пирĕн чĕлхере çакăн пек вăхăт тесесем пулма пулĕччĕç:

а) иртнĕ-хальхи вăхăт: *кайрăм пулать, пĕлтĕм пулать;*

а) хальхи-пулас вăхăт: *каятăп пулĕ, килетĕп пуле;*

б) иртнĕ-пулас вăхăт: *кайрăм пуле, килтĕм пуле;*

в) пулас-иртнĕ вăхăт: *каяс пулнă* т. ыт. те.



Ку вăхăт тĕсĕсене малалла та палăртма пулать, анчах та вĕсенче вăхăт пĕлтерĕшĕ сăмах майлашăвĕн шайĕнче паларать, çавăнпа та ана морфологири вăхăт категорийĕ тесе хаклама пултараймастпăр;

г) морфологи (е аффикс) мелĕпе, кун пек чухне вăхăт пĕлтерĕшне палартакан аффикссем пĕр сăмах шайĕнчех пулаççĕ: *кур-т-ăм: кур* — глагол тĕпĕ, *-т-* — пĕрре иртнĕ вăхăт аффиксĕ, *-ăм* — сăпат аффиксĕ; *вула-р-ăм* тенĕ чухне пĕрре иртнĕ вăхăт аффиксĕ — *-р-, кур-ч-ĕ* сăмахра — *-ч-*.

Морфологири вăхăт чиккисене калаçу пыракан вăхăтпа çыхăнтарса палăртма сĕнеççĕ: калаçу пыракан вăхăт—хальхи вăхăт, калаçу пуличченхи вăхăт — иртнĕ вăхăт, калаçу пулмалли вăхăт — пулас вăхăт. Анчах та çакна ас тумалла: грамматикăри вăхăт чăн пурнăçри вăхăтпа шайлашмасан та пултарать: *Ыран эпир хулана каятпăр* предложенири *каятпăр* ĕçхĕл морфологире хальхи вăхăтра, анчах пурнăçри чăнлăха пулас вăхăтпа çыхăнтарать, ăна ĕнентерме *ыран* сăмах пур.

*Болдинора А. С. Пушкин нумай сăвă хайлать. 1826 çулта «Борис Годунов» трагеди çырать.* Ку предложенисенчи *хайлать, çырать,* ĕçхĕлсем хальхи вăхăтра, анчах та чăн пурнăçри ĕç 160 çул ытла каялла пулнă.

Чăваш чĕлхинчи вăхăт системине ку таранччен те вĕçне çитиех йĕркелесе ăнлантарса çитереймен: *курса тата курмасăр иртнĕ вăхăт* текен терминсем, пĕлтерĕшне кура, кирлĕ мар пулса юлаççĕ; иртнĕ умĕнхи вăхăт (*ӳкнĕччĕ, килнĕччĕ, вуланăччĕ*) причасти вăхăчĕ пулса тарать; çавăн пекех *вула-са-тт-ăм, кил-се-тт-ĕм* тенисене те сăпатлă формăсен таса вăхăчĕ теме май çук, вăхăт аффиксĕ вĕсенче деепричасти кӳлепи çумне çыпçанать, çапла майпа, деепричастисен вăхăчĕ пирки калаçу пуçарма лекет; вăхăт, сăпат, хисеп тарăх улшăнакан сăмахсем глаголăн сăпатсăр (е сăпатлă мар) форми шутланма пултараймаççĕ.

Яланхи йĕркене пăсас мар тесе эпир те чăваш чĕлхинчи вăхăт категорине хальхи вăхăтран пуçăнар.

**А. Хальхи вăхăт.** Ку вăхăт ĕç халь, калаçу пынă вăхăтра, пулнине палартать. Анчах та ку вăхăт кӳлепи калаçнă хыççăнхи — пулас ĕçе те (*ыран каятăп*), ялан пулакан ĕçе те (*хĕвел тухать, çутатать, анать*), иртнĕ ĕçе те палартма пултарать (*малтан вăл «Таня» поэма, унтан «Аптраман тăвраш» поэма çырать*).

Хальхи вăхăтри ĕçхĕлĕн кӳлепи пирки уйрăмман чарăнса тăмалла. Чĕлхеçĕсем паян куна çитсе те хальхи вăхăтри ĕç-

хӗлсен морфема кӳлеписене татӑкла палӑртса ҫитереймен. Ҫалани пуш самах ан пултӑр тесен тӗрлӗ вӑхӑтра тухнӑ кӗнекесенчен тӗслӗхсем илсе парар.

Н. И. Ашмарин ку вӑхӑта «Хальхи-пулас вӑхӑт» тенӗ* те сӑпатлану ӳкерчӗкне ҫапларах кӑтартнӑ:

Пӗрреллӗ хисеп

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *калатап, калап* | *таратап, тарап* |
| 2 с. | *калатан, калан* | *таратан, таран* |
| 3 с. | *калать, калатӗ, калат* | *тарать. тарате, тарат* |

Нумайла хисеп

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *калатпар* | *таратпӑр* |
| 2 с. | *калатар, калаттӑр* | *таратар, тараттар* |
| 3 с. | *калаҫҫӗ (калаччӗ)* | *тараҫҫӗ (тарачче)*[3]. |

Тимухха Хӗветӗрӗ сӑпатлану йӗркине ҫапла ӳкерчӗкленӗ:

| | Пӗрреллӗ хисеп | | | Нумайла хисеп | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *лар-а-т-ап* | *вул-а-т-ап* | 1 с. | *лар-а-т-пар* | *вул-а-т-пар* |
| 2 с. | *лар-а-т-ан* | *вул-а-т-ан* | 2 с. | *лар-а-т-ар* | *вул-а-т-ар* |
| 3 с. | *лар-а-ть* | *вул-а-ть* | 3 с. | *лар-а-ҫ-ҫ-е* | *вул-а-ҫ-ҫ-ӗ*[4]. |

И. П. Павлов хальхи вӑхӑт пӗлтерӗшне *-ат(-ет)* аффикспа палӑртни ҫинчен калать[5].

| | Пӗрреллӗ хисеп | | | Нумайла хисеп | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ҫыр-ат-ап* | *ӗҫле-т-еп* | 1 с. | *ҫыр-ат-п-ар* | *ӗҫле-т-п-ӗр* |
| 2 с. | *ҫыр-ат-ан* | *ӗҫле-т-ӗн* | 2 с. | *ҫыр-ат-v-ар* | *ӗҫле-т-v-ӗр* |
| 3 с. | *ҫыр-ать-v* | *ӗҫле-т-v* | 3 с. | *ҫыр-а-ҫ-ҫӗ* | *ӗҫле-ҫ-v-ҫӗ* |

М. Р. Федотов *ҫыр* ӗҫхӗлӗн сӑпатланӑвне ҫакӑн пек икӗ кӳлепеллӗ ҫырса кӑтартать[6].

| | Пӗрреллӗ хисеп | | Нумайла хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| | 1-мӗш кӳлепе | 2-мӗш кӳлепе | 1-мӗш кулепе | 2-мӗш кӳлепе |
| 1 с. | *ҫыра-т-а-п* | *ҫыра-п* | *ҫыра-т-пар* | *ҫыра-п-пӑр* |
| 2 с. | *ҫыра-т-ӑ-н* | *ҫыра-н* | *ҫыр-та-р* | *ҫыра-та-р* |
| 3 с. | *ҫыра-ть* *ҫыра-тӗ* | *ҫыра-ть* | *ҫыра-ҫҫӗ* (*ҫыра-т-чӗ* *ҫыра-ччӗ*) | *ҫыраҫҫӗ* |

* Паллах. кун пек калани тӗрӗсе килмест, меншӗн тесен хальхи вахат кӳлепи чӑн пурнаҫри пулас вахата кана мар, иртнӗ вахата та палартма пултарать теремӗр: *Эпӗ сиксе татам та ҫапла калатап* тене чух пулса иртнӗ ӗҫе калаканни хальхи пек туса катартать: *татам — калатап.*

[3] Ашмарин Н. И. Материалы... С. 318.

[4] Тимухха Хӗветӗрӗ. Чӑваш чӗлхийӗн крамматикӗ. Шупашкар, 1924. 67 с.

[5] Павлов И. П. Хальхи чӑваш литература чӗлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 236—237 с.

[6] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. Ч. 2. С. 82.



Сӑпатлану парадигмисене пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн, паллах, *хӑшне ӗненмелле?* текен ыйту сиксе тухать.

Малтанах тӗпчевҫӗсен пӗр килекен шухӑшӗсене шута илер. Пурте тенӗ пекех чӑваш чӗлхинчи хальхи вӑхӑт ӗҫхӗл тепӗ ҫумне *-а(-е)* деепричасти аффиксӗ хушӑннипе пулнине палӑртаҫҫӗ. Ҫун пек каласан сӑпатланӑва ӗҫхӗл (глагол) тӗпе мар, деепричасти (ӗҫхӗлтеш) форми лекет те унан вӑхачӗ, сӑпачӗ, хисепӗ пирки калаҫмалла пулса тухать.

Пирӗн шутпа, *-а(-е)* ӗҫхӗлтеш аффиксӗ мар, чылай тӗрӗк чӗлхисенчи пекех, — хальхи вӑхат аффиксӗ. Сӑмахран, И. В. Ҫормушин тишкерекен 28 тӗрӗк чӗлхинчен 19-ӗшӗнче хальхи вӑхат *-а(-е)* кӳлепеллӗ[7]. Асӑрхӑр: чӑваш чӗлхинчи калаҫусенче кӑна мар, илемлӗ литературӑра та уса куракан *кур-а-п, кур-а-н* кӳлепесенче *кур* ӗҫхӗл тӗпӗ ҫумне *-е-* вӑхат аффиксӗ, унтан сӑпат аффиксӗсем хушӑнаҫҫӗ, ҫапла майпа *кил-е-п, лар-а-п* сӑмахсенче *-а(-е)* вӑхӑт аффиксӗн пӗлтерӗшне сисме пулать. Танл.:

чӑв. *пыр-а-п,* якут. *бар-а-бын,* тут. *бар-а-м(ын);*

чӑв. *пыр-а-н,* якут. *бар-а-гын,* тут. *бар-а-сын;*

чӑв. *пыр-а-ть,* якут. *бар-ар,* тут. *бар-а**.

Хӑш-пӗр тӗрӗк чӗлхисенче хальхи вӑхӑта палӑртакан *-а(-е)* аффикс хайӗн пӗлтерӗшне сӗвӗрӗлтерме пуҫланипе вӑхата палартма *-т* (*тар < дурур*) аффикспа та уса курма пуҫлаҫҫӗ:

чӑв. *пыр-а-т-ап;* алт. 1) *бар-а-д-ым;* 2) *бар-а-дыр-ым;* уйг. 1) *бар-а-дур-мен* (ватам ӗмӗр), 2) *бар-а-дурур-мен.*

А. И. Иванов, ҫак тӗслӗхсене анлантарнӑ май *-т, -д, -дыр, -дур, -дурур* пӗр пӗлтерӗшлӗ аффикссем тесе пӑхать, авалхи *дурур* (чӑв. *таран)* причастирен пулса кайнине палӑртать[8], чӑваш чӗлхинчи *пыратӑп, пыр-а-тӑран эпӗ* тенинчен кӗскелсе пулнине ӗнентерет.

Авалтан хальхи вӑхӑта палӑртнӑ *-а(-е)* вӑхӑт аффиксӗ хальхи вӑхӑтра ӗҫхӗлтешӗн *-а(-е)* кӳлепипе пӗр килет.

Чӑнах та, чӗлхе историкӗсем чылай чухне *-а(-е)* ӗҫхӗлтеш аффиксӗ пулнине палӑртса хӑш-пӗр тӗрӗк чӗлхисенче хальхи вӑхат ҫак модельпе пулнине ӗнентереҫҫӗ:

Ӗҫхӗл тӗпӗ +*-а(-е)* ӗҫхӗлтеш аффиксӗ +*-т* (<*тӑран* ~ *дурур* причасти) + сӑпат аффиксӗ.

[7] Ҫормушкин И. В. Система времен глагола в алтайских языках. М.: Наука, 1984. С. 18.

* Тӗслӗхсене И. В. Ҫормушкин ӗҫӗнчен илнӗ (ҫӳлерех пӑхӑр).

[8] Иванов А. И. Несколько слов об образовании форм спряжения в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1968. Вып. 15. С. 185.

Хаш-пер терĕк чĕлхисенче ку модель пасалнин тĕслĕхĕсем те пур; хакас чĕлхинчех хальхи вахăт çапларах пала рать: ĕçхĕл тĕпĕ + *-ып(-п)* ĕçхĕлтеш аффиксĕ +*-ча(-че)* < *чат* «вырт» + сапат аффиксĕсем: *ойна-п-ча-м*[9]; чăв. *вылятăп.*

Туркка чĕлхинче хальхи вахăт аффиксĕ *-р* шутланать: *оку-р-ум;* чăв. *вула-р-ăм* тенине тӳр килет пек, анчах та *-р-* чăваш чĕлхинче пĕрре иртнĕ вахăт аффиксĕ. Чылай тĕрĕк чĕлхисенче *-р* причасти аффиксĕ шутланать.

Ахальтен мар ĕнтĕ Н. К. Дмитриев вахăт категорийĕ ĕçхĕлĕн кăна мар, причастисен те, деепричастисен те пулнине палăртать, пушкăрт чĕлхинчи хальхи вахăт деепричасти форминчен пулнине çирĕплетсех калать[10].

Çапла майпа, чăваш чĕлхинчи хальхи вахăт кӳлепи икĕ сан-сăпатла пулса тухать: 1) *-а(-е)* аффикс — деепричасти аффиксĕ; 2) *-а(-е)* аффикса ытти тĕрĕк чĕлхинчи хальхи вахăт аффиксĕ пек те пăхма май пур.

Традицие пăсас мар тесе, хальхи вахăтри глаголсен сăпатлану парадигмине тата морфемăсен пайланăвне шкул учебникĕсенчи пекех паратпăр:

Ç и р ĕ п л е т у а с п е к ч ĕ (т а р а м ĕ)

Пĕрреллĕ хисеп (тулли форма)

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *çыр-ат-ăп* | *вула-т-ăп* | *ил-ет-ĕп* |
| 2 с. | *çыр-ат-ăн* | *вула-т-ăн* | *ил-ет-ĕн* |
| 3 с. | *çыр-ать-v* | *вула-ть-v* | *ил-ет-v* |

Пĕрреллĕ хисеп (кĕске форма)

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *çырап* | *вулап* | *илеп* | *курап* | *килеп* |
| 2 с. | *çыран* | *вулан* | *илен* | *куран* | *килен* |
| 3 с. | *çырать* | *вулать* | *илет* | *курать* | *килет* |

— Ан çилленĕр мана, мистер Дружкин,
Анчах эп *шухашлап* урахла (Хус.);
Хирте çара тĕтре *куран,*
Хур кайăксем картан-картан
Кикаклатса аштша асанчĕç (Хус.).

*Шухашлап, çырап, вулап, тарашап* самахсенче *-п* сапат аффиксĕ тесен, вĕсенче *-а-* хальхи вахăт аффиксĕ пулнине те палартмалла*. [Ă, е] уçă сасăсемпе пĕтекен глагол тĕпĕсенче хуплашу пулнă: *вула-а-п* > *вулап, шухашла-а-п* > *шухашлап; итле-е-п* > *итлеп.* Хупа сасăсемпе пĕтеккенисенче морфемăсен пайланăвне уççăнах катартма май пур: *çыр-а-п, кил-е-п.* Енчен те кĕске формăсенчи хальхи вахăт аффиксĕ сапат аффиксĕпе пĕрлешсе ларнă тесен, пайлашу çапларах пулать: *лар-ап, кур-ап, ĕçле-п, çуре-п.*

Нумайла хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *çыр-ат-п-ăр* | *вула-т-п-ăр* | *ил-ет-п-ĕр* |
| 2 с. | *çыр-ат-v-ăр* | *вула-т-v-ăр* | *ил-ет-v-ĕр* |
| 3 с. | *çыр-а-çç-ĕ* | *вула-çç-ĕ* | *ил-е-çç-ĕ* |

Х и р ĕ ç л е в а с п е к ч ĕ

| Пĕрреллĕ хисеп | | | Нумайла хисеп | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *çыр-мас-т-ăп* | *ил-мес-т-ĕп* | 1 с. | *çыр-мас-т-п-ăр* | *ил-мес-т-п-ĕр* |
| 2 с. | *çыр-мас-т-ăн* | *ил-мес-т-ĕн* | 2 с. | *çыр-мас-т-v-ăр* | *ил-мес-т-v-ĕр* |
| 3 с. | *çыр-мас-ть-v* | *ил-мес-т-v* | 3 с. | *çыр-ма-çç-ĕ* | *ил-ме-çç-ĕ* |

[Р] сасăпа пĕтекен тăхăр глаголăн *(пар, пер, тар, йĕр, хур, шар, яр, кĕр, пыр)* хирĕçлев аспекчĕн *-мас(-мес)* аффиксĕ умĕн самах тĕпĕнчи [р] тухса ӳкет; *кĕ-мес-т-ĕп, па-мас-т-ăп* т. ыт. те.

П у л а ю с а р л а х а с п е к ч ĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайла хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *çыр-ай-мас-т-ăп* | *ил-ей-мес-т-ĕп* | *çыр-ай-мас-т-п-ăр* | *ил-ей-мес-т-п-ĕр* |
| 2 с. | *çыр-ай-мас-т-ăн* | *ил-ей-мес-т-ĕн* | *çыр-ай-мас-т-v-ăр* | *ил-ей-мес-т-v-ĕр* |
| 3 с. | *çыр-ай-мас-ть* | *ил-ей-мес-т-v* | *çыр-ай-ма-çç-ĕ* | *ил-ей-ме-çç-ĕ* |

П у л а ю л а х а с п е к ч ĕ

| Пĕрреллĕ хисеп | | | Нумайла хисеп | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *çыраятăп* | *(çыр-ай-ат-ăп)* | 1 с. | *çыраятпăр* | *(çыр-ай-ат-п-ăр)* |
| 2 с. | *çыраятăн* | *(çыр-ай-ат-ăн)* | 2 с. | *çыраятăр* | *(çыр-ай-ат-v-ăр)* |
| 3 с. | *çыраять* | *(çыр-ай-ать-v)* | 3 с. | *çыраяççĕ* | *(çыр-ай-а-çç-ĕ)* |

Хальхи вахăт формин пĕлтерĕшĕсем чылай. Вĕсенчен паллăраххисем çаксем:

1. Ялан пулса пыракан ĕçе кăтартасси: *Кăпкай тимĕрçĕ вырăс çынни. Утламаш халăхĕ ăна çывăх курать. Асла ывалĕпе иккĕшĕ вĕсем хайсен лаççинче ир пуçласа каçчен ĕ ç л е ç ç ĕ: ял халăхĕ валли çурла ш а л л а ç ç ĕ, пата х а т ĕ р л е ç ç ĕ, сухапуç майлаштарасси те пулать, пурта та т а в а ç ç ĕ. Пĕр Утламашран кăна мар, куршĕ ялсенчен те часчасах к и л е ç ç ĕ* (Илп.).

2. Ĕç калана вахăтра пулнине пĕлтерет: *П ĕ л е т ĕ р - и, çырусем халь те килсех тараççĕ вĕт* (Скв.).

Пахчана кĕретĕп саванса чунтан,
Сывлăшĕ симпыл пек туйăнать унта.
Йалтар çуталаççĕ сара улмасем.
Илĕртсе тăраççĕ хĕрлĕ аниссем (Эйзин).

---

[9] Грамматика хакасского языка / Под ред. профессора Н. А. Баскакова. М.: Наука, 1975. С. 201.

[10] Дмитриев Н. К. Грамматика башкирского языка. М.; Л., 1948. С. 145—161.

* Паллах, [а, е] уçă сасăсемпе пĕтекен ĕçхĕлсенче самах тĕпĕнчи уçă сасса сыхласа та хăварма пулать, анчах та ун пек чух *-а(-е)* вахăт аффиксĕ палармасть: *вула-та-п,* çавна май ăна пулас вахăт кӳлепипе пĕрпеклетмелле: *вул-а-п.*

3. Калана хыççăнхи е пĕр ĕç пулнă хыççăнхи тепĕр ĕçе палартать, калаканни ĕç пулассин пирки пĕртте иккĕленмест. Ĕç хăçан пулассине палăртакан сăмахсем пулас вăхăт пĕлтерĕшне кăтартаççĕ: *Ыран эпĕ хулана каятăп; Килес çул тырă вăйлă пулать; Висмине пире киле яраççĕ; Эпир сахаллăн тăрса юлтăмăр, пирĕн ретсем сайралсах пыраççĕ* (Арт.).

**А. Пулас вăхăт.** Пулас вăхăт формин чăваш чĕлхинче хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур. Пĕрисем калана тăрăх ку вăхăтăн ятарлă аффиксĕсем çук. Кун пек чухне эпир çирĕплету аспектĕнче сăмах улшăнавĕ çинчен кăна калаçма пултаратпăр:

Ç и р ĕ п л е т у  а с п е к ч ĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *çыр-ăп* | *кал-ăп* | *çыр-ăп-ăр* | *кал-ăп-ăр* |
| 2 с. | *çыр-ăн* | *кал-ăн* | *çыр-v-ăр* | *кал-v-ăр* |
| 3 с. | *çыр-ĕ* | *кал-ĕ* | *çыр-ĕ-ç* | *кал-ĕ-ç* |

Хальхи вăхăт формисемпе танлаштарсан, 3-мĕш сăпатра çакăн пек уйрăмлăхсем пур: *-ĕ* виççĕмĕш сăпат аффиксĕ хальхи вăхăтра тухса ÿкнĕ, пулас вăхăтра вăл хăй вырăнĕнчех юлнă; нумайлă хисепре хальхи вăхăт форми *çыр-а-çç-ĕ*, пулас вăхăтăн — *çыр-ĕ-ç;* сăпат аффиксĕпе нумайлă хисеп аффиксĕн вырăнĕсем ылмашнă.

Х и р ĕ ç л е в  а с п е к ч ĕ

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *çыр-м-ăп* | *кала-м-ăп* | *çыр-м-ăп-ăр* |
| 2 с. | *çыр-м-ăн* | *кала-м-ăн* | *çыр-м-v-ăр* |
| 3 с. | *çыр-м-ĕ* | *кала-м-ĕ* | *çыр-м-ĕ-ç* |

П у л а ю л ă х  а с п е к ч ĕ

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *çыр-ай-ăп* | *çыр-ай-ăп-ăр* |
| 2 с. | *çыр-ай-ăн* | *çыр-ай-v-ăр* |
| 3 с. | *çыр-ай-ĕ* | *çыр-ай-ĕ-ç* |

П у л а ю с ă р л ă х  а с п е к ч ĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *çыр-ай-м-ăп* | *кала-й-м-ăп* | *ил-ей-м-ĕп* | *çыр-ай-м-ăп-ăр* | *ил-ей-м-ĕп-ĕр* |
| 2 с. | *çыр-ай-м-ăн* | *кала-й-м-ăн* | *ил-ей-м-ĕн* | *çыр-ай-м-v-ăр* | *ил-ей-м-v-ĕр* |
| 3 с. | *çыр-ай-м-ĕ* | *кала-й-м-ĕ* | *ил-ей-м-ĕ* | *çыр-ай-м-ĕ-ç* | *ил-ей-м-ĕ-ç* |

Чăваш чĕлхе вĕрентĕвĕнче пулас вăхăтăн аффиксне уйрăммăн палăртма май пурри çинчен калани те тĕл пулать: сăмах тĕпĕпе сăпат аффиксĕ хушшине кĕрсе ларакан *-ă(-ĕ)* аффикс пулас вăхăт аффиксĕ шутланать. Ун пек чухне сăпатлану парадигминчи морфемăсен пайланулăхĕ çакăн пек курăнать: *çыр-ă-п, вул-ă-п, ĕçл-ĕ-н, çыр-ĕ, вул-ĕ.* Пулас вăхăтăн *-ă(-ĕ)* аффиксĕ уйрăм аффикс пулни ĕмĕт наклоненийĕнчи формăсенче те палăрать: *çыр-ă-тт-ăм, ĕçл-ĕ-тт-ĕм.*



Пулас вăхăт калана хыççăнхи вăхăта пĕлтерет, чылай чухне калаканни пулассине çирĕп шанни, ĕненни сисĕнет:

Çĕршывăм хаюллăн вăранĕ,
Тăпранĕ кăвар кăйăкла:
«Çук, çук» теекен улталанĕ (Çеçп.);
«Ялан çĕршывшăн сыхă пулăп!» —
Тесе кунта тăвать тупа (Хус.).

Аспект формисене кура пулас вăхăт кÿлепи иккĕленĕве те палăртма пултарать: *Итлĕр-ха, мĕнех çырайăп эпĕ ун патне?* (Скв.).

**Б. Пĕрре иртнĕ вăхăт.** Ĕлĕкрех ăна **пĕрре пулса иртнĕ вăхăт** тесе палăртатчĕç, термин кĕскерех пултăр тесе ăна халĕ **пĕрре иртнĕ вăхăт** теме йышăннă. Ку вăхăтăн аффиксĕсем *-р, -т(-ч)**, вĕсем сăмах тĕпĕпе сăпат аффиксĕ хушшине кĕрсе лараççĕ. Пĕр енлĕ çыхăнура хăйсем тĕллĕн çÿреймесçĕ, вĕсен пĕлтерĕшне сăпат аффиксĕ уçăмлатать: *тар-т-ăм, çĕр-т-ĕм, лар-т-ăм, хар-т-ăм* сăмахсенчи *тарт, çĕрт, ларт, харт* формăсем сăпат аффиксĕсĕр чухне иртнĕ вăхăта палăртмаççĕ.

Ç и р ĕ п л е т у  а с п е к ч ĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ĕçле-р-ĕм** | *кан-т-ăм* | *иш-р-ĕм* | 1 с. | *ĕçле-р-ĕм-ĕр* | *кан-т-ăм-ăр* |
| 2 с. | *ĕçле-р-ĕн* | *кан-т-ăн* | *иш-р-ĕн* | 2 с. | *ĕçле-р-v-ĕр* | *кан-т-v-ăр* |
| 3 с. | *ĕçле-р-ĕ* | *кан-ч-ĕ* | *иш-р-ĕ* | 3 с. | *ĕçле-р-ĕ-ç* | *кан-ч-ĕ-ç* |

Х и р ĕ ç л е в  а с п е к ч ĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ĕçле-ме-р-ĕм* | *кан-ма-рăм* | 1 с. | *ĕçле-ме-р-ĕм-ĕр* | *кан-ма-р-ăм-ăр* |
| 2 с. | *ĕçле-ме-р-ĕн* | *кан-ма-р-ăн* | 2 с. | *ĕçле-ме-р-v-ĕр* | *кан-ма-р-v-ăр* |
| 3 с. | *ĕçле-ме-р-ĕ* | *кан-ма-р-ĕ* | 3 с. | *ĕçле-ме-р-ĕ-ç* | *кан-ма-р-ĕ-ç* |

П у л а ю л ă х  а с п е к ч ĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ĕçле-й-р-ĕм* | *кан-ай-р-ăм* | 1 с. | *ĕçле-й-р-ĕм-ĕр* | *кан-ай-р-ăм-ăр* |
| 2 с. | *ĕçле-й-р-ĕн* | *кан-ай-р-ăн* | 2 с. | *ĕçле-й-р-v-ĕр* | *кан-ай-р-v-ăр* |
| 3 с. | *ĕçле-й-р-ĕ* | *кан-ай-р-ĕ* | 3 с. | *ĕçле-й-р-ĕ-ç* | *кан-ай-р-ĕ-ç* |

П у л а ю с ă р л ă х  а с п е к ч ĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ĕçле-й-ме-р-ĕм* | *кан-ай-ма-р-ăм* | *ĕçле-й-ме-р-ĕм-ĕр* | *кан-ай-ма-р-ăм-ăр* |
| 2 с. | *ĕçле-й-ме-р-ĕн* | *кан-ай-ма-р-ăн* | *ĕçле-й-ме-р-v-ĕр* | *кан-ай-ма-р-v-ăр* |
| 3 с. | *ĕçле-й-ме-р-ĕ* | *кан-ай-ма-р-ĕ* | *ĕçле-й-ме-р-ĕ-ç* | *кан-ай-ма-р-ĕ-ç* |

* Ытти пур хурăнташ тĕрĕк чĕлхисенче ку вăхăтăн аффиксĕ *-ды(-ди), -ду(-дÿ), -ты(-ти), -ту(-тÿ)* пулнине кăтартаççĕ. Çавна кура М. Р. Федотов тĕпчевçĕ пĕрре иртнĕ вăхăтăн аффиксĕ *-та(-тĕ), -ра(-рĕ), -чĕ* тесе палăртать (Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986 Ч. 3. С. 96).

Сапатлану уйрăмлăхĕсем: çирĕплетӳ аспектĕнче глагол тĕпĕ мĕнле сасапа пĕтнине кура аффиксăн тĕрлĕрен вариантсем пулаççĕ: <л, н, р> сасăсемпе пĕтекен глагол тĕпĕ çумне 1-мĕшпе 2-мĕш сапатсенче *-т* хушăнать: *лартăм, шантăм, шăвартăм, лартăн, шантăн, шăвартăн;* 3-мĕш сапатра *т ~ ч* ылмашу пулать: *ларчĕ, курчĕ, шанчĕ, шăварчĕ.*

Ытти хупă сасăсемпе пĕтекен тата уçă сасăсемлĕ самах тĕпĕ çумне *-р* вариант хушăнать: *хунарĕ, упрарăм, хĕнерĕн, сыпрăн.*

Хирĕçлев, пулаюлăх, пулаюсарлăх аспекчĕсенче пур çĕрте те *-р* вариант хуçаланать.

<Р> сасăпа пĕтекен тăхăр глагол *(йĕр, кĕр, кур, пар, пер, пыр, тар, хур, яр)* пĕрре иртнĕ вăхăтăн çирĕплетӳ тата хирĕçлев аспекчĕсенче сăмах тĕпĕнчи <р> сасса çухатаççĕ: *кĕтĕм, петĕм, пытăн, пычĕ, кĕчĕ, кĕтĕм, кĕтĕн,* анчах та ытти аспектсенче <р> саса каллех хăй выранĕнчех пулать: *кĕрейрĕм — кĕреймерĕм, тарайрăн, тараймарĕ.* Тăхăр глагола шутламасан, ытти <р> сасăпа пĕтекен глагол тĕпĕнчи çав саса нихăш аспектра та тухса ӳкмест: *сартăм, сармарăм, сарайрăм, сараймарăм.*

Пĕрре иртнĕ вăхăтăн пĕлтерĕшĕсем:

а) ĕç пулса иртнине çирĕплетсех каласси (çирĕплетӳ аспекчĕ):

> Вĕренерĕн эп купăс асталарăм,
> Хĕр пилĕкĕ пек турăм варрине,
> Пĕр саванса, пĕр хурланса каларăм —
> Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине (Хус.);

а) ĕç вăрăма пынине, тăсăлнине палартма пĕрре иртнĕ вăхатри глагола икĕ хут калаççĕ: *тăтăм-тăтăм, кĕтрĕм-кĕтрĕм, утрăм-утрăм.*

> Утрăм-утрăм, утса тухаймарăм,
> Такăрлатрăм куллен урама.
> Кĕтрĕм-кĕтрĕм, кĕтсе илеймерĕм,
> Савнă тусăм, аçта эс çӳрен? (Давыдов-А.).

Пулаюсарлăх аспектĕнчи *тухаймарăм, çитеймерĕм, илеймерĕм* сăмахсем ĕç пулайманнине, пурнăçланайманнине палартаççĕ.

Ĕç вăрăма пынине, тăсăлнине уйрăм сăмахсемпе те палартма пулать: *нумай, чылай, эрнипех çӳрерĕм, утрăм, вуларăм.*

**В. Темиçе иртнĕ вăхăт.** Ку вăхăт аффиксĕн варианчĕсем темиçе тĕрлĕ пулаççĕ: *-атт(-етт), -тт-, -т-, -атч(-етч), -тч.* Пурте вĕсем хăйсен пĕлтерĕшне сапат аффиксĕпе çыхăнтарса кăна палартаççĕ. Сапата тата хисепе палартакан аффикссем пĕрре иртнĕ вăхăтрисем пекех.



Çирĕплетӳ аспекчĕ

Пĕрреллĕ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *кĕр-етт-ĕм* | *лар-атт-ам* | *вула-тт-ам* |
| 2 с. | *кĕр-етт-ĕн* | *лар-атт-ан* | *вула-тт-ан* |
| 3 с. | *кĕр-етч-ĕ* | *лар-атч-ĕ* | *вула-тч-ĕ* |

Нумайлă хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *кĕр-етт-ĕм-ĕр* | *лар-атт-ам-ар* | *вула-тт-ам-ар* |
| 2 с. | *кĕр-етт-v-ĕр* | *лар-атт-v-ар* | *вула-тт-v-ар* |
| 3 с. | *кĕр-етч-ĕ-ç* | *лар-атч-ĕ-ç* | *вула-тч-ĕ-ç* |

Хирĕçлев аспекчĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *кĕ-мес-т-ĕм* | *лар-мас-т-ам* | *кĕ-мес-т-ĕм-ĕр* | *лар- мас-т-ам-ар* |
| 2 с. | *кĕ-мес-т-ĕн* | *лар-мас-т-ан* | *кĕ-мес-т-v-ер* | *лар- мас-т-v-ар* |
| 3 с. | *кĕ-мес-тч-ĕ* | *лар-мас-тч-ĕ* | *кĕ-мес-тч-ĕ-ç* | *лар- мас-тч-ĕ-ç* |

Хирĕçлев аспектĕнче 9 глагол сăмах тĕпĕнчи <р> сасса çухатаççĕ: *ямастăм, пеместĕн, хумастчĕ, памастăмăр,* т. ыт. те.

Пулаюлăх аспекчĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *кĕр-ей-етт-ĕм* | *вула-й-атт-ам* | *кĕр-ей-етт-ĕм-ĕр* | *вула-й-атт-ам-ар* |
| 2 с. | *кĕр-ей-етт-ĕн* | *вула-й-атт-ан* | *кĕр-ей-етт-v-ĕр* | *вула-й-атт-v-ар* |
| 3 с. | *кĕр-ей-ет-чĕ* | *вула-й-атч-ĕ* | *кĕр-ей-етч-ĕ-ç* | *вула-й-атч-ĕ-ç* |

Пулаюсарлăх аспекчĕ

| | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ил- ей-мес-т-ĕм* | *вула-й-мас-т-ам* | *ил- ей-мес-т-ĕм-ĕр* | *вула-й-мас-т-ам-ар* |
| 2 с. | *ил- ей-мес-т-ĕн* | *вула-й-мас-т-ан* | *ил- ей-мес-т-v-ĕр* | *вула-й-мас-т-v-ăр* |
| 3 с. | *ил- ей-мес-тч-ĕ* | *вула-й-мас-тч-ĕ* | *ил- ей-мес-тч-ĕ-ç* | *вула-й-мас-тч-ĕ-ç* |

Пĕлтерĕшсем: 1) ĕç темиçе хут пулса иртнине пĕлтерет (çирĕплетӳ аспекчĕ):

> Тахçан ача чухне эс *вĕрентеттĕн,*
> Саспаллисем палла пуçласанах:
> «Ӳссессĕн хура халахшăн тар,— *теттĕн,*—
> Çыру тесе йăхна ан мансамах».
> Сана *итлеттĕм* ун чухне йăвашшăн (Хус.);

2) иртнĕ ĕç вăрăма тăсăлнине палартать:

> *Вылятттăмăр* кĕтӳ çитерн ĕçемĕн,
> *Чупаттамăр* ура ываниччен.
> Çу кунĕ шăрататчĕ симĕс çеме
> Ир пуçласа çĕм тĕттĕм пуличчен (П. Яккусен).

**Г. Малтан иртнĕ вăхăт.** Ку вăхăт *-сатт(-сетт), -сачч-(-сечч)* аффикспа пулнине палăртаççĕ. Тĕрĕссипе илес пулсан, кунта икĕ аффикс пĕрлешĕвĕ куçкĕретлĕ; *-са(-се)* деепричасти аффиксĕ + *-атт(-етт), -ачч(-ечч)* — темиçе иртнĕ вăхăт аффиксĕ; *-са(-се)* аффикс хальхи чăваш чĕлхинче «вилĕ» аффикс шутланмасть: *кай-са, ук-се, вĕрен-се, ĕçле-се, шухашла-са* т. ыт. те, вăл пур глагол тĕпĕ çумне те хушăнать, тури калаçура иртнĕ вăхăта палăртас сĕмĕ уйрăммăнах лайăх паларать: *Эпĕ пасара кайса. Эпĕ хирте кунĕпех ĕçлесе.*

Деепричасти аффиксĕ чĕрĕ аффикс пулнине тĕпе хурсан, глаголăн сăпатсăр форми (деепричасти) сăпатланавĕ çинчен калаçмалла. Çапла майпа, «сăпат, хисеп, вăхăт тарăх улшăнман глагол формине деепричасти теççĕ» тени тĕрĕсе килсе тухмасть.

Чăнах та, кăтарту наклоненийĕнчи ытти вăхăт формисемпе танлаштарсан, ку вăхăтăн хăйĕн уйрăмлăхĕсем пур: малтан иртнĕ вăхăтри глаголсем çирĕплету аспектĕнче кăна пулаççĕ.

| Пĕрреллĕ хисеп | | | Нумайлă хисеп | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *каласаттам* | *чĕнсеттĕм* | 1 с. | *каласаттамăр* | *чĕнсеттĕмĕр* |
| 2 с. | *каласаттăн* | *чĕнсеттĕн* | 2 с. | *каласаттăр* | *чĕнсеттĕр* |
| 3 с. | *каласаччĕ* | *чĕнсеччĕ* | 3 с. | *каласаччĕç* | *чĕнсеччĕç* |

Иртнĕ вăхăт формисем чылай чухне ытти пуплев пайĕсем çумне те хушăнакан, иртнĕ вăхăта палăртакан *-чĕ(-ччĕ)* аффикса йышăнаççĕ: *вулаттăмччĕ, вуласаттăмччĕ* (танл.: *вуласаччĕ, вуланаччĕ*). Ун пек чух иртнĕ вăхăт пĕлтерĕшĕ вăйланать çеç, анчах та *-ччĕ* аффикс 3-мĕш сăпат форми çумне хушăнсах каймасть, мĕншĕн тесен пĕр пек янăракан сасăсем пĕр сăмах форминче юнашар тăма юратаççĕ.

## 5 §. ХУШУ НАКЛОНЕНИЙĔ (ТАЙĂМĔ)

Хушу наклоненийĕ ĕç тума хушнине, ыйтнине, сĕннине е канаш панине пĕлтерет. Хушу наклоненийĕн ятарлă вăхăт аффиксĕсем çук, анчах та хушу наклоненийĕнчи глагол формисем ĕçе халь е пулас вăхăтра тума сĕннине, ыйтнине пĕлтереççĕ.

Сăпатлану парадигми хăйнеевĕрлĕ, кунта пĕр харăсах сăмах улшăнавĕ те, сăмах формин улшăнавĕ те паларать.



Çирĕплету аспекчĕ
Пĕрреллĕ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *кур-а-м* | *пĕл-е-м* | *вула-м* |
| 2 с. | *кур* | *пĕл* | *вула* |
| 3 с. | *кур-тар* | *пĕл-тĕр* | *вула-тар* |

Пĕрреллĕ хисепре сăпат аффиксĕ пĕрремĕш сăпатра кăна паларать, 2-мĕшпе 3-мĕш сăпатсенче вăл çук.

Пĕрремĕш сăпат формипе час-часах уса курмаççĕ, хушăран вăл поэзире çеç тĕл пулкалать:

Татса пар мана эс пĕр сапак,
Асăнмалах эп ана *тирем* (Хус.);
Ханалатан пулĕ ханана
Е хавна *тавам-и* эп хăна? (Хус.).

1-мĕш сăпат форми, тĕрĕссипе, хушнине уççăнах палăртмасть, вăл ĕçе тума кăмăл е сунам пуррине пĕлтерет:

Эс çырлан куранан пусама, —
Кил, савни, парнелем юррама (Давыдов-А.).

*Тир-е-м, тав-а-м, парнеле-м, вула-м* йышши формăсенче глагол тĕпĕ çумне *-а(-е)* деепричасти аффиксĕ, унтан *-ам-(-ĕм, -м)* сăпат аффиксĕ хушăннине палăртаççĕ чĕлхеçĕсем.

Иккĕмĕш сăпат форми хушса çирĕппĕн каланине пĕлтернĕ чухне глагол тĕпĕпе пĕр килсе тухать: *Тар! Вырăнтан та ан тапран. Пĕр пусам та ан пус!*

Пуçсăрланать усал ташман,
Сĕмсĕрленет, кĕрет. Ан яр эс!
Касса пăрах çав аçтахан
Вутпа сывлан пусне пĕр харăс! (Хус.).

Кăмшăн та пулин ĕç тума çирĕппĕн ыйтнине те çав формăпах палăртаççĕ:

Эс тараш хавăн халăхушăн,
Ун араскалĕшĕн эс çун! (Хус.).

Пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене кăтартас тĕллевпе П. П. Хусанкай çырнă «Таня» поэмăри йĕркесене тишкерсе тухар.

Ĕçе тума чунтан ыйтнине глагол тĕпĕ çумне *-сам (-сем)* аффикс хушса палăртаççĕ:

— Ан йĕрсем, — тет вăл, — ан макăр,
Ан кулян, анне (Хус.).

Ĕçе тума чунтан е тĕмсĕлсех ыйтнине, сĕннине, хушнине *-чĕ(-ччĕ)* аффикспа та палăртаççĕ:

Ан ярччĕ ман чĕрем патне
Харуша ташмана эс, ывлам (Хус.).

Ĕçе тума ăшшăн, кăмăллăн ыйтнине *-сам(-сем)* аффикс çумне *-ччĕ* аффикс хушса та палăртма пулать:

Анне, май пур пулсан,
Çырсамччĕ кашт кана (Хус.).

Пĕррелле хисепри 3-мĕш сапат форми глагол тĕпĕ çумне *-тăр(-тĕр)* аффикс хушăннипе пулать:

Эппин, сар çупкамĕ хĕрелтĕр пилешĕн,
Вараххан саралтар, çаралтар ката! (П. Яккусен).

3-мĕш сапат форми ĕçе тума çынна хушнине çеç пĕлтермест, хупăрласа таракан çутçанталăкри япаласемпе пуламсене кирлĕ пек пултарасшăннине те палартать:

Ан тив, кантарла сар хĕвелĕ çутаттар,
Каçкулĕм кĕрхи сулхансем сисĕнет (П. Яккусен).

Çав пĕлтерĕшсенех вăйлатса катартас тĕллевпе *-тар(-тĕр)* аффикс çумне *-ччĕ* аффикса хушаççĕ:

Курак чĕппине йăвинчен, ав, вĕçтернĕ,
Çунат тĕреклентĕрччĕ, тет, сивĕччен (П. Яккусен).

Пĕррелле хисепри сапатлану парадигмине, малтанхипе танлаштарсан, çакан пек катартма пулать:

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *кур-а-м* | *пĕл-е-м* | *вул-а-м* |
| 2 с. | *кур-сам* | *пĕл-сем* | *вула-сам* |
| | *кур-сам-ччĕ* | *пĕл-сем-ччĕ* | *вула-сам-ччĕ* |
| 3 с. | *кур-тар* | *пĕл-тĕр* | *вула-тар* |
| | *кур-тар-ччĕ* | *пĕл-тĕр-ччĕ* | *вула-тар-ччĕ* |

3-мĕш сапат аффиксĕ *-тар(-тĕр)* хушаран пулаюлăх аспекчĕн *-ай(-ей)* аффиксĕ çумне хушăннин тĕслĕхĕсем те пур:

Йăмрасем çине ларайтар
Хĕвел ашшине,
Янра юрапа мухтатар
Чăваш чĕлхине (Çеçп.).

Нумайлă хисепри сапатлану парадигмин каткаслăхне те çакан пек катартма пулать:

| | | | |
|---|---|---|---|
| 1 с. | *кур-а-р* | *пĕл-е-р* | *вул-а-р* |
| 2 с. | *кур-ар* | *пĕл-ĕр* | *вул-ăр* |
| | *кур-сам-ар* | *пĕл-сем-ĕр* | *вула-сам-ар* |
| 3 с. | *курччăр* | *пĕл-ччĕр* | *вула-ччар* |
| | *кур-ччар-ччĕ* | *пĕл-ччĕр-ччĕ* | *вула-ччар-ччĕ* |

В. Энтипен «Тĕл пулар-и — паллашар-и» савви петĕмĕшле хушу наклоненийĕн нумайлă хисепри 1-мĕш сапат формисем çинче никĕсленет, *-и* тагак ыйтнипе пĕрлех кунта ĕçе тума сунăм пуррине вăйлатса катартма пулашать:

Тĕл пулар-и — паллашар-и,
Паллашар-и — туслашар-и
Камал туртна чух?
Туслашар-и — калаçар-и,
Калаçар-и — савашар-и
Камал çепĕç чух? (В. Энт.).



Пĕлтерĕш тĕлешĕнчен нумайлă хисепри 2-мĕшпе 3-мĕш сапат формисем пĕррелле хисеприсенчен ĕçе тума пĕр çынна хушнипе мар, ушкăна (темиçе çынна) хушнипе уйăралса тараççĕ:

Çĕнтеру юрри юрлатап.
Тултарсамар куркара та
Такар кашт туталиччен:
Тавранманнине пуç тайар (Хус.).

*Тултарсамар* самах кунта ĕçе тума чунтан ыйтнине пĕлтерет.

Евĕклĕхе е сапăйлăха палартнă чухне 2-мĕш сапатри нумайлă хисеп форми ĕç тума пĕр çынна хушнине те пĕлтерет: *Анатолий, тархасшан, выльăр-ха мĕн те пулин...* (Арт.).

Хушу наклоненийĕн хирĕçлев аспекчĕ морфологи (аффикс) мелĕпе пулмасть, кун пек чухне синтаксис мелĕ хуçаланать.

| Пĕррелле хисеп | | | Нумайлă хисеп | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *курам мар* | *пĕлем мар* | 1 с. | *курар мар* | *пĕлер мар* |
| 2 с. | *ан кур* | *ан пĕл* | 2 с. | *ан курар* | *ан пĕлĕр* |
| 3 с. | *ан куртăр* | *ан пĕлтĕр* | 3 с. | *ан курччăр* | *ан пĕлччĕр* |

Эс ан çун,
Эпĕ çунам мар,
Вал ан çунтар, —
Кам-ха вара тĕттĕмлĕхе сирĕ? (Н. Хикмет).

## 6 §. ĔМĔТ ТАЙĂМĔ

Ку тайăмри кулепесем пĕр-пĕр ĕçе тума ĕмĕтленнине палартаççĕ.

Чĕлхеçĕсем ĕмĕт тайăмĕн сапатланавĕнчи морфемасене тĕрлĕрен катартаççĕ. И. П. Павлов сапатлану парадигмине çапла сĕнет:

| | Пĕррелле хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| 1 с. | *кур-атт-ăм* | *кур-атт-ам-ар* |
| 2 с. | *кур-атт-ăн* | *кур-атт-ар* |
| 3 с. | *кур-ĕчч-ĕ* | *кур-ĕчч-ĕ-ç* |

Ăнлантарура çапла калана: «...глагол тĕпĕ çумне ĕмĕт наклоненийĕн аффиксĕ *-ăтт(-ĕтт)*, *-ĕчч*, унтан сапат аффиксĕпе хисеп аффиксĕ хушăнать. Этимологи тĕлĕшĕнчен илсен ку наклонени форми пулас вăхат никĕсĕ çумне çителĕксĕр глагол хушăннипе пулна: *кай-а-тт-ам, кай-а-тт-ан, кай-ĕ-чч-ĕ* т. ыт. те. Кунта *-а-* глаголан ят формине тавакан аффикс[11],

[11] Кун пек аффикс пулас вахат формин тытамĕнче те пулнине палартать автор.

*-тт(-чч-)* çителĕксĕр глаголти иртнĕ вăхăт аффиксĕ... *-ă(-ĕ)* аффикспа *-тт(-чч)* аффикс, хăйсен пĕлтерĕшĕсене çухатса, ĕмĕт наклоненийĕн аффиксĕ пулса тăна, сăпат аффиксĕсем хăйсен пĕлтерĕшĕсемпех çӳреççĕ»[12].

Тимухха Хĕветĕрĕ ку тайăма тытăнчăклă тайăм тенĕ, морфемăсем тĕлĕшĕнчен çапла пайласа кăтартнă:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *лар-ă-тт-ам* | *вул-а-тт-ам* | *лар-ăтт-амăр* | *вулă-тт-амар* |
| 2 с. | *лар-а-тт-ан* | *вул-а-тт-ан* | *лар-ă-тт-ăр* | *вул-а-тт-ар* |
| 3 с. | *лар-ĕ-ччĕ* | *вул-ĕ-чч-ĕ* | *лар-ĕ-чч-ĕç* | *вул-ĕ-чч-ĕ-ç* |

Асархаттару. *Ларĕччĕç* самахра йанăш кайнă: *лар-ĕ-чч-ĕ-ç* кирлĕ.

Ăнлантару пайĕнче çакăн пек калани пур:

1. Ку тайăм пулас вăхăт аффиксĕ çумне *-чĕ* хушăнаран пулнă.

2. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш сăнра <ă> саса пур. Вăл пĕрпĕр авалхи кĕлеткерен юлнă пулмалла[13].

Н. И. Ашмарин хăйĕн лекцийĕсенче ĕмĕт тайăмĕн кӳлеписене морфемăсем çине пайласа кăтартман; пулас вăхăт тĕпĕ çумне *-ттам(-ттĕм)* аффикс хушăннипе пулнине, вăл авалхи *е* «быть» глаголăн юлашкийĕ пулнине ĕнентерет. Ку глагол тутар чĕлхинче вĕçленнине çакăн пек кăтартать:

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *идим «я был»* | *идик «мы были»* |
| 2 с. | *идин «ты был»* | *идиниз «вы были»* |
| 3 с. | *иди «он был»* | *идилар «они были»*[14]. |

Морфологи ыйтăвĕсене халалласа çырнă тĕп ĕçĕнче Н. И. Ашмарин ĕмĕт тайăмĕ чăваш чĕлхинче икĕ тĕрлĕ пулма пултарнине кăтартнă:

а) морфологи мелĕпе:

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *калăттам(ччĕ)* | *калаттамăр(ччĕ)* |
| 2 с. | *калаттан(ччĕ)* | *калаттăр(ччĕ)* |
| 3 с. | *калĕччĕ* | *калĕччĕç* |

ă) синтаксис мелĕпе:

Пĕррелĕ хисеп

1 с. *калана пулаттам(ччĕ)* «я сказал бы тогда»
2 с. *калана пулаттан(ччĕ)*
3 с. *калана пулĕ(ччĕ)*

Нумайлă хисеп

1 с. *калана* { *пулаттамăр(ччĕ)*
2 с. *пулăттăр(ччĕ)*
3 с. *пулĕччĕç*[15]

[12] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 257 с.

[13] Тимухха Хĕветĕрĕ. Чăваш чĕлхиен крамматикĕ. Шупашкар, 1924. 74 с.

[14] Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка // Тр. / ЧНИИ. Чебоксары, 1976. Вып. 66. С. 64.

[15] Ашмарин Н. И. Материалы... С. 320—321.



М. Р. Федотов ĕмĕт тайăмĕ глагол тĕпĕ çумне *-а(-ĕ)* пулас вăхăт аффиксĕ (тут., пушк. *-р, -ар, -ир, -эр, -ыр, -ер*), ун çумне *-тте(-ччĕ)* иртнĕ вăхăт аффиксĕ (авалхи *ер* «быть, находиться») хушăннипе пулнине асăрхама хушать[16]:

Кайак чунĕ пулсассăн
Пĕрĕччĕ те кулĕччĕ;
Çуначĕсем пулсассăн
Вĕçĕччĕ те кайĕччĕ (К. Ив.).

Çулерех асăннă ĕçхĕлсем иртнĕ вăхăта мар, пулас вăхăта палăртнипе çыхăннă. Паллах, çав кӳлепесемпех: 1) хальхи ĕçе те палăртма пулать: *çак сехетрех кайĕччĕ; халь тесен, халь кайĕччĕ;* 2) иртнĕ вăхатри ĕçе те: *пĕлнĕ пулсан, килнĕ пулăттам.* Çапла вара, ку таранччен ытти наклоненисен (кăтарту наклоненийĕсĕр пуçне) вăхăт пĕлтерĕшĕ çук тени тĕрĕсе килмест.

Енчен те ĕмĕт тайăмĕнче пулас вăхăтăн *-а(-ĕ)* аффиксĕ пуррине палăртатпăр пулсан, пулас вăхăт кӳлепинче те *-ап(-ĕп)* аффикс мар, *-а-п(-ĕ-п)* морфемăсем пуррине кăтартма лекет:

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *лар-а-п* | *кил-ĕ-п* | *вул-а-п* | *шухăшл-а-п* | *килĕш-ĕ-п* |
| 2 с. | *лар-а-н* | *кил-ĕ-н* | *вул-а-н* | *шухăшл-а-н* | *килĕш-ĕ-н* |
| 3 с. | *лар-v-ĕ* | *кил-v-ĕ* | *вул-v-ĕ* | *шухăшл-v-ĕ* | *килĕш-v-ĕ* |

Кун пирки кайрантарах калăпăр.

Ĕмĕт тайăмĕн хирĕçлев тăрăмĕ, пулас вăхăтăнни пекех, ĕçхĕл тĕпĕ çумне *-м* аффикс хушăннипе пулать.

| | Пĕррелĕ хисеп | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *лар-м-а-тта-м* | *вула-м-а-тта-м* | *лар-м-а-тта-м-ар* | *вула-м-а-ттă-м-ар* |
| 2 с. | *лар-м-а-тта-н* | *вула-м-ă-ттă-н* | *лар-м-а-тта-v-р* | *вула-м-а-тта-v-р* |
| 3 с. | *лар-м-ĕ-чч-ĕ* | *вула-м-ĕ-чч(ĕ)-ĕ* | *лар-м-ĕ-чч(ĕ)-ĕ-ç* | *вула-м-ĕ-чч-ĕ-ç* |

Енчен те ĕмĕт тайăмĕн тата пулас вăхăтăн сăпатлануĕнче *-а(-ĕ)* форманта пулас вăхăт аффиксĕ тесе шутласан, чăваш чĕлхинчи хальхи вăхăта палăртнă чух *-а(-е)* аффикспа уса курнине палăртмалла: *кур-а-тă-н, пĕл-е-тĕ-п.*

Асăрхăр: якут, карачай-балкар чĕлхисенче (т. ыт. те) *-а(-е)* хальхи вăхăт аффиксĕ тесе шутлаççĕ:

| | якутла | чăвашла | кĕске форма | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *бар-а-бын* | *пар-а-т-ăп* | *пар-а-п* | *кĕр-е-п* |
| 2 с. | *бар-а-гын* | *пыр-а-т-ăн* | *пар-а-н* | *кĕр-е-н* |

[16] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. Ч. 2. С. 116.

| балкарла | чавашла | | кĕске форма |
|---|---|---|---|
| 1 с. *ал-а-ма* | *ил-е-тĕ-п* | *ил-е-п* | *кĕр-е-п* |
| 2 с. *ал-а-са* | *ил-е-тĕ-н* | *ил-е-н* | *кĕр-е-н* |
| 3 с. *ал-а-ды* | *ил-е-т(ĕ)* | *ил-е-т(ĕ)* | *кĕр-е-т(-ĕ)* |

## 7 §. КИЛĔШӲ ТАЙАМĔ

Тĕпчевçĕсем калана тарах, ку тайам ĕç тунипе е пулнипе килĕшнине пĕлтерет. И. П. Павлов унан пĕлтерĕшне çапларах палартать: «...калаканни кам та пулин ĕç тунине е мĕнле те пулин ĕç пулнипе килĕшнине, уншан çав ĕç кирек мĕнле результатла пулсан та пур пĕреххине, ĕçпе интересленменнине палартасси»[17]. Автор сапатлану парадигмине çапла пана:

| | Пĕрреллĕ хисеп | | | Нумайла хисеп | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *кур-ап-ин* | *ĕçл-ĕп-ин* | 1 с. | *кур-ап-ар-ин* | *ĕçл-ĕп-ĕр-ин* |
| 2 с. | *кур-аса-н* | *ĕçл-ĕсĕ-н* | 2 с. | *кур-аса-v-р* | *ĕçл-ĕсĕ-v-р* |
| 3 с. | *кур-v-ин* | *ĕçл-v-ин* | 3 с. | *кур-е-ç-ин* | *ĕçл-ĕ-ç-ин* |

Тĕпчевçĕсем (пурте тенĕ пекех) килĕшӳ тайамĕ пулас вахат форми çумне *-ин* аффикс хушаннипе пулнине тĕсенĕ. Апла пулсан, сапатлану йĕркинче çакан пек улшанусем кĕртме лекет:

1 с. *кур-а-п-ин, пул-ă-п-ин, кил-ĕ-п-ин, ĕçл-ĕ-п-ин.*

Ку ĕçхĕл тĕпĕ çумне пулас вахатан *-а(-ĕ)* аффиксĕ, унтан сапат тата килĕшӳ тайамĕн аффиксĕсем хушанса пыраççĕ. 2-мĕш сапат кӳлепинчи морфемасен пайлануlахĕ пирки тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен шухашлаççĕ. В. Г. Егоровпа И. П. Павлов чаваш чĕлхинчи килĕшӳ тайамне палартма *-ин* тата *-асĕ(-ĕсĕ)* аффикссемпе уса курнине çирĕплетеççĕ пулсан, Н. И. Ашмарин тата А. И. Иванов шухашĕпе, килĕшӳ тайамĕн 2-мĕш сапатĕнче (пĕр. хисепре) *-сан(-сĕн)* аффикс çӳрет, вал хаш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенчи *-сын, -зын* 2-мĕш сапат аффиксĕпе килĕшсе тарать: тут. *бар-ыр-сын,* чав. *кай-а-сан.*

Тутар чĕлхинче *-ыр* пулас вахат аффиксĕ чаваш чĕлхинчи *-ă-* аффикса тӳр килет.

Пĕрреллĕ хисеп кӳлепипе танлаштарсан кунта тата темĕн çитменни паларать.

| | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайла хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *кай-а-п-ин* | *кил-ĕ-п-ин* | *кай-а-п-ар-ин* | *кил-ĕ-п-ĕр-ин* |
| 2 с. | *кай-а-?-сан* | *кил-ĕ-?-сĕн* | *кай-а-?-сăр* | *кил-ĕ-?-сĕр* |

Ыйту палли выранĕнче сапат аффиксĕ кирлĕ пек.

[17] Павлов И. П. Хальхи чаваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 259 с.



Нумайла хисепри 2-мĕш сапатри *-сар(-сĕр)* аффикс тутар чĕлхинчи *-сыз* пулас вахатан сапат аффиксĕпе тӳр килсе тухать.

Килĕшӳ тайамĕн пĕрреллĕ тата нумайла хисепĕсенче 2-мĕш сапатра *-ин* аффикс тухса ӳкнĕ пулмалла.

Н. И. Ашмарин шухашĕпе, *-ин* килĕшӳ тайамĕн аффиксĕ вырас чĕлхинчен илнĕ элемент шутланать, вал вырас чĕлхинче «пусть» пĕлтерĕшпе çӳрет: *я ин пойду,* у. к. пусть я пойду.

М. Р. Федотов ку аффикс пулавĕ пирки Н. И. Ашмарин калани[18] мар, Г. И. Рамстедт анлантарни тĕрĕсрех тесе шутлать[19]. Авалхи тĕрĕк чĕлхинче тĕл пулакан *-йан, -йын* > *-ын* аффикса Г. И. Рамстедт чаваш чĕлхинчи *-ин* аффикспа çыхантарна:

ав. тĕрĕк bolajan «да стану я», чавашла *пулапин* «пусть я буду».

Ĕçе тума килĕштернине, е ĕç пултар тесе чунтан-камалтан ыйтнине килĕшӳ тайамĕн кӳлепи çумне *-ччĕ* аффикс хушса палартаççĕ: *килĕсĕнччĕ, ларасанччĕ, ларинччĕ, килинчче, ĕçлинччĕ.*

Килĕшӳ тайамĕн хирĕçлев тарамĕ, пулас вахатри пекех ĕçхĕл тĕпĕ çумне *-м* аффикс хушаннипе пулать:

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *кай-м-а-п-ин* | *пĕл-м-ĕ-п-ин* |
| 2 с. | *кай-м-ă-сан* | *пĕл-м-ĕ-сĕн* |
| 3 с. | *кай-м-ин* | *пĕл-м-ин* |

## 8 §. ĔÇХĔЛЕН ТАТАШЛАХ КАТЕГОРИЙĔ

Чаваш чĕлхе наукинче *-кала(-келе)* аффиксла ĕçхĕл кӳлеписене ку таранччен «темиçе хут форми» тенĕ[20]. Анчах та темиçе хут форми категори форми пулни çинчен асанман. Темиçе хут форми тени термин шайне ларманнине шута илсе, *-кала(-келе)* аффиксла ĕçхĕлсене эпир таташлах категорийĕн форми теме сĕнесшĕн, кĕскен: *таташлах категорийĕ.* Пĕтĕмлĕх принципне тĕпе хурсан (пур ĕçхĕлсемпе те çӳреме пултарать вал), *-кала(-келе)* аффикса самаха улаштараканнисен шутне кĕртмелле, мĕншĕн тесен форма таваканнисен самах тĕпĕ çумне çыпçанаслахĕ ансар пулать. Фор-

[18] Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка // Тр. / ЧНИИ. Чебоксары, 1976. Вып. 66. С. 66.

[19] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. С. 119—120.

[20] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 230—231 с.

ма тăваканнисен шутне, чăнах та, -*ала(-еле)* вайлату аффиксне кĕртме пулать, вăл хăш-пĕр ĕçхĕл тĕпĕсем çумне кăна хушăнать.

Ĕç тăтăшах пулнине е вăрăма тăсăлнине *-кала(-келе)* аффикса ĕçхĕл тĕпĕ çумне тӳрех хушса кăтартма пулать: *калакала, пĕлкеле, ларкала, кайкала, пахкала, чупкала, уткала, вĕçкеле, вĕренкеле, çываркала* т. ыт. те. Тĕрĕссипе илсен, чăваш чĕлхинче *-кала(-келе)* аффикса йышăнман пĕр ĕçхĕл те çук. Ку аффикс пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле ĕçхĕлсемпе ирĕккĕнех çӳрет: *юрлакала, ташлакала, пайлакала.*

Залог аффиксĕ тесе пăхнă (шкул учебникĕсенче — самах тăвакан) аффикссемпе çӳренĕ чух *-кала(-келе)* аффиксăн çакăн пек уйрăмлăхсем пуррине палăртмалла:

а) *-н(-ан, -ĕн)* аффикс *-кала(-келе)* аффикс умĕн те, ун хыççăн та тăма пултарать: *çап-ăн-кала — çап-кала-н; турт-ан-кала — турт-кала-н; тап-ан-кала — тап-кала-н.* Кун пек чухне хушăран пĕлтерĕш улшăннине те аванах сисме пулать: *Ç а п а н к а л а с а çӳре. Ç а п к а л а н с а çӳре. Шанапаван т а п а н к а л а т ь те ĕнесем т а п к а л а н с а анчах тарăççĕ;*

а) *-ш-(-аш, -ĕш)* аффикс *-кала(-келе)* аффикс хыççăн кăна тăрать: *сĕркелеш, тĕрткелеш, турткалаш;*

б) *-т, -тар, -тер, -ттар, -ттер* аффикссем яланах *-кала(-келе)* аффикс умĕнче: *турттаркала, ларттаркала, пертеркеле, ларткала.*

Ĕç хушăран кăна е тăтăшах пулса пынине палăртма *-кала(-келе)* аффикспа çыравçăсемпе сăвăçсем час-часах усă курăççĕ.

*Килĕнче вал чĕлĕм те турткалать* (Х. Уяр); *Чан сасси илтĕнкелет* (Н. Мр.).

Тăтăшлăх аффиксĕ хыççăн пур вăхăт аффиксĕсем те тăма пултараççĕ: *вулакалатăп, вулакаларăм, вулакалаттăм, вулакалăп.*

## 9 §. ВАЙЛАТУ КӲЛЕПИ

Вайлату форми *-ала(-еле)* аффикспа пулать. Тăтăшлăх категорийĕн *-кала(-келе)* аффиксе пур ĕçхĕлпе те çӳреме пултарать пулсан, вайлату кӳлепине эпир сайра-хутра кăна тĕл пулатпăр: *çап-ала, вĕт-еле, хав-ала, чав-ала, хып-ала* т. ыт. те. Пуласса *-ала(-еле)* аффикс ĕç тăтăшлăхне палăртакан *-кала(-келе)* аффиксранах пулса кайнă пулмалла. Тĕслĕхрен, караимсен тата крым тутарĕсен чĕлхисенче *ķувғала ~* чăв. *хавала.*



Пуласса та *-кала(-келе)* аффикс ĕç тăтăшлăхне палăртакан икĕ аффикс пĕрлешнипе пулнă пулмалла[21]: *-ка(-ке), -ха(-хе) + -ла(-ле).* Хальхи чăваш чĕлхинче *-ка(-ке), -ха(-хе)* аффикс çыхăнчăк самах тĕпĕсенче е тымар морфемăсенче кăна тĕл пулать; танл. азерб. *чалха ~* чăв. *чухе;* караимла *ķозға,* чăв. *хус-ка-н,* турк. *галға ~* чăв. *хум-ха-н,* ав. тĕрĕк *bulγa,* чăв. *пал-ха-т* т. ыт. те.

Вайлату аффиксĕ ытти тĕрĕк чĕлхисенче те тĕл пулать: азерб. *говала,* чăв. *хавала;* туркм. *çепеле ~* чăв. *сапала,* анчах та ун тухăçлăхĕ пысăк мар.

## 10 §. ИНФИНИТИВ КАТЕГОРИЙĔ

**Инфинитив:** ĕçхĕл тĕпĕ *+-ма(-ме)* аффикс. Ĕçхĕлĕн сăпатсăр кӳлеписен шутне эпир инфинитива (ĕçхĕлĕн палла мар кӳлепине) кĕртетпĕр. Н. И. Ашмарин ăна супин[22] ят панă, вăçĕ ушкăна пайласа кăтартнă[23].

Супин I: *-ма(-ме)* супин, автор шучĕпе, *-мах(-мех)* аффиксла ĕç ятĕнчен пулса кайнă: *каймах > кайма, килмех > килме;* ытти тĕрĕк чĕлхисенче *-мах(-мех), -мак(-мек).* Диалектсенче *каймаксерен, килмексерен* кӳлепесем пурри те *-ма(-ме)* аффикс *-мак(-мек)* аффиксран пулнине çирĕплетет. Хăш-пĕр *-ма(-ме)* аффиксла супинсем хальхи чĕлхере япала ятнех тухса кайнă: *ларма, çиме, выртма, пӳлме, ĕçме, ĕçме-çиме* т. ыт. те.

Супин II: *-машкăн-(мешкĕн)* аффиксла кӳлепесене автор çапла ят панă: *каймашкăн, килмешкĕн.* Ку кӳлепесем супин I çумне *-шăн(-шĕн)* аффикс хушăннипе пулнă.

Н. И. Ашмарин супин III пуррине те палăртать, пулас пайташ *+-шăн(-шĕн)* аффикс. Анчах та автор каланипе килĕшме йывăр.

Кунта пулас пайташ та, пирке вĕçлевлĕхĕн *-шăн(-шĕн)* аффиксĕ те хайсен кӳлепине те, пĕлтерĕшне те улăштарман, çавăнпа та *каясшăн, килесшĕн* кӳлепесене ниепле те супин (инфинитив) теме май çук.

И. П. Павлов *курса, килсе* ĕçхĕлтешсен хирĕçлев тăрамне *кур-ма-сăр, кил-ме-сĕр* кӳлепеллĕ пулнине палăртать[24]. Ку

[21] Серебренников Б. А., Гаджиева Н. З. Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. Баку, 1979. С. 241.

[22] Ашмарин Н. И. Материалы... С. 312.

[23] Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка // Тр. / ЧНИИ. Чебоксары, 1976. Вып. 66. С. 70.

[24] Павлов И. П. Хальхи чаваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 287 с.

шухашпа килӗшме йывӑр. Пирӗн шутпа, кунта *-ма(-ме)* инфинитив кӳлепи *+-сар(-сӗр)* ҫукла падеж аффиксӗ пурри куҫкӗретлӗ. Туркка чӗлхинче *-+ мак + сыз + ын* кӳлепесем пурри эпир каланине ҫирӗплетме кирлӗ[25].

Инфинитив (е супин), чӑнах та, ӗҫхӗл паллисене ытларах упрать, пӗлтерӗшӗпе те вӑл ӗҫхӗлтен аякках кайман. Ҫав вӑхӑтрах инфинитивӑн пайташсен е ӗҫхӗлтешсен пек палла ячӗн е япала ячӗн категори паллисене йышӑнас сӗмӗ ҫук. Паллах, эпир кунта *чармак, шыҫмак* самахсем туллин палла ятне куҫнине палӑртмалла; *пусма, хӳме, юрма, ҫӗртме, тӗкме, каҫма* йышши самахсем япала ячӗсем пулнине катартмалла, анчах та *утма ҫул, ларма хӗр, шартлама сивӗ, ҫӗрме пуян, сӗрме купас* йышши ҫирӗпленсе ларнӑ самах ҫавранӑшӗсенчи *-ма(-ме)* аффиксла самахсем палла ячӗсем мар, инфинитив (супин) пулнине тӳрремӗнех каламалла.

Инфинитив хайне уйрӑм тана чух ӗҫӗн тӑрамне, пулавне палӑртаймасть, ҫавӑнпа та вӑл яланах хайне анлантаракан самахсемпе ҫӳрет:

а) сапатланакан ӗҫхӗлсемпе: *ӗҫлеме кайрӗ (каять, кайӗ);*

а) пайташсемпе: *ӗҫлеме каяс (кайна, каякан);*

б) ӗҫхӗлтешсемпе: *ӗҫлеме кайса (кайсан, кайсассӑн);*

в) палла ячӗпе: *ӗҫлеме лайӑх (япах, кансӗр, йывӑр, ҫамал);*

*ҫук* татакпа: *калама ҫук, кӗме ҫук, иртме ҫук, сӳме ҫук;*

г) япала ячӗсемпе: *ута ҫулма, тырӑ вырма, ҫырла татма.*

Ҫӳлерех каланине шута илсен, ӗҫ пӗлтерӗшне ытти самахсемпе пӗрлешсен кана туллин палӑртакан *-ма(-ме), -машкӑн(-мешкӗн)* аффиксла ӗҫхӗл кӳлеписене инфинитив теме май пур.

Анчах та кунта ҫакна асӑрхаттармалла: калаҫура (диалогра) инфинитив хайне уйрӑм тарса, ӗҫ пӗлтерӗшне (мӗн ӗҫ тума тӗлленнине) палӑртма пултарать:

— Аҫта каятан?
— Ӗҫлеме.
— Мӗн ӗҫлеме?
— Акма.
— Акма? Иртерех мар-и?
— Ҫук. Ахаль те кая юлтамар. Ытти ҫулсемпе танлаштарсан халӗ шатма вахат ҫитнӗ.
— Шатма? Каҫал шатмалли ҫинчен калаҫма иртерех-ха.
— Калаҫма тесен сан чӗлху нихҫан та ывӑнас ҫук. Ӗҫлеме тесен, сана шыраса тупма ҫук.
— Ӗҫлеме! Ӗҫлеме! Ӗҫ вал шапа мар, шыва сикмест.

Инфинитив (ӗҫхӗлӗн сапатсар форми) хисеп, сапат, падеж тарах пачах улшӑнмасть. Инфинитив йышӑнакан аффикссем ҫаксем: а) ҫуклах вӗҫлевлӗхӗн кӳлепи: *пӗл-ме-сӗр, кай-ма-сар;* а) таташлах кӳлепи: *вулама-ссерен, килме-ссерен;* б) ҫителӗклӗх кӳлепи: *каймалах пур, ӗҫлемелӗх вахат.*

## 11 §. ПРИЧАСТИ (ПАЙТАШ) КАТЕГОРИЙӖ

Причасти термин выранне Тимухха Хӗветӗрӗ те, Н. И. Ашмарин та «пайташ» теме сӗннӗ. Унтанпа вахат нумай иртрӗ пулин те, аслисем каланине чӑн пурнӑҫа кӗртме эпир кая юлман тесе шутлатпар.

Пайташ тесе ӗҫхӗл паллисене ҫухатсах ҫитереймен, палла ячӗпе япала ячӗн хаш-пӗр категори формисене йышӑнакан самахсене каламалла.

Пайташӑн палӑрамӗ хаех ку ушкӑнри самахсем ӗҫхӗлпе кӑпа ҫыханманнине, ҫавна май ӗҫхӗлӗн сапатсар кӳлепи кӑна пулманнине ҫирӗплетет. Пайташ ӗҫхӗлӗн сапатсар (е сапатла мар) форми кӑна пулманнине ӗнентермелли тӗслӗхсем темӗн чухлех. Асӑрхӑр: ку таранччен «глагол сапат, хисеп, вахат, наклонени тарах улшӑннине глагол сапатлан‌авӗ» тенӗ[26]. Сапатсар (е сапатла мар) форма тени вара глагол наклонени, вахат, сапат, хисеп тарах улшӑнманнине катартакан палла пулса тамалла пулнӑ. Шел пулин те, чӗлхеҫӗсем ҫак йӗркене ҫирӗп тытса пырайман. Ака И. П. Павлов хальхи причастин катарту наклонений‌ӗ, вахачӗ пуррине палӑртать[27], пулмалли причастие «пулмалли наклонени» тет[26]. Ҫавӑнпа пӗрлех автор чӑваш чӗлхи вӗрентӗвӗнче хальхи вахатри ӗҫе пӗлтерекен причастие хальхи причасти, иртнӗ вахатри ӗҫе пӗлтерекен причастие иртнӗ вахат причастийӗ, пулас вахатри ӗҫе пӗлтерекен причастие пулас причасти теме сӗннӗ[29]. Анчах та хальхи, иртнӗ тата пулас вахатсене вӗсенче мӗнле аффикспа палӑртнине каламан. Аффиксӗ ҫук пулсан, вахатне мӗнле пӗлмелле? текен ыйту сиксе тухать. Причасти аффиксӗсем икӗ функциллӗ пулнӑ пек пулса тухать. Причастисем сапат, хисеп тарах улшан-

[25] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. С. 103.

[26] Павлов И. П. Хальхи чаваш литература чӗлхи... 235 с.
[27] Ҫавантах. 266—269 с.
[28] Ҫавантах. 278 с.
[29] Ҫавантах. 266 с.

маннине те теменшĕн ҫине тарсах ĕнентереҫҫĕ. Пулас причасти сапат, хисеп тарах улшаннине пурте пĕлеҫҫĕ пулин те.

Пайташсем пурте *-и, -скер* аффиксем йышанма пултарни, вĕсен, палла ячĕсен пекех, паларту категорийĕ пуррине пĕлтерет; *-и, -скер* аффиксла причастисем *-сем* нумайла хисеп аффиксне йышансан вĕҫленеҫҫĕ. Хальхи причастисем *-сем* аффикса тӳрех йышанаҫҫĕ, чылай чухне туллин вĕҫленеҫҫĕ, каманлах категорийĕн аффиксне те йышанма пултараҫҫĕ. Япала е палла ячĕн категори формисене те сыхласа упракан самахсене глаголан сапатсар форми тени тĕрĕслĕхе хирĕҫлени пулать. Пайташсене морфологире хайне уйрам ушкана уйарса тĕпчемелле, вĕсен уйрамлахĕсене ĕҫхĕлтен кана пухса анлантармалла мар. Чанах та, ĕҫхĕл паллисем пайташсенче лайахах палараҫҫĕ. Хирĕҫлев тарамĕнче: *кайна, каякан — кайман, курас — курмас,* пулаюлах тата пулаюсарлах тарамĕсенче те пулаҫҫĕ вĕсем: *килеес ҫук, килейнĕ, килеймен, пĕлеймен, ларайман* т. ыт. те.

Шкул учебникĕсенче «Япала паллине катартакан глаголан сапатла мар формине причасти» тесе вĕрентме хушна[30]. *Вĕренес пулать, вĕреннĕ иккен* тенĕ чухне *вĕренес, вĕреннĕ* самахсем япалан паллине катартнине мĕнле пĕлмелле-ши? Ку тата ытти нумай ыйтусене хуравлас тесен пайташсене хайсене морфологире глаголан хайне уйрам категорийĕ тесе пахма лекет.

**А. Хальхи пайташ.** Шкул учебникĕнче причастисем, сапатла формари глаголсем пекех, вахат тарах улшанма пултарнине калана, вĕсем хальхи, иртнĕ, пулас вахатсенче пулнине палартна[31]. Асархар: сапатла формари глаголсен пурин те вахат аффиксĕсем пур, причастин вахат аффиксĕсене ку таранччен пикам та палартман. Палартманни пĕтĕмпех аффикс морфемасене пĕрлештерсе ярса «хутла аффикс морфемасем» туса тултарнинчен килнĕ. Хальхи пайташан аффиксĕ *-акан(-екен)* тенĕ те, ку аффикс истори тĕлĕшĕнчен кана икĕ компонентла пулнине асархаттарна. Чаваш чĕлхинче хальхи пайташ аффиксĕ *-кан(-кен)* тесе шутласан, ун умĕн таракан *-а(-е)* — хальхи вахат аффиксĕ пулса тухать. Кана эпир ĕҫхĕлсен сапатла формисене пахса тухна чухне

[30] Павлов И. П., Игнатьева Э. Е. Чаваш чĕлхи: Морфологи 5—6 классем валли. Шупашкар, 1983. 156 с. Малтанхи каларамра урахларах сĕннĕ пулна: «Япалан паллине ҫӳ тарах катартакан глаголан сапатла мар формине причасти теҫҫĕ».

[31] Павлов И. П., Игнатьева Э. К. Чаваш чĕлхи: Морфологи. 5—6 классем валли. Шупашкар, 1983. 156 с.



те палартрамар: *кур-а-та-п, ĕҫл-?-е-тĕ-п, пĕл-е-тĕ-п.* Ку таранччен чаваш чĕлхинче хальхи вахат аффиксĕ *-т(-ат, -ет)* пулнине ĕнентернĕ, анчах та, Б. А. Серебренников калашле, ҫав *-т(<тар)* унта нимĕнле хушма пĕлтерĕш те кĕртмест[32].

Чаваш чĕлхинче те *кат-а-кан, лар-а-кан, пĕл-е-кен, вĕрен-е-кен, чухл(а)а-кан* пайташсенче *-а(-е)* кана хальхи вахат аффиксĕ, *-кан(-кен)* иртнĕ причасти аффиксĕ шутланать. Ҫак иртнĕ причасти аффиксĕ *-а-(е)* аффиксан пĕлтерĕш витĕмĕпе хальхи пайташ пулса юлна. Ҫапла вара, хальхи пайташан хальхи вахатне ытти тĕрĕк чĕлхесенче те тĕл пулакан *-а(-е)* аффикс палартать. Ку вал чĕлхе факчĕ, ана сивлеме (ку истори тĕлĕшĕнчен кана теме) нимĕнле салтав та ҫук.

Сапатла формари хальхи вахатри ĕҫхĕл пекех хальхи пайташ халь пулакан ĕҫе кана мар, ялан пулакан ĕҫе те катартма пултарать. И. А. Андреев калашле, хальхи пайташ ĕҫĕн тасамлахне палартна чух, хальхи, иртнĕ, пулас вахатсене пĕр харас катартма пултарать[33]: *пуранакан ҫурт, ҫӳрекен ҫын, паллакан ача.* Хушаран ĕҫхĕл тĕпĕпе вахат аффиксĕ хушшине *-й* пулаюлах тарамĕн аффиксĕ кĕрсе ларма пултарать:

*Ҫук, ҫук теекен — улталанĕ* (Ҫеҫп.);
Танл.: *Кушлаваш текен вуникĕ ял уйĕ* (Элкер).

Хальхи пайташ ĕҫхĕл паллисене ҫухатса ҫитерейменни чан малтан *-а(-е)* хальхи вахат аффиксĕнче куранать. Хальхи пайташан хирĕҫлев тарамĕ пуррине эпир нимĕнпе те ĕнентерме пултараймастпар. Пирĕн шутпа, *кайман, килмен* самахсем иртнĕ причастин хирĕҫлев тарамĕнче. *Каякан, килекен* самахсен хирĕҫлев тарамĕ пулна пулсан, ҫапларах янарамаллаччĕ: *каймакан, килмекен.* Анчах та чĕлхере кун пек кӳлепесем ҫук.

Хальхи пайташ палла ячĕн хаш-пĕр паллисене йышанма пултарать. Пайташ аффиксĕ хыҫҫан *-рах(-рех), -тарах(-терех)* танлаштару формин аффиксĕсем тама пултараҫҫĕ: *пĕлекенрех* е *пĕлекентерех: пĕлекентерех студент, чухлакантарах юлташ, мухтанакантарах ҫын, именекентерех хĕр,* анчах ку аффикссене пур хальхи пайташ ҫумне те ҫыпаҫтарма май килмест.

Палла ячĕн пекех, хальхи пайташан паларту категорийĕ пур. Паларту категорийĕ тетпĕр пулсан, *-и* тата *-скер* аф-

[32] Серебренников Б. А., Гаджиева Н. З. Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. Баку, 1979. С. 161.

[33] Андреев И. А. Причастие в чувашском языке. Чебоксары, 1961. С. 127.

фикссем пур (е чылай) пайташ ҫумне хушӑнма пултарнине сӑнамалла. Чӑнах та, кирек мӗнле хальхи пайташ та *-и*, *-скер* аффикспа ҫӳреме пултарать: *лараканни—лараканскер, пӗлекенни—пӗлекенскер, ыйтаканни — ыйтаканскер* т. ыт. те.

Хальхи пайташӑн япала ячӗпе пӗр килекен паллисем ҫаксем: хальхи пайташ субстантивациленет (япала ячӗленет), япала ячӗленнӗ хальхи пайташ хисеп, падеж, сӑпат тарӑх улшӑнать: *вулакан — вулакансем*;

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *вулаканам* | *вулаканамар* |
| 2 с. | *вулакану* | *вулаканар* |
| 3 с. | *вулаканӗ* | *вулаканӗ* |

Хальхи пайташ туллин вӗҫленнин тӗслӗхӗсем:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Т. | *вулакан* | *вулакансем* | *вулаканскер* | *вулаканни* |
| Қ. | *вулаканан* | *вулакансен* | *вулаканскерӗн* | *вулаканнин* |
| П. | *вулакана* | *вулакансене* | *вулаканскере* | *вулаканнине* |
| В. | *вулаканта* | *вулакансенче* | *вулаканскерте* | *вулаканнинче* |
| Т. | *вулакантан* | *вулакансенчен* | *вулаканскертен* | *вулаканнинчен* |
| П. | *вулаканпа* | *вулакансемпе* | *вулаканскерпе* | *вулаканнипе* |
| Ҫ. | *вулакансар* | *вулакансемсӗр* | *вулаканскерсӗр* | *вулаканнисӗр* |
| П. | *вулаканшан* | *вулакансемшӗн* | *вулаканскершӗн* | *вулаканнишӗн* |

Асархаттару. *Вулаканӗ, лараканӗ, пӗлекенӗ, пулашаканӗ* тенӗ чухне *-ӗ* 3-мӗш сапат аффиксӗ теме пулать; *вулаканни, лараканни, пӗлекенни* сӑмахсенчи *-и* — паларту аффиксӗ.

И. А. Андреев хальхи пайташ япала ячӗлсне пултарнине палӑртать пулин те, туллин лексикализациленнӗ (туллин япала ятне куҫнӑ) сӑмахсен шутне *ыйткалакан* сӑмаха кӑна кӗртет. Автор хальхи пайташсене ҫӗнӗ ӑнлава палӑртнӑ чухне усӑ курнине палӑртать: *айӑплакан, айӑпланакан, пайлакан, пайланакан, каскалакан* «платник», анчах та юлашкинчен панӑ сӑмахсем определенисем пулаҫҫӗ тесе, вӗсене тулли япала ячӗленменнине ӗнентерме тӑрӑшать[34].

Пирӗн шутпа, хальхи пайташ япала ятне туллин куҫнине шута илнӗ чухне, определени пулнипе пулманнине кӑна сӑнани ҫителӗксӗр. Ҫитменнине тата *каскалакан, айӑплакан, айӑпланакан* сӑмахсене ҫав халлӗнех словарь единицисем тесе реестра кӑларнӑ, апла пулин вӗсем япала ятне куҫнине ӗнентерме словаре кӗртсе ҫирӗплетнӗ.

Тулли япала ячӗленнисен шутнех ҫак пайташсене те кӗртмелле: *ишекен* (синонимӗ — *ишевҫӗ*), *вулакан, ӗҫлекен, палкакан, вылякан, пӗлекен, чупакан, ҫухӑракан, кӗтекен*

[34] Андреев И. А. Причастие в чувашском языке. Чебоксары, 1961. С. 131.



т. ыт. те. Ку сӑмахсем япала ячӗленнине вӗсен определени пуррипе ҫуккинчен мар, япала ячӗн мӗнле категори паллисене йышӑннинчен пӗлмелле: нумайлӑ хисеп аффиксне, вӗҫлевлӗх аффиксӗсене тата каманлӑх-сапат категорийӗн аффиксӗсене йышӑнаҫҫӗ пулсан, вӗсем субстантивациленни куҫ умӗнчех, вӗсене ним иккӗленмесӗрех словарь единици тесе шутлама юрать.

Б. А. Серебренников *-кан(-кен)* аффиксӑн *-кан* варианчӗ пулнине кӑтартать, тӗслӗх вырӑнне *чупкӑн* сӑмаха илсе парать[35]. Паллах, *-кан* аффиксӑн *-кӗн* алломорфӗ те пулать: *вӗҫкӗн,* анчах та ку сӑмахсене палла ячӗ тенӗ. *Хыркӑн, таркӑн* сӑмахсем — япала ячӗсем.

Хальхи пайташ *-ччӗ* аффикса йышӑнсан, чылай чухне ӗҫ мӑлтан, иртнӗ вӑхӑтра пулнине палӑртать: *Вӗсем кассерен каска ҫинче лараканччӗ; Кӑшт хӗрсен юрлаканччӗ вӑл; Вал пӗлекенччӗ ун пек хыпарсене; Қаҫ енне тавранаканччеха вӑл.*

Хушӑран хальхи пайташ *-ла(-ле)* евӗрлӗх формин аффиксне йышӑннине курма пулать: *Ыйткалаканла тӑхӑнса ҫӳренӗ; Тӑрӑшса ӗҫлекенле куранма тӑрӑшать; Тарӑн шухӑшлаканла пуҫне икӗ аллипе тытса ларать.*

**Ӑ. Пулас пайташ.** Ку таранччен пулас пайташ ӗҫхӗл тӗпӗ ҫумне *-ас(-ес)* аффикс хушӑннипе пулать, пулас вӑхӑта палӑртать, тенӗ, анчах та пулас вӑхӑтӑн аффиксне кӑтартман. Чӑваш чӗлхинчи *-ас(-ес)* аффикс пулавӗ пирки тӗрлӗрен шухӑшлакансем пур[36].

Н. И. Ашмарин шухӑшӗпе, ку аффикс *-а(-е)* деепричасти аффиксӗ ҫумне *-с*<*(-си)* 3-мӗш сапат аффиксӗ хушӑннипе пулнӑ, авалрах ку аффикс *-аса(-есӗ)* кӳлепепе ҫӳренӗ, кайрантарах *-ас(-ес)* кӑна тӑрса юлнӑ. Тутар чӗлхинче чӑваш чӗлхинчи пек *-асы, -асе* аффикс пуррине палӑртнӑ автор[37]. Л. С. Левитская, Н. И. Ашмарин каланине тӗрӗссе хурса, ку аффикс тутар чӗлхинче кӑна мар, ытти хурӑнташ чӗлхесенче те тӗл пулнине тӗслӗхсемпе ҫирӗплетет. Танл.: тутарла *барасы кон,* чӑвашла *килес е ҫитес ҫул (кун),* караимла *келаси,* казахла *келесэ* ~ чӑв. *килес* т. ыт. те.

[35] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. М., 1976. С. 87—91; Андреев И. А. Причастие в чувашском языке. Чебоксары, 1961. С. 157—159.

[36] Ашмарин Н. И. Материалы... С. 310—311.

[37] Щербак А. М. Очерки по сравнительной морфологии языков: Глагол. Л., 1981. С. 84.

Чылай тĕслĕхсем илсе панă хыççăн, тĕпчевçĕсен тĕрлĕ шухăшĕсене пĕтĕмлетсе, Л. С. Левитская *-ас(-ес)* икĕ пайран тăнине палăртать; *-а(-е)* — пулас вăхăт аффиксĕ, вăл малтанах дезидератив (ĕмĕт) пĕлтерĕшлĕ пулна; *-с* — дезидератив аффиксĕ[38].

Пирĕн шутпа, пулас пайташăн *-а* вăхăт аффиксĕ хальхи вăхăтăн *-а* аффиксĕпе хурăнташлă. А. М. Щербак кăтартнă тăрăх, пушкарт, казах, тутар, узбек, уйгур чĕлхисенче *-а* пулас вăхăта та палăртать[39]. Çак пуламах эпир чăваш чĕлхинче те асăрхатпăр.

*Хулана ыран каятăп* тенĕ чухне *каятăп* хальхи вăхăтри ĕçхĕл пулас вăхăтри ĕçе палăртать. Апла пулсан, хальхи чăваш челхинчи пулас пайташ *-а* пулас вăхăт аффиксĕ çумне *-с* пайташ аффиксĕ хушăннипе пулать теме пур май та пур. Сапатланакан ĕçхĕлсенче *-а(-е)* аффикс *-а(-ĕ)* вариантла пулса кайнине каларăмăр: пушк. *бирәм,* чăв. *пар-ă-п;* кар. *алым* ~ чăв. *ил-ĕ-п.*

Б. А. Серебренников çирĕплетнĕ тăрăх, *бирәм, алым* глаголсенче пулас вăхăтăн *-р* аффиксĕ тухса ӳкнĕ. Кун пек пулăма карачай-балкар чĕлхинчи тĕслĕхсемпе çирĕплетме пулать. Тĕслĕхрен, <р, л> сасăсемпе пĕтекен глаголсенче пулас вăхăтра *-ар(-ыр, ир)* аффиксăн <р> сасси сиксе юлнине куратпăр: *келирбиз* теес вырăнне унта *келибиз* (~ чăв. *кил-ĕ-п-ĕр*) теççĕ. Б. А. Серебренников шухăшĕпе, чăваш чĕлхинчи *-а(-ĕ)* пулас вăхăт аффиксĕ ытти тĕрĕк чĕлхисенчи *-ы, -и* пулас вăхăт аффиксĕнчен пулса кайнă[40].

Çапла вара, пулас пайташ ĕçхĕл тĕпĕ çумне *-а* пулас вăхăт аффиксĕ, ун çумне *-с* пайташ аффиксĕ хушăннипе пулать.

Паллах, чăваш чĕлхинчи *-ас(-ес)* аффикс тĕрĕк чĕлхисенчи *-ар(-ер)* пулас вăхăт аффиксĕпе хурăнташлă теме те пулать, анчах та чăваш чĕлхи *-р* чĕлхе пулнине шутласан, ку чĕлхе факчĕ мĕншĕн хирĕçле килсе тухнине ĕнентермелле.

Ĕçхĕл тĕпĕ çумне *-а+-с(-е+-с)* аффикс хушăннипе пулакан пулас пайташ, чăнах та, ĕçхĕл паллисене çухатса çитерейместь.

[38] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. М., 1976. С. 90—91.

[39] Щербак А. М. Очерки по сравнительной морфологии языков: Глагол. Л., 1981. С. 84.

[40] Б. А. Серебренников, Гаджиева Н. З. Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. С. 197—198.



Ĕçхĕл тĕпĕ çумне тĕрлĕрен тăрăм аффиксĕсем хушăнаççĕ:

а) хирĕçлев тăрăмĕн *-ма* аффиксĕ:

Пĕрне-пĕри *пăрахмасса*
Тупа туни çухалчĕ пирĕн (Ухс.);

Қашни *ăсмасра** кашăка какай турамĕ лекмест (хал. сăм.);

ă) пулаюлăх тăрăмĕн *-ай(-ей)* аффиксĕ:

Мĕншĕн каяс Юхма, ай, пасарне,
Қарымски çĕлĕк *илеес* [ил'эйэс] çук (фольк.);

в) пулаюсарлăх тăрăмĕн *-ай+-м(-ей+-м)* аффиксĕ: *Мĕншĕн ӳсес качча пулса, çамрак хĕрпе выляймас пур* (А V, 199).

Палла ячĕн пекех, пулас пайташăн *-и, -скер* аффикссемлĕ палăрту категорийĕ пур, *-и* аффиксла кӳлепесем хальхи чĕлхере час-часах тĕл пулаççĕ:

*Володьан статья çырасси те пĕтсе ларчĕ* (Емель.).

Нихаçан та Нарспи евĕр
Хĕн курман, *курмасскерсем*** (Хус.).

*Курасси, пĕлесси, каясси, ларасси, чупасси, курасскер, пĕлесскер, каясскер, ларасскер* йышши кӳлепесем *-сем* нумайла хисеп аффиксне йышăнаççĕ те туллин вĕçленеççĕ.

Çынсем ешĕл хуран ай касаççĕ,
Эпир *касассисем* те ай усеççĕ (фольк.).

Пулас пайташ *-и, -скер* аффикссем йышăнмасăрах вĕçленме пултарать, ку унăн ятпала ячĕн паллисем пуррине аса илтерет. Чĕлхеçĕсем пулас пайташ тулли мар вĕçленӳре пулнине кăтартма тăрăшаççĕ: каманлăхпа çуклăх вĕçлевлĕхĕсенче пулманнине палăртаççĕ[41]. Ку шухăш тĕрĕсех.

Енчен те авалхи карал вĕçлевлĕхĕн (оруди падежĕн) *-ăн(-ĕн)* аффиксне, А. И. Иванов калашле, каманлăх падеж аффиксĕ тесен те[42], пулас пайташ тулли мар вĕçленни курăнать: *Кĕç-вĕç тухассăн*** туйăнать* (Арт.); *Хаяр çил вĕсене хуçкаласа такассăн ласкать; Ай-хай упа пур,*

* *Парахмасса. ăсмасра* сăмахсен пайланулăхĕ питех те касакла.

** Хаш-пĕр тĕслĕхсене И. А. Андреев тата И. П. Павлов ĕçесенчен илнĕ.

[41] Андреев И. А. Причастие в чувашском языке. Чебоксары, 1961. Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 271—272 с.

[42] Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Филология. Чебоксары, 1967. Вып. 34. С. 83.

*** И. А. Андреев *тухассăн, такассăн* йышши кӳлепесем наречи пулманнине палăртать, -ан-(ĕн) карал падеж аффиксĕ пулнине çирĕплетет. (Асăнна ĕç. 161 с.).

*Тытассăнах туйăнать* (юрăран). Пирĕн шутпа, *тухассан, такассан* йышши кулепесене пулас пайташăн мĕнлелĕх категорийе тесен тĕрĕсрех пулать.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *курас* | *вулас* | *килес* |
| К. | *курассан?* | *вулассăн?* | *килессĕн?* |
| П. | *курасса* | *вуласса* | *килессе* |
| В. | *курасра?* | *вуласра?* | *килесре?* |
| Т. | *курасран* | *вуласран* | *килесрен* |
| П. | *кураспа* | *вуласпа* | *килеспе* |
| Ç. | *курассăр?* | *вулассăр?* | *килессĕр?* |
| П. | *курасшăн* | *вуласшăн* | *килесшĕн* |

*Кайса куртăм чиперех, курасса* (пар.) *шанманччĕ. Куллен тарать питĕ ир, Ĕ ç л е с р е* (выр.)—*хастар* (Элкер). *Çынсем к у р а с р а н* (тух.) *анкарти хыçĕсемпе утрĕ. Вармантан т у х а с п а* (пĕрл.) *тĕттĕмленчĕ. Вăл пĕтĕм пурлăха алла и л е с ш ĕ н* (пирке) *çунна.*

Пулас пайташ *-сем* нумайлă хисеп аффиксне тӳрех йышăнмасть, *-и, -скер* аффикссем хыççăн тин тăма пултарать вăл. Çав вăхатрах сăпат аффиксĕсене ирĕккĕнех йышăнать:

| | Пĕрреллĕ хисеп | | Нумайлă хисеп | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *курассăм,* | *пĕлессĕм* | *курассăмăр,* | *пĕлессĕмĕр* |
| 2 с. | *курассу,* | *пĕлессу* | *курассăр,* | *пĕлессĕр* |
| 3 с. | *курасси,* | *пĕлесси* | *курасси,* | *пĕлесси* |

*Курассăм* килет, *пуплессĕм* килет
Хам юратнă таванăмсемпе (юрăран).
Ан кĕттер мана, ан кĕттер, савни,
*Каласссăм* ман пур пĕр аша сăмах (юрăран);

*В ĕ р е н е с с ӳ килет пулсан, аçунтан ыйт та, шкула кил; Тем к у р а с с и пур* (А XIII, 274); *Нихçан парăнман, п а р ă н а с с а м ă р çук* (Алка); *К а я с с ă р килсен, нимĕн шухăшламасăрах — тухăр та утăр.*

Пулас пайташсенчи сăпат аффиксĕсен пĕлтерĕшĕ япала ячĕсенчи пекех конкретлах мар, ку вăл пайташăн пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшĕнчен килет. Каманлăх-сăпат аффиксĕсем япала каман пулнине конкретлă кăтартаççĕ, пайташсенче ун пекки çук: *ачам, кĕнекем, пиччем;* танл.: *пĕлессĕм, курассăм, утассăм, вулассăм.*

*Кĕнекем* тенине *ман кĕнеке* теме пултаратпăр пулсан, уйрамман илнĕ *пĕлессĕм* тенине *ман пĕлес* сăмах майлашăвĕпе палăртма май çук, анчах та *пĕлессĕм килет* тенине эпир *Ман пĕлессĕм килет* теме пултаратпăр.

Пулас пайташăн *-и* 3-мĕш сăпат аффиксне *-и* паларту категорийĕн аффиксĕнчен уйăрса илме те çамăл мар. И. П. Павлов вĕсене пĕр-пĕринчен çак йĕркепе уйăрма вĕрентет: 3-мĕш сăпатри пулас пайташ падеж тăрăх улшăнмасть тата *кил, çук* сăмахсемпе тачă çыхăнура тăрать: *Унăн Шупашкара к а я с с и к и л е т; Унăн вылямă к а я с с и те çук.* Паларту категорийĕнчи пулас пайташ хисеп тата вĕçлевлĕхсем тăрăх улшăнма пултарать: *Вăл Шупашкара к а я с с и н е эпĕ пĕлмен*[43].

И. П. Павлов кăтартнă *кил, çук* сăмахсен ретне *пур* сăмаха та кĕртмелле: *Тем к у р а с с и пур ĕнтĕ татах.*

1-мĕш сăпат, пĕрреллĕ хисеп

| | япала ячĕ | пайташ | |
|---|---|---|---|
| Т. | *кĕнекем* | *килессĕм* | *курассăм* |
| К. | *кĕнекемĕн* | *килессĕмĕн?* | ? |
| П. | *кĕнекеме* | *килессĕме?* | ? |
| В. | *кĕнекемре* | *килессĕмре?* | ? |
| Т. | *кĕнекемрен* | *килессĕмрен?* | ? |
| П. | *кĕнекемпе* | *килессĕмпе?* | ? |
| Ç. | *кĕнекемсĕр* | *килессĕмсĕр?* | ? |
| П. | *кĕнекемшĕн* | *килессĕмшĕн?* | ? |

Чăнах та, сăпат аффикслĕ пулас пайташсем вĕçленмеççĕ. Апла пулсан, И. П. Павлов калани тĕрĕсех пек, *-и* паларту категорийĕн кулеппне 3-мĕш сăпат кулепинчен вăл вĕçленни тăрăх уйăрса илме пулать теме май пур пек.

Пулас пайташ кулепи çумне *-чĕ* аффикс хушăннин тĕслĕхĕсем темĕн чухлех:

Туту çине çăра *çакасчĕ,*
Уççи манра *пуласчĕ* ун (Ухс.);
*Канаясчĕ* пуçам хĕр чĕрçи çинче,
*Илтеесчĕ* чунам ыра сассине,
*Çупарласчĕ* аллăм ылтăн какрине (Алка).

Пулас пайташсемпе çӳренĕ чух *-чĕ* аффикс чылай чух ĕмĕтленнине, ĕçе тума сунăм пуррине палăртать. Паллах, пулас пайташ пулас вăхăта палăртнине пула *-чĕ* аффиксăн иртнĕ вăхăт пĕлтерĕшĕ сĕвĕрĕлет, ĕмĕтленнине пĕлтерни малти вырăна тухать. Асăрхăр: *Эх, ç у м ă р ч ч ĕ пĕрре!.. Кашни эрнере к и л е с ч ĕ çакăн пек аша çумăр* предложенисенчи *çумăрччĕ,* (çумăр) *килесчĕ* сăмахсенче пĕр евĕрлĕ шухăшах палăрать.

Пулас пайташăн *-чĕ* аффикслă кулепи ĕмĕт тăйăмĕн çавăн пек кулепипе пĕр пĕлтерĕшлĕ те пулма пултарать: *ĕç-*

---

[43] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 94 с.

*лесчĕ — ĕçлĕттĕмччĕ, каясчĕ сан — кайăттăнччĕ, пырасчĕ ун — пырĕччĕ.*

Палăрту категорийĕн *-и, -скер* аффиксĕсем хыççăн *-чĕ* аффиксăн *-ччĕ* алломорфĕ çӳрет, анчах та вăл ун пек чухне ĕмĕтленнине мар, иртнĕ вăхăта палăртать: *Манан мĕн пур ĕмĕтĕм унпа çывахран та çывăх туслашассиччĕ, ĕмĕрсене, кун-çула пĕрле çыхăнтарассиччĕ* (Аслан); *Салтака каясскерччĕ вăл.*

Пулас пайташ *-ла(-ле)* аффикс йышăнса, еверлĕх форминче пулма пултарать: *шатарасла пăх, çĕр çурасла кашкар, курмасла çисе тултар.* Чĕлхере чылай чухне *-ла(-ле)* аффикс хирĕçлев тăрăмĕнчи пулас пайташ кӳлепи çумне хушăнать: *Асархамасла ура хурса ӳкерчĕ; Упи уйне урпа акрăм, урпи пулчĕ пулмасла* (A IV, 84). Ку предложенисенчи *асархамасла, пулмасла* самахсене *асархасла, пуласла* пайташсемпе улăштарма май çук.

**Б. Иртнĕ пайташ.** Чылай тĕпчевçĕсем ĕçхĕл тĕпĕ çумне *-нă(-нĕ)* аффикс хушăнса пулнă кӳлепесене курмасăр иртнĕ вăхăт теççĕ[44]. Кун пек калани тӳрре килмест. *Эпĕ вулана, ларнă, килнĕ, пĕлнĕ* тенĕ чухне калаканни хăй мĕн ĕç тунине курман пек пулса тухать. Курмасăр иртнĕ вăхăт тенине Б. А. Серебренниковпа И. П. Павлов тĕрĕсех сивлеççĕ[45]. Иртнĕ пайташ кӳлепи сăпат аффиксĕсем йышăнманни те ăна сăпатланакан ĕçхĕлсен системинче пăхма май çукки çинчен хыпарлать.

Иртнĕ пайташ ĕçхĕл паллисене çухатманни çакăнтан курăнать: а) хирĕçлев тăрăмĕн аффиксĕ ĕçхĕл тĕпĕ çумне хушăнать: *Касман, хуçман, сĕтел çине хуман, ăна çимен çын та çук* (сĕт).

*Уснĕ-ӳсмен* хĕрсемшĕн
Лаша кӳлсе ан тухăр (фольклор);

а) пулаюлăх тăрăмĕн *-ай(-ей)* аффиксĕн пĕлтерĕшĕ часчасах туллин палăрмасть: *калана — калайнă самах; вĕреннĕ — татах вĕренейнĕ.* Поэзире тата юрăсенче, Н. И. Ашмарин калашле[46], *-ай(-ей)* аффикс поэзи эрешлевĕ пек пулса юлать;

[44] Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. Ч. III. С. 102—106; Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. М.: Наука, 1976. С. 73—74.

[45] Серебренников Б. А. О значениях прошедших времен в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1958. Вып. 16. С. 182; Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 75—76 с.

[46] Ашмарин Н. И. Заметки по грамматике чувашского языка // Тр. / ЧНИИ. Чебоксары, 1976. Вып. 66. С. 54.



б) пулаюсарлăх тăрăмĕнчи кӳлепесем ĕç пулманнине «çемçен» палăртаççĕ: *курман — курайман; пĕлмен — пĕлеймен; килмен — килеймен; вĕренмен — вĕренеймен.*

Пулаюсарлăх тăрăмĕнчи кӳлепесем халăх самахлăхĕнче япала ячĕ вырăнне çӳреме пултараççĕ: *Йатайман пысак тытнă* **тет.**

Иртнĕ пайташăн аффиксĕ пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле ĕçхĕл тĕпĕсем çумне ирĕккĕнех хушăнать: *çапнă — çапаçнă, куçнă — куçарнă, ернĕ — ертнĕ, хĕрнĕ — хĕртнĕ* т. ыт. те.

Паллă ячĕн пекех иртнĕ пайташăн палăрту категорийĕ *-и, -скер,* аффикспа пулать: *кайнă — кайни — кайнăскер; пĕлнĕ — пĕлни — пĕлнĕскер; кĕтнĕ — кĕтни — кĕтнĕскер; вулана — вулани — вуланăскер* т. ыт. те. Тĕрĕссипе, *-и, -скер* аффикссене йышăнман иртнĕ пайташ чĕлхемĕрте çук та. Палăрту категорийĕнчи иртнĕ пайташ *-сем* нумайла хисеп аффиксне йышăнать, вĕçленет:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *вулани* | *вуланисем* | *вуланăскер* |
| К. | *вуланин* | *вуланисен* | *вуланаскерĕн* |
| П. | *вуланине* | *вуланисене* | *вуланăскере* |
| В. | *вуланинче* | *вуланисенче* | *вуланăскерте* |
| Т. | *вуланинчен* | *вуланисенчен* | *вуланаскертен* |
| П. | *вуланипе* | *вуланисемпе* | *вуланăскерпе* |
| Ç. | *вуланисĕр* | *вуланисемсĕр* | *вуланăскерсĕр* |
| П. | *вуланишĕн* | *вуланисемшĕн* | *вуланаскершĕн* |

Асархаттару. *Вуланаскерне, вуланăскерĕнче, вуланаскерĕнчен...* теме май пур.

Хирĕçлев тăрăмĕнчи иртнĕ пайташ та палăрту категорийĕнче чухне вĕçленет.

Каларамăр ĕнтĕ, кун пек чухне çӳлерех асăннă пайташсен япала ячĕленес (субстантивациленес) сĕм пур.

Иртнĕ пайташ *-и, -скер* аффикссем йышăнмасăр та вĕçленме пултарать, вĕçленӳ кун пек чух тулли мар пулать. Тулли мар вĕçленӳре пулни иртнĕ пайташăн япала ячĕн хаш-пĕр паллисем пуррине хыпарлать:

Т. *курна: Эпĕ ку çынна тахçан, таçта курнă;*
К. *курнăн:* ?
П. *курнăна:* ?
В. *курнăра:* ?
Т. *курнăран: Курнăран ăна паллатăп та;*
П. *курнăпа: Курнăпа курманни пĕрех мар* (диал.);
Ç. *курнăсăр: Курнасăр пуçне ас туса юлмалла* (калаç.);
П. *курнашан: Курнăшăн укçа илмеççĕ.*

Хирĕçлев тăрăмĕнчи иртнĕ пайташ вĕçленнин тĕслĕхĕ:

Т. *курман: Курман çынна куртăм;*
К. *курманан: Курманан курасси килнĕ тет* (калараш);
П. *курмана: Ене курмана качака* (калараш); *пул курмана шурпи;*

В. *курманра:* ?
Т. *курманран: К у р м а н р а н аш ҫунать;*
П. *курманпа: Пӗлтӗртенпе ана к у р м а н п а пӗрех;*
Ҫ. *курмансар:* ?
П. *курманшан: Эсӗ к у р м а н ш а н эпӗ айапла-и?*

Хирӗҫлев тарӑмӗнчи иртнӗ пайташ хушӑран *-ла(-ле)* евӗрлӗх формине йышӑнма пултарать: *пӗлменле калаҫать, курманла ҫиет.*

Ку таранччен ним сӑлтавсӑрах *-на+-ҫем(-нӗ+-ҫем)* иртнӗ причастин тӑсамлӑх кӑлепине деепричасти тенӗ. Кун пек чухне *-на(-нӗ)* аффиксӑн кӑлепи те, пӗлтерӗшӗ те ҫухалмасть. Асӑрхар: *ала кӗнӗҫем* тенӗ чухне ӗҫ иртнӗ вӑхӑтра пуҫанса калана саманта ҫити тӑсалать, ӗҫ тӑсамлӑхне *-ҫем* аффикс палӑртать.

Ҫавӑн пекех *-наранпа(-нӗренпе)* аффикса та деепричасти аффиксӗ теме май ҫук; *-нӑ(-нӗ)* аффиксӑн пӗлтерӗшӗ ҫухалманни ҫак тӗслӗхсенче аван куранать: *Атте хулана к а й н а р а н вара икӗ кун ҫитрӗ.* Ку предложенири *кайнаран* сӑмах туху падежӗнче. *Атте хулана к а й н а р а н п а икӗ кун ҫитрӗ* тенӗ чухне, пӗлтерӗшӗ улшӑнманнине кура, *кайнаранпа* сӑмах иртнӗ пайташах шутланма тивӗҫ, анчах та *-ранпа(-ренпе)* тухупа пӗрлелӗх вӗҫлевлӗхӗсен аффиксӗсене деепричасти аффиксӗ теме ҫук: асӑрхар: *пӗчӗкренпе, ачаранпа, ӗлӗкренпе, авалтанпа, ӗнертенпе, пӗлтӗртенпе* сӑмахсене наречи тенӗ, анчах *кайнаранпа* сӑмаха никам та халиччен наречи темен.

Иртнӗ пайташӑн кирек мӗнле тӑрӑмри кӑлепи те *-ччӗ* аффикс йышӑнма пултарать: *курначчӗ, курманччӗ, курайманччӗ; кӗнеччӗ, кӗменччӗ, кӗрейнӗччӗ, кӗртейнӗччӗ, кӗртейменччӗ* т. ыт. те. Кун пек чухне *-ччӗ* аффикс йышӑнна кӑлеписем иртнӗ вӑхӑта палӑртассипех ҫыхӑнна, анчах та *курначчӗ, ларначчӗ, пӗлнӗччӗ* сӑмахсене курмасӑр иртнӗ вӑхӑтра теме май ҫук. *«Вутла арман» ҫинчен калаҫнине эпӗ темиҫе хутчен те и л т н ӗ ч ч ӗ* (Талвир) предложенири *илтнӗччӗ* тенине курмасӑр иртнӗ вӑхӑтра теме май ҫук.

**В. Яланхи пайташ:** ӗҫхӗл тӗпӗ + *-а* + *-н(-е* + *-н)* аффикс. Яланхи пайташ кӑлепи ӗҫхӗл тӗпӗ ҫумне *-а(-е)* хальхи вӑхӑт тата причастин *-н* аффиксӗ хушӑннипе пулать[47]. Чӑваш чӗлхинчи *-а* + *-н(-е* + *-н)* аффикс яланхи ӗҫе кӑтартнипе пӗрлех, хальхи ӗҫе те аванах палӑртать, эпир ана *-а*+*-кан(-е* + *-кен)* кӑлепепе улӑштарма пултарнинчен те сисетпӗр:

*Анан* хӗвелӗн шевлипе
Ҫуталчӗ ун типшӗм пичӗ (Хус.).
Танл.: *А н а к а н хӗвелӗн шевлипе...*

Пуҫне ҫӗклерӗ
Сак ҫинче *выртан* салтак (Ухс.).
Танл.: *Сак ҫинче в ы р т а к а н салтак.*

Ҫӑлерех илнӗ тӗслӗхсенче И. А. Андреев *-ан(-ен)* аффиксла сӑмахсем *-акан(-екен)* кӑлепеллисемпе шӑп та шай пӗр пӗлтерӗшлӗ пулнине палӑртать[48].

Туркка, азербайджан, гагауз чӗлхисенче, чӑваш чӗлхинчи пек, *-ан(-ен)* аффиксла яланхи пайташа хальхи причасти теҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем хальхи ӗҫе палӑртаҫҫӗ; *алан, йазан, учан, ишлейән* — хальхи причастисем; вӗсене чӑвашла икӗ тӗрлӗ палӑртма май пур: *алан—илен, илекен; йазан—ҫыран, ҫыракан; учан — вӗҫен, вӗҫекен; ишлейән — ӗҫлен, ӗҫлекен.*

Хирӗҫлев тарӑмӗнчи яланхи пайташ кӑлепи хальхи тата иртнӗ пайташсенни пекех пулнине палӑртрӑмар ӗнтӗ: *ларан — ларман, ҫиен — ҫимен, пӗлен — пӗлмен, ҫӳрен — ҫӳремен, ӳсен — ӳсмен.*

*К у р а н куҫа курми туса ҫӳре; К у р м а н куҫпа тем ҫине те пырса тӑрӑнӑн; К у р а й м а н куҫпа нумаях вулаймӑн.*

Ытти пайташсемпе танлаштарсан, яланхи пайташ *-и* палӑрту аффиксне йышӑнманни сисӗнет, *-скер* аффикс та пит сайра ҫыпҫӑнать ун ҫумне:

Алхасса *выртанскере*
Ҫупӑрлать вӑл юрласа (Хус.).
Танл.: Алхасса *выртаканскере...*

Хай анлантаракан япала ячӗсӗр тӑнӑ чух яланхи пайташ япала ячӗ вырӑнӗнче ҫӳрет, нумайлӑ хисеп аффиксне йышӑнать, вӗҫленет. Чылай пайташсем хальхи чӗлхере туллин япала ячӗленнӗ: *автан, суран, пиҫен, чикен, ҫӗмрен, ӳсентӑран, иртен-ҫӳрен, килен-каян, таван* т. ыт. те.

Яланхи пайташӑн юрилӗх форми *-ҫи* аффикспа пулать, *киленҫи, каянҫи, ӗҫленҫи ту.*

**Г. Пулмалли пайташ:** ӗҫхӗл тӗпӗ +*-малла(-мелле).* Хаш-пӗр тӗпчевҫӗсем *-малла(-мелле)* аффиксла кӑлепесене

[47] Серебренников Б. А., Гаджиева Н. З. Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков.. С. 231.

[48] Андреев И. А. Причастие в чувашском языке. С. 156.

пулмалли тайăм (наклонени) тесшĕн[49]. Пулмалли тайăм пултăр тесен, *-малла(-мелле)* аффикс хыççăн сăпат аффиксĕсем хушăнмалла, анчах ун пекки чăваш чĕлхинче çук, çавăнпа та ку кÿлепеллĕ самахсене эпир пайташсен ретнех кĕртетпĕр. Туркка, азербайджан чĕлхисенче вĕсен сăпат, хисеп аффиксĕсене йышăнаççĕ, çавăнпа та вĕсене пулмалли (долженствовательное) наклонени теççĕ*. Туркмен, гагауз чĕлхисенче, чăваш чĕлхинчи пекех, *-малы* кÿлепеллĕ самахсем сăпат аффиксĕсене йышăнмаççĕ:

| | чăвашла | | туркменла | |
|---|---|---|---|---|
| 1 с. | *ман* | | *мен* | |
| 2 с. | *сан* | | *сен* | |
| 3 с. | *ун* | *çыр-малла* | *ол* | *яз-малы* |
| 1 с. | *пирĕн* | | *биз* | |
| 2 с. | *сирĕн* | | *сиз* | |
| 3 с. | *вĕсен* | | *олар* | |

Тĕрĕк чĕлхисенчи *-малы(-мели)* аффикс тата чăваш чĕлхинчи *-малла(-мелле)* аффикс мĕнле пулса кайни халĕ те паллă мар[50]. Çавăнпа та ăна эпир пĕр аффикс тесе шутлатпăр. Истори тĕлĕшĕнчен, паллах, кунта икĕ хайне тивĕç пĕлтерĕшлĕ аффикс пулма пултарнă. Хальхи чĕлхере *-ма(-ме)* инфинитив аффиксĕ çумне сулану аффиксĕ *-лла(-лле)* е *-алла(-елле)* хушăннă тесен, ку кÿлепен сулану пĕлтерĕше çук. Е *-ма(-ме)* глаголтан пулнă япала ячĕ çумне *-ла(-ле)* самах е форма тăвакан аффикс хушăннă тесен, геминаци пулăмне ăнлантарма май пур пулсан та, *-ла(-ле)* аффиксăн пĕлтерĕшĕ паларманни куç умĕнчех.

Ытти пайташсен пекех, пулмалли пайташăн вăхăт пĕлтерĕшĕ пур: вăл ĕç пулас вăхатра пулмаллине пĕлтерет, çавна май *-ас(-ес)* аффикслă пайташа аса илтерет: *тухмалла çын — тухас çын, каймалла хĕр — каяс хĕр.*

Пĕтĕмĕшле илсен, ку пайташ, ыттисем пекех, ĕçхĕл, паллă ячĕн паллисене упрать, çавăнпа та эпир ăна инфинитивăн вăл е ку кÿлепи теместпĕр.

Чăваш чĕлхинчи пулмалли пайташăн хирĕçлев тăрамĕ морфологи (аффикс) мелĕпе пулаймасть, эпир ăна синтаксис мелĕпе кăна палăртатпăр: *пăхмалла мар, каламалла мар, килмелле пулман* т. ыт. те. Çав вăхăтрах туркка, азербайджан, гагауз чĕлхисенче хирĕçлев тăрамне *-ма(-ме)* аффикспа та палăртаççĕ: гагаузла: *йаз-ма-малы,* чăвашла: *çырмалла мар.*

Пулаюлăх тăрамĕ те хушăран тĕл пулкалать: *тытанса тăраймалла, пĕлеймелле япала.*

Пулмалли пайташăн япала ячĕн паллисем çук тесен те юрамалла, анчах та паллă ячĕн паллисем уççăнах палăраççĕ; пулмалли пайташ *-рах(-рех)* аффикс йышăнса, танлаштару форминче пулма пултарать: *ăнланмалларах кала; хăрамаллăрах вырăна çитрĕмĕр* т. ыт. те.

Пулмалли пайташ палăрту категорийĕ *-и, -скер* аффиксĕсемпе пулать: *тĕлĕнмелле — тĕлĕнмелли — тĕлĕнмеллескер; сивĕнмелле — сивĕнмелли — сивĕнмеллескер; вуламалла — вуламалли — вуламалласкер; -и, -скер* аффикслă пулмалли пайташсем *-сем* нумайлă хисеп аффиксне йышăнаççĕ, вĕçленеççĕ.

Хушăран *-и* аффикслă пулмалли причастисем япала ячĕленеççĕ те хисеп, падеж тăрах япала ячĕ пекех улшăнаççĕ: *тупмалли, туртмалли* т. ыт. те. Хушăран *-и* аффикслă пулмалли пайташсем хăйсене уйрăм çÿремен определенисем вырăнĕнче тăраççĕ, ун пек чухне вĕсене çирĕпленсе ларнă самах майлашăвĕ е термин шайĕнче пăхма пулать; *канмалли кун, çĕр улми калармалли машина, çам таптармалли цех.*

Хушăран *-и, -скер* аффикссене юнашар та уса кураççĕ: *Вăл пурпĕрех килĕнчен каймалли çын, хăйсен çурчĕпе пуранаймаллискер* (Илп.).

**Д. Пули-пулми пайташ:** ĕçхĕл тĕпĕ *+-и.* Ку таранччен ăна пулма пултаракан причасти тенĕ. Кун пек калани тĕрĕслĕхе çывăх тăмасть, мĕншĕн тесен хальхи чĕлхере çирĕплетсе калани (пулма пултаракан ĕçе палăртни) хăйне тĕллĕн пачах тĕл пулмасть. Фольклор произведенийĕсенче те хирĕçлев тăрамĕ яланах çирĕплету кÿлепипе юнашарах е тепĕр самах урлă тăрать: *кури куçа курми ту, илти хăлха илтми пуле.*

*Пиçи-пиçми* çырлашăн
Чĕрес çакса ан тухăр (фольк.).

Хирĕçлев тăрамĕнчи çак пайташ хăйне уйрăм та тăма пултарать:

Тытса *чарми* лашине
Çапса *утми* турамар (фольк.).

[49] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. Морфологи. Шупашкар, 1965. 278—280 с.; Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. Ч. 3. С. 120—122.

* Сапатланакан самахсен тĕслĕхĕсене М. Р. Федотован çулерех асаннă ĕсĕнче пана (121 с.).

[50] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. М., 1976. С. 95.

Пули-пулми пайташ пулаюлах тараменче сайра кана тел пулать. Пулаюсарлах тарӑмӗнчи тӗслӗхсем пур: *куҫпа вичейми хирсем, утса тухайми вӑрмансем, тытса чараими утсем, ниҫта чикейми вӗчӗ.*

> *Юрлайи* те *юрлайми* лармашкан
> Эпирех те чӗнмен хана мар (фольк.).

*Пули-пулми* тени хаех чӗлхере пайташ шайӗнче тарать:

> Хата хапхи санчарла,
> *Пули-пулми* уҫаймасть (фольк.).

Ку предложенири *пули-пулми* самах япала ячӗн пӗлтерӗшӗпе тарать. Япала ячӗ выранӗнче таракан *пули-пулми* пайташ нумайла хисеп аффиксне йышанать, веҫленет: *пули-пулми — пули-пулмисем:*

Т. *пули-пулми: Пули-пулмисем татса параймаҫҫӗ кана;*
Ҫ. *пули-пулмин: Ҫашни пули-пулмин самахне ан итле;*
П. *пули-пулмие: Пули-пулмие ан шан;*
В. *пул -пул ире:* ?
Т. *пули-пулминчен: Ҫашни пули-пулмирен, пули-пулминчен ыйтаймӑн;*
П. *пули-пулмипе: Пули-пулмипе калаҫмасть вал;*
С. *пули-пулмисӗр: Пули-пулмисӗр турех ан сик;*
П. *пули-пулмишӗн: Ҫашни пули-пулмишен тарашмалли ҫук.*

Фольклорта *пули-пулми* пайташ кӳлепи иртнӗ пайташ кӳлепипе ылмашнине курма пулать:

| | |
|---|---|
| *Пиҫи-пиҫми* ҫырлашан | *Ӳси-ӳсми* хӗрсемшӗн |
| (*Пиҫнӗ-пиҫмен* ҫырлашан) | (*Ӳснӗ-ӳсмен* херсемшӗн) |
| Ҫӗрес йатса ан тухар. | Лаша кулсе ан тухар (фольк.). |

Тата тепӗр уйрамлаха асархама пӗлмелле: *-акан(-екен)* аффиксла хальхи пайташ хирӗҫлев тараменчи *пули-пулми* пайташпа пӗлтерӗш хирӗҫлевӗнче тарать: *шарша пелекен пулчӗ — шарша пӗлми пулчӗ; хула куранакан пулче — хула курӑнми пулчӗ.*

*Пули-пулми* пайташ *-скер* аффикс йышанма пултарать: *Лаши те юрти-юртмискер мар — урхамах! Пули-пулмискерсемпе каласса ҫавар пылакне те ан яр* (калаҫ.).

И. П. Павлов катартна тарах, ку пайташ кӳлепи ҫумне таплаштару аффиксӗ те хушанма пултарать[51]. *Хуиха-суиха пулсан, ана ҫуртра чи малтан анланса илетчӗ, сисенмирех ирттерсе яма тарӑшатчӗ* (Илпек).

[51] Павлов И. П. Хальхи чаваш литература чӗлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 283 с.



Ҫулерех пахса тухна пайташсем пурте ӗҫхӗлӗн хаш-пӗр паллисене упраҫҫӗ, ҫав хушарах вӗсенче палла тата япала ячӗн паллисем те пур. Ҫавна кура вӗсене пайташсен ретне кӗртетпӗр, те ӗнтӗ.

Ку таранччен *-малах(-мелӗх)* аффикспа пулна кӳлепесене «ҫителӗклӗх причастийӗ» тенӗ. Хальхи чӗлхере «ҫителӗклӗх причастийӗ» тенӗ кӳлепесем паларту категорийӗнче пулмаҫҫӗ, хисеп, вӗҫлевлӗх тарах улшанмаҫҫӗ, каманлах категорийӗн аффиксӗсене йышанмаҫҫӗ, ҫаванпа та сайра-хутра уйрам падежсенче пулнишӗнех эпир ана пайташсен ретне кӗртейместпӗр. Асанна *-малах(-мелӗх)* аффикс икӗ пайран тарать: *-ма(-ме)* — инфинитив аффиксӗ +*-лӑх(-лӗх)*. Ҫулерех эпир *-лах(-лӗх)* ҫителӗклӗх кӳлепин аффиксӗ пулнине палартрамӑр, *кӗпелӗх ҫитса, хапхалах юпа,* ҫаванпа та *ҫимелӗх, выртмалӑх* йышши кӳлепесене инфинитиван ҫителӗклӗх форми теме сӗнетпӗр. Маларах асанна салтавсене пулах *-анҫи(-енҫи)* юрилӗх причастине яланхи причастии юрилӗх кӳлепи тесен, тӗрӗсрех пулать; *-ан+-ҫи (-ен+-ҫи)* аффикс пӗр аффикс марри куҫ умӗнчех.

## 12 §. ӖҪХӖЛТЕШ (ДЕЕПРИЧАСТИ)

**Ӗҫхӗлтеш** тени иккӗмӗшле самах: **ӗҫхӗл** (глагол) + **-теш** аффикс; *-теш* аффикс пӗр япала тепӗр япалапа ҫыввххине палартать, апла пулсан, вал ӗҫхӗлтен пулнине тата морфологи тӗлӗшӗнчен унпа ҫыввххине пӗлтерет.

Ку таранччен деепричасти (ӗҫхӗлтеш) тесе сапат, хисеп, вахат, наклонени тарах улшанман, ӗҫӗн паллине катартакан, предложенире обстоятельство пулакан глагол формине калаҫҫӗ, тенӗ[52].

Шкул учебникӗсенче[53] ун пирки ҫапла калана: «Тӗп ӗҫпе ҫыханна хушамла ӗҫе пӗлтерекен глаголан сапатсар формине деепричасти теҫҫӗ».

Тӗслӗх выранне *Ҫырма юхать кӗрлесе* предложение илнӗ: *юхать* — тӗп ӗҫе пӗлтерет, *кӗрлесе* — хушамла ӗҫе. Анчах та кун пек калани пур чухне те тӳрре килмест.

*Хараса кайнӑ* тенӗ чухне *хараса* ӗҫхӗлтеш тӗп ӗҫе палартать, *кай* — пулашу глаголӗ. Кун пек тӗслӗхсен хисепне

[52] Павлов И. П. Хальхи чаваш литература чӗлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 286 с.
[53] Павлов И. П., Игнатьева Э. Е. Чаваш чӗлхи: Морфологи 5—6 классем валли. Шупашкар, 1983. 169 с.

ӳстерме те пулать: *варҫса пӑрах, пӑха хур, ӑшатса яр, курса юл. кулса илет, юратса каймасть, ҫураҫса хур* т. ыт. те.

Деепричасти (ӗҫхӗлтеш) сӑпат, хисеп, вахӑт тӑрах улшӑнмасть тени пур чухне те тӗрӗсе килмест: *-са(-се)* аффиксла ӗҫхӗлтеш вахӑт, сӑпат, хисеп тӑрах улшӑнать, ун ҫинчен эпир кайрантарах тӗплӗнрех калӑпӑр.

Ку ӗҫре эпир ӗҫхӗлтешсене икӗ ушкӑна уйӑрса пӑхмастпӑр, мӗншӗн тесен «хальтерех пулса кайнӑ деепричастисем» тени вырӑнлӑ мар, ҫавӑнпа та *-а(-е), -са(-се), -сан(-сен)* аффиксла ӗҫхӗлтешсем пирки калаҫни кӑна тӗреслӗхе ҫывӑх теме май пур.

**А. -а(-е) аффиксла ӗҫхӗлтеш: ӗҫхӗл тӗпӗ +-а(-е).** Ку ӗҫхӗлтеш пур тӗрӗк чӗлхисенче те пур. Чӑваш чӗлхинче хупа сасӑпа пӗтекен ӗҫхӗлсенче вӑл пурри тӳрех курӑнать; <а. е> уҫа сасӑсемпе пӗтекен сӑмахсенче хуплашу пулать.

А. М. Щербак шухӑшӗпе[54], *-а(-е)* аффикс чи малтанах ӗҫ ячӗ тӑвакан формант пулнӑ. Кайрантарах вӑл хальхи вӑхӑта палӑртма пуҫланӑ, ҫав вӑхӑтрах деепричасти аффиксӗн функцине те пурнӑҫлама пуҫланӑ.

Ҫак шухӑшах Л. С. Левитская та ҫирӗплетет, анчах вӑл Г. И. Рамстедт каланине шута илсе, ӗҫ ятӗнчен хальхи причасти пулнӑ текен шухӑша тӗпе хурать[55].

Пирӗн шутпа, *-а(-е)* ӗҫхӗлтеш аффиксӗ *-а(-е)* хальхи вӑхӑт аффиксӗпе хурӑнташлӑ текен шухӑша ырламалла. Анчах та хальхи чӑваш чӗлхинче *-а(-е)* ӗҫхӗлтеш аффиксӗн хальхи вӑхӑт пӗлтерӗшӗ паларсах каймасть. Н. И. Ашмарин каланӑ тӑрах[56], *-а(-е)* аффиксла ӗҫхӗлтеш *тар* пулӑшу ӗҫхӗлӗпе пӗрлешсе хальхи вӑхӑта пӗлтерекен пайташ тӑвать: *сӑва тӑран, паллӑ тӑран, кура тӑран.*

*Хупана тӑран* кӗлете
*Уҫала тӑран* турӑмар (фольк.);

*Курман чипере ан ил, к у р а т ӑ р а н усалах ил,* теҫҫӗ (каларӑш).

Кунта шухӑшламалли пурах. Хальхи вӑхӑт кӳлепи те, чӗлхеҫӗсем ӗнентернӗ тӑрах, ҫак модельпех пулса кайнӑ: *ҫыратап < ҫыра тӑран эп.* Апла пулсан, авалхи чӑваш чӗлхинче хальхи вӑхӑта ӗҫхӗлӗн хальхи вӑхӑт аффиксӗпе тата *тӑран* пайташпа палӑртнӑ теме пулать: *киле тӑран, лара*

[54] Щербак А. М. Очерки по сравнительной морфологии тюркских языков: Глагол. Л.: Наука, 1981. С. 85.

[55] Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. М., 1976. С. 101—102.

[56] Ашмарин Н. И. Материалы... С. 327.



*тӑран, пӗле тӑран.* Кайрантарах вӗсем ҫумне сӑпат аффиксӗсем хушӑнма пуҫланӑ та, *тӑран* сӑмах кӗскелсе *-та* аффикс пулса юлнӑ, *эп>-п* аффикса куҫнӑ. *Таран* пайташсӑр сӳрекен ытти кӳлепесем кайрантарах ӗҫхӗлтеш пулса кайнӑ:

Арпалахри тамана
Арпа *чава* ларать-ҫке (фольк.);
Карташ тулли лашаҫам
*Карӑна, пӑха* юлать-ҫке (фольк.).

Ӗҫ ячӗ пулнӑ *-а(-е)* аффиксла кӳлепесем хальхи чӑваш чӗлхинче япала ячӗ шутланаҫҫӗ: *ака, ыра, виле, турта, виҫе* т. ыт. те.

Хальхи чӗлхере *-а(-е)* аффиксла ӗҫхӗлтеше пӗр хут калани пачах тӗл пулмасть тесен те юрать, унпа яланах икӗ хут каланӑ сӑмах пек уса курӑҫҫӗ: *пӑха-пӑха илет, кала-кала кӑтартать, уха-уха пырать* т. ыт. те.

Пурте Тури касалла
*Хашка-хашка* чупаҫҫӗ (К. Ив.).

Вайлату кӳлепи (е категорийӗ) ӗҫхӗлтеш ҫумне *-ах(-ех, -х)* аффикс хушӑннипе пулать, ӗҫхӗлтеш *-а(-е)* аффикспа пӗтнине кура, чӗлхере *-х* алломорф хуҫаланать:

Пирӗн тавансем пит аякра:
*Килех* тарар, *килех* тарар, ан сивӗнӗр (фольк.).

Вайлату аффиксӗ хушӑннӑ ӗҫхӗлтеш ӗҫ пӗрмай пулнине е вӑхӑтӑн-вӑхӑтӑн пулнине палӑртать: *Ваттисем в и л е х пыраҫҫӗ, ҫамраккисем ҫ у р а л с а х тараҫҫӗ; Кучченеҫ к и л е х тӑтар, эпир ҫ и е х тӑрар.*

Илсе панӑ тӗслӗхсенче вайлату татӑкӗ хушӑннӑ ӗҫхӗлтеш хыҫҫӑн чылай чухне *тӑр* пулӑшу ӗҫхӗлӗ тӑнине курма пулать.

Эпир пӑхса тухакан ӗҫхӗлтеш хушӑран *-рах(-рех)* танлаштару аффиксне йышӑнать: *Хуралӑрах кайнӑ, хӗстеререх тыт, хӑрарах тӑр, парӑнарах пар.*

Танлаштару аффиксӗ ҫумне *-па(-пе)* пӗрлелӗх вӗҫлевлӗхӗн аффиксӗ хушӑнма пултарать: *кантӑрла ҫитерехпе, тӗттӗм пуларахпа, хула патне ҫитерехпе* т. ыт. те.

**Ӑ. -са(-се) аффиксла ӗҫхӗлтеш: ӗҫхӗл тӗпӗ +-са(-се).** Ку ӗҫхӗлтешӗн аффиксӗ мӗнле пулса кайни халӗ те паллӑ мар. Ытти тӗрӗк чӗлхисенче кун пек кӳлепеллӗ ӗҫхӗлтеш ҫукки те чӗлхе историкӗсемпе этимологсен ӗҫне каткӑслатать,

Чӑваш чӗлхе наукинче **-са(-се)** аффиксла кӳлепесене **курмасӑр иртнӗ вӑхат** тесе палӑртас туртӑм пур[57]. Хаине уйрӑммӑн илнӗ чухне *-са(-се)* аффиксла ӗҫхӗлтешсен тури калаҫура иртнӗ вӑхӑта палӑртас сӗмӗ пур, анчах та ку кӳлепесем сӑпат аффиксне йышӑнаймаҫҫӗ:

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| эпӗ<br>эсӗ<br>вӑл | — кайса | | эпир<br>эсир<br>вӗсем | — кайса |

Ҫитменнине тата, сӑпатланакан глаголсемпе ҫыхӑнсан, *-са(-се)* аффиксла ӗҫхӗлтешсем иртнӗ вӑхӑта кӑна мар, хальхи тата пулас вӑхӑтри ӗҫе те палӑртма пултараҫҫӗ: *Кайса пӑх-ха вӗсене, мӗн те пулин еҫлеҫҫе-и е ҫук? Вуласа тух та каласа пар; Станокӗ пӗр веҫемсер ӗҫлесе тарать.*

Хушӑран *-а(-е)* аффиксла ӗҫхӗлтеш вырӑнне *-са(-се)* аффикслине пӗлтерӗше пач улӑштармасӑр кӗртсе лартма пулать:

Арпалахри тамана
Арпа *чава* (*~чавса.* — В. С.) *ларать-ҫке* (фольк.);

Ҫав вӑхӑтрах чылай чухне хирӗҫле ылмашу тума май ҫукки те куҫ умӗнчех:

Чашки-чашки шур шарҫа
*Тапса* (*тапа?* — В. С.) такса пулмаре.
Аякра куранать пӗр вут ҫути:
*Ҫитсе* (*ҫите?*) пулӗ-ши, ут пулсан? (фольк.).

Умлӑ-хыҫлӑ пулакан ӗҫе палӑртасси *-са(-се)* ӗҫхӗлтешрен кӑна килмест, ытларах чухне сӑпатланакан ӗҫхелтен е ытти ӗҫхӗлтешсемпе пайташсенчен килет: *вуласа пӗтеретеп, вуласа пӗтертӗн, вуласа пӗтерӗп, вуласа пӗтерес, вуласа пӗтернӗ.*

Пит сайра *-са(-се)* аффикс умӗн пулаюлӑх тӑрӑмӗн *-ай(-ей)* аффиксне асӑрхама пулать: *курайса юлайман, чатайса ларайман, юратайсах кайман.*

Танлаштару форминче пулма пултарни те *-са(-се)* аффиксла ӗҫхӗлтеше *-а(-е)* аффикслипе ҫывӑхлатать:
*сыхланарах пурӑн — сыхлансарах ҫӳре, пурӑн, тар;*
*тарӑшарах ҫыр — тарӑшсарах вӗрен-ха, ҫыр, вула, еҫле.*

Чи касакли кунта ҫапах та ку таранччен *-са(-се)* аффиксла ӗҫхӗлтешсем сӑпат, хисеп тӑрах улшӑнманнине ҫинче тӑрсах вӗрентни тесе шутламалла. Чӗлхе факчӗсене хирӗҫ-

57 Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. Ч. 3. С. 106—109.



лесех, малтан иртнӗ вӑхӑт аффиксӗ *-сатт(-сетт)* теме хушнӑ, тӗрӗссипе ку аффикс пӗр аффикс мар: кунта пӗр харӑс *-са-т-та* виҫӗ аффикс пуррине хальхи чӗлхерех палӑртмалла: *-са* — ӗҫхӗлтеш аффиксӗ, *-т* — пӗрре иртнӗ вӑхӑтри *таран* пайташран кӗскелсе аффикса тухнӑ элемент, *-тӑ* — ытти тӗрӗк чӗлхисенчи *эди* ҫителӗксӗр ӗҫхӗлпе тӳр килекен аффикс. Тутар чӗлхинче *-са(-се)* аффикса *-ып(-ип)* ӗҫхӗлтеш аффиксӗ тӳр килнине сӑнасан, эпир ҫапла танлаштарса кӑтартма пултаратпӑр: чӑвашла: *ҫыр-са-т-та-м* ~ тутарла: *ялып-? — иде-м,* икӗ чӗлхере те *-м* — сӑпат аффиксӗ.

Ҫанла вара, чӑваш чӗлхинче малтан иртнӗ вӑхат ӗҫхӗлӗн мар, ӗҫхӗлтешӗн пулса тухать:

| | Пӗрреллӗ хисеп | Нумайла хисеп |
|---|---|---|
| 1 с. | *ҫыр-са-т-та-м* | *ҫыр-са-т-та-м-ар* |
| 2 с. | *ҫыр-са-т-та-н* | *ҫыр-са-т-та-v-р* |
| 3 с. | *ҫыр-са-ч-чӗ-v* е *ҫыр-са-ч-ч-ӗ* | *ҫыр-са-ч-чӗ-v-ҫ* е *ҫыр-са-ч-ч-ӗ-ҫ* |

Сӑпатлану парадигми пуррипе *-са(-се)* аффиксла ӗҫхӗлтешсене ӗҫхӗлӗн сӑпатсӑр форми теме май килмест.

Хаш-пӗр тӗрӗк чӗлхисенче *-ып(-ип)*, *-ыб(-иб)* аффиксла ӗҫхӗлтешсем сӑпатланни те вӗсене уйрӑм ушкӑнра пӑхмалли ҫинченех калать; *(ып(-ип), ыб(-иб)* аффиксла ӗҫхӗлтешсем чӑваш чӗлхинчи *-са(-се)* аффиксла ӗҫхӗлтешсемпе пӗлтерӗш енчен пӗр пек). Узбекла:

| | Пӗрреллӗ хисеп | Нумайла хисеп |
|---|---|---|
| 1 с. | *ёз-иб-ман* | *ёз-иб-м-из* |
| 2 с. | *ёз-иб-ди* | *ёз-иб-си-з* |
| 3 с. | *ёз-иб-ди* | *ез-иб-ди-лар* |

Н. И. Ашмарин кӑтартнӑ тӑрӑх, чӑваш чӗлхинче ҫакӑн пек сӑпатлану та пулнӑ[58]:

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *кайсатап (кайсап)* | *кайсатпӑр* |
| 2 с. | *кайсатан* | *кайсаттар* |
| 3 с. | *кайса* | *кайса* |

Автор ҫавӑнтах хирӗҫлев тӑрӑмӗнчи кӳлепесен сӑпатланӑвне те парать. Хальхи чӗлхере кун пекки ҫуккине кура эпир ӑна тишкерӗве кӗртместпӗр.

Автор хайӗн Словарӗнче *-са(-се)* аффиксла ӗҫхӗлтешсен ҫакӑн пек сапатлану кӳлепесене те палӑртать: *кайсарӗ* (кай-са-р-ӗ. — *В. С.*), *кайсаран, кайсарар, кайсарӗҫ*. Кунтах скобкӑра ҫапла ҫырса хуни пур: *кайса* сӑмахӑн вӗҫне ҫитиех ӑнлантарса ҫитерме май ҫук формисем (A V, I).

58 Ашмарин Н. И. Материалы.., С. 388.

Ĕçхĕлтешĕн темиçе иртнĕ вăхăт кӳлепи çумне *-ччĕ* аффикс хушăнсан та вăхăт пĕлтерĕшĕ çавах юлать:

| | | |
|---|---|---|
| 1 с. | *вуласаттамччĕ* | *вуласаттамарччĕ* |
| 2 с. | *вуласаттанччĕ* | *вуласаттарччĕ* |
| 3 с. | ? | |

Хальхи чĕлхере ку ĕçхĕлтешĕн сăпатланакан кӳлеписем хирĕçлев тăрăмĕнче пулăсшăн марри сисĕнет.

Темиçе иртнĕ вăхăт кӳлепине малтан иртнĕ вăхăт кӳлепипе танлаштарсан çака курăнать:

| | |
|---|---|
| кил-е-т-тĕ-м | кил-се-т-тĕ-м |
| лар-а-т-тă-м | лар-са-т-тă-м |
| кил-е-т-тĕ-н | кил-се-т-тĕ-н |
| лар-а-т-тă-н | лар-са-т-тă-н. |

Икĕ вăхăт кӳлепинче те пĕр пек элементсем шăйлашăнса тăрать.

Енчен те ĕçхĕл тĕпĕпе юнашар тăракан *-а(-е)* аффикса хальхи вăхăт аффиксĕ тесен, *-са(-се)* аффикса та вăхăт аффиксĕ темелле пулать;

**Б. -сан(-сен) аффиксла ĕçхĕлтеш: ĕçхĕл тĕпĕ +-сан(-сен).** Ĕçхĕлтешсене танлаштарсан, кӳлепе ӳсĕмлĕхне курма пулать: малтанах *-а(-е)* аффикс кăначчĕ, кайрантарах вăл *-са(-се)* кӳлепеллĕ пулни курăнчĕ, халĕ ак *-са(-се)+-н* аффикс хушăннă пек пулса тухать. Тен, ку чĕлхе аталанăвĕн тӳпинчен пăхсан тĕрĕсех те мар пулĕ, анчах та вĕсен пусмаланса пыракан кӳлеписене ылмаштарсан, пĕлтерĕш улшăнманнине те палăртрăмăр эпир.

Çулçи *çупа* татăр-и,
Улми *ташла* татăр-и!

Танл.: Çулçи *çупса* татăр-и,
Улми *ташласа* татăр-и!

Малалла та çак йĕркепех тишкерӳ тусан, *-сан(-сен)* аффиксран *-сассăн(-сессĕн)* пулса тăнине асăрхатпăр, анчах кӳлепи вăрăмланнишĕн каллех вĕсене пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен уйрăмлатма пур чухне те май килмест: *çураçсан кайран — çураçсассăн кайран; ăна курсан — ăна курсассăн; пĕртак тăхтасан — пĕртак тăхтасассăн.*

Тĕслĕхсене çакăн пек шăйлаштарса тухса танлаштарсан, ирĕксĕрех çакăн пек ыйту çуралать: *-а(-е), -са(-се), -сан(-сен), -сассăн(-сессĕн)* аффикссем пурте пĕр тĕпрен хунаса аталанса пыман-ши? Ытти тĕрĕк чĕлхисенчи *-а(-е)* аффикс чăваш чĕлхинчи *-а(-е)* аффикспа пĕлтерĕш тата кӳлепи енчен тӳр килни тата *-са(-се), -сан(-сен), -сассан-(-сессĕн)* ĕçхĕлтеш аффиксĕсем тĕрĕк чĕлхисенче çукки те çав шухăш



патнех çитерет. Анчах та чĕлхеçĕсем ку аффикссем мĕнле пулса кайнине тĕрлĕрен ăнлантараççĕ[59].

Пайташсемпе ĕçхĕлтешсене танлаштарса пăхсан çакă курăнать: ĕçхĕл паллисене çухатса çитереймен (ĕçхĕл тĕпĕ çумне тĕрлĕ тăрăм аффиксĕсем хушăнаççĕ, вăхăт тăрăх улшăнаççĕ, анчах та пурте сăпатланмаççĕ), çав вăхăтрах япала ячĕпе палла ячĕн категорийĕсене йышăнакан сăмахсене пайташ терĕмĕр. Пайташсемпе танлаштарсан, ĕçхĕлтешсен ĕçхĕл паллисем ытлараххине палăртмалла: *-са(-се)* аффиксла ĕçхĕлтеш сăпатланать, палла ячĕн хăш-пĕр паллисем кăна палараççĕ, япала ячĕн паллисем пачах çук тесен те юрамалла; *-са(-се)* аффиксла ĕçхĕлтеш сăпатланăвĕ (вăхăт, сăпат, хисеп тăрăх улшăнни) ĕçхĕлтешсене ĕçхĕлĕн сăпатсăр форми теме ирĕк памасть, çавна май ĕçхĕлтешсем морфологире хăйне уйрăм категори тăваççĕ тесе шутлама май пур.

Ку таранччен хальтерех пулса кайнă деепричастисем тесе пăхнă кӳлепесене ниепле те ĕçхĕлтешсем тесе пăхма май килмест, мĕншĕн тесен вĕсем морфемăсем тĕлĕшĕнчен питĕ уçăмла пайланаççĕ, çавăнпа та «хутла аффикссем» пуррине ниепле те ĕнентерме май çук: *-иччен* аффиксла деепричастисем тесе пăхнă кӳлепесем *-и + -ччен* аффикссем пуррипе паларăççĕ: *-и* — пули-пулми пайташ (халиччен ăна пулма пултаракан причасти тенĕ) аффиксĕ, *-ччен* — тăсăмлăх кӳлепин аффиксĕ, апла пулсан *кил-и-ччен, лар-и-ччен, калаç-и-ччен* сăмахсен пайланулăхне кура, вĕсене пайташăн тăсăмлăх форми темелле; *-ма+-(с)серен, -ме+-(с)серен): каймассерен, килмессерен* — инфинитивăн тăташлăх кӳлепи; *-на + +-çем (-нĕ+-çем): кайнăçем, килнĕçем* — иртнĕ пайташăн тăсăмлăх кӳлепи; *-нă+-ран + -па(-нĕ + -рен + -пе): кайнăранпа, килнĕренпе* — иртнĕ пайташăн тăсăмлăх кӳлепи; *-у + -çăн(-ӳ + -çĕн): кайуçăн, килӳçĕн* — ĕç ячĕн тăсăмлăх кӳлепи.

Тĕпчевçĕсем, темĕншен-çке, *-у(-ӳ)* аффиксла ĕç ячĕ авалхи чăваш чĕлхинче кăна пулнине кăтартма тăрăшаççĕ, анчах та ĕç ячĕн мĕнле грамматика паллисем пулнине (пуррине) кăтартма хальхи чĕлхе тĕслĕхĕсене тишкереççĕ[60]. Пирĕн шут-

[59] Павлов И. П. К вопросу о происхождении двух деепричастных аффиксов в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1956. Вып. 14. С. 255; Левитская Л. С. Историческая морфология чувашского языка. М., 1976. С. 101—106; Федотов М. Р. Чувашский язык в семье алтайских языков. Чебоксары, 1986. С. 106—109.

[60] Павлов И. П. О двух тенденциях развития суффиксальных морфем в чувашском языке // Вопросы фонетики, грамматики и фразеологии чувашского языка. Чебоксары, 1983. С. 101—102.

па, ĕç ячĕ авалхи чăваш чĕлхинче кăна пулнă тени *-уçан- (-ÿçĕн)* пĕр аффикс шайĕнче тăнине ĕнентерме кирлĕ вĕсене. Ку шухăшăн тĕшши çук; мĕншĕн тесен *-у(-ÿ)* аффиксла ĕç ячĕсем хальхи чăваш чĕлхин морфологи тишкерĕвне кĕресçĕ, çавăнпа та вĕсене уйрăммăн илсе тĕпчемелле.

## ĔÇ ЯЧĔ

**Ĕç ячĕ:** ĕçхĕл тĕпĕ + *-у(-ÿ)* аффикс. Хальхи чăваш чĕлхинче ĕçхĕл тĕпĕ çумне *-у(-ÿ)* аффикс хушăннипе япала ячĕсем тата ĕç ячĕсем пулаççĕ. Вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме пĕлмелле:

1) *-у(-ÿ)* аффикслă япала ячĕсем: *сыру, пĕлÿ, пуху, çĕнтерÿ.* Ку япала ячĕсем сăпат, хисеп, вĕçлевлĕхсем тăрăх туллин улшăнаççĕ: *çыру — çырусем: çыравăм, çырăву, çыравĕ; çыравĕн, çырава, çырура, çырусăр, çырушăн;*

2) *-у(-ÿ)* аффикслă ĕç ячĕсем нумайлă хисепре пулмаççĕ, камăнлăх-сăпат категорийĕн аффиксĕсене йышăнмаççĕ, тулли мар вĕçленÿре пулаççĕ, тĕрĕсрех: хăш-пĕр падеж аффиксĕсене кăна йышăнаççĕ.

Н. И. Ашмарин тури калаçура ку кÿлепесем сахалрах тĕл пулни çинчен çырать[1] те çакăн пек танлаштарулла тĕслĕхсем илсе парать: *çул çÿре — çул çÿрÿ* (хальхи чĕлхере: *çулçÿрев); тырă ак — тыра аку; çынтан вăтан — çынтан вăтану.* Унтах уйрăм тĕслĕхсем те пур: *тавтапуç калу, калаçу тăву пулмарĕ.* Çавăнтах, тепĕр параграфра, *-у(-ÿ)* аффикслă ĕç ячĕн *-çăн(-çĕн)* аффикслă уйрăм форми пурри çинчен çырать: *кунтан тыра тиесе таврануçан...; эсĕ малтан килÿçĕн.*

Çав ĕçрех автор ĕç ячĕсем *çитĕ* ĕçхĕлпе çÿренин тĕслĕхĕсене илсе парать: *Вĕсемпе лапартатса лару çитĕ ĕнтĕ; Çитĕ ĕнтĕ чей ĕçÿ; Çитĕ сана çÿрÿ; Çитĕ çывăру*[2].

Хайĕн тепĕр ĕçĕнче Н. И. Ашмарин диалектсенче ĕç ячĕпе анлă усă курнине палăртать: *лару, килÿ, тăру, ĕçÿ, çийÿ, илÿ.* Кĕрешĕн тутарсен чĕлхинче *алыу, килиу* сăмахсенче

[1] Ашмарин Н. И. Опыт исследования чувашского синтаксиса. Симбирск, 1923. Ч. 2. С. 267.
[2] Çавăнтах. С. 138.



*ыу, иу* дифтонгсем пуррине палăртнипе пĕрлех автор чăваш чĕлхинчи *-у(-ÿ)* аффикс çав дифтонгсенчен пулса кайма пултарнине калать. Ытти хурăнташ чĕлхесенче çав дифтонг выранне *-ыг(-иг)* аффикс çÿрет: *алыг, калиг.* Автор шухăшĕпе, чăваш чĕлхинчи ĕç ячĕсен ĕçхĕл паллисем сахал, çавăнпа та вĕсене япала ячĕсем теме сĕнет[3]. Пирĕн шутпа, ĕç ячĕсене морфологире уйрăм ушкăн (класс) туса пăхмалла. Хальхи чăваш литература чĕлхинче ку кÿлепесем анлă çÿренине И. П. Павлов ĕненмелле çырса кăтартать, анчах вăл та, Н. И. Ашмарин пекех, *-у(-у)* аффикс иккĕмĕшле япала ячĕ тунине палăртать[4].

Ĕç ячĕ япала ячĕн категори формисене йышăнайманни ăна иккĕмĕшле япала ячĕ теме май памасть.

Асăрхаттăру. *Савва хĕрсе вылу та, калаçу та* (Ухс.) йĕркесенче *вылу* — ĕç ячĕ, *калаçу* — япала ячĕ. Танлаштарса пăхар: *калаçу-сем—вылусем(?), калаçавăм — вылавăм(?), калаçăвĕ — вылăвĕ(?), калаçава — вылăва(?), калаçура — вылура(?).* Ытти паллиллĕ тĕслĕхсене чĕлхере çук кулепесем тесе анланмалла.

Ĕç ячĕсем сăмах майлашăвĕсенче пулма пултарнине палăртмалла: *пула тыту, киле çÿрÿ, вĕçсе пыру.*

Лаши *вĕçсе пырупа*
Пичĕ-куçĕ пит усал (К. Ив.).

Г. Т. Тимофеевăн «Тăхăръял» ĕçĕнче çакăн пек тĕслĕхсене пана: *таркăн курану, ача-пача улаштару, тупăк çакансă тăру, арçури кăтăклу, упа тухса улу, лаша çитерÿ, упăте тыту, мĕн таву, çар иртÿ, çын вилÿ, çынна çарату, çĕнĕ çĕре куçару, çул çинче харату, кимĕ сĕтĕрÿ, укçа тупу, укçа кăлару, вăрман касма каю, çармасла вĕренÿ, хăна килÿ, «пула тутарĕ» кăшкăру* (61—62 с.).

Чăнах та, ĕç ячĕсем хăш-пĕр вĕçлевлĕх аффиксĕсене йышăнаççĕ:

Хапха тăрри шартлатать
Саламатпа *çапупа* (К. Ив.);
Кĕç машина таралтатрĕ:
Тулан-шалăн *çÿрÿпе* (Хус.).

Пушкăрт чĕлхинче те *-у(-ÿ)* аффикслă ĕç ячĕ пуррине палăртаççĕ, çав ĕç ячĕсем падеж тăрăх вĕçленме, камăнлăх категорийĕн аффиксĕсене йышăнма пултарнине, изафет конструкцийĕсенче пĕрремĕш тата иккĕмĕш компонент выранĕнче тăма пултарнине палăртнă: йәшәу бәхете «счастье житья», *кешенең атлауы* «ходьба человека».

[3] Ашмарин И. Н. Заметки по грамматике чувашского языка. С. 66—67.
[4] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 284—286 с.

Чăваш чĕлхинчи ĕç ячĕпе танлаштарсан, пушкăрт чĕлхинчи ĕç ячĕн функцийĕсем анлăрах: чăваш чĕлхинчи ĕç ячĕн аффиксла хирĕçлев тăрăмĕ çук, пушкăрт чĕлхинче пур: *алмау* «ан ил», *татмау* «ан тыт».

Чăваш чĕлхинчи ĕç ячĕсен хисепне сахал тесе калама май çук. Л. П. Сергеев хатĕрленĕ «Чăваш чĕлхин тӳнтерле словарĕнче» *-у(-ӳ)* аффиксла ĕç ячĕсене çителĕклех пана: *таву, кулу, пулу, вану, авлану, вăтану, тавăну, хĕнӳ-çапу, чупу, кару, тару, хăру, хуру, тату, чату, турту, хушу, шеллӳ, хĕнӳ, çӳрӳ, сисӳ, сӳтӳ, вĕтӳ, пĕтӳ*[5] т. ыт. те.

Паллах, хăш-пĕр ĕç ячĕсене хирĕçле тăракан япала ячĕсене те тупма пулать: *кулу-кула, пулу-пулăм, тӳсӳ-тӳсĕм* т. ыт. те.

Тĕрĕссипе илес пулсан, ĕç ячĕн *-у(-ӳ)* аффиксĕ глагол тĕпĕ çумне тӳрех мар, ытти аффикссем хыççăн та хушăнма пултарать:

а) *-кала(-келе)* тăтăшлăх категорийĕн аффиксĕ хыççăн:

Манра — йалт эс пани,
Ĕçченлĕх, чыслах, хаваслах,
Хурланса та *илкелу* (Хус.).

Л. П. Сергеевăн «Чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕнче» *чупкалу* сăмаха тата (135 с.) *-кала(-келе) +-ш+-ӳ* модельпе пулнă çак сăмахсене пана: *перкелешӳ, тĕрткелешӳ* (137 с.). Тĕлĕнмелле пулин те, çак словарьтех *сас-тăву, йĕрĕнӳ-тăву* сăмахсене мăшăр сăмах пек пана. Пирĕн шутпа, ку сăмахсем мăшăр сăмах картине кĕреймеççĕ. *Хĕнӳ-çапу, вăрçă-харкашу, вĕрӳ-суру* сăмахсене мăшăр сăмахсем теме пулать.

## ĔÇХĔЛÇУМĔ (НАРЕЧИ)

**Ĕçĕн е паллăн (хушăран япалан) паллине пĕлтерекен, туллин вĕçленмен, хисеп тăрăх улшăнман, сăпатланман, хушăран палăрту тата танлаштару формисенче пулакан сăмахсене ĕçхĕлçумĕ теме пулать.**

Туллин улшăнман сăмахсем ретне кĕнĕшĕнех ĕçхĕлçумĕн «морфологи паллисем çук тесе» калама йывăртарах. Ĕнчен те ĕçхĕлçумĕсен морфологи паллисем çук пулнă пулсан, эпир вăл сăмахсене морфологири сăмахсен ушканĕнче (пуплев пайĕсен шутĕнче) пахайман пулаттамăр.

Ĕçĕн паллине кăтартакан ĕçхĕлçумĕсене кирлĕ чухлех кăтартма пулать: *аран утать, сасартăк килет, харăс утать, тăрук вăранать, хуллен ухать, ялан вулать, пĕрмай çырать, кĕç çитет* т. ыт. те.

Паллăн паллине палăртакан ĕçхĕлçумĕсен хисепĕ, ĕçĕн паллине кăтартаканнисемпе танлаштарсан, пысăках мар: *ялан кăвак, кашт хĕрлĕ, пĕртак сивĕ, ытла хитре, пушшех илемлĕ* т. ыт. те.

Япалан паллине вăра уйрăм ĕçхĕлçумĕсем кăна палăртма пултараççĕ: *кашт укçа, хуллен ута* т. ыт. те.

Ĕçхĕлçумĕсен морфологири улшăнăвне сăнаманнипе часчасах *хĕлле, çулла, кĕркунне, çуркунне* сăмахсене ĕçхĕлçумĕсем тесе пăхас туртăм пур. Ку шухăша сивлеме лекет, мĕншĕн тесен çав сăмахсем туллин вĕçленеççĕ, нумайла хисеп аффиксне йышăнаççĕ, апла пулсан, вĕсем — япала ячĕсем. Тĕслĕх выранне Н. И. Ашмарин словарĕнчи *хĕлле* словарь статйине илсе пăхар. Унта *хĕлле(-хĕл)* тенĕ. Ку *хĕлле* сăмах *хĕл* япала ячĕпе пĕр пĕлтерĕшлĕ тенине пĕлтерет. Халĕ сăмаха Н. И. Ашмарин мĕнле вĕçлевлĕхсенче панине сăнапăр: *Х ĕ л л е н те, ç у л л а н та хайсенĕн арасна тĕсли пит нумай; Х ĕ л л е н е кĕриччен пур хваттер те хатĕр пулать; Х ĕ л л е р е н п е турăсарсен ячейки ĕçлет; Х ĕ л л е п е çулла; Тирĕслĕке х ĕ л л е с ĕ р такмаççĕ; Х ĕ л л е ш ĕ н хатĕрлесе хучĕç* (A XVII, 19). Кунта эпир вырăн тата туху вĕçлевлĕхĕнче пулакан тĕслĕхсене уйрăммăн тупаймарăмăр. Вĕсене хамăртан хушса калама пулать: *Х ĕ л л е р е н вăра хулара пуранать.*

Çитменнине тата *çулла, хĕлле* сăмахсем нумайлă хисепре те пулаççĕ: *Х ĕ л л е с е н ч е варман касма çӳрет; Тутарсем унта выртма, çитерме килеççĕ ç у л л а с е н ч е* (A VII, 223).

Çапла майпа, *хĕлле, çулла, кĕркунне, çуркунне* сăмахсене ĕçхĕлçумĕ теме май çук. Қамăнлăх категорийĕнче пулайм̧аççĕ пулсан та, вĕсене япала ячĕ тесех пăхма лекет.

Çавăнпа пĕрлех *К ă н т а р л а с е м тĕлнелле ĕçе вĕçлетпĕр* теме те пулать, ку сăмах нумайла хисеп аффиксне йышăннине асăрхатпăр. *Кăнтăрла* сăмах тĕрлĕрен кӳлепеллĕ пулма пултарать: *кăнтăрланалла* (сулăну кӳлепи); *кăнтăрларах* (танлаштару форми), *кăнтарлахи* (палăрту форми), танл.: *ирхи, каçхи, çĕрлехи, хĕллехи, çуллахи, кĕркуннехи, çуркуннехи; кăнтăрлачен* (тăсăмлăх форми).

[5] Сергеев Л. П., Тихонов А. Н. т. ыт. те. Чăваш чĕлхин тӳнтер словаре. Шупашкар, 1985. 135—138 с.

*Кантӑрла, ҫӗрле, хӗлле, ҫулла* сӑмахсене *-ла(-ле)* аффикс хушанса пулнӑ ӗҫхӗлҫумӗсем тени тӗрӗсе килмест. Кусемпе пӗрлех *ачалла, майралла, ҫӗнӗлле, кивӗлле, иккӗлле, виҫҫӗлле, пирӗнле, хамӑрла* йышши сӑмахсене те ӗҫхӗлҫумӗсем теместпӗр: *ачалла* — япала ячӗн евӗрлӗх формиӗ, *ҫӗнӗлле* — паллӑ ячӗн, *иккӗлле* — хисеп ячӗн, *хамӑрла* — местоимении евӗрлӗх формисем.

Халӗ ӗҫхӗлҫумӗсен «морфологи паллисем ҫук» тенине хирӗҫлекен тӗслӗхсем татах та пуррине пӑхӑр. Вӑхӑт ӗҫхӗлҫумӗсем пурте тенӗ пекех тулли мар вӗҫленӳре пулаҫҫӗ — хӑш-пӗр падеж аффикссене кӑна йышӑнаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне хӑшӗ-пӗрисем нумайлӑ хисеп аффиксне йышӑнса тӗрлӗ пӗлтерӗше палӑртма пултараҫҫӗ. Вӑхӑт ӗҫхӗлҫумӗсем ҫумне хушакан *-сем* аффикс вӑхӑт пӗлтерӗшне ҫывхартса кӑтартать: *каҫалсем, каҫалсенче* (А VII, 191), *ыррансенче* (А III, 56), *ӗнерсенче* (А IV, 119).

Вӑхӑт ӗҫхӗлҫумӗсенчен чылайӑшӗ палӑрту форминче пулать: *ыранхи, паянхи, ӗнерхи, хальхи, авалхи, каҫалхи, пӗлтӗрхи, кӗҫӗрхи, паҫархи* т. ыт. те. Вӗсенчен хӑшӗ-пӗрисем танлаштару форминче пулаҫҫӗ: *ӗлӗкрех, ӳлӗмрех, анчахрах, паҫартарах, вӑрарах, пӗркунтарах.*

Вӗсемех тасамлӑх кӳлепин аффиксне те йышӑнаҫҫӗ: *паянччен, ыранччен, кӗҫӗрччен, хальччен, паҫарччен, виҫминеччен* т. ыт. те. Тухупа пӗрлелӗх падежӗсен аффиксӗсене йышӑнсан вӗсем вӑхӑт тасамлӑхне палӑртаҫҫӗ: *ӗнертенпе, пӗркунтанпа, паҫӑртанпа, ӳлӗмренпе, авалтанпа, ӗлӗкренпе* т. ыт. те.

*Ыран, паян* ӗҫхӗлҫумӗсем тулли мар вӗҫленӳре пулаҫҫӗ, каманлӑхпа выран вӗҫлевлӗхӗсенче тӗслӗхсем ҫукки кӑна вӗсене япала ячӗ теме чӑрмантарать:

| | | |
|---|---|---|
| Т. | *ыран* | *паян* |
| К. | ? | ? |
| П. | *ырана* ан хавар; | *паяна* ҫитсе те |
| В. | ? | ? |
| Т. | *ырантан* тепӗр кунне; | *паянтан* пуҫласа |
| П. | *ыранпа* паян; | *паянпа* ыран |
| С. | *ыransар* каймасть; | *паянсар* кун ҫук-им? |
| П. | *ыраншӑн* ан кулян; | *паяншӑн* туленӗ эпӗр. |

Палӑрту форминчи ӗҫхӗлҫумӗсем тулли вӗҫленӗве лекеҫҫӗ:

| | | | |
|---|---|---|---|
| Т. | *паҫархи* | *пӗлтӗрхи* | *кӑҫалхи* |
| К. | *паҫӑрхин* | *пӗлтӗрхин* | *кӑҫалхин* |
| П. | *паҫӑрхине* | *пӗлтӗрхине* | *каҫалхине* |
| В. | *паҫархинче* | *пӗлтӗрхинче* | *каҫалхинче* |
| Т. | *паҫархинчен* | *пӗлтӗрхинчен* | *каҫалхинчен* |
| П. | *паҫархипе* | *пӗлтӗрхипе* | *каҫалхипе* |
| Ҫ. | *паҫӑрхисӗр* | *пӗлтӗрхисӗр* | *каҫалхисӗр* |
| П. | *паҫархишӗн* | *пӗлтӗрхишӗн* | *каҫалхишӗн* |



Ҫапла майпа вӑхӑт ӗҫхӗлҫумӗсен «морфологи паллисем ҫук» теме пултараймастпӑр.

Халӗ мӗнлелӗх ӗҫхӗлҫумӗсене илсе пӑхӑр. Ку ушкӑнри ӗҫхӗлҫумӗсем танлаштару аффиксне йышӑнма пултараҫҫӗ: *апларах, ҫапларах, капларах, еплерех, хуллентерех, ерипентерех, тӑрукрах.*

Хӑш-пӗр виҫе ӗҫхӗлҫумӗсен те танлаштару формиӗ пулать: *ытларах, тӳпемирех, пӗртакрах.*

Ӗҫхӗлҫумӗсен вайлату тата иртнӗ вӑхӑт категорийӗсем пурри те ӗҫхӗлҫумӗсен морфологи паллиех пулать. Вайлату категорийӗнчи кӳлеписем *-ах(-ех, -х)* аффикс хушаннипе пулаҫҫӗ: *аранах, хӑвартах, сасартаках, тӑрукках, каштах, питех, йӑлтах, партаках, самаях, халех, ӗлӗкех, авалах, пасӑрах, юриех* т. ыт. те.

Иртнӗ вӑхӑта *-ччӗ(-чӗ)* аффикс палӑртать: *ҫаплаччӗ, аранччӗ, хавартчӗ, ытлаччӗ, пайтахчӗ, паянччӗ, ӗнерччӗ, ӗлӗкчӗ.*

Морфологи паллисене кӑтартнӑ хыҫҫӑн ӗҫхӗлҫумӗсене ушкӑнсем ҫине пайласа тухӑр:

1. Мӗнлелӗх ӗҫхӗлҫумӗсем: *апла, капла, апла-капла, ҫапла, епле, аран, ерипен, хӑвӑрт, сасартак, тарук, варах, тӗк, танч, чӗвен, кӗрет, пуҫхӗрлӗ, ҫарран, таташ, шав* (калаҫать), *самай, харам.*

Н. И. Ашмарин *апла, капла, ҫапла* сӑмахсене местоименисем тенӗ[1]. Кайрантарахри тепӗр ӗҫӗнче местоименисен ретне *епле* сӑмаха та кӗртнӗ[2]. Ку сӑмахсем местоименисем пек вӗҫленмеҫҫӗ, нумайлӑ хисепре пулмаҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсене ӗҫхӗлҫумӗсем тени тӗрӗсрех. Чӑнах та, *-и, -скер* аффиксем йышӑнсан, вӑл сӑмахсем вӗҫленеҫҫӗ: *апли, капли, ҫапли, апласкер, ҫапласкер, еплескер.*

2. Вӑхӑт ӗҫхӗлҫумӗсем: *паян, ӗнер, кӗҫӗр, пӗркун, халь, ӗлӗк, авал, кӑҫал, пӗлтӗр, час, ӳлӗм, анчах, вара, ӗнтӗ, кӗҫ, паҫар, куллен, ҫуллен, виҫмине, таватмине, ултмине, тин, кӗҫ-вӗҫ, пирвай, таташ.*

3. Виҫе ӗҫхӗлҫумӗсем: *йӑлт, кашт, партак, пач, пушшӗ, ытла, пайтах, вуҫ, пит(ӗ), тӳпеми, шаламиˮ.*

---

[1] Ашмарин Н. И. Материалы... С. 194.
[2] Он же. Заметки по грамматике чувашского языка. С. 47.

4. Выран ĕçхĕлçумĕсем: *лере, лерен, ниçта, ниçтан, унта, унтан, кунта, кунтан, ăçта, аçтан.*

5. Пиркепе тĕллев ĕçхĕлçумĕсем: *ахаль, ытахальтен, юри, ятне, калах.*

## АФФИКС ХУШĂНСА ПУЛНĂ ĔÇХĔЛÇУМĔСЕМ ПИРКИ

1. Чăваш чĕлхинче ĕçхĕлçумĕсем *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффикспа пулнине палăртнă чух çак япаласене шута илмен: а) ку аффикс темиçе е чылай пуплев пайĕнчи сăмахсемпе çÿреме пултарать, сăмах тăвакан нихăш аффиксăн та ун пек «анлă ирĕклĕх» çук, апла пулсан, *-ла(-ле)* аффикс—сăмаха улăштаракан аффикс. Ку аффикса нумайлă хисеп аффиксĕ теме май çук, ăна функцийĕпе пĕлтерĕшне кура падеж аффиксĕсен ретĕнче кăна пăхма пулать. Вĕçлевлĕх аффиксĕсен шутĕнче пăхас пулсан, унăн чи анлă пĕлтерĕшне шута хурса ăна евĕрлĕх вĕçлевлĕхĕ (падежĕ) тем май пур.

1) Ку аффикс, падеж аффиксĕсем пекех, пайăр ятсемпе те, пайăр маррисемпе те çÿрет: *Макçамла, Петĕрле, ачалла, хĕрарăмла* калаçать. Ытти падеж аффиксĕсем пекех *-ла(-ле)* аффикс нумайлă хисеп аффиксĕ çумне те çыпçанать: *сынсемпе — çынсемле, çынсенче — çынсенле;*

2) *-ла(-ле)* аффикс пайăр ятсем çумне хушăнсан та, пайăр ятсене пысăк саспаллиренех çыраççĕ: *Пришибеевла, Артемьевла, Ухсайла, Хусанкайла;* танл.: *Пришибеевсар, Артемьевшăн, Ухсайсар, Хусанкайшăн;*

3) *-ла(-ле)* аффикс каманлăх категорийĕн тата нумайлă хисеп аффиксĕсем хыççăн та тăма пултарать: *пĕр ял ачисемле,* кунта *ачисемле*—япала ячĕ, *ач(а)*—тымар морфема, *-и* — каманлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕ, *-сем* — нумайлă хисеп аффиксĕ, *-ле* — евĕрлĕх формин аффиксĕ;

4) изафет сăмах майлашăвĕсенчи сăмахсем япала ячĕ шайĕнчех юлаççĕ: *ача ваййи, Уртемейсен качаки, ял çынни, чĕп амăшĕ; -ла(-ле)* аффикс йышăнсан, çав сăмах майлашăвĕсем ĕçхĕлçумĕ пулса тăраймаççĕ, япала ячĕн шайĕнчех юлаççĕ: *Уртемейсен качакилле, пĕр ял çыннилле, чĕп амăшле*.*

Ытти ушкăнри сăмахсемпе çÿренине çак тĕслĕхсемпе çирĕплетме пулать:

* Тĕслĕхсене И. П. Павловăн «Хальхи чăваш литература чĕлхи» кĕнекинчен илнĕ (298 с.).



а) палла ячĕ +*-лла(-лле), -ла(-ле): кивĕлле пуранать, çĕнелле еçлеме пуçăнна;*

а) хисеп ячĕ +*-ла(-ле): саккарла çаптарнă таша* (Х. Агивер); *виççĕлле явна пуша;*

б) ятылмашĕ +*-ла(-ле): хăйсемле калаçма пуçларĕç; пиренле пачах пĕлмест;*

в) ĕçхĕл (пайташ) + *-ла(-ле): курманла çиет; пĕлменле калаçать; шăтарасла пахать; ыйткалакан-ла; çÿрекенле утран, ай, мĕн юлĕ* (А VIII. 70);

г) еçхелçумĕ +*-ла-(-ле): хальчченле, яланхилле.*

Ку аффиксăн пĕлтерĕшĕ *пек, евĕр,* хыççăмахсен пĕлтерĕшепе çывăххине палăртса эпир ăна евĕрлĕх форми теме сĕнесшĕн.

Н. И. Ашмарин Словарĕнче *-ла(-ле)* аффикс палла ячĕ, местоимени тата наречи тăвакан аффикс пулнине палăртнă. Хальхи чĕлхере ку аффиксăн ун пек сăмах тăваслăхĕ палăрмасть. *Ăна таса ылтан саватла* (на сосуд из чистого золота) *та улăштарса илес çук* (А VIII, 3) предложенири *саватла* сăмах палла ячĕ те, местоимени те, наречи те мар, ку сăмахăн *ылтăн* определенийĕ пулни вăл япала ячĕ пулнине ĕнентерет. Вырăсла та ăна автор наречи пĕлтерĕшĕпе мар, япала ячĕн пелтерĕшĕпех куçарнă.

1. Словарьте *-ла(-ле)* аффикс хыççăп *-скер* аффикс çÿреме пултарнине катартнă: *Учителлескер пур та, вĕрентни телĕ çук. Аттеллескер, упăшкиллескер* (А VIII, 70—71). Илсе пана тĕслĕхсенче пĕринче те япала ячĕсем хăйсен тĕп пĕлтерĕшне улăштармаççĕ: *учителлескер* тенине *учитель пекскер, аттеллескер* тенине *атте евĕрлĕскер, упашкиллескер* тенине *упашки пекскер* сăмах майлашăвĕсемпе улăштарма май пур. Икĕ майлă каласан та, çав сăмахсем япала ячĕ шайĕнчех юлаççĕ.

2. Чăваш чĕлхинче авал кăрал падежĕн аффиксĕ пулнă *-ăн(-ен)* аффикс наречи тăвакан аффикс пулнă тесе ĕненетерне: *алăкан-тепелĕн* ут, *аллан* пар, *уран* ут, *хусахан* пурăн.

Н. И. Ашмарин *-ан(-ĕн)* каманлăх вĕçлевлĕхĕн аффиксĕ наречи тăвакан аффикс пулнине çирĕплетет[3]: *тапхăрăн выранан, куçа-куçан, сиввĕн, иккĕн.* Çав вăхăтрах *çара пуçăн çара уран* сăмах майлашăвĕсене те наречисен шутне кĕртсе янă. *Çара пуçăн* тенĕ чух *çара* — палла ячĕ, *пуçăн* — япала ячĕ менлелĕх форминче.

[3] Ашмарин Н. И. Материалы... С. 228.

3. Наречи тавакан аффикссен шутне *-ранпа(-ренпе, -танпа(-тенпе)* аффикса кӗртеҫҫӗ: *ачаранпа, иртенпе, нумайранпа, ӗмӗртенпе, пӗчӗкренпе; -ранпа(-ренпе), -танпа(-тенпе)* пӗр аффикс мар, кунта туху тата пӗрлелӗх падеж аффиксӗсем пурри куҫ умӗнчех, ҫаванпа та ҫав аффикссене йышанакан самахсем ҫав пуплев пайӗнчех юлаҫҫӗ;

а) *ачаранпа, ӗмӗртенпе* — япала ячӗ;
а) *пӗчӗкренпе, ҫамракранпа* — палла ячӗ;
б) *виҫҫӗренпе, вуннаранпа (кӗтетӗп)* — хисеп ячӗ;
в) *унтанпа, ҫавантанпа* — местоимени;
г) *паҫартанпа, ӗнертенпе* — наречи;
д) *кайнаранпа, килнӗренпе* — ӗҫхӗл, иртнӗ пайташ тухупа пӗрлелӗх падежӗсенче.

4. И. П. Павлов *-чен, -серен* аффикссен функцине икӗ тӗрлӗ ӑнлантарать. Малтан ку аффикссем наречи тавакан аффикссем пулнине ҫирӗплетет[4], кайрантарах ку аффикссене йышанна самахсем наречи пулайманнине ӗнентерме тарашать[5]. Кайрантарах калани тӗрӗсе килет.

Виҫе *кунчен* Чӗкеҫ кин
Ват карчака йӳтетрӗ (К. Ив.)

йӗркесенчи *кунчен* самаха наречи теме май ҫук. Автор хӑй те *хӗвелчченех, хӑйччен, ҫаканччен, савасерен, юписерен, ункисерен* самахсене, вӗсем япала ячӗн, местоименисен конкретлӑхне ҫухатманнине кура наречи теме йывӑрри ҫинчен тӗрӗсех калать. Ку кулепесене И. П. Павлов «хыҫсамах—аффикспа таракан япала ячӗ е местоимени» теме сӗнет. Кун пек калани уҫамлах марриne шута илсе тата аффикссен пӗлтерӗшне тӗпе хурса, эпир *хӗвелччен* — япала ячӗн тасам кулепи, *хӑйччен* — таврану ятылмашӗн тасамлах кулепи теме сӗнетпӗр.

Ҫав вахатрах: *савасерен* — япала ячӗн таташлах кулепи, *курмассерен* — инфинитиван таташлах кулепи тесен тӗрӗсрех пулать.

Тасамлах кулепи тӗрлӗ ушканри самахсемпе ҫуреме пултарать: *нумайччен, чылайччен* — палла ячӗн тасамлах кулепи; *хӑйччен, эпӗччен* — местоименисен тасамлах кулепи, *пайтахчен, ӗнерччен* — ӗҫхӗлҫумӗсен тасамлах кулепи; *кайиччен, киличчен* — ӗҫхӗлӗн (пайташан) тасамлах кулепи. Наречи тавакан аффикссен ретне *-ӗпе(-ипе)* аффикса кӗртни (*ялӗпе, тӗнчипе*) самахсен хушма ятпарасланхне[6] шута илменнипе пулна.

---

[4] Павлов И. П. Хальхи чаваш литература чӗлхи. 304 с.
[5] Ҫавантах. 325 с.



*Ялӗпе ӗҫе тухнӑ* предложение тӗслӗхшӗн илсе пӑхар. Малтанах кунта *ял* япала ячӗ икӗ пӗлтерӗшлӗ пулнине палартмалла: 1) *ял* — пуранакан выран: 1) *ял* — халӑх (ялта пуранакан халах): *Ял калаҫать, ял кулать* тенӗ чухне *ял* самах «ял халахе» тенине пӗлтерет. *Ялӗпех ӗҫе тухнӑ* тенине тата тепер терлӗ калама пулать: *Ял халахе ӗҫе тухнӑ. Ял* самах «ял халахӗ» пӗлтерӗшлӗ пулни хайне уйрам таракан япала мар. Танл.: *Хулипех ӗҫе тухна. Районӗпех тырӑ вырҫҫе. Ялепех еҫе тухна* тенӗ чухне *-ӗ* каманлах категорийӗн 3-меш сапат аффиксӗ пӗлтерӗшне ҫухатман, вал самахан хушма пелтерешепе ҫыханна: *Пӗтӗм ялӗ уйра — ял халӑхӗ уйра.*

Чаваш чӗлхинче *-ласа(-лесе), -латса(-летсе)* деепричасти форминчи самахсем ӗҫхӗлҫумӗсем пулнине ӗненме йывар. Морфемикӑра ҫыханчак тымар морфемасемпе ҫыханчак самах тепесем пуррине вӗрентме хушаҫҫӗ пулсан[7], *кӗтӳлетсе, ирлесе, пинлесе* самахсене морфемасем тӗлӗшӗнчен сапла паиламалла: *кӗт-у-лет-се, ир-ле-се, пин-ле-се.* Пӗтӗмӗшле илсен, ку самахсем ӗҫхӗлтешсем; *кетулет, пинле* — ҫыхӑнчӑк тепсем, весем хӑйсем тӗллӗн ҫуремеҫҫӗ. анчах ҫакан пек калани тӗл пулать: *ир ирле* «проводить утро», «дожить до утра», *ҫер ҫерле* «проводить ночь», «ночевать»; *кун кунла* «проводить день», *ҫу ҫулла* «проводить лето» тенисене аса илтереҫҫӗ.

*Ятарласа* самаха та ӗҫхӗлҫумӗсен ретӗнче пахна. Н. И. Ашмарин Словарӗнче (А IV, 245—246) *ятар, ятарла, ятарласа, ятарлатса* самахсем пуррине катартнӑ, апла пулсан, чаваш челхинче *ятар, ятарла,* самахсем *-са* аффиксса рах ҫӳренӗ пулмалла. Хальхи чӗлхере *ятарласа* ӗҫхӗлтеш шутланма тивӗҫ.

*Харӑсла* самах ҫыханчак тӗп пулнине палартна, вал *-са* деепричасти аффиксепе кана ҫӳренине калана Н. И. Ашмарин (А XV, 60): *Харасласа уксе пуҫҫапаҫҫӗ.*

Н. И. Ашмарин *хараслат* самах та ҫыханчак тӗп пулнине палартна, *-са* аффиксла деепричасти формипе ҫӳренине катартна: *Вуникӗ хурама пӗр тӗпре, тавай харӑслатса касар-и* (А X VI, 60).

---

[6] Шмелев Д. Н. Введение // Способы номинации в современном русском языке. М.: Наука, 1982. С. 17—19.
[7] Земская Е. А. Современный русский язык: Словообразование. М.: Просвещение, 1973. С. 48—53.

*Чĕреслет* çыхăнчăк тĕп те *-се* деепричасти аффиксĕпе çуренине автор калана: *Чĕреслетсе* çумăр çавать (A XV, 287).

*Витрелет* сăмаха та Н. И. Ашмарин деепричасти аффиксĕн пĕлтерĕшĕпе çÿренине кăтартнă: *Витрелетсе çумăр ярать* (A V, 259).

Н. И. Ашмарин каланине шута хурас пулсан тата хальхи чĕлхере çыхăнчăк тĕпсемпе тымарсем пуррине тĕсесен, çÿлерех асăннă *-са(-се)* аффиксла сăмахсене деепричасти теме лекет.

И. П. Павлов ĕçхĕлçумĕсен шутне *яра куна, пĕр авка, кун каçа, ăçта кирлĕ унта, ырантан тепĕр кунне* йышши конструкцисене кĕртмелле марри çинчен тĕрĕсех калать: «Пуплев пайĕсем уйрăм сăмахсене кăна пĕрлештерсе тарăççĕ, сăмах майлашăвĕсемпе сăмах çавранăшĕсене пĕрлештермеççĕ»[8]. Шел пулин те, шкул учебникĕсенче çак шухăша пур чухне те çирĕп тытса пыманни сисĕнет. Сăмахран, паллă тата палла мар местоименисен шутне çак сăмах майлашăвĕсене кĕртнĕ: *кам та пулин, мĕн те пулин, кирек кам, кирек мĕн, кирек епле, кирек хăш*[9], *хуть кам.* Наречисен шутне *кирек хăçан, хăçан та пулин, ăçта та пулсан* сăмах майлашăвĕсене кĕртме май пурри çинчен калана[10].

Ĕçхĕлçумĕсене вĕрентнĕ чухне, пирĕн шутпа, ытларах тымар сăмахсене сăнамалла. Аффикс мелĕпе пулнисене хунатса яни чĕлхере пăтравлăх патне кăна илсе пырать. Сăмахсем пĕр-пĕр формăра çирĕпленсе ларса хăйсен лексика пĕлтерĕшне пачах улăштарнă ĕçхĕлçумĕсем те чĕлхере нумай мар. Ют чĕлхерен (уйрăмах вырăс чĕлхинчен) йышăннă сăмахсен пĕлтерĕшĕ улшăннипе пулнă ĕçхĕлçумĕсене те уллта-çиччĕрен ытла тупаймастпăр.

Ĕçхĕлçумĕсен йышне ку таранччен шухăшламасăр хунатса пынине сивлĕмелле.

---

[8] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1925. 102 с.

[9] Павлов И. П. Игнатьева Э. И. Чăваш чĕлхи. Морфологи: 5—6 классем валли. Шупашкар, 1983. 80, 96, 99 с.

[10] Çавантах. 185 с.



## ЕВĔРЛЕВ СĂМАХĔСЕМ

Чăваш чĕлхинчи евĕрлев сăмахĕсене пуçласа тĕпчекенĕ Н. И. Ашмарин профессор пулнă. Ку ыйтупа унăн темиçе ĕç пичетленсе тухнă[1]. Çав ĕçсенче Н. И. Ашмарин евĕрлев сăмахĕсене мимемăсем тесе ят панă, вĕсен лексикăпа грамматика уйрăмлăхĕсене палăртнă. Евĕрлев сăмахĕсене тĕплĕн тишкерсе Н. И. Ашмарин чĕлхере пур сăмахсем те мимемăсенчен пулса кайнă текен шухăш патне пырса тухать. Н. И. Ашмарин шухăшĕпе килĕшмесĕр, чăваш чĕлхин хăшпĕр тĕпчевçисем хирĕçле шухăшсем каланисем те пулчĕç[2]. Евĕрлев сăмахĕсен проблемине чĕлхе наукинче татса панă теме май çук-ха. Г. Е. Корнилов чĕлхери евĕрлев сăмахĕсен морфологипе семантика уйрăмлăхĕсене тĕпчĕнĕ май А. М. Газов-Гинзберг, А. Г. Спиркин ĕçĕсене[3] тишкерет тата чĕлхери пур сăмахсем те япаласемпе пулăмсене евĕрленинчен пулса кайнă текен теорие пăхса тухнă май Н. И. Ашмарин шухăшне хÿтĕлет. Н. И. Ашмарин каланине, чĕлхене пĕрле пухан-са канашласа тума май çуккине марксизм-ленинизм теорийĕпе çыхăнтарса ăнлантарать[4].

Чăваш чĕлхинче евĕрлев сăмахĕсем чылаях пысăк вырăн йышăнаççĕ, вĕсем «çутçанталăк пулăмне илемлĕрех, туллирех сăнарласа пама пулăшаççĕ, пирĕн чĕлхене сĕткенлĕрех те пулăхлăрах тăваççĕ»[5]. Кун пирки Н. И. Ашмарин акă мĕн çырса хăварнă: «Среди европейцев способность живописать все великое разнообразие природы сохранилась только у немногих избранников — ею владеют одни поэты: здесь, на

---

[1] Ашмарин Н. И. Основы чувашской мифологии (о подражательных словах в чувашском языке). Казань, 1918: Унăнах. Подражания в языках Среднего Поволжья // Изв. Азерб гос. ун-та / Общественные науки. 1925. Т. 2—3 4—5; Унанах. О морфологических категориях подражаний в чувашском языке Казань, 1928.

[2] Егоров В. Г. Подражательные слова // Материалы по грамматике современного чувашского языка. Морфология. Чебоксары, 1957. Ч. I. С. 352—360.

[3] Газов-Гинзберг А. М. Был ли язык изобразителен в своих истоках? Свидетельство просемитского запаса корней. М., 1965; Спиркин А. Г. Происхождение языка и его роль в формировании мышления. М., 1957.

[4] Корнилов Г. Е. К теории имитативов-I // Диалекты и топонимия Поволжья. Чебоксары, 1977. Вып 5. С. 61—141.

[5] Павлов И. П. Асанна еç. 308 с.

берегах Суры и Волги, каждый, кто не затолкан в житейской сумятице, не задавлен тяжким бременем невзгод и не утратил живительных связей с родною природой, является поэтом, который простыми средствами, созданными безымянным творчеством народных масс, рисует в звуках обыденной речи чудесно яркие образы многоликой и почти неуловимой жизни»[6].

### ЕВĔРЛЕВ САМАХĔСЕНЕ ПĔЛТЕРĔШĔСЕНЕ КУРА УШКАНЛАНИ

Семантика тĕлĕшĕнчен евĕрлев сăмахĕсене çакăн пек ушкăнсене пайлама пулать:

1) кайăк-кĕшĕксем, выльăх-чĕрлĕхсем кăларакан сасса евĕрлесе каланисем: *чим-чим* (çерçи чимлетни), *кикак* (хур е хуркайăк сасси), *му-ук* (ĕне макăрни), *мэ-эк* (сурăх е качака макăрни), *шип-шип* (чĕпĕ шиплетни), *нарх-нарах* е *нарик-нăрик* (сысна нăриклетни);

2) чĕрчунсем ирĕксĕр кăларакан сасса евĕрлени: *харт* (лаша е сысна хăранипе кăларакан сас), *апчху* (çын сунаслани);

3) çын кăмăл-туйăмне палăртма евĕрлесе калани: *ха-ха-ха, хи-хи-хи, хо-хо-хо, лах-лах-лăх, хи-хик* (çын кулнине палăртни), *хаш-ш-ш* (çын ассăн сывлани), *шар-и* (ача, çын макăрни);

4) чĕрĕ е чĕрĕ мар япала тунă шăв-шава евĕрлени: *пăр-р* (кайăк вĕçсе сывлăша çĕкленни), *пăнт, пăнтăр-пăнтăр* (парappан сасси);

5) çутçанталăк пулăмĕсене евĕрлени: *йăлтăр* (çиçĕм çиçни), *йăлт-йăлт* (аякри çиçĕм çутине евĕрлени), *йăлтăр-ялтăр* (çиçĕм çывăхра çиçнине евĕрлени); *кĕмсĕрт* (аслати сасси аякра илтĕнни), *шарт* (аслати çывăхра çапни), *йăл-йăл* (хĕвел пăхни), *шăпăр-шăпăр* (çумăр çуни), *лап-лап е лапка-лапка* (юр çуни), *ши-и* (çил шăхăрса вĕрни), *-у-у* (çил улани);

6) япаласем пĕр-пĕринпе сĕртĕнсен тухакан сасса евĕрлени: *чăкăрт-чăкăрт* (ура айĕнче юр чĕриклетни); *кăчăр-кăчăр* (шăл айĕнче хăйăр кăчăртатни), *чанк-чанк* (тимĕр япаласене çапсан тухакан сас);

7) сăнлăха евĕрлекен сăмахсем, вĕсем шутне куçа курăнакан пулăма сăнарласа каланă сăмахсем кĕреççĕ: *Ши кайăп, пи кайăп, çӳле кайап — çăмарта тăвап* (пăрçа е хăмла). *Ши, пи* ку тĕслĕхре сăнлаха евĕрлекен сăмахсем шутланаççĕ.

[6] Ашмарин Н. И. О морфологических категориях подражаний в чувашском языке. С. 8—9.

Евĕрлев сăмахĕсен морфологи паллисем çинчен ку таранччен сăмах хускатман тесен те юрать. Чăваш чĕлхе наукинче 20—30 çул хушши евĕрлев сăмахĕсем морфологи тĕлĕшĕнчен улшăнманни çинчен калаçу пырать[7]. Юлашки çулсенче ку шухăша яланлăхах çирĕплетес туртăм палăрчĕ. «Евĕрлев сăмахĕсенче аффикссем нихăçан та пулмаççĕ»[8] тенине правило вырăнне сĕнме пуçлани чĕлхе фактĕсене хирĕçлет.

Чăнах та, ĕçхĕлçумĕсен те, евĕрлев сăмахĕсен те категори кӳлеписем тӳрех куçа курăнмаççĕ, ăна асăрхама пĕлес пулать. Чăваш чĕлхинчи морфологи ушкăнĕсене кĕрекен пур сăмахсен те *-ах (-ех, -х)* аффикслă вăйлату категорийĕ пуррине каларăмăр ĕнтĕ. Ку тĕлĕшрен евĕрлев сăмахĕсем те аякка тăрса юлмаççĕ, кашни евĕрлев сăмахĕ тенĕ пекех вăйлату категори кӳлепин аффиксне йышăнма пултарать: *Çил пăчах чаранчĕ* (А X, 162); *Хырăм панках тулчĕ* (А IX, 91); *Алăкне ярах уç* (А IV, 219); *Çанталăк, çутçанталăк янкăрах* (А IV, 196).

> *Ваштарах* та ваштар, ай, çил вĕрет
> Йĕтĕн чечексене çав такать (А V, 344).

*Хăранипе халăх к а п ă р а х сирĕлчĕ* (А VI, 76); *Ман аларан туяна к а р т а х туртса илчĕ;* *К ĕ п ĕ р е х сырса ил* (А VII, 264); *Кучĕ çине л а к а х кайса ларчĕ* (А VIII, 6); *Çил л ă ш т а х чаранчĕ* (А VIII, 133) т. ыт. те.

Евĕрлев сăмахĕсем, *-ччĕ(-чĕ)* аффикс йышăнса, иртнĕ вăхăта палăртма пултараççĕ: *Шывĕ те ш ă н к ă р-ш ă н к ă р- ч ч ĕ, çилĕ те в ă ш ă л - в ă ш ă л ч ч ĕ; Тырри к ă ш т ă р- к ă ш т ă р ч ч ĕ.*

Евĕрлев сăмахĕсен категорисĕр çакăн пек кӳлеписем пулма пултараççĕ:

а) *-рах(-рех), -тарах(-терех)* аффикслă танлаштару кӳлепи: *В а ш т - в а ш т р а х хатланкаласа çӳре* (А V, 334). *Эп Ванюк кĕпине, к а л - к а л т а р а х пултăр тесе, сарлакарах çĕлетрĕм* (А VI, 26). *В а р - в а р т а р а х çаврăнкала* (калаç.);

[7] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965. 308 с.

[8] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 104 с.

а) *-и, -скер* аффикслă палăрту кӳлепи: *К ĕ т - к ĕ т и к и сара чăха, санăн пуçра тĕпек пур* (А VII, 193); *Пирĕн килçуртра ача-пăча л ĕ р и - л ĕ р и сасси кана* (А VIII, 142). Танл.: *Мĕн л ĕ р - л ĕ р сасси çавăнта* (А VIII, 142); *В а р т - в а р т с к е р часах кайса килчĕ* (калаç.); *Харсар та в а ш - в а ш с к е р* (Алент.);

б) пурлă кӳлепе: *Пит л а п а р - л а п а р л ă япалана хаклă парсах ан илĕр* (А VIII, 115);

в) нумайлă хисеп кӳлепи: *К а п т ă р - к а п т ă р с е н е пуçтаркалас* (А VII, 166). *Ака сире хаман л ă п а р - л а п а р с е н ч е н хашĕ-пĕрне пуçтаркаласа яратăп* (А VIII, 115); *Пуçтарас çак л ă п а р - л а п а р с е н е.*

Юлашки тĕслĕхсенчи еверлев сăмахĕсем япала ячĕленнине палăртнă Н. И. Ашмарин хăйĕн Словарĕнче.

Еверлев сăмахĕсене япала ячĕн пĕлтерĕшĕпе усă курма пуçланине поэзире курма пулни çинчен И. П. Павлов ĕнентермелле çырса кăтартнă[9]:

Чекеç юрри, хурсен *кикаке,*
Ачасемпе аппалану... (Хус.);
Эй, салтак юррин *ян-янĕ!*
Илтĕнет вăл аякра (Хус.).

Япала ячĕсем вырăнĕнче çӳрекен еверлев сăмахĕсем хисеп, сăпат, вĕçлевлĕхсем тăрăх та улшăнма пултараççĕ.

*Хам-хамсем чупаççĕ; Манан пĕчĕкçĕ хам-хамам; Петĕрсен хам-хамĕ; Петĕрсен хам-хамне; Петĕрсен хам-хамĕпе* (ачасемпе калаçнинчен) т. ыт. те.

Çӳлерех илсе панă тĕслĕхсем «еверлев сăмахĕсенче аффикссем нихăçан та пулмаççĕ» тенине хирĕçлеççĕ, апла пулсан, еверлев сăмахĕсен палăртăмĕ çапларах пулмалла: çутçанталăкри сас-чĕвве, шав-шава, хусканусене еверлесе палăртакан вăйлату тата иртнĕ вăхăт категорийĕнче, танлаштару, палăрту кӳлеписенче пулма пултаракан, япала ячĕленес сĕм пур сăмахсене еверлев сăмахĕсем темелле.

## ХЫÇÇĂМАХ ПИРКИ

Хыçсăмах тени чăваш чĕлхинче туллин тĕпчесе çырса кăтартнă сăмахсен шутне кĕмест. Нумаях та нулмасть шкул учебникĕсенче «вĕçленекен (е улшăнакан) хыççăмахсем»

[9] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 314 с.



пурри пирки калаттăмăр пулсан, халĕ вара «улшăнакан хыçсăмахсем тени наука тĕлĕшĕнчен йăнăш пулни палăрчĕ»[1]. Халиччен «улшăнакан хыçсăмахсем» тенĕ *ай, çи, ум, хыç, тĕл, аяк, вĕç, вара, ен* тата ытти хăш-пĕр сăмахсене япала ячĕ теме лекет.

Хальхи вăхăтра шкул учебникĕсенче паракан «Хыçсăмах» палăртăмне те йĕркеллĕ теме май çук: «Вĕçленекен сăмаха предложенири тепĕр сăмахпа çыхăнтаракан пулăшу пуплев пайне хыçсăмах теççĕ»[2]. Мĕншĕн «вĕçленекен сăмаха» кăна?

Морфологи мĕн вĕрентнине мансах шкул ачисен предложени (синтаксис) вĕренме пуçанмалла-мĕн. Хыçсăмах текен сăмахăн морфологири кӳлепине вĕренесси е вĕрентесси пирки кунта калаçу та пымасть, мĕншĕн тесен «хыçсăмахсем улшăнмаççĕ» имĕш.

Хыçсăмахсем улшăннине кăтартас тĕллевпе эпир Н. И. Ашмарин словарĕнчи *пек* сăмахпа çыхăннă словарь статйисене тишкерсе тухрăмăр (асăрхăр: ку таранччен *пек* хыçсăмах* пулнине палăртнă):

1) *пек* самах палăрту кӳлепин аффиксне йышăнать: *пекки, пекскер; -и, -скер* аффикссем йышăннă ытти пур сăмахсем пекех, ку кӳлепесем хисеп тата вĕçлевлĕхсем тăрăх улшăнаççĕ: *пеккисем, пекскерсем:*

Т. *пекки: Сан п е к к и кам пур-ши?*
К. *пеккин: Сан п е к к и н ĕç те çук унта;*
П. *пеккине: Сан п е к к и н е кĕртмеççĕ унта;*
В. *пеккинче: Ял п е к к и н ч е пуранаççĕ халлĕхе;*
Т. *пеккинчен: Сан п е к к и н ч е н укçа ыйтса илеймĕн;*
П. *пеккипе: Сан п е к к и п е ĕç тума çук;*
Ç. *пеккисĕр: Сан п е к к и с ĕ р пуранма çамал;*
П. *пеккишĕн: Сан п е к к и ш ĕ н хать хĕвел ан тух.*

Н. И. Ашмарин Словарĕнче хăш-пĕр вĕçлевлĕх кӳлеписене пана: *Халь порăнтамăр пока ял п е к к и н ч е; Пана п е к к и н е ил; Ларас п е к к и с е м карап çине ларнă та каяс çĕре кайнă* (А IX, 155);

2) танлаштару кӳлепинче те пулма пултарать: *Вĕсем ĕлĕк лерелли тури чавашсем п е к р е х е х тумланнă иккен*

[1] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 106 с.

[2] Павлов И. П. Игнатьева Э. И. Чăваш чĕлхи. Морфологи. 200 с.

* Н. И. Ашмарин ана татак тенĕ, пайташсемпе пĕрле çуренине палăртнă: *каина пек, каяс пек* (Ашмарин Н. И. Опыт исследования чувашского синтаксиса. Казань, 1903. Ч. 1. С. 434).

(A IX, 153); *Ҫукраххисем ку нимесене хайсем пекреххисемпе пӗрле пулса тӑваҫҫӗ* (A XII, 207);

3) вайлату категорийӗнче пулать: *Пирӗн ял асла вӑрман варринче пекех ларать; Тивес пекех пычӗ ман пата* (A IX, 153);

4) иртнӗ вӑхӑт кулепи те уншӑн ют мар: *Ҫырӑва ҫырма тытӑниччен темӗн чухлӗ сырас пекчӗ; Вал касхине кӑшт пелетлерех пекчӗ* (A IX, 153—154);

5) евӗрлӗх кӳлепинче: *Пӗрмаях ҫакӑн пекле каласа* ҫыварттарать (A IX, 155).

Тӗслӗхсене пахса тухнӑ хыҫҫӑн *пек* хыҫсӑмах улшӑнманни ҫинчен калама йывӑр. Асӑрхӑр: И. П. Павлов *пек* хыҫсӑмах тулли мар вӗҫленӳре пулнине сакӑн пек тӗслӗхсемпе ҫирӗплетнӗ: *Пӗр ҫухрам пекре... Вуна минут пекрен... Сассисене пӗр пеке килтерсе*[3].

Халӗ «хыҫсӑмахсем падеж формисенче пулакан сӑмахсем (япала ячӗ, паллӑ ячӗ, хисеп ячӗ, местоимени, глаголан причасти форми) ҫумне ҫеҫ хушӑнма* пултараҫҫӗ» тенине тишкерӳллӗ куҫпа пахса тухар[4].

*Пӗр вахатра Ахтапанта, пасарта хайне кирлӗ пек пилӗк ҫын чӗнне* (A IX, 153). Ку предложенире *пек* хыҫсӑмах *кирлӗ* татӑк хыҫҫӑн тӑрать. *Мана капла туни тӗрӗс мар пек; Ман шутпа, капла туни тӗрӗс мар пек* (A IX, 154) предложенисенче *пек* хыҫсӑмаха *мар* татӑк хыҫне лартнӑ. *Вал ҫав кӗнекесем айӗнче выртатчӗ пек-ҫке* (A IX, 153); *Пурте тавранчӗҫ пек; Туртмастӑп пекех пулсан та...* (A IX, 154) пуплевсенче вара *пек* хыҫсӑмах сӑпатланакан ӗҫхӗл кӳлеписемпе юнашар тӑрать. *Ҫапман тыррисем мӗн пур пекки юлнӑ* (A IX, 155); *Уйра ҫӗр каҫиччен пекех выляса ашкӑнса сӳреҫҫӗ* (154); *Ку юмаҫ пахам пек тӳрӗ тет* (153); *Эп паян суха тавам пек тӳрам* (A IX, 154); *Эсӗ пама пулнисем куса куранакан япаласенчен тем пекех аван.*

Илсе пана тӗслӗхсенчен ҫакӑ куранать:

а) *пек* хыҫсӑмах тулли пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем хыҫӗнче кӑна мар, пулӑшу пӗлтерӗшлисем хыҫӗнче те тӑма пултарать;

---

[3] Павлов И. П. Хальхи чӑваш литература чӗлхи. 323 с.

[4] Павлов И. П. V—VI классенче чӑваш чӗлхин морфологине вӗрентесси. 107 с.

* «Хушӑнма пултараҫҫӗ» тени кунта тӗрӗсех мар; хыҫсамах самах хыҫӗнче кана тама пултарать, аффикс пулна пулсан, «хушӑнма» пултаратче вал.



а) валах вӗҫлекен сӑмахсем хыҫӗнче кӑна мар, сӑпатланаканнисем ҫумӗнче те хайне аванах туять.

Ҫапла вара, «вӗҫленекен сӑмаха предложенири тепӗр сӑмахпа ҫыхӑнтаракан пулӑшу пуплев пайне хыҫсамах теҫҫӗ» тени *пек* сӑмахшӑн тӗрӗс мар пулҫа тухать.

**Таран.** Словарьсенче те, аслӑлах ӗҫӗсенче *таран* хыҫсӑмах пулнине кӑна кӑтартна: тӗп падеж форми хыҫҫӑн тӑнине, виҫе ҫыхӑнавне кӑтартнине палӑртнӑ. Ку хыҫсӑмах хӑшпӗр падеж аффиксӗсене йышӑнма пултарнине асӑрхаттарнӑ, анчах та морфологи тӗлӗшӗнчен улшӑнманнине ҫирӗплетсех каланӑ.

Чӑнах та, *таран* хыҫсӑмах тӗп вӗҫлевлӗхри сӑмахсем хыҫҫӑн тӑрать: *Лаша хырӑмӗ айӗ таран; Ҫыр таранах шыв юхать* (A VIII, 212).

Ку сӑмах иртнӗ пайташ кӳлепиллӗ сӑмахсем хыҫҫӑн тӑнине те асӑрхатпӑр: *Вай ҫитнӗ таран (таранччен) пилӑшап* (A VIII, 213).

Местоименисем хыҫҫӑн тӑнӑ чух *таран* хыҫсӑмах тӗрлӗ вӗҫлевлӗх аффиксӗсене йышӑнма пултарать: *Шыв пӗвере ку таран пур* (тӗп. в.); *Ҫав таранран паян куна ҫитсе ӗҫе вӗҫлеймен.*

*Таран* хыҫсӑмах туллин вӗҫленмен *пур, ҫук* сӑмахсем хыҫҫӑн тама пултарать: *Вай пур таран хыҫҫан ут* (A VIII, 212); *Сан ырлаху та виҫме ҫук таранччен нумай* (A VIII, 214).

*Таран* хыҫсӑмах, *-ччӗ* аффикс йышӑнса, иртнӗ вӑхата палӑртма пултарать: *Чуччу ларкачи пилӗк таранччӗ* (A VIII, 212); *-ччӗ* аффикса *таран* хыҫсӑмах ҫумне иртнӗ вӑхатри тӑрама палӑртнӑ чух ирӗккӗнех хушма пулать: *Хӗрри таранччӗ. Ҫӗрпӳ таранччӗ. Шивӗ пилӗк таранччӗ.*

Ҫавӑн пекех *таран* хыҫсӑмах вайлату категорийӗн *-ах-(-ех, х)* аффиксне те ҫамӑллӑнах йышӑнать: *Пӗр виҫ эрне таранах; Сапкара выртаканни таранах* (A XIII, 213).

Кӑтарту ылмашӗсем, япала ячӗсем тата иртнӗ пайташсем хыҫҫӑн тӑнӑ чух *таран* хыҫсӑмах *-ччен* тӑсамлӑх аффиксне йышӑнма пултарать: *Ку (ҫав, ҫак) таранччен. Вуна ҫухрам таранччен; Ватти-вӗтти таранччен; Хам мӗн пӗлнӗ таранччен анчах каласа кӑтартатӑп* (A XIII, 214). Н. И. Ашмарин Словарӗнче тата ҫакӑн пек тӗслӗхсем пур: *Тутарсем патне тухса, хайсем пӗр ҫын юлми таранччен тутарсемпе варҫна; Санан ырлаху виҫме ҫук таранччен нумай; Ҫын ҫӗре хайне кирлӗ таранччен илчӗ.*

Юлашки тĕслĕхсем *таран* хыççăмах вĕçленмен (е туллин вĕçленмен) сăмахсем хыççăн та тăма пултарнине хыпарлаççĕ.

Словарьсенче темĕншĕн *таранччен* кÿлепене хăйне уйрăммăн словарь статйи туса кĕртеççĕ, пирĕн шутпа, *таранччен* сăмахри *-ччен* сăмах тăвакан аффикс мар, вăл *таран* хыççăмахăн тăсăмлăх кÿлепи кăна пулать, çавна май ăна реестра кĕртме кирлĕ мар.

*Таранччен* кÿлепе çумне *-лĕх* аффикс хушăнсан, *таран* хыççăмахăн çителĕклĕх форми пулать: *1 çултан пуçласа 5 çул таранчченлĕхе тĕрмене хупмалла сут туна* (А VIII, 214).

*Таран* хыççăмах тата унăн *таранччен* кÿлепи *-хи* палăрту формин аффиксне йышăнма пултараççĕ: *Вăтар çул таранхи; Хĕрĕх çул таранхи; Ку таранчченхи пирнăçĕ* (А VIII, 214).

Пăхса тухнă тĕслĕхсем *таран* хыççăмах морфологи тĕлĕшĕнчен улшăнни çинчен хыпарлаççĕ.

**Юнашар.** Н. И. Ашмарин Словарĕнче *юнашар* паллă ячĕ пулнине палăртнă: *Юнашар хĕрсем те куç хĕссе илкелĕç* (А IV, 337).

1982—1985 çулсенче тухнă «Чăвашла-вырăсла словарьте» вăл паллă ячĕ кăна мар, хыççăмах пулнине те палăртнă.

И. П. Павлов *юнашар* хыççăмах паллă ячĕн форминчен пулнине тата вăл пĕрлелĕх падеж форми хыççăн тăнине кăтартать[5].

Словарьте те, И. П. Павлов ĕçĕнче те *юнашар* паллă ятне *юнашар* хыççăмахран мĕнле уйăрса илмеллине каламан. Пирĕн шутпа, *юнашар* сăмах чăваш чĕлхинче паллă ячĕ кăна шутланма тивĕç, вăл хыççăмаха тухса кайнине ĕнентерекен сăлтавсем çук.

Пур паллă ячĕ пекех *юнашар* сăмах а) танлаштару категорийĕнче пулать: *варманпа юнашартарах ялсем; краватьпе юнашартарах ларт;*

ă) паларту категорийĕн *-и, -скер* аффиксĕсене йышăнать: *варманпа юнашарскер, юнашарри;* «Чăвашла-вырăсла словарьте» (1982) *варманпа юнашар, кравательпе юнашар* тĕслĕхсенче *юнашар* хыççăмах пулнине палăртнă.

**Витĕр.** И. П. Павлов *витĕр* хыççăмах паллă ячĕн форминчен пулнине палăртать[6].

---

[5] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи. 316—320 с.
[6] Çавăнтах. 320 с.



Н. И. Ашмарин ку сăмах наречи вырăнĕнче çӳренине: «Употребл. и как наречие», — тесе палăртнă (А V, 257).

«Чăвашла-вырăсла словарьте» *витĕр* сăмах паллă ячĕ, наречи тата хыççамах пулнине кăтартнă, анчах та тĕслĕхсене пана чухне пăтраштару кĕрсе кайнă: *Витĕр пĕçернĕ çăкăр* тенĕ чух *витĕр* наречи (е паллă ячĕ?). *Витĕр писне пилешĕ çулçи витĕр куранать* тĕслĕхре иккĕшĕнче те *витер* хыççамах пек пулса тухнă.

Енчен те, *витĕр* сăмах паллă ячĕ те, наречи те, хыççăмах та пулать пулсан вĕсене уйăрса илмелли критерисем те пулмалла.

*Пире çумăр витĕрех йĕпетрĕ* тенĕ чухне *витĕрех* сăмаха ĕçхелçуме (наречи) темелле пек. *Эпир çумăр витĕрех кайрамăр* предложенире *витĕр* хыççăмах пулса тăмалла пулса тухать.

*Витĕр касса çил вĕрет, витĕр куранать, витĕр тухнă чих витĕртерех пĕлесшĕн, витĕр чипер* тĕслĕхсенче *витĕр* сăмах предложени пуçламашĕнче тăрса хыççăмах пулаймасть.

А с а р х а т т а р у. *Витĕр куранать* тенĕ чух *витĕр* наречи пулать темелле пек; *чуречe витер куранать* предложенире вара *витĕр* хыссамаха куçмалла. Сăмах хаш ушкана кĕнине (пуплев пайĕ пулнине) пĕлме самах хаш выранта танипе, мĕнле самахсемпе çыханура танине тĕсемелле пек пулса тухать. Ку çул çине тарас пулсан, *юман* самаха та тĕрлĕ ушкана (пуплев пайне) кĕртсе ямалла: *юман — çирĕп йывас* (япала я.): *юман юпа* (палла я.); *ку юпа — юман* (ĕçхĕл). *Лайах* самах та паллă яче тата ĕçхелхуме шутланма тивĕç; *лайах ача — лайах вĕренчĕ. пуранма лапах.* Ку теслехсенче *юман* самах пур çĕрте те япала ячĕ, *лайах* палла яче пулать.

Анчах та *витĕр* сăмах хăйĕн лексика пĕлтерĕшне тĕксĕмлетсе хыççăмаха тухса каять теме пулать, ун пек чухне, паллах, *витĕр* сăмах вĕçленекен сăмахсем хыçĕнче тăнине сăнама лекет: *чӳрече витĕр, тăвăл витĕр, çумăр витĕр.*

Вĕçленекен сăмахсем хыççăн тăнă чух *витĕр* сăмах морфологи тĕлĕшĕнчен çакăн пек улшăнать:

а) вăйлату категорийĕнче пулать: *çӳлелле витрех çитĕнсе кайре; вăрманалла витрех кайнă.* Хăвăрах куратăр, *витрех* сăмах япала ячĕн падеж форми хыççăн мар, сулăну кӳлепи хыççăн тăрать.

*Витĕр* хыççăмах хăй умĕнчи япала ятне тĕп вĕçлевлĕхре кăна мар, пару вĕçлевлĕхĕнче те тытса тăма пултарать: *Ун хыçĕнчен кăркка аçи сиксе тухнă та, кашкăра витрех хăвалаcа кайнă; Кĕлет алăкне витĕр çурса касăпăр; Ывăлĕсем çĕнĕ çĕре витрех тарнă; Йăлтăр курнан хĕрсене витрех парса ятăмăр* (А V, 257).

Юлашки тĕслĕхсенче, чăнах та, *витрех* тени *витĕр* «сквозь, сквозной, зоркий, острый, определенный» пĕлтерĕшсемпе çÿремест, ăна хыççăмах теме пулать.

Пĕтĕмлетÿре çакăн пек калама пулать: чăваш чĕлхинче хыççăмахсен хисепĕ нумай мар. Вĕсен шутне ытти тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе хунатса пыни хыççăмахсен морфологири выранне палăртма пачах пулашмасть. Енчен те хыççăмахсем улшăнмаççĕ тетпĕр пулсан, вĕсен шутне морфологи тĕлĕшĕнчен туллин улшăнман е кăшт улшăнакан сăмахсене кăна кĕртме лекет. Сăмахран, *тери* хыççăмаха илер: вăл вайлату категорийĕ *-ех* аффиксне йышанма пултарать: *çав териех, тем териех*, иртнĕ вăхăтра пулать: *тем териччĕ, тем териехчĕ.*

**Тери** сăмахпа пĕр пĕлтерĕшлĕрех *таран* сăмаха хыççăмах тесен, вăл тулли мар «улшăнакан хыççăмах» шутланма тивĕç.

Улшăнманнисен шутне *хута* сăмаха кĕртме пулать, вăл та, *тери* хыççăмах пекех, вайлату форминче кăна пулать: *çĕр хутах кайрĕ.*

Хыççăмах ыйтăвне татса патăмăр тесе калама пултараймастăр, ку ыйтăва эпир хускатрăмăр çеç, çавăнпа та чи малтанхи ятнех «хыççăмах пирки» терĕмĕр. Ыйтăвĕ пăтравла пирки хыççăмахсен палăртăмне те ăсласа çитерме май килмест. Морфологи курсĕнче пахса тухмалла япала пулсан, паллах, унăн палăртăмĕ пулмаллах. Шкул учебникĕсенче хыççăмахсене синтаксис касăкласĕшĕн кирлĕ тенипе килĕшме йывăр.

## ПĔТĔÇТЕРÿСЕМ (СОЮЗСЕМ)

Тимухха Хĕветĕрĕ те, Н. И. Ашмарин та *союз* терміна чăвашла *пĕтĕçтерÿ* теме сĕннĕ.

Пĕтĕçтерÿсене улшăнман пуплев пайĕ шутне кĕртеççĕ. Кун пек каланиех пĕтĕçтерÿсем морфологире пăхса тухмалли япала маррине систерет, анчах та чĕлхеçĕсем çине тăрсах вĕсене пуплев пайĕ теççĕ, морфологире вĕрентме сĕнеççĕ. Морфологири сăмахсен ушканне кĕртес пулсан, пĕтĕçтерÿсен морфологи паллисене тупмалла. Çав паллăсем çук пулсан, ун пек ушкăн та морфологире çук. Пĕтĕçтерÿсене синтаксисра пăхса тухмаллине ку сăмахсен палăртăмĕнче[1] куратпăр: «Пĕр йышши членсене е хутла предложенин пайĕсене пĕрперинпе сыхăнтаракан пулăшу пуплев пайне союз теççĕ».

Чăваш чĕлхи вĕрентекенсем валли пичетленĕ кĕнекере И. П. Павлов çапла çырать: «Союз çинчен вĕреннĕ май ачасем хăйсем синтаксис çинчен мĕн пĕлнине малалла аталантарăççĕ. Союзсен уйрăмлăхĕсене палăртма пĕр йышши членла предложенисемпе хутла предложенисене илсе анлантарма тивет. Анлантарнă чухне союзсен синтаксисри сыхăну пĕлтерĕшсене формисемпе пĕрлех шута илсе пымалла. Союзлă предложение тишкернĕ май...»[2]

**А с ă р х а т т а р у.** Пĕтĕçтерÿ (союз) морфологири сăмахсен ушканĕсем хушшинче хăйне уйрăм выран тупаймасть. Морфологи тишкерĕвĕ тунă чухне пĕтĕçтерÿсене, ним каламанран кăна, асан‿а иртме пулать.

В. В. Виноградов академик союзсен несĕллĕхне палăртса: «Союзы, в сущности, запредельны морфологии». — тенĕ, анчах та, традицие пăханса, морфологири сăмахсен ушкăнĕнчех хăварнă[3].

Морфологире *эхер те мехер, мĕншĕн тесен, ма тесен, пулсан та, пулин те* йышши сăмах çавранăшĕсене пĕр сăмах тесе пăхма май çук. Çавăнпа пĕрлех чăваш чĕлхин морфологиĕнче *тесе, тесен* деепричастисене союз, татăк тата хыççăмах тени нккĕленÿллĕ[4].

## ТАТĂКСЕМ ПИРКИ

Синтаксиса морфологи курсĕнче вĕрентесси татăксемпе те çыхăннă: «Предложени членĕ е пĕтĕм предложени çумне хушăнса, вĕсен пĕлтерĕшне кăштах урăхлатакан пулăшу пуплев пайне татăк теççĕ»[1].

---

[1] Павлов И. П., Игнатьева Э. Е. Чăваш чĕлхи: Морфологи. 5—6 классем валли. Шупашкар, 1983. 205 с.

[2] Павлов И. П. V—VI классенче чăваш чĕлхин морфологине вĕрентесси. Шупашкар, 1985. 109 с.

[3] Виноградов В. В. Русский язык. М., 1972. С. 553.

[4] Павлов И. П. Особенности употребления слова *тесе* в чувашском языке // Вопросы чувашского языка, литературы и искусства. Чебоксары, 1960. С. 26—40; Андреев И. А. Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. Шупашкар. 1975. II пайĕ. 62—65; 158—159 с.

[1] Павлов И. П., Игнатьева Э. И. Чăваш чĕлхи: Морфологи. 5—6 классем валли. Шупашкар, 1983. 209 с.

Учительсем валли хатӗрленӗ кӗнекере вара учителӗн ачасене татаксем пирки ҫапла вӗрентмелле имӗш: «Калаканни предложенири анлӑ шухӑша е пӗр-пӗр сӑмахпа палӑртакан шухӑш пайне пӗлтернӗ чух хай мӗнле кӑмал-туйӑмпа каланине палӑртса хӑварма пултарать. Ҫав хушӑмла пӗлтерӗшпе усӑ куракан пулӑшу сӑмахӗсене татаксем теме йышӑнна. Вӗсемпе ытларах калаҫу пуплевӗнче тата илемлӗ литературӑра усӑ кураҫҫӗ»[2].

Асархаттару. Вайлату татакӗ тесе пахнӑ *-ах(-ех, -х)* аффикс шутланать, кана эпир ытти аффикссене ҫырна пекех тулли пӗлтерӗшлӗ самахсемпе пӗрле ҫыратпар; *-ах(-ех)* аффикс морфологири улшанакан пур самахсем ҫумне те хушанма пултарнине тӗсесе, эпир ана вайлату категорийӗн аффиксӗ тесе палартрамар.

Татаксен морфологири несӗллӗхне халлӗхе никам та ҫутатса паман. Ку ыйтӑва пӑхса тухнӑ чухне татаксене икӗ ушкӑна уйӑрма лекет: а) улшӑнакан татаксем; ӑ) улшӑнман татаксем. Улшӑнакан татаксене «тулли мар улшӑнакан» татаксем теме лекет. Улшӑнман татаксен морфологи паллисем пачах та ҫук.

Хирӗҫлев татакӗсене пӑхса тухӑпӑр: ку таранччен хирӗҫлев татакӗ тесе пахнӑ *ни-* сыпӑка эпир *префикс* терӗмӗр, ҫавнпа та ӑна татаксен ретӗнче пӑхмастпӑр *(никам, нимӗн, нихӑш)**.

**Ҫук.** Ку сӑмах чӑваш чӗлхинче паллӑ ячӗ те, татак та пулать. Хӑшӗсем ӑна ӗҫхӗл те пулать тесе палӑртасшӑн, анчах та унӑн ӗҫхӗл паллисем палӑрсах каймаҫҫӗ. Пуплев калавӗ (сказуемӑй) пулнӑшӑнах ӑна ӗҫхӗлсен ретне кӗртме май ҫук, мӗншӗн тесен унӑн тайӑм, вӑхат, сӑпат, хисеп паллисем пачах та ҫук. *Вал паян клубра ҫукчӗ* пуплеври *ҫукчӗ*, иртнӗ вӑхӑт аффиксӗпе тӑрать пулин те, ӗҫхӗл мар.

Паллӑ ячӗ пулакан *ҫук* сӑмах** нумайлӑ хисепре пулма пултарать, япала ячӗленет: *ҫуксем* «бедняки» (А VII, 205). Япала ячӗ пекех *ҫук* сӑмах а) сулӑну формине пулать; ӑ) *-ам* 1-мӗш сӑпат аффиксне йышӑнать: *Ҫукам ҫукпа пултар, пурӑм хампа пултар; Пуянлӑхӑм пур, ҫукам ҫитмест* (А XII, 205).

Анчах асту: Михетер
Хӗрне памасть *ҫукалла* (К. Ив.);

[2] Павлов И. П. V—VI классенче чаваш чӗлхин морфологине вӗрентесси. 111 с.

* Ҫаван пекех *та-(те-)* иккӗлену татакӗ тенӗскер, префикс шутланать *(такам, темӗн, тахӑш)*.

** Чылай чухне *пур* сӑмах морфологире *ҫук* самахпа пӗр функциллӗ.



Паллӑ ячӗ пекех, *ҫук* сӑмах палӑрту категорийӗнче пулать: *Ҫукки ҫукшан кулянать, пурри пуршан кулянать; Ҫукскерсем ерленсе кана пураннӑ.* Танлаштару категорийӗн *-рах* аффиксне йышӑнать: *ҫукраххисем* (А XII, 207).

Паллӑ ячӗ е япала ячӗ выранӗнче тана чух *ҫук* сӑмах падеж аффиксӗсене те йышӑнать: *Епле эсир мана ҫукпа* (перл.) *иапатасшан?* (А XII, 205); *Ҫук ҫын ҫукшан* (пирке) *кулянать.*

*Ҫук* сӑмах, татак функцине пурнӑҫланӑ май, тӗрлӗрен кӳлепелле сӑмахсемпе пӗрле (хыҫҫан) ҫӳреме пултарать:

а) япала ячӗн тӗрлӗ формисем хыҫҫан: *Пирӗн улахра Якку ҫук; Унта утсем ҫук, палансем анчах; Вуник тенкӗсӗр ҫук* (А XII, 204);

а) паллӑ ячӗсем хыҫҫан: *Вӗллесенче пыл ҫителӗклӗ сик пулсан, хуртсене сахар шывӗпе тарантмалла* (А XII. 203);

б) сӑпатланман ӗҫхӗлӗн тӗрлӗ кӳлепи хыҫҫан: *Тыра кӑҫал калама ҫук аван; Унта калаҫмалах та ҫук;*

в) сӑпатланакан ӗҫхӗлсем хыҫҫан (кун пек тӗслӗхсем выранти калаҫусенче кӑна):

Эп вармана *кайрам ҫук,*
Кукар йываҫ *касрӑм ҫук,*
Эп усала *кайрам ҫук,*
Усал ҫумне *выртрам ҫук* (А XII, 204);

г) пулас пайташӑн тӗрлӗ кӳлепи ҫумне: *Эс ӗҫлес сик кунта; Эс ана йатас ҫук; Илессӳ ҫук эс мана* (А XII. 204);

д) иртнӗ пайташ кӳлепи ҫумне:

Шура хӑва *касна ҫукчӗ,*
Ывантарчӗ хулсене:
Йывар хуйха *курна ҫукчӗ*
Ҫурче ҫамрак чӗрене (А XII, 205).

*Ҫук* татакӑн тата ҫакӑн пек морфологи паллисем пур:

1) *-че* иртнӗ вӑхӑт аффиксне йышӑнать. *Эпӗ пытам унта, старик килте ҫукчӗ, вармана кайнӑччӗ;*

2) хӑш-пӗр вӗҫлевлӗх аффиксӗсене йышӑнать· *Ним сикран* (тух.) *нимӗр ҫиес* (А XII, 203); *Пуранмалах урӑх пӳрт ҫукпала* (перл.) *ҫав сивӗ, нӳрӗ пӳртрех пурӑнмалла* (А XII, 207);

3) вайлату категорийӗнче пулать: *Ача-пӑча кӗнекине кун пек йанаш ярса тултарнине чӑтма ҫуках;*

4) *-и, -скер* палӑрту аффиксӗпе ҫӳрет: *Килте хӗрарӑм ҫукскер, ҫакӑр пӗҫерме те ҫын куҫӗнчен пӑхас пулать* (А XII, 206); *Эсӗ ҫуккине пур таватӑн* (А XII, 206); *Ту хӗрринчи Токтамӑш, тулли ҫуккин, сӗлли пур* (А XII, 208); *Ҫуккин* тени кунта *ҫук пулин* тенине тӳр килет пулмалла.

*Çук* самах чылай чухне çирĕплексе ларнă самах майлашăвĕсенче тĕл пулать: *çука юл: Çук пуян çука юлать* (А XII, 205); *çука ер: Эпир пушшех çука ерсе кайрамар* (А XII, 206); *çука калар: Этеме пĕтĕмпех çука каларса ан парах* (А XII, 206).

**Мар.** Хирĕçлев татăкĕ пулакан *мар* самахăн çакăн пек морфологи паллисем пур:

а) тулли мар веçленӳре пулать:

Т. *мар: Кирлĕ мар, çын мар, кашкар мар; Сикер мар;*
К. ?
П. *мара: Кирлĕ м а р а ан калаç; Ĕçлес м а р а персен, пулмасть;*
В. ?
Т. *мартан: Кирлĕ м а р т а н каламастап; Ĕçлес м а р т а н пытанать;*
П. *марпа: Кирлĕ м а р п а ан аппалан;*
Ç. *марсар: Кирлĕ м а р с а р çуремен эпĕ унта виçĕ кун;*
П. *маршан: Кирлĕ м а р ш а н утмастăп;*

а) танлаштару аффиксне йышанать: *Çиллентермелле мартарах каларам* (А VIII, 198). Танлаштару аффиксне йышăннă кулепе *-и* паларту аффиксне йышăнма пултарать, *-сем* аффикспа та çурет: *Çĕтĕк мартараххисене вал арчана майлаштарса хучĕ;*

б) паларту аффиксĕ *мар* самах тĕпĕ çумне тӳрех хушăнма та пултарать: *Эх, необразованнай халах, кама шеллемеллине, кама шеллемелле маррине пĕлместĕр* (Сениэль);

в) *-ччĕ(-чĕ)* иртнĕ вăхăт аффиксне йышанса иртнĕ вăхата палартас сĕмĕ пулса тарать: *Пилеш патак сан алра пур марччĕ ара, ун чухне* (А VIII, 198); *-ччĕ* аффиксла *мар* самах пулас пайташ кулепи хыççăн тăна чух иртнĕ вăхăт пĕлтерешĕ выранне пулас вăхăт пĕлтерĕшĕ паларма пуçлать: *Эпĕ курпуна курмасар вилес марччĕ* (А VIII, 196);

г) *-ах* вайлату аффиксне йышанать: *Çын марах вал — ту качаки; Аван марах ун пек.*

**Тата.** Чылай чухне *тата* пĕтĕçтерӳ (союз) пулнине кăтартаççĕ. Анчах та *тата* вайлату татăкĕ пулнине хирĕçлеме май çук. Вайлату татăкĕ пулна май ку самахăн морфологи паллисем пуррине палартма пулать:

а) *-ах(-х)* вайлату аффиксне йышанать: *Вутă татах пурччĕ* (А XIII, 243);

а) *-ччĕ* аффикса йышанса тĕрлĕ пĕлтереш семĕсене палартать: *Хавар укçара пĕтерсен татаччĕ; Вал ахаль иртĕнет пулсан татаччĕ* (А XIII, 24п); *Эпĕ килте пулсан татачче* (А XIII, 245);

б) вайлату аффиксĕ *-х+-чĕ: Хăй кайни татахчĕ* (А XIII, 244).



**Шăп** тата **лăп** тĕрĕслетӳ татăкĕсем вайлату аффиксне йышанма пултараççĕ: *Юлашки вахатра эпĕ шапах çаван пек самант шырарам* (Скв.); *Эп çитнĕ çĕрех вăл та лапах çитрĕ.*

Ытти ушкансене кĕрекен (çирĕплетӳ, кăтарту, уйăру, ыйту, иккĕленӳ) татаксен морфологи паллисем пачах çуккине кура эпир вĕсене пахса тухмастпар.

Асархаттару. Шкул учебникĕнче морфологи тишкерĕвĕ тума сенне татаксен морфологи паллисене пачах асанман пирки татаксене морфологи тишкерĕвĕ туна теме май çук.

*Ара* — татăк, калана шухаша çирĕплетет, пĕтĕм предложенипе çыханнă, ытти самахсенчен запятой лартса уйăрмалла[3].

Çак пĕчĕк тĕслĕхех шкул учебникĕн материалне питех те кăткасласа яни çинчен калать.

Студентсене вĕрентме хатĕрленĕ «Ханăхтарусен пуххи» кĕнекере татаксене морфологи тишкерĕвĕ тума çакăн пек кана сĕннĕ[4]: Татăк. Пĕлтерĕш тăрах хăш ушкана кĕрет.

## ТУЙĂМЧАВ (МЕЖДОМЕТИ)

**Туйăма, кăмăла, хистеве пĕлтерекен самахсене междомети (туйăмчав) темелле:** *ах, эх, ух, ых, уф* т. ыт. те.

Междомети хайне уйрăм пуплев пайĕ шутланать. Вăл хăй пелтерĕшлĕ самахсенчен те, пулăшу пĕлтерĕшлисенчен те уйăралса тарать.

Морфологи тĕлĕшĕнчен междомети пачах та улшăнмасть тесен те тĕрĕсех пулать. Анчах çук-çук та хушаран хăш-пĕр междометисем *-чĕ* иртнĕ вăхат аффиксне йышăннине курма пулать: *Эхче, ахчĕ, ухчĕ· Эпир ун чух шухчĕ* тет пĕр поэт хайĕн саввинче.

Çынна ĕç тума хистекен междометисенчен хăшĕ-пĕрисем нумайла хисеп форминче те пулаççĕ: *атя — атьăр, ме — мейĕр, чим — чимĕр.*

[3] Павлов И. П., Игнатьева Э. Е. Чăваш чĕлхи. Морфологи: 5—6 классем валли. Шупашкар, 1983. 213 с.
[4] Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Хăнăхтарусен пуххи. Шупашкар. 1970. 169 с.

Хушăран тĕпчевçесем туйăмчăвсен шутне тулли пĕлтерĕшлĕ сăмахсене кĕртеççĕ. Ун пек чух вĕсем хайсен лексика пĕлтерĕшĕсене çухатна имĕш. Ку шухăша ырлама çук. *Салам, аван-и, тавтапуç* сăмахсем, пирен шутпа, хальхи чăваш чĕлхинче тулли лексика пĕлтерĕшлĕ сăмахсемех, çаванпа та вĕсене словарьсенче реестра каларса çырнă. Ют чĕлхесенчен илнĕ: *стой, алло, чао, бонжур*, сăмахсене туйăмчăвсен шутне кĕртме те пулать, тен.

Туйăмчăвсен шутне (енчен те эпир вĕсене пуплев пайĕ тетпĕр пулсан) сăмах çавранăшĕсене кĕртни те иккĕленӳллĕ: *ыра кун, ыра каç, ман килес, сыва пул, чипер кайăр, тепре куриччен, ан айăплăр* тенисене пĕр сăмах тесе пăхма май çук.

Савăннине, мухтаннине, хĕрхеннине, ырланине, кулянниие, тарăхни-кӳреннине, вăрçни-сивлениие пĕлтерекен сăмахсене, чăнах та, туйăмчăвсен шутне кĕртме пулать: *ах, ах, ай, эй, ой, уф, фу, ха, ха, ну, ай-вай, э-ха-хаи, эккеи* т. ыт. те.

## ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ

Ку ĕçре эпир чăваш чĕлхинчи сăмахсен морфологири ушкăнĕсене (класĕсене) пăхса тухрăмăр. Сăмахсен морфологири ушкăнĕсене палăртнă чухне вĕсен лексика-семантика пĕлтерĕшне кăна мар, грамматика пĕлтерĕшне те шута илме тăрăшрăмăр. Грамматика (е морфологи) пĕлтерĕшне тĕрĕс палăртас тесен вăл е ку сăмахăн улшăнăвне тĕпчемелле. Сăмах улшăнăвĕ икĕ енлĕ палăрать: а) туллин улшăнакан тата ă) тулли мар улшăнакан сăмахсен кӳлеписем пуррипе. Сăмах мĕнле улшăннине кура морфологире категориллĕ тата категорисĕр кӳлепесем пуррине палăртмалла. Морфологи категорийĕсем чĕлхемĕрте тĕрлĕрен пулаççĕ: пĕрисем пĕр ушкăнри сăмахсене кăна килĕшӳллĕ, теприсем икĕ-висе е тăвата ушкăнри сăмахсене тивĕçтереççĕ, виççĕмĕшсем вара чылай пуплев пайĕсенчи сăмахсемшĕн те килĕшӳллĕ.

Тĕслĕхрен, япала ячĕн кăмăнлăх-сăпат категорийĕ япала ятĕнче кăна тулли палăрать (сăпат аффиксĕсем чылай япала ячĕ çумне хушăнаççĕ — пĕтĕмлĕх принципне пăхăнаççĕ). Шут хисепĕсен *иксĕмĕр, иксĕр, иккĕшĕ* кӳлеписем хăш-пĕр сăпат аффиксĕсене кăна йышăнма пултарнине кура (*иксем, иксӳ* тени чĕлхере çук), шут хисеп ячĕн кăмăнлăх-сăпат ка-



тегорийĕ çинчен мар, сăпат форми çинчен кăна каласма май пур. Апла пулсан шут хисеп ячĕсен категорисĕр сăпат форми пур. Ку хисеп ячĕн категорисĕр форми пулнине сăпат аффиксĕсем пур хисеп ячĕ çумне хушăнманнинчен те курма пулать: *вун пĕрсĕмĕр, вун пĕрĕр* тени çук. Çапла вара, пĕтĕмлĕх принципĕ пăсăлни куç умĕнчех.

Хальхи пайташсем те хушăран сăпат аффиксĕсене йышăнма пултараççĕ: *вулаканăм, вулакану, вулаканĕ, вулаканăмăр, вулаканăр* теме пулать, анчах та *ыратакан, шăтакан, çĕрекен* йышши сăмахсем кăмăнлăх-сăпат аффиксне йышăнманнипе пĕтĕмлĕх принципĕ пăсăлать те, эпир хальхи пайташсен кăмăнлăх сăпат категорийĕ çинчен мар, сăпат форми (категорисĕр форми) çинчен кăна каласатпăр.

Пулас пайташ, япала ячĕ пекех, пур чухне те сăпат аффиксĕсене йышăнма пултарать. Çавна май эпир пулас пайташăн сăпат категорийĕ пурри çинчен ирĕккĕнех калама пултаратпăр. Анчах та çав кулепесенче кăмăнлăх пĕлтерĕшĕ пачах та çук, çапла майпа пулас пайташăн сăпат категорийĕ пирки кăна каласма май пур, япала ячĕсем сăпат аффиксĕсемпе кăмăнлăх пĕлтерĕшне уçăмлăн палăртаççĕ.

Нумайлă хисеп категорийĕ япала ячĕн кăна мар, сăпат тата таврăну сăпат ылмашĕсен те пур. Анчах та кунта çакна асăрхамалла, япала ячĕсен нумайлă хисеп категорийĕ *-сем* аффикс хушăннипе пулать пулсан, ятылмашĕсенче урăхларах:

*эпĕ — эпĕ-р, эсĕ — эсĕ-р, вăл — вĕ-сем*, кунта пĕрремĕшпе иккĕмĕш сăпат ятылмашĕсенче нумайлă хисеп аффиксĕ *-р* пулать, виççĕмĕш сăпатра — *-сем*.

Таврăну сăпат ылмашĕсенче: *хам — хам-ăр, ху, хав — хăв-ăр, хай — хăй-сем*. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш сăпатсенче нумайлă хисеп аффиксĕ *-ăр* шутланать.

Пĕтĕмĕшле илсен, ятылмашĕсен, хисеп ячĕсен нумайлă хисеп категорийĕ пур тесе шутламалла. Паллă ячĕсен нумайлă хисеп форми пурри çинчен кăна калама лекет: *илемлĕсем (?), шултрасем, пысăксем* теме май çуккипе пĕтĕмлĕх принципĕ пăсăлать

Паллă ячĕсен категори формисем пурри çинчен ку таранччен пачах та каласман. Пирĕн шутпа. паллă ячĕн пĕтĕмлĕх принципне пăхăнакан виçĕ категори пур: *-рах(-рех), -тарах(-терех)* аффиксла танлаштару категорийĕ: *-и, -скер* аффикссемлĕ палăрту категорийĕ; *-ăн(-ĕн)* аффикслă мĕнлелĕх категорийĕ. Çак виçĕ категори пуррипе эпир паллă ятне япала ячĕн пурлă форминчен уйăрса илме пултаратпăр:

*илемлĕ — илемлĕрех* (палла ячĕ), *шĕлепкелле — шĕлепкеллĕрех(?)* — япала ячĕн пурла форми. Çаван пекех *-сар(-сер)* аффиксла палла ячĕсене суклах падежĕнчи япала ячĕсенчен уйăрса илме пулать: *илемсĕр — илемсертерех* (палла ячĕ); *магазинсăр — магазинсартарах*(?) — япала ячĕ, çуклах падежĕнче: ыйту палли *магазинсăртарах ял* теме май çукки синчен хыпарлать. Самах улшăнăвне тĕпчесен танлаштару категорийĕ урах нихăш ушканри самахсен те суккине курататпăр. Паларту категорийĕ вара хальхи, иртнĕ, пулас пайташсен пур.

Самахсен категориллĕ тата категорисĕр формисем пуррине палăртни самаха улăштаракан тата самах тавакан аффикссене пĕр-пĕринчен уйăрмаллине систерет.

Морфологири чылай пуплев пайĕнчи самахсене килешуллĕ морфологи категорийĕсем çаксем: а) *-чĕ(-ччĕ)* аффиксла иртнĕ вăхăт категорийĕ: *ачаччĕ, Иванччĕ; хитречче, хаичче, виссĕччĕ, ĕнерччĕ, кайначчĕ, кайсаччĕ, ваш-ваштче, татачче* т. ыт. те. а) *-ах(-ех, -х)* аффиксла вайлату категорийĕ: *ачах. Иванах, хитри хитрех, виççех, виççĕмĕшех, ĕнерех, кайна кайнах, кайсах кил, ваш-ваштах, татах* т. ыт. те.

Япала ячĕн евĕрлĕх кулепи, *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффикспа пулаканскер, япала ятне кăна тивĕçлĕ тесе йышăнма май çук. Ытти ушкансенчи самахсен те евĕрлĕх форми пулать. Евĕрлĕх форми япала ячĕсенче чылай анла саралнă, çавна май *-ла(-ле), -лла(-лле)* аффикса ниепле те самах таваканнисен шутĕнче пахма çук.

Ку таранччен япала, палла, хисеп ячĕсен, ятылмашĕсен, ĕсхĕлĕн тата ытти пуплев пайĕсен палартамĕсенче морфологи паллисене катартасси йалара пулман, ку ĕçре эпир çав çитменлĕхе катертме тарашрамар.

Хушмалча

## Морфологи тишкерĕвĕн йĕрки

**Япала ячĕ.** Самах тĕпĕ. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле самах. Пайар е пайар мар ят. Хисеп. Вĕçлевлĕх (падеж).

Тĕслĕх. *Ачасемпе* — япала ячĕ, самах тĕпĕ — *ача*, пĕрремĕшле самах, пайар мар ят, нумайла хисепре, пĕрлелĕх вĕçлевлĕхĕнче (падежĕнче).

Кĕскен: *ачасемпе:* я. я., с. т. — *ача*, пĕр. с., п. м., ят, нум. х., перл. в.

1. Япала ячĕ каманлах-сапат категорийĕнче: *ачамсемпеччĕ* — я. я., с. т. — *ача*, пĕр. с., п. м. ят, к. к. 1-мĕш сап., сапат аф. пĕр. хис., япала ячĕ нум. хис., пĕрл. в., ирт. вăхатра.

2. Япала ячĕ паларту форминче чухне: *хиртисене* — я. я., с. т. — *хир*, пĕр. с., п. м. ят, пĕр хис., выр. в., паларту форми нум. хис., пару в.

3. Ытти формасем пур чухне:

*варманаллараххисен* — я. я., с. т. — *варман*, пĕр. с., пĕр. х., тĕп. в., п. м. ят, сулану форми çумне танлаштару форми хушанна, паларту форми нум. хисепре, кам в.

*ачаллах* — я. я., с. т. — *ача*, пĕр. с., п. м. ят, пĕр. хис., тĕп в., евĕрлĕх тата вайлату категорийĕсенче.

4. Қаманлах вĕçленĕвне палартна чух: *ачасенне илтĕмĕр; ачасенне* — я. я., с. т. — *ача*, пĕр с., п. м. ят, нум. хис., пару в., танл.: *ачасене.*

**Палла ячĕ.** Самах тĕпĕ. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле самах. Танлаштару, паларту, мĕнлелĕх категорийĕсем. Вайла форма.

Тĕслĕх. *Хĕрлĕ* — п. я., с. т. — *хĕрлĕ*, пĕр. с., тĕп ф. *илемлĕрен* — п. я., с. т., — *илемлĕ*, ик. с., тух. в.

1. Паларту категорийĕнче чухне:

*хитрескерне* — п. я., с. т. — *хитре*, пĕр. с., пал. кат., пĕр. х., пару в.;

*илемлисем* — п. я., с. т. — *илемлĕ*, ик. с., пал. кат., нум. х., тĕп. в.

2. Танлаштару категорийĕнче чухне: *мăнтартараххин* — п. я., с. т. — *мăнтар*, пĕр. с., танл. кат., пал. кат. пĕр. х.. кам. в.

3. Вайла формара чух:

*хуп-хурах* — п. я., с. т. — *хура*, пĕр. с., вайла формара, вайлату категорийĕнче.

4. Палла ячĕ япала ячĕленнĕ (субстантивациленнĕ) чухне:

*ватта (хисепле); ватта* — п. я., суб. я. я., с. т. — *вата*, пĕр. с., п. м. ят, пĕр. с., пĕр. х., пару в.

*Ваттисене* самаха икĕ тĕрлĕ тишкерӳ тума пулать:

I *ваттисене* — п. я., с. т.—*вата*, пĕр. с., пал. кат., нум. х., пару в.;

II *ваттисене* — п. я., суб. я. я., с. т. — *вата*, пĕр с., п. м. ят, кам. кат., 3 с., сапат аф. пĕр. х., я. я. нум. х., пару в.

**Хисеп ячĕ.** Самах тĕпĕ. Мĕнле категори. Хисеп. Вĕçлевлĕх.

Тĕслĕх. *Пиллĕк* — х. я., с. т. — *пиллĕк,* пĕр. с., шут х. я., пĕр. х., тĕп в.;

*вуннасенче* — х. я., с. т. — *вунна,* пĕр. с., шут х. я., нум. х., выран в.

1. Шут хисепĕсен сапат форми пур чухне:

*иксĕмĕршĕн* — х. я., шут х. я., сапат форми нум. х., пирке в.;

*иккĕшĕнче* — х. я., шут х. я., сап. форми пĕр х., выран в.

2. Паларту форми пур чухне: *хĕрĕхрине* — х. я., шут. х. я., пĕр. х., выран в., паларту форми пĕр х., пару в.;

*вуннарискерĕн*—х. я., шут х. я., пĕр. х., выр. в., (-+-*скер*) паларту форминче, пал. форми пĕр. х., кам. в.

3. Хисеп ячĕ машар самах чухне: *пиллĕк-ултгасенчи* — х. я., хутла (машар самах), шут. х. я., нум. х., выр. в., паларту форми пĕр х., тĕп. в.

Асархаттару. *Çер сакăр вун иккĕ, пин те тахар çĕр сакар вун çиччĕ* самах майлашавĕсенчи хисеп ячĕсене уйрамман тишкеру тумалла, унсаран *пин те* тенĕ чух *те* татак та хисеп ячĕ пулса кайма- пултарать.

**Ятылмашĕ.** Самах тĕпĕ. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле самах. Хаш ушкана кĕрет. Хисеп. Падеж.

Тĕслĕх. *Кампа* — ятыл., с. т. — *кам,* 1 с., ыйту ятыл., пĕр. х., пĕр. в.;

*никамăн* — ятыл., с. т. — *никам,* 2 с., çуклах ятыл., пĕр. х., кам. в.

1. Сапат тата таврану-сапат ятылмашĕсем чух: *мана* — ятыл., с. т. — *эпĕ* (вĕçленекен тĕп — *ман*), пĕр сам., сапат ятыл., 1 с., пĕр. х., пару в.;

*пирĕнпе* — ятыл., с. т. — *эпир* (вĕçленекен тĕп *пир, пирĕн*), 1 с., сап. ятыл., нум. х., пĕрл. в.;

*хамаран* — ятыл., с. т. — *хам,* 1 с., тавр.-сапат ятыл., нум. х., кам. в.

2. Паларту форми пур чухне:

*вĕсеннисемпе* — ятыл., с. т. — *вăл > вĕ,* 1 с., сап. ятыл., нум. х., кам. в., паларту форми нум. х., пĕрле в. (хуташ вĕçленуре).

3. Хуташ тата каманлах вĕçленĕвĕсем паларна чухне:

*пиртен* — ятыл., с. т.—*эпир* (вĕçленекен тĕп — *пир*) 1 с., нум. х., тух. в. (хуташ вĕçленуре);

*пирĕнтен*—(кам. в.), ятыл., с. т.—*эпир* (вĕçленекен тĕп— *пирĕн),* 1 с., нум. х., тух. в.



4. Евĕрлĕх категорийĕ пур чух:

*кунашкал* — ятыл., с. т.—*ку,* 1 с., катарту ятыл., пĕр х. кам. в., евĕрлĕх. кат.

**Ĕçхĕл.** Самах тĕпĕ. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле самах. Тарам: хирĕçлев, пулаюлах, пулаюсарлах. Тайам: хушу, ĕмĕт, килĕшу. Вахат, сапат, хисеп.

Тĕслĕх. *Вулатап* — ĕçхĕл, с. т. —*вула,* 1 с., хальхи вахат, пĕр. с., пĕр. х.

*вуламастап* — ĕçхĕл, с. т. — *вула,* 1 с. хирĕçлев тарамĕнче, хальхи вахат, 1 с., пĕр х.;

*юрлăттам* — ĕçхĕл, с. т. — *юрла,* 2 с., ĕмĕт тайамĕ, пулас вахат, 1 с., пĕр х.;

*ташласам* — ĕçхĕл, с. т. — *ташла,* ик. с., хушу тайамĕ, 2 с., пĕр х.

1. Таташлах категорийĕ пур чухне: *вулакалатан* — ĕçхĕл, с. т. — *вула,* пĕр. с., таташлах кат., хальхи вахатра, 2 с., пĕр. х.

2. Икĕ тайам аффиксĕсем пĕрле чух: *кайтарин* — ĕçхĕл, с. т. — *кай,* пĕр. с., хушу + килĕшу тайамĕнче, 3 с., пĕр х.

3. Килĕшу тайамĕнче чухне:

*курапин* — ĕçхĕл, с. т. — *кур,* пĕр. сам., кил. тайамĕнче, пулас вахатра, 1 с., пĕр х.;

*кур-ĕ-ç-ин* — ĕçхĕл, с. т. *кур,* пĕр. сам., кил. тайамĕ, пулас вахат, 3 с., нум. х.

4. Ĕмĕт тайамĕнче чух:

*курĕччĕç (кур-ĕ-чч-ĕ-ç)* — ĕçхĕл, с. т. — *кур,* пĕр с., ĕмĕт тайамĕнче, пулас вахат, 3 с., нум. х.

5. *Курнаскерсем* — ĕçхĕл, с. т. — *кур,* иртнĕ пайташ категорийĕ, паларту ф., нум. х., тĕп в.

6. *Курассăм* — ĕçхĕл, с. т. — *кур,* пĕр. с., пулас пайташ кат., 1 с., пĕр х.

7. *Курсаттам* — ĕçхĕл, с. т. — *кур,* пĕр. с., ĕçхĕлтеш кат., иртнĕ вахатра, 1 с., пĕр. х.

8. *Каймалах* — ĕçхĕл, с. т. — *кай,* пĕр. с., инфинитив кат., çителĕклĕх форминче.

9. *Курмассерен* — ĕçхĕл, с. т. — *кур,* пĕр. сам., инфинитив кат., таташлах кат. ф.

**Ĕç ячĕ.** Самах тĕпĕ. Иккĕмĕшле самах. Хисеп, вĕçлевлĕх (вĕсем пулсан).

*ачашлу* — ĕç ячĕ, с. т. — *ачашлу,* ик. с.

*çапупа* — ĕç ячĕ, с. т. — *çапу,* ик. с., пĕрл. в.;

*шатăртаттарусем* — ĕç ячĕ, с. т. — *шатăртаттару* ик. с., нум. х.

**Ĕçхĕлçумĕ.** Самах тĕпĕ. Пĕрремĕшле е иккĕмĕшле самах. Хаш ушкана кĕрет. Танлаштару форми (енчен те, вал пулсан).

Т ĕ с л ĕ х. *Анчах* — ĕçхĕлçумĕ, с. т. — *анчах,* пĕр. с., вахат ĕçхĕлçумĕ;

*часрах* — ĕçхĕлçумĕ, с. т. — *час,* пĕр, с., танл. ф.;

*паçарччĕ* — ĕçхĕлçумĕ, с. т. — *паçар,* пĕр с., иртнĕ вахатра.

**Хыçсамах.** Улшанакан (е тулли улшанман) хыçсамах. Хай умĕнчи самаха хаш вĕçлевлĕхре тытса тарать:

*кашкар пекрехскерĕн; пекрехскерĕн* — хыçсамах, с. т. — *пек,* улшанакан хыçсамах: танлаштару + паларту ф., пĕр. х., кам. в., *кашкар* самаха тĕп вĕçлевлĕхре тытать;

*тери* — хыçсамах, с. т. — *тери,* улшанман хыçсамах, хай умĕнчи самахсене (ятылмашĕсене) яланах тĕп вĕçлевлĕхре тытать.

**Татак.** Ушканĕ. Улшанакан е улшанман татак; *салтак маррисем; маррисем* — татак, ç. т. — *мар,* хирĕçлев татакĕ, улшанакан татак, пал. ф., нум. х., тĕп в.;

*-и* — татак, ыйту татакĕ, улшанман татак.

**Евĕрлев самахĕ.** Пĕлтерĕшĕ. Мĕнле морфологи паллисем пур (енчен те, вĕсем пур пулсан):

*кĕрр* — ев. самахĕ, сасса евĕрлет;

*шапал-шапалскер* — ев. самахĕ, пулама евĕрлет, пал. ф., пĕр. х., тĕп в.;

*шартах* — ев. сам., пулама евĕрлет, вайлату кат.

## Кĕнекери терминсен тан пĕлтерĕшлĕхĕн йĕрки

**Вĕçлевлĕх** — падеж: тĕп вĕçлевлĕх — тĕп падеж, каманлах вĕçлевлĕхĕ — каманлах падежĕ, пару вĕçлевлĕхĕ — пару падежĕ, выран вĕçлевлĕхĕ — выран падежĕ, туху вĕçлевлĕхĕ — туху падежĕ, пĕрлелĕх вĕçлевлĕхĕ — пĕрлелĕх падежĕ, çуклах вĕçлевлĕхĕ — çуклах падежĕ, пирке вĕçлевлĕхĕ — пирке падежĕ; карал вĕçлевлĕхĕ — инструмент (оруди) падежĕ.

**Ĕçхĕл** — глагол; пĕрремĕшле ĕçхĕл — пĕрремĕшле глагол; иккĕмĕшле ĕçхĕл — иккĕмĕшле глагол.

**Ĕçхĕлтеш** — деепричасти: *-са(-се)* аффиксла ĕçхĕлтеш — *-са(-се)* аффиксла деепричасти.

**Ĕçхĕлçумĕ** — наречи: вахат ĕçхĕлçумĕ — вахат наречийĕ, форми; категори кулепи — категори форми.



**Кулепе** — форма: нумайла хисеп кулепи — нумайла хисеп

Морфологири самахсен ушканĕсем — пуплев пайĕсем;

**Пайташ** — причасти: хальхи, иртнĕ, пулас пайташ — хальхи, иртнĕ, пулас причасти.

**Пĕтĕçтеру** — союз.

**Тайам** — наклонени: хушу тайамĕ — хушу наклоненийĕ, килĕшу тайамĕ — килĕшу наклоненийĕ, ĕмĕт тайамĕ — ĕмĕт наклоненийĕ.

**Тарам** — аспект: хирĕçлев тарамĕ — хирĕçлев аспекчĕ, пулаюлах тарамĕ — пулаюлах аспекчĕ, пулаюсарлах тарамĕ — пулаюсарлах аспекчĕ.

**Туйамчав** — междомети.

**Хушамсас** — интерфонема, интерфикс.

**Ятылмашĕ** — местоимени: сапат ятылмашĕ — сапат местоименийĕ, катарту ятылмашĕ — катарту местоименийĕ т. ыт. те.

## ЛИТЕРАТУРА


Андреев И. А. Причастие в чувашском языке. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1961. 262 с.

Андреев И. А. К вопросу о выделении категории относительных прилагательных в тюркских языках // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1966. Вып. 32. С. 90—103.

Андреев И. А. Рец. на кн.: И. П. Павлов. Современный чувашский литературный язык. Морфология // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1966. Вып. 32. С. 193—204.

Андреев И. А. Происхождение формы множественности имен в свете диалектных данных // Материалы по чувашской диалектологии / ЧНИИ. Чебоксары, 1970. Вып. 3. С. 44—58.

Андреев И. А. К вопросу о выделении частей речи в тюркских языках в свете теории о первичной и вторичной синтаксических функциях // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1970. Вып. 46. С. 179—195.

Ашмарин Н. И. О мифологических категориях подражаний в чувашском языке. Казань, 1928. 160 с.

Иванов А. И. К вопросу о падежах в чувашском языке в связи с изучением специфики его // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1953. Вып. 8. С. 167—192.

Иванов А. И. Склонение и его роль в чувашском языке // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1967. Вып. 34. С. 67—99; 1968. Вып. 39. С. 106—126.

Иванов А. И. Об относительной хронологии некоторых аффиксов и грамматических форм чувашского языка // Учен. зап. / ЧНИИ. Чебоксары, 1970. Вып. 49. С. 61—90.

Матвеев Т. М. Грамматика чувашского языка: Морфология. Симбирск, 1919. 124 с.

Материалы по грамматике современного чувашского языка. Ч. I: Морфология / ЧНИИ. Чебоксары, 1957. 360 с.

Павлов И. П. Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи / Н. П. Петров ред. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1965. 342 с.

Павлов И. П. Чăваш чĕлхинчи падежсем çинчен // Учен. зап. / ЧНИИ Чебоксары, 1963. Вып. 22. С. 175—190.

Павлов И. П. 5—6 классенче морфологие вĕрентесси. Шупашкар: Чăваш кен. изд-ви, 1985. 110 с.

Сергеев В. И. Морфемика: Лекцисен тексчĕ / Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1987. 48 с.

Сергеев В. И. Чăваш чĕлхинчи япала ячĕ / Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1990. 80 с.

Сергеев Л. П., Котлеев В. И. Чăваш чĕлхи: Пуçламăш шкул учителĕсем хатĕрлекен факультет студенчĕсем валли. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1988. 327 с.

Федотов М. Р. Средства выражения модальности в чувашском языке. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1963. 121 с.




## ТУПМАЛЛИ


КУРТĔМ . . . . . . . . . . . 3

ЯПАЛА ЯЧĔ . . . . . . . . . . 21

§ 1. Япала ячĕсен хисеп категорийĕ . . . . . . 24
§ 2. Çăмăллăх-сапат категорийĕ . . . . . . . 27
§ 3. Япала ячĕсен падеж (вĕçлевлĕх) категорийĕ . . . 31
§ 4. Теп падеж (вĕçлевлĕх) . . . . . . . . 33
§ 5. Япала ячĕсен вĕçлену парадигми . . . . . 36
§ 6. Падеж системине кĕмен формасем . . . . . 39
Япала ячĕсен евĕрлĕх (категори) форми . . . . 39
Япала ячĕсен иртнĕ вăхăт категорийĕ . . . . . 41
Тăсăмлăх категори форми вăхăта палăртни . . . 43
Вăйлату категорийĕ . . . . . . . . . 43
§ 7. Япала ячĕсен категорисĕр формисем . . . . . 44

ПАЛЛА ЯЧĔ . . . . . . . . . . . 48

§ 1. Самах улшăнăвĕ. Палла ячĕсен пахалăх виçине палăртакан формасем . . . . . . . . . . . 49
§ 2. Палла ячĕн танлаштару категорийĕ . . . . . 51
§ 3. Палла ячĕсен палăрту категорийĕ . . . . . 52
§ 4. Палла ячĕсен мĕнлелĕх категорийĕ . . . . . 53
§ 5. Самах формин улшăнăвĕпе çыханнă категори формисем: падеж тата хисеп категорийĕсем . . . . . . . . . 54
§ 6. Палла ячĕсен категорисĕр формисем . . . . . 56

ХИСЕП ЯЧĔ . . . . . . . . . . . 57

§ 1. Хисеп ячĕсен формисем . . . . . . . . 59
§ 2. Самах тата самах формин улшăнăвĕ . . . . . 60
§ 3. Пĕр(ре) хисеп ячĕн уйрăмлăхĕсем . . . . . 63
§ 4. Йĕрке хисеп категорийĕ . . . . . . . 63
§ 5. Валеçу хисеп категорийĕ . . . . . . . . 64
§ 6. Мĕнлелĕх хисеп категорийĕ . . . . . . . 66
§ 7. Хисеп ячĕсен категорисĕр формисем . . . . . 67

МЕСТОИМЕНИ (ЯТЫЛМАШĔ) . . . . . . . 68

§ 1. Сапат местоименийĕсен самах улшăнăвĕ . . . . 69
§ 2. Самах формин улшăнăвĕ . . . . . . . 69
§ 3. Сапат местоименисен евĕрлĕх категори форми . . . 75
§ 4. Таврăну местоименийĕсем . . . . . . . 76
§ 5. Кăтарту местоименийĕсем . . . . . . . 79
§ 6. Ыйту местоименийĕсем . . . . . . . . 83
§ 7. Çуклăх местоименийĕсем . . . . . . . 84
§ 8. Палла мар местоименисем . . . . . . . 95
§ 9. Палла местоименисем . . . . . . . . 86

ĔÇХĔЛ (ГЛАГОЛ) . . . . . . . . . . 88

§ 1. Аспект (тăрăм) категорийĕ . . . . . . . 91
Çирĕплету аспекчĕ (тăрамĕ) . . . . . . . 91
Хирĕçлев аспекчĕ (тăрамĕ) . . . . . . . 92
Пулаюлăх аспекчĕ (тăрамĕ) . . . . . . . 92
Пулаюсарлăх аспекчĕ (тăрамĕ) . . . . . . 93
§ 2. Глаголăн сăпатлă формисем. Самах формин улшăнăвĕ . . 93
§ 3. Кăтарту тайăмĕ (наклоненийĕ) . . . . . . 94

§ 4. Вахӑт категорийӗ . . . 94
Хальхи вахат . . . 95
Пулас вахат . . . 100
Пӗрре иртнӗ вӑхӑт . . . 101
Темиҫе иртнӗ вахат . . . 102
Малтан иртнӗ вӑхат . . . 104
§ 5. Хушу наклоненийӗ (тайамӗ) . . . 104
§ 6. Ӗмӗт тайамӗ . . . 107
§ 7. Ҫилешу тайамӗ . . . 110
§ 8. Ӗсхӗлӗн таташлах категорийе . . . 111
§ 9. Вайлату кӳлепи . . . 112
§ 10. Инфинитив категорийӗ . . . 113
§ 11. Причасти (пайташ) категорийӗ . . . 115
Хальхи пайташ . . . 116
Пулас пайташ . . . 119
Иртне пайташ . . . 124
Яланхи паиташ . . . 126
Пулмалли пайташ . . . 127
Пули-пулми пайташ . . . 129
§ 12. Ӗҫхӗлтеш (деепричасти) . . . 131
-а(-е) аффиксла ӗҫхӗлтеш . . . 132
-са(-се) аффиксла ӗҫхӗлтеш . . . 133
-сан(-сен) аффиксла ӗҫхӗлтеш . . . 136
ЕҪ ЯЧЕ . . . 138
ЕҪХЕЛҪУМЕ (НАРЕЧИ) . . . 140
ЕВЕРЛЕВ САМАХЕСЕМ . . . 149
ХЫҪСАМАХ ПИРКИ . . . 152
ПЕТЕҪТЕРУСЕМ (СОЮЗСЕМ) . . . 158
ТАТАКСЕМ ПИРКИ . . . 159
ТУЙАМЧАВ (МЕЖДОМЕТИ) . . . 163
ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ . . . 164
ХУШМАЛЧА . . . 166
ЛИТЕРАТУРА . . . 172



Учебное издание

СЕРГЕЕВ Виталий Иванович

СОВРЕМЕННЫЙ ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК
МОРФОЛОГИЯ

Учебное пособие

Редактор М. М. Федорова

Корректор З. М. Порфирьева

ИБ № 105

Сдано в набор 16.09.92. Подписано в печать 20.12.92. Формат 60×84/16. Бумага газетная. Печать высокая. Гарнитура литературная. Усл. п. л. 10,23. Уч.-изд. л. 9,0. Тираж 2000 экз. Заказ № 989. Цена С 15.

Издательство Чувашского университета
Типография Издательства. 428015 Чебоксары, Московский пр., 15

4=